М. Ю. Лермонтов



# Пирĕн вăхăтри герой

М. Ю. ЛЕРМОНТОВ

# ПИРĔН ВĂХĂТРИ ГЕРОЙ

Чувашская Республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. Горького
г. Чебоксары Чувашской АССР

ЧĂВАШ АССР
КĔНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар—1964

## ТУПМАЛЛИ

Стр.

ПĔРРЕМĔШ ПАЙĔ

I. Бэла . . . . . . . . . . . 5

II. Максим Максимыч . . . . . . . . 44

ПЕЧОРИН ЖУРНАЛĔ

I. Тамань . . . . . . . . . . . 57

ИККĔМĔШ ПАЙĔ

II. Мери княжна . . . . . . . . . 70

III. Фаталист . . . . . . . . . . 150

*Михаил Юрьевич Лермонтов*

**ГЕРОЙ НАШЕГО ВРЕМЕНИ**

На чувашском языке

По переводу **Н. Пиктемира** и **Н. Янгаса**

Обложка и титул **Кириллова Н. С.**
Редактор **Ю. И. Скворцов**
Художественный редактор **М. А. Ильин**
Технический редактор **А. Ф. Никитина**
Корректоры **Р. И. Шипколина, Р. И. Белова**

Сдано в набор 9-III-1964 г. Подписано к печати 24-IV-1964 г.
Изд. № 51/64. Формат 84×108/32. Объем 8,40 печ. л. Учетно-изд. 8,20.
Заказ № 1026. Тираж 4500 экз. Цена 40 коп.

Чувашкнигоиздат, г. Чебоксары, ул. К. Маркса, 36.

Типография № 1 Управления по печати при Совете Министров ЧАССР
г. Чебоксары, ул. Володарского, 5.

Кирек мĕнле кĕнекере те умсăмах вăл — чи лайăх та чи начар япала: вăл вара сочиненийĕн е тĕп шухăшне ăнлантарса пани, е критикă умĕнче тӳрре тухни, ăна канаш пани пулать. Анчах вĕрентсе каланинче е журналсем тапăннинче вулакансемшĕн ĕç çук, çавăнпа вĕсем умсăмахсене вуламаççĕ те. Çавăн пек пулни, уйрăммăнах пирĕн енчен çавăн пек пулни, питех те шел вара. Çамрăк та уçă кăмăллă-çке пирĕн публикă, вăл юптарусене те, вĕсен вĕçĕнче вĕрентсе калани пулмасан, ăнланаймасть-ха. Шӳтленине тавçăраймасть вăл, тăрăхланине туймасть, ăна вĕрентсе тивĕçлĕ воспитани паман. Лайăх çынсем хушшинче е лайăх кĕнекере уççăнах ятлаçни пулма та пултарайманнине пĕлеймест-ха вăл, ку чухнехи вĕренӳлĕх тата çивĕчрех хĕç-пăшал шухăшласа кăларнине, çав хĕç-пăшал, куçа курăнманпа пĕрех пулин те, йăпăлтату витĕмĕпе пĕркеннĕ майпа шăпах тĕрĕс те вĕлермелли хăватпах пырса çапнине пĕлеймест-ха вăл. Пирĕн публикă провинциал пек. Вăл пĕр-пĕринпе хирĕçекен патшалăхсен икĕ дипломачĕ калаçнине итлесе тăнă хыççăн: çав дипломатсем, пĕр-пĕринпе ытарма çук туслă пурăнасшăн пулса, хăйсен правительствисене улталаççĕ, тесе шутламалла.

Çак кĕнекен нумаях та пулмасть хăш-пĕр вулаканĕсем, çитменнине тата журналсем те, хăйсен ытла час ĕненес йăлине пула, çакăнта çырнине çаплипех ăнланнине тӳссе курмалла пулчĕ. Хăшпĕрисем Пирĕн Вăхăтри Герой пек намăссăр çынна хăйсемпе танлаштарнăшăн ытла хытă кӳренчĕç; теприсем вара, çыракан хăй портретне тата хăйĕн тус-юлташĕсен портречĕсене ӳкерсе кăтартнă тесе, питĕ те чеен асăрхаттарчĕç... Кивĕ те мĕскĕн сăмах! Руç çĕршывне ĕнтĕ, унта çакăн йышши киревсĕр япаласенчен пуçне пурте çĕнелсе пыраççĕ пулсан, çавнашкал тунă пулас. Асамлă халапсенчен чи асамли те пирĕн енче вăл çынран кулса мăшкăллать тесе ӳпкелешнинчен хăтăлаймĕ!

Ырă çыннăмсем, Пирĕн Вăхăтри Герой — вăл чăнах та портрет, анчах вăл пĕр çын портречĕ кăна мар: вăл пĕтĕм хамăр вăхăтри ăрăвăн çитменлĕхĕсене пĕтĕçтерекен, вĕсен аталанăвне кăтартакан портрет. Эсир мана каллех: этем çав тери киревсĕр пулма пултараймасть, тейĕр, анчах эпĕ сире çакна калăп: эсир трагедиллĕ тата романтикăллă усал этемсем пулма пултарнине ĕненместĕр-и? Енчен, чи хăрушă та ирсĕр япаласем çинчен шухăшласа кăларнине эсир йăпансах итлетĕр пулсан, мĕншĕн-ха çак характере, вăл шухăшласа кăларнăскер пулин те, каçармастăр? Унта чăнлăх хăвăр ĕмĕтленнинчен те ытларах пулнăшăн мар-ши вара?..

Çын шухăш-кăмăлĕшĕн усси çук унтан, тейĕр эсир! Чимĕр-ха. Ĕнтĕ çынсене пылаккине çителĕклех çитернĕ; вĕсен вар-хырăмĕ те çавăн пирки пăсăлса кайнă: йÿçĕ эмелсем, хаяр чăнлăхсем кирлĕ. Çапах та эсир çак кĕнекен авторĕ çынсен çитменлĕхĕсене тÿрлетес кăмăлпа хăçан та пулин çак мăнаçлă ĕмĕте тытать, тесе ан шухăшлăр вара. Турă хăтартăрах мана çак пăсăк ĕçе тумашкăн! Авторĕшĕн тесен, хамăр вăхăтри çынна вăл хăй мĕнле ăнланнă пек кăтартасси йăпанмалли ĕç кăна пулнă, хăйĕннипе сирĕн инкекĕре пула, вăл çавăн пек çынсене ытла та тăтăш куркаланă çав. Чирне кăтартса панипе те çитĕ, ăна мĕнле сыватмаллине вара турă пĕлет!

# Пĕрремĕш пайĕ



## I

### БЭЛА

Эпĕ, пĕр вырăнтан тепĕр вырăна лав тыта-тыта, Тифлисран таврăнаттăм. Лавăм çинче мĕн пурĕ те пĕр пĕчĕк чемодан кăначчĕ, ăна Грузи çинчен çул тăрăх çырса пынă хутсемпе çурри таран тултарнăччĕ. Вĕсенчен чылайăшĕ, сирĕн телейĕре кура, çухалса пĕтнĕ, чемоданĕ вара ытти япаласемпе пĕрле, хам телее кура, тĕрĕс-тĕкĕлех тăрса юлнă.

Эпĕ Койшаур айлăмне анса çитнĕ çĕре хĕвел юрпа витĕннĕ ту хыçне пытанма пуçларĕ те ĕнтĕ. Лавçă-осетин, çĕрлеччен Койшаур тăвĕ çине улăхма ĕлкĕрес тесе, лашасене ырми-канми хисте-хисте, сасси çитнĕ таран юрласа пырать. Чаплă вырăн ку айлăм! Йĕри-тавра улăхма çук çӳллĕ тусем ешĕл плюшпа пĕркенсе тăраççĕ, тата чинарă тĕмĕсемпе тумланнă хĕрлĕрех сăмсахсем, çуркаланса пĕтнĕ чăнкă çыран хĕррисем курăнаççĕ, лере, таçта çӳлте, ылтăн çӳçеллĕ ĕмĕрхи юрсем палăраççĕ, аялта тата Арагвă шывĕ хура та сĕм-тĕттĕм ту хушшинчен шавласа сикекен пĕр ятсăр çырмапа ыталаннă та, кĕмĕл çил пек тăсăлса, тирне йăлтăртаттаракан çĕлен пек çуталса выртать.

Койшаур тăвĕ патне çитсен, эпир духан [1] умне ча-

[1] Духан — чей ĕçмелли, апатланмалли çурт.

рантăмăр, унта грузинсемпе горецсем пĕр çирĕм çынна яхăн кĕпĕрленсе тăратчĕç, вĕсенчен инçе те мар тĕве караванĕ çĕр выртма чарăннă: хамăн урапана çак çĕр çăтасшĕ ту çине сĕтĕрсе хăпартма манăн вăкăрсем тытмалла пулчĕ, мĕншĕн тесен кĕр вăхăчĕ çитнĕччĕ ĕнтĕ, çулĕ те пăрланнăччĕ — тăвĕ тата икĕ çухрăма яхăн тăсăлатчĕ-ха.

Мĕн тăвас тетĕн, эпĕ ултă вăкăр тара илтĕм, темиçе осетин кĕрĕшрĕç. Вĕсенчен пĕри ман чемодана хăй çурăмĕ çине çавăрса хучĕ, ыттисем, кăшкăрашса кăна темелле, вăкăрсене пулăшма тытăнчĕç.

Ман урапа хыççăн тепĕр урапа пырать, лавне тӳпелесе тиесе тултарнă пулин те, ăна тăвата вăкăр ним мар туртса пырать. Çакă вара мана тĕлĕнтерсех ячĕ. Хуçи, кĕмĕлпе тыттарнă пĕчĕк кабардин чĕлĕмне ĕмсе, урапи хыççăн утать. Хăй çине вăл офицерсен эполетсăр сюртукне уртса янă, пуçне черкессен лапсăркка çĕлĕкне тăхăннă. Сăнран пăхсан ăна пĕр аллă çулалла çитнĕ темелле; хĕвелпе пиçĕхнĕ пит-куçĕ вăл Кавказ леш енчи хĕвелпе тахçанах паллашнине кăтартать, вăхăтсăр кăвакарнă майăхĕ те унăн çирĕп уттипе, маттур сăн-сăпачĕпе килĕшсех каймасть. Эпĕ ун патне пытăм та пуç тайрăм; пуç тайнине хирĕç вăл нимĕн чĕнмесĕр пуçне сулчĕ те çăварĕ тулли тĕтĕм мăкăрлантарчĕ.

— Эпир сирĕнпе çула май пулас?

Вăл нимĕн чĕнмесĕр каллех пуç тайрĕ.

— Эсир Ставрополе каятăр пулмалла?

— Так-с точно... хысна япалисемпе.

— Калăр-ха, чăнах, мĕнле майпа сирĕн йывăр урапăра тăвата вăкăр ним мар туртса пырать, манăн пушă лава та çак осетинсем пулăшнипе ултă выльăх аран-аран сĕтĕрет?

Вăл чеен кулса илчĕ те ман çине тинкерсе пăхрĕ.

— Эсир Кавказа килни нумай пулмасть пуль-ха?

— Çулталăка яхăн,— терĕм эпĕ.

Вăл тепĕр хут йăл кулса ячĕ.

— Мĕн вара?

— Нимех те мар! Калама çук айван çав азиатсем! Вĕсем кăшкăрашнипе пулăшаççех тетĕр пуль эсир? Шуйттан пĕлет-и вĕсем мĕн кăшкăрашнине? Вăкăрĕсем ăнланаççĕ-ха вĕсене; хуть те çирĕм вăкăр кӳлтер, анчах лешсем хăйсем майлă кăшкăрсан, вăкăрсем пĕри пĕр

вырăнтан тапранмаççĕ... калама çук путсĕр çынсем! Мĕн тăвас тейĕн вĕсемпе?.. Иртсе çӳрекенсенчен укçа шăйăрма юратаççĕ ĕнтĕ... Иртĕхтернĕ ханттарсене! Акă курăрха, сирĕнтен вĕсем тата эрех ĕçме те илĕç. Эпĕ вĕсене паллатăп, мана улталаймĕç!

— Эсир кунта нумайранпа службăра тăратăр-и?

— Алексей Петрович[1] чухнех кунта службăра пулнă эпĕ,— терĕ вăл, каçăрăларах тăрса.— Вăл Лини[2] çине килнĕ вăхăтра эпĕ подпоручикчĕ,— хушса хучĕ тата,— горецсене хирĕç çапăçнăшăн мана кунта икĕ чин пачĕç.

— Халĕ эсир?..

— Халĕ эпĕ виççĕмĕш линейнăй[3] батальонра тăратăп. Ыйтма хăям-ха, эсир тата?..

Эпĕ каласа патăм ăна.

Каласу çакăнпа пĕтрĕ те, каллех эпир пĕр-пĕринпе юнашар пĕр сăмахламасăр утрăмăр. Ту тăррине çитсен, юр курăнса кайрĕ. Хĕвел анчĕ те, çавăн хыççăн часах çĕрле пулса ларчĕ, кăнтăр енче кирек хăçан та çавăн пек пулать; çапах юр йăлтăртатса тăнипе эпир халь те пĕрех май тăвалла улăхакан çула çăмăллăнах уйăрма пултаратпăр, анчах хальхинче çулĕ паçăрхи пекех чăнкă марччĕ. Чемоданăма урапа çине хума хушрăм, вăкăрсене тăварса лашасем кӳлме каларăм та аялалла, улăх çинелле, юлашки хут çаврăнса пăхрăм,— ту хушшинчен хумлăн-хумлăн тапса тухнă çăра тĕтре улăха пĕтĕмпех хупласа илнĕччĕ, çав енчен пирĕн пата пĕр сас-чӳ те çитеймест. Осетинсем мана хупăрласа илчĕç те манран эрехлĕх укçа аптратма пуçларĕç, анчах штабс-капитан[4] вĕсем çине сиввĕн пăхса пĕрре кăна кăшкăрчĕ, лешсем пĕр самантрах таçта тарса пĕтрĕç.

— Пулать-çке çавăн пек халăх!— терĕ вăл.— Çăкăр тени вырăсла мĕнле пулать, çавна пĕлмест хăй, «офицер, эрех ĕçме укçа пар!» теме вĕреннĕ те; маншăн пулсан, тутарсем лайăхрах пек: вĕсем хуть эрех ĕçмеççĕ...

Станцие çитме тата çухрăма яхăн юлчĕ. Таврипех шăпчĕ, калама çук шăпчĕ, вăрăм туна ăçтан вĕççе иртнине те вăл нăйăлтатнă сасăпах сăнама пулатчĕ. Сулахайра сĕм-тĕттĕм ту хушши курăнать; ун хыçĕнче те, пирĕн

---

[1] Сăмах Ермолов генерал çинчен пырать.
[2] Лини — вăрçăри укрепленисен линийĕ.
[3] Линейнăй çарсем — стройпа çапăçма уйăрнă çарсем.
[4] Штабс-капитан — пехотăри, артиллерири тата инженернăй çарсенчи офицер чинĕ.

умра та юрпа витĕннĕ кăвак ту тăррисем шупка пĕлĕт тӳпемĕнче хĕвел шевлин юлашки хăватсăр çутипе сăнланса пĕркеленнĕн курăнаççĕ. Тĕттĕм пĕлĕтре çăлтăрсем йăлтăртатма тытăнчĕç, хайхи вара тĕлĕнсех кайрăм эпĕ, кунта вĕсем хамăрăн çурçĕртинчен чылай çӳллĕрех пек туйăнаççĕ. Çулăн иккĕ айккипе якалнă хура чулсем мăкăрăлса тăраççĕ, юр айĕнчен унта-кунта йывăç тĕмĕсем курăнкалаççĕ, пĕр çулçă та вырăнĕнчен хускалмасть, çакăн пек вырăнта, вилнĕ пек тĕлĕрсе çывăран çутçанталăкра, вырăс шăнкăравлĕ, ĕшеннĕ почтă тройки пыни питех те савăнтарать.

— Ыран лайăх çанталăк пулать!— терĕм эпĕ. Штабс-капитан пĕр сăмах та чĕнмерĕ, пӳрнипе çеç вăл хамăр умри çӳллĕ ту çине тĕллесе кăтартрĕ:

— Вăл мĕн тата?— тесе ыйтрăм эпĕ.

— Гуд-Гора ятлă ту.

— Мĕнех вара?

— Пăхăр-ха, епле тĕтĕм пек йăсăрланса тăрать.

Чăнах та, Гуд-Гора тăвĕ çинче тĕтре йăсăрланса тăрать, аяккипе çăмăл пĕлĕтсем юхаççĕ, чи тăрринче вара хура пĕлĕт выртать, çав тери хура вăл, тĕттĕм тӳпере те çав пĕлĕт хура саплăк пек палăрарах курăнать.

Акă эпир почтă станцине те куратпăр, çав таврашри сакльă[1] тăррисене асăрхарăмăр, пирĕн умра хăйă çутисем те тараватлăн курăнса кайрĕç, çав вăхăтрах акă нӳрлĕ сивĕ сывлăш та вĕрсе ячĕ, ту хушши кĕрлеме пуçларĕ, унтан йĕпхӳ те пĕрĕхкелеме тытăнчĕ. Буркă[2] уртса яма ĕлкĕртĕм çеç, юр вĕркĕшсе çума та пуçларĕ. Штабс-капитан çине ырă кăмăлпа пăхса илтĕм эпĕ...

— Пирĕн кунтах çĕр выртмалла пулать,— терĕ вăл пăшăрханса,— кунашкал çил-тăманра тусем урлă каçасси пулмасть ĕнтĕ. Мĕскер тетĕн? Крестовой çинчен юрпа пăр шуса анман-и?— тесе ыйтрĕ вăл лавçăран.

— Анман-ха, господин, анчах унта халь-халь шуса анас пек капланса тăрать,— терĕ лавçă-осетин.

Иртсе çӳрекенсем валли станцире уйрăм пӳлĕм пулманнипе пире çĕр каçма пĕр тĕтĕмлĕ сакльăна вырнаçтарчĕç. Эпĕ юлташăма хампа пĕрле пĕрер стакан чей ĕçме чĕнтĕм, манăн чугун чейник — Кавказра çӳренĕ чухнехи пĕртен пĕр савăнăç — шăпах хампа пĕрлеччĕ.

---

[1] Сакльă — лапчăк тăрăллă, пĕр хутлă пӳрт.
[2] Буркă — кĕççерен çĕлетнĕ плащ.

Саклине пĕр енчен чул ту çумне тĕртĕнтернĕ. Унăн алăкĕ патне шутарса ӳкерекен виçĕ картлашка тăрăх хăпармалла. Аллăмпа хыпашласа кĕтĕм те пĕр ĕне çумне лырса çапăнтăм; ку таврашри сынсем тарçăсем пурăнмалли вырăнта вите тăваççĕ иккен. Ниçта кайса кĕме те пĕлейми пултăм: унта сурăхĕ макăрать, лере йытти хăрлатать. Юрать-ха, тепĕр енче тĕксĕм çутă курăнса кайрĕ, хайхи мана алăк евĕрлĕ пĕр хушă тупма та çăмăлтарах пулчĕ. Кунтан тухсан кăмăла килмелли картинă курăнса кайрĕ: аслă пӳртре туллиех халăх. Тĕтĕмпе хуралнă пӳрт маччи икĕ юпа çинче тытăнса тăрать. Çĕр урай варринче вучах çатăртатса çунать; маччари тĕнĕ витĕр тухакан тĕтĕме çил каялла вĕрсе кĕртет те, шалта нимĕн курăнми пулса тăрать, пайтах вăхăт иртермелле пулчĕ манăн мĕн те пулин куриччен: вут умĕнче икĕ карчăк тата темĕн чухлĕ ача-пăча ларса тухнăччĕ, вĕсемпе пĕрле çĕтĕк-çатăк тумланнă пĕр тип-шĕмрех кăна грузин ларатчĕ. Пирĕн халь нимĕн тума та çукчĕ ĕнтĕ, вут умне лартăмăр та чĕлĕмсене чĕртрĕмĕр. Чейникĕмĕр кăмăллăн чашкăрма тытăнчĕ.

— Мĕскĕн çынсем!— терĕм эпĕ штабс-капитана, хамăрăн таса мар хуçасем çине кăтартса. Лешсем пирĕн çине хытса кайнă пек нимĕн чĕнмесĕр пăхаççĕ.

— Ытла тăр-тар халăх! — терĕ вăл.— Ененетĕр-и? Нимĕн тума та пĕлмеççĕ вĕсем, нимĕне те вĕренме пултараймаççĕ! Пирĕн кабардинецсене е чеченецсене илерха, сăмахран, вĕсем хăйсем, вăрă-хурах та çара пакарта кăна пулин те, нимĕнрен те хăраса тăмаççĕ. Кусенĕн хĕç-пăшал тытмашкăн та кăмăлĕсем туртмаççĕ, пĕрин çинче те йĕркеллĕ кинжал кураймастăн. Каснă-лартнă осетинсем ĕнтĕ!

— Эсир чеченецсем патĕнче нумай пурăннă-и вара?

— Крепоçра ротăпа пĕр вунă çул хушши тăрсаттăм эпĕ унта, Чуллă каçма патĕнче, пĕлетĕр пулĕ?

— Илткеленĕ.

— Вăт, ачам, çав пуç касакансем пире шăлтах йăлăхтарса çитерчĕç-çке, халь ĕнтĕ вĕсем, мухтав турра, кăштах лăпланнă темелле, анчах ĕлĕкрех крепоç картинчен çĕр утăма та пулин уйăрлас пулсан, сана пĕр-пĕр эсрелĕ сыхласах ларать: кăшт асăрханмасан, кĕтсех тăр вара — е пăяв ывăтса мăйăнтан пăваççĕ, е ĕнсӳне пульă туянăн. Пултараççĕ те-çке вĕсем!

— Сирĕн унта темĕн те курма тӳрĕ килчĕ пуль?— тесе ыйтрăм эпĕ пĕлес килнĕрен.

— Ара, тӳрĕ килмесĕр! Куркаланă ĕнтĕ...

Хайхи вăл, пуçне усса, сулахай мăйăхне пĕтĕркелерĕ те шухăша кайрĕ. Манăн темĕн пек мĕнле те пулин пĕр пĕчĕк истори ыйтса пĕлес килетчĕ,— курса çӳренине çыракансен кăмăлĕ пурин те çавнашкал. Çав хушăрах чей те вĕресе тухрĕ; çул çине илсе тухнă икĕ пĕчĕк стакана чемоданран кăларса чей тултартăм та пĕрне ун умне лартрăм. Вăл тутанса пăхрĕ те хăй ăшĕнче çеç каланă пек: «Куркаланă ĕнтĕ!»— тесе хучĕ. Унăн сăмахĕ мана пысăк шанчăк пачĕ. Ватă кавказецсем калаçма та, каласа кăтартма та юратнине пĕлетĕп эпĕ; калаçмашкăн вĕсене хутран-ситрен кăна май килет; тепре, акă, хăй ротипе ăçта та пулин пĕр пилĕк çул хушши пĕр-пĕр тĕттĕм кĕтесре пурăнать, çапах çав пилĕк çул хушшинче те ăна никам та здравствуйте те темест (мĕншĕн тесен фельдфебель *здравия желаю* тет). Калаçас тесен, мĕн çинчен калаçмалли тупăнĕччех. Таврашĕпех чурăс халăх, кунсерен кунта хăрушлăх пур, тĕлĕнмелле ĕçсем те пулса иртеççĕ, ирĕксĕрех вара: пирĕн çавсем çинчен ытла сахал çыраççĕ, тесе шеллетĕн.

— Чейне ромпа хутăштарас теместĕр-и?— терĕм эпĕ хампа калаçса ларакан çынна:— Манăн çутти те пур та, Тифлисран илсе тухни, халĕ ытла сивĕрех,— терĕм.

— Çук, тавах сире, ĕçместĕп.

— Мĕншĕн апла?

— Ахалех. Тарăхса çитнипе, ĕçместĕп тесе, сăмах панă эпĕ. Подпоручикра тăнă чухнех пĕрре эпир пĕринпе сыпкаларăмăр та, çĕрле тревогă пулчĕ; акă хайхи пирĕн, хĕрсе çитнĕскерсенĕн, фрунт[1] умне тухса тăмалла пулчĕ. Пирĕн Алексей Петрович пĕлчĕ те ун çинчен, кайран пире лекрĕ те: ĕнтĕ тура ан хуштарах çавăн пек çилленнине курма! Кĕçех суда паратчĕ. Вăл тĕрĕс те, пĕр хисепрен, тепĕр чухне çулталăк пурăнатăн, акă, никама курмастăн, кунтах тата эрехĕ те пулать — йăлтах пĕтен вара!

Çакна илтнĕ хыççăн эпĕ хам шанчăка çухататăп пулĕ тесеттĕм.

— Акă, черкессенех илер-ха, эппин,— терĕ вăл малалла,— туйра-и, вилĕ пытарнă чухне-и, вĕсем эрех ĕçсе

---

[1] Фрунт — войскăсен вăрçăри стройĕ.

супаççĕ те пуçлаççĕ вара хĕçĕсемпе каскалашма. Пĕррехинче эпĕ хам мирной[1] княç патĕнче хăнара пулнă чух аран-аран çăлăнса юлнăччĕ.

— Мĕнле пулчĕ-ха вăл тата?

— Акă,—чĕлĕмне тултарчĕ те вăл пĕрре ĕмсе илчĕ, вара калама пуçларĕ,— ак çапла пулчĕ вăл: эпĕ ун чухне ротăпа Терек леш енчи крепоçра тăраттăм, унтанпа пилĕк çул иртет ĕнтĕ. Пĕрре, çапла, кĕркунне ĕçмеçимелли япаласем турттаракан лав килсе кĕчĕ, унпа пĕрлех пĕр çирĕм пилĕк çулалла çитнĕ çамрăк офицер килчĕ. Вăл ман пата пĕтĕм формине тăхăнсах пырса кĕчĕ те, хăйне ман пата крепоçра[2] юлма хушнă, терĕ. Хăй çав тери çинçешке те шурăччĕ, çийĕнчи мундирĕ те вĕр-çĕнĕччĕ, çавăнпа эпĕ вăл хамăр пата, Кавказа, килни нумаях та мар иккенне тавçăрса илтĕм. «Сире кунта Российăран куçарнă пулĕ-ха?»— тесе ыйтрăм эпĕ унран.—«Тĕрĕс, штабс-капитан господин»,— терĕ вăл. Ана аллинчен тытрăм та эпĕ: «Питĕ лайăх, питĕ лайăх. Сире кунта кăшт кичемрех пулĕ те, çапах сирĕнпе эпир туслă пурăнăпăр-ха... Манăн çакна калас тата, эсир мана тӳрех Максим Максимыч тесе чĕнĕр... мĕне кирлĕччĕ ĕнтĕ çакăн пекех чыслă тумланса килмешкĕн? Ман пата кирек хăçан та эсир карттусăра кăна тăхăнса килĕр»,— терĕм эпĕ. Ана хайхи хваттер тупса патăмăр та, вăл пурăнмаллипех крепоçа куçрĕ.

— Мĕн ятлăччĕ вăл?— тесе ыйтрăм эпĕ Максим Максимычран.

— Ятне... Григорий Александрович Печорин, теттĕмĕр ăна. Тӳррипех калам сире, кăмăллă çынччĕ вара; анчах кăшт тĕлĕнмеллерехчĕ. Сăмахран, акă, çумăрта е сивĕре яра куна кунĕпех сунарта çӳретчĕ вăл; пурте шăнатчĕç, ĕшенсе çитетчĕç, уншăн вара нимĕн те марччĕ. Тепĕр чухне тата килĕнчен те тухмастчĕ, кăштах çил вĕркеленĕ вăхăтра кантăк умне ларсан та, шăнса пăсăлтăм тесе, ĕнтĕркеме тытăнатчĕ; чӳрече хупăлчи уçăлса хупăннипех шарт сиксе илетчĕ хăй, кăвакарса каятчĕ, хăй çапах хир сысни тытмашкăн та пĕр-пĕччен çӳретчĕ, ăна хам та курнă, хăш чухне, калăпăр, темиçе сехетре те унран пĕр сăмах ыйтса пĕлеймĕн, тепĕр чух-

---

[1] Мирной — вăрçа хутшăнманскер.

[2] Вăл вăхăтра офицерсене хăш-пĕр чухне дуэльте пулнăшăн тата патшалăха хирĕçле ĕçсем тунăшăн крепоçа куçарнă.

не вара калаҫма пуҫлатчӗ те ăш ыратичченех култаратчӗ, ҫаплаччӗ ҫав, питӗ те тӗлӗнмелле сынччӗ вăл; пуянччӗ пулас хăй: хаклă япаласем нумайччӗ унăн!..

— Чылай пурăнчӗ-и вăл сирӗнпе пӗрле?— тесе ыйтрăм эпӗ каллех.

— Ҫулталăка яхăн. Ҫавăн чухлӗ кăна пулсан та, манас ҫук ăна эпӗ. Чылай пăтăрмах кăтартрӗ вăл мана, калама та вырăнлă мар! Чăнах, пулаҫҫӗ-ҫке ҫавăн пек сынсем, вӗсемпе калама ҫук тӗлӗнмелле япаласем пулассине малтанах ҫырса хунă темелле!

— Тӗлӗнмелле япаласем тетӗр-и?— терӗм эпӗ, ăна чей тултарса панă май хамăн пӗлес килнине ун умӗнче пытараймасăр.

— Акă, сире каласа парам-ха эппин. Крепоҫран ултă ҫухрăмалла пӗр мирной кнеҫ пурăнатчӗ. Унăн ывăле, пӗр вун пилӗк ҫулхискер, пирӗн пата ҫӳреме иленчӗ: кун сиктермесӗр пыратчӗ вăл, пӗрре унăн ҫавна тумалла пулать, тепре тата темӗн тумалла, тесе. Ăна эпир Григорий Александровичпа иксӗмӗрех иртӗхтерсе ятăмăр пулас. Хăй те питӗ ҫивӗч ачаччӗ, мӗн кирлине пурне те тăватчӗ: утпа ут-вӗттин вӗҫтерсе пынă чух ҫӗртен ҫӗлӗк илмеллеччӗ-и е пăшалпа пемеллеччӗ-и — пурне те пултаратчӗ. Анчах унăн пӗр лайăх мар йăла пурччӗ: укҫашăн вилсе каятчӗ вара. Пӗррехинче ҫапла Григорий Александрович кулас тесе кăна: эсӗ аҫу кӗтӗвӗнчен чи лайăх качака такине вăрласа килсен, сана вунă тенкӗ парăп тесе каланă. Мӗн тейӗр эсир? Тепӗр каҫхинех вăл такине мăйракинчен ҫавăтса килчӗ. Хăш чухне эпир ăна вăрҫтарма юрататтăмăр та, унăн куҫӗсем юнпа хӗрелсе тулатчӗҫ, ҫавăнтах кинжалне ярса тытатчӗ вара. «Эй, Азамат, санăн пуҫу чӗрӗ юлаймӗ, яман[1] пулӗ санăн пуҫна!»— теттӗм вара ăна.

Пӗрре ҫапла ватă кнеҫ хăеx пире туя чӗнме пычӗ: аслă хӗрне качча паратчӗ вăл, эпир вара унпа кунаксемччӗ[2], тăраймастăн вӗт ӗнтӗ пымасăр, вăл тутар пулин те, хăвăрах пӗлетӗр. Кайрăмăр... Аулра темӗн чухлӗ йытăсемччӗ, вӗсем пире хаяррăн вӗрсе хирӗҫ чупса тухрӗҫ. Хӗрарăмсем пире курсанах кӗрсе пытанчӗҫ, эпир куркаланнисенчен сар пике темеллисемех ҫукчӗ ҫав. «Черкес хӗрарăмӗсем питӗ хитре тесе шутланăччӗ

[1] Яман — япăх, начар.
[2] Кунаксем — туссем: пӗр-пӗрин патне хăнана ҫӳрекенсем.

эпĕ»,— терĕ мана Григорий Александрович. «Тăхтăрха!»—терĕм эпĕ кулкаласа. Пуçăмра урăхла шухăш пурччĕ манăн.

Княç патĕнче пӳрт тулли халăхчĕ. Азиатсен йăли çавăн пек: кама курнă, кама тĕл пулнă, çавсене пурне те туя чĕнеççĕ. Пире кунта питĕ хисеплĕ йышăнчĕç, тĕпеле кĕртрĕç. Эпĕ çапах та хамăр лашасене ăçта тăратнине асăрхама ĕлкĕртĕм, кĕтмен çĕртен темĕн те пулма пултарать-çке.

— Туйне мĕнле ирттереççĕ вара вĕсем?—тесе ыйтрăм эпĕ штабс-капитанран.

— Яланхи пекех. Малтан вĕсене пĕр-пĕр мулла Коранран[1] темĕскер вуласа парать; унтан вара çĕнĕ çынсемпе вĕсен мĕн пур тăванĕсене парне параççĕ, ханисем çиеççĕ, эрех ĕçеççĕ; унтан джигитовка пуçланать; кирек хăçан та вара пĕр-пĕр çапкаланчăк, таçта вараланса пĕтнĕскер, лăкăшти уксах лашине утланать те хуçкаланать, тăрăхлать, ырă çынсене култарать; кайран акă, каç пула пуçласан, хăнасем пухăннă çĕрте, пирĕнни пек каласан, бал пуçланать. Пĕр-пĕр мĕскĕн старик виçĕ хĕлĕхлĕ япалапа кĕвĕ калать... темĕнле купăс тетчĕç-ха вĕсем çавна, пирĕн балалайкă евĕрлĕскер. Хĕрсемпе çамрăк йĕкĕтсем пĕр-пĕринпе хире-хирĕç икĕ йĕркен тăрса тухаççĕ те алă çупса юрлаççĕ. Хĕрпе каччă варрине тухса тăрать, вĕсен хăйсен асне мĕн килет, çавна пĕрне-пĕри такмакласа параççĕ, ыттисем вара пĕр харăс юрлама тытăнаççĕ. Эпир Печоринпа çапла хисеплĕ кĕрекере лараттăмăр, акă хайхи ун патне хуçан вун ултă çулхи кĕçĕн хĕрĕ пырса тăчĕ те, мĕнле калас иккен?.. ну, комплимент пекскерне ăна юрласа пачĕ.

— Мĕн юрласа пачĕ-ха вăл, ас тăваймастăр-и?

— Чимĕр-ха: «Пирĕн çамрăк йĕкĕтсем яштак та, имĕш, вĕсен сăхманĕсене те кĕмĕлпе тĕрленĕ иккен те, анчах вырăс çамрăк офицерĕ вĕсенчен яштакарах, галунĕсем[2] унăн ылтăнран. Вăл вĕсем хушшинче тирек пек курăнать; ăна ӳсе ешерме кăна пӳрмен пирĕн садра»,— тесе юрлать, Печорин çĕкленчĕ, пуç тайрĕ ăна, аллине хăй çамки патне, унтан чĕри патне тытрĕ те

[1] Коран — магометансен тĕн кĕнеки.

[2] Галунсем — çар çыннисен тумĕсем çине çĕлекен ылтăн е кĕмĕл хăю.

мана таварса калама ыйтрĕ, эпĕ вĕсемпе калаçма лайăх пĕлеттĕм те унăн сăмахĕсене куçарса патăм.

Хĕр уйрăлса кайсан, эпĕ Григорий Александровичран: «Ну, мĕнле пек?»—, тесе пăшăлтатса ыйтрăм.

— Питĕ чипер, мĕн ятлă вăл?— терĕ Григорий Александрович.

— Бэла ятлă,— терĕм эпĕ.

Чăнах та, хĕр питĕ чиперччĕ: çўллĕ кăна, хўхĕмскер, хир качаканни пек хура куçĕ чĕрене кĕрсе ăшăтатчĕ. Шухăша кайнă Печорин ун çине куçне илмесĕр пăхса тăчĕ. Хĕр те ун çине час-часах куç айĕн пăхкаласа илчĕ. Анчах пĕр Печорин кăна мар иккен ытараймасăр пăхса тăнă княçăн хĕрне: пўлĕм кĕтессинчен ун çине тата тепĕр çулăмлă мăшăр куç сикмесĕр пăхса тăнă. Эпĕ тинкеререх пăхрăм та çапла, хамăн ĕлĕкхи паллана Казбича асăрхарăм. Те мирнойччĕ вăра вăл, те мирной марччĕ — пĕлсе те илейместĕп. Ăшкăннине хам асăрхаман пулин те, таврара ăна шансах пĕтерместчĕç. Хăш чухне вăл пирĕн пата крепоçа такасем илсе пыратчĕ те йўнĕ хакпах сутса хăвáратчĕ, нихăçан та хаклашса тăмастчĕ вара: хăй мĕн чухлĕ ыйтать, çавăн чухлĕ пар, пуссан та урăх чакмастчĕ. Вăл Кубань таврашĕнче абрексемпе[1] сĕтĕрĕнме юрататать тесе калаçатчĕç. Чăннипе калас-тăк, унăн пит-куçĕ вăрă-хурахсенни пекеччĕ вара: пĕчĕккĕ типшĕмрех кăна та анлă хул пуççиллĕскерччĕ... Вичкĕнччĕ вара хăй, шуйттан пек вичкĕнччĕ! Бешмечĕ унăн яланах çурăкчĕ, саплăклăччĕ, хĕç-пăшалне çапах та кĕмĕлпе тыттарса пĕтернĕччĕ. Лаши вара унăн пĕтĕм Кабардипе мухтава тухнăччĕ,— чăнах та, çав лашаран та лайăхраххине аса илме те çукчĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ ун лашине хĕрĕнекенсем чылай пулнă та, май килмен. Акă, халь аса илетĕп те эпĕ çав лашана, тĕлĕнетĕп, тикĕт пек йăм-хураччĕ, урисем — хĕлĕх пек, куçĕ вара Бэла куçĕнчен пĕртте кая мар; вăйĕ мĕнлеччĕ тата ун! Аллă çухрăм пĕр чарăнми чуптар хуть, ăна тата çав тери лайăх вĕрентсе çитернĕччĕ — хуçа хыçĕнчен йытă пек чупатчĕ; сассине те уйăратчĕ унăнне! Ăна вăл нихçан та кăкармастчĕ. Шăпах хурахсен лашиччĕ çав ĕнтĕ...

---

[1] Абрек — ĕлĕк Кавказ тăвĕ таврашĕнчи хастар çапăçакан çын, çапăçура вăл, вĕчче таварăс тесе, час-часах хăй пурнăçне те хĕрхенмен.

Çав каçхине Казбич яланхи пек мар тĕксĕмрехчĕ, бешмечĕ айне кольчугă[1] тăхăннине те асăрхарăм эпĕ. «Ахаль мар вăл кольчугă тăхăннă, вăл мĕн те пулин тăвасшăнах»,— тесе шухăшларăм эпĕ.

Сакльăра пăчă пулса çитрĕ те, уçălма тесе, эпĕ тула тухрăм. Тусем çине каç сăнĕ çапнăччĕ, ту хушшинче тĕтре юхма пуçларĕ.

Манăн хамăр лашасем тăракан аслăк айне çитсе курас килчĕ, унта ут çимĕçĕ пурри-çуккине пĕлесшĕн пултăм, тата сыхланарах тăни нихăçан та ытлашши пулмасть: лашам манăн лайăхчĕ, ун çине кабардинецсем час-часах ăмсанса пăхатчĕç те: якши тхе, чек якши[2] текелесе йăнкăлтататчĕç.

Хӳме çумĕпе утса пыратăп та çапла, сасартăк тем калаçкаланине илтетĕп: пĕр сассине тӳрех уйăрса илтĕм: вăл чарусăр Азамат сассиччĕ, хамăр хуçа ывăлĕ; тепри вара сайрарах та хуллентерех калаçать. «Мĕн çинчен канашлаççĕ кунта вĕсем?»— тесе шухăшларăм эпĕ: «Хамăн лаша çинченех мар-и?»— терĕм. Хайхи, хӳме çумне пĕшкĕнсе лартăм та итлесе тăратăп, хам пĕр сăмах та сиктересшĕн мар. Хутран-ситрен сакльăран юрлани те илтĕнет, мана итлемешкĕн кансĕр.

— Чаплă-çке санăн лашу!— тет Азамат,— енчен эпĕ килте хам хуçа пулсан, виç çĕр лаша таран кĕтӳ тытсассăн, сан урхамахушăн çур кĕтĕвĕме панă пулăттăм, Казбич!

«Казбич иккен!»— тесе шухăшларăм та эпĕ вăл кольчугă тăхăннине аса илтĕм.

— Тĕрĕс,— терĕ Казбич пăртакçă чĕнмесĕр тăнă хыççăн: — ун пеккине пĕтĕм Кабардара та урăх тупаймастăн. Пĕрре эпир абрексемпе пĕрле Терек леш енне кайрăмăр та вырăссен лаша кĕтĕвне çавăрса илме тытăнтăмăр; телейĕмĕр пулман пирки пурсăмăр та тĕрлĕ çĕре сапаланса пĕтрĕмĕр. Ман хыççăн тăватă казак вĕçтерсе пыратчĕç; хыçăмра гяурсем[3] кăшкăрашнине те илте пуçларăм эпĕ, хам умрах тата çăра кăна сĕм вăрман сарăлса ларать. Эпĕ йĕнер çинерех лăпчăнтăм та, Аллаха[4] шанса, утăма пĕрех пушăпа сăтăрса илтĕм, унччен

[1] Кольчугă — тимĕр ункăсем тирсе тунă кĕпе еверлĕ тăхăнмалли япала.

[2] Якши тхе, чек якши — лайăх лаша, пит лайăх.

[3] Гяур — урăх тĕн тытакан.

[4] Аллах — магометансен турри.

ăна пĕрре те çапса кӳрентерменччĕ-ха. Утăм кайăк пек чăмрĕ турат хушшипе; йĕплĕ хулă йывăççисем ман тумтире йăлтах çурса пĕтерчĕç, карагачăн[1] типĕ турачĕсем питрен çапăнса юлаççĕ. Манăн ут тункатасем урлă сике-сике пырать, ăмăрĕпе туратсемпе йывăç тĕмисене сирсе вĕçет. Ана вăрман хĕррине пăрахса хăварса, хам çуранах вăрманалла кĕрсе пытаннă пулсан, лайăхрах пулнă пулĕччĕ ĕнтĕ, анчах ăна ытла хĕрхентĕм эпĕ — ăрăмçă çăлса хăварчĕ вара мана. Пуç çийĕнченех темиçе пульă шăхăрса иртрĕ; учĕсем çинчен аннă казаксем хыçăмран чупнине те илтетĕп акă... Пĕр самантрах ман ума пĕр тарăн çырма тухса тăчĕ; урхамахăм кăштах шухăшласа тăчĕ те — тӳрех сикрĕ. Унăн кайри ури чĕрнисем çыранран хăпса кăна кайнăччĕ, малти урисем çинче вăл аран çакăнса тăма ĕлкĕрчĕ. Эпĕ чĕлпĕре вĕçертрĕм те çырма тĕпнелле вăркăнтăм, шăпах, çапла туса, лашана çăлса хăвартăм: вăл сиксе те тухрĕ. Казаксем çакна пĕтĕмпех курса тăчĕç, анчах мана шырама çырма тĕпне пĕри те анмарĕ; вĕсем мана ӳксе вилчĕ тесе шутларĕç пулас: пурте ман лашана тытма чупрĕç. Чĕрем юнпа çăвăнать; çырма тăрăх çăра курăк хушшипе шуса иртрĕм те,— пăхатăп: вăрман пĕтрĕ, темиçе казак уçланкă учĕсене уттарса тухрĕç, çавăнтах манăн Карагез та тӳрех вĕсен умне сиксе тухрĕ, ак хайхисем пурте кăшкăрашса ун хыççăн ыткăнчĕç: теменччен хăваларĕç вĕсем ăна, уйрăммăнах пĕри ик-виçĕ хутчен те кĕçех ăна йăлмакпа тăхăнтартса тытатчĕ; эпĕ сехĕрленсе ӳкрĕм, пуçăма усрăм та кĕл тума тытăнтăм. Кăштах тăрсан пуçа çĕклесе пăхатăп та куратăп: манăн Карагез хӳрине вĕлкĕштерсе çил пек ирĕккĕн çĕмĕрттерсе килет, гяурсем хăйсен ывăнса çитнĕ лашисемпе пушă хирте таçта аякра тăрса юлнă. Валлах[2] тĕрĕссипе калатăп, пĕтĕмпех тĕрĕс! Мĕн тĕттĕм пуличченех çырмара лартăм эпĕ. Мĕн тейĕн çав, Азамат? Сасартăк тĕттĕмре илтетĕп акă, çыран хĕррипе ут чупать, тулхăрать вăл, кĕçенет, урисемпе çĕре кукалет; эпĕ хамăн Карагеза сассинчен палларăм: вăлах пулчĕ çав, манăн çывăх юлташ!.. Çавăнтан вара эпир пĕрре те уйрăлман.

Вăл хăйĕн урхамахне, тĕрлĕрен ачаш ятсем парса, яка мăйĕнчен аллипе лăпкăн ачашлани илтĕнчĕ.

---

[1] Карагач — йывăç.

[2] Валлах — Аллах ячĕпе тупа тăватăп тени

— Манăн пĕр пин кĕсреллĕ кĕтӳ пулнă пулсан,— терĕ Азамат,— пĕр Карагезшăнах пĕтĕмпе сана панă пулăттăм.

— Йок [1], кирлĕ мар,— терĕ Казбич лăпкăн.

— Итле-ха, Казбич,— терĕ Азамат йăпăлтатса,— эсĕ ырă çын, эсĕ хăюллă джигит, ман атте акă вырăс-сенчен хăрать те мана ту çине кăлармасть, пар мана хăвăн утна, сана уншăн мĕн кирлĕ, йăлтах парăп, аттен чи лайăх винтовкине е хĕçне вăрласа килĕп те сана парăп, кала, мĕн кăна кирлĕ сана,— хĕçĕ унăн чăн-чăн гурда [2], çивĕччине аллу çумне тыт кăна, хăех ӳте касса кĕрет, санăнни пек кольчугă вара уншăн нимĕне те тăмасть.

Казбич чĕнмерĕ.

— Сан лашуна пĕрремĕш хут курнă чух,— терĕ Азамат малалла,— вăл сăмси шăтăкĕсене карăнтарса, айăнта ташласа çеç тăратчĕ, чĕрни айĕнчен вут сирпĕнсе вылянатчĕ, çавăнтан вара хама та паллайми пултăм эпĕ, мана нимĕн те илĕртми пулчĕ: аттен чи лайăх урхамахĕсем çине эпĕ те йĕрĕнсе лăха пуçларăм, вĕсене утланса тухмашкăн та намăсчĕ, йăлтах хуйха кайнăччĕ-çке эпĕ, кунĕ-кунĕпе чул ту çинче кулянса лараттăм, минутсерен тенĕ пек ман ума санăн хура урхамаху хăйĕн илемлĕ уттипе, çĕмрен пек тӳрĕ, яка çурăмĕпе тухса тăрассăн туйăнатчĕ; вăл сăмах каласшăн пек, вичкĕн куçĕсемпе мана куçран пăхнă пекчĕ. Енчен эсĕ ăна мана сутмасан, эп вилетĕп, Казбич!— терĕ Азамат чĕтрекен сасăпа.

Вăл йĕрсе янă пек те туйăнчĕ мана: тӳррипех калас пулать сире, Азамат калама çук кутăн ачаччĕ, ача чухнех вăл нихçан та куççульне кăлармастчĕ.

Вăл йĕнине хирĕç темĕнле кулса янă пек сасă илтĕнчĕ.

— Итле!— терĕ Азамат çирĕп сасăпа,— куратăн-и акă, эпĕ тем тума та хатĕр. Кирлех пулсан, эпĕ сан валли халех хамăн аппана вăрласа килĕп. Кирлĕ-и? Епле ташлать вăл, епле юрлать! Тĕрĕ тунă чух ылтăнпа тĕрлет те — тĕлĕнсе кайăн! Тĕрĕк падишахĕн те ун пек арăм пулман... Кирлĕ-и? Ыран каçпа кĕтсе тăр мана çав юхан шыв патĕнчи ту хушшинче: эпĕ унпа пĕрле

[1] Йок — çук.
[2] Гурда — чи лайăх йышши хеç

кӳршӗ аула каятӑп,— вӑл вара санӑн пулӗ. Бэла санӑн урхамахна тӑмасть-и вара?

Казбич темӗнччен пӗр сӑмах та чӗнмерӗ. Тӑрсан-тӑрсан тин вӑл тавӑрса калас вырӑнне авалхи юрра хуллен тӑсса ячӗ [1]:

Пирӗн ялсенче нумай чипер хӗрсем,
Ҫӑлтӑр пек ҫунаҫҫӗ вӗсен куҫӗсем.
Вӗсене савма шӑпа питех хитре,
Йӗкӗтӗн анчах хавасӗ ирӗкре.
Ылтӑн тӑватӑ арӑм илет.
Урхамах, ун хакӗ — ылтӑнран ирттерет.
Вӑл пуш хирти ҫилсенчен те юлмасть,
Вӑл сивӗнмест, вӑл улталамасть.

Азамат ӑна кӑлӑхах кунӑҫма йӑлӑнчӗ, куҫҫульне те тӑкрӗ, йӑпӑлтатса та пӑхрӗ, тупа та турӗ; юлашкинчен Казбич ӑна чӑтаймасӑр татса пӳлчӗ:

— Кай кунтан, ӑссӑр ача! Аҫта сана ман ут ҫине ларма! Вӑл сана виҫӗ утӑмранах ӳкерсе хӑварать, чул ҫине ӳксе ӗнсӳне хуҫасшӑн-им?

— Эпӗ-и!— тесе урса кайрӗ Азамат, унтан хӑйӗн пӗчӗк кинжалӗпе кольчугӑна чанкӑртаттарчӗ. Вӑйлӑ алӑ ӑна аяккалла тӗртсе ячӗ те, вӑл карта ҫатанне пырса ҫапӑнса кисрентерчӗ. «Пулать-ха мыскара»,— тесе шухӑшласа илтӗм эпӗ; вите патнелле чупрӑм, унтан хамӑр лашасене ҫаварлӑхласа, хыҫри картишне ҫавӑтса тухрӑм. Икӗ минутранах сакльӑра акӑш-макӑш шӑв-шав пуҫланчӗ. Акӑ мӗн пулнӑ иккен унта. Азамат хӑйӗн ҫурӑк бешмечӗпе чупса кӗнӗ те, имӗш, Казбич мана чиксе пӑрахма тӑчӗ, тенӗ пулать. Хайхисем пурте тула сиксе тухрӗҫ, пӑшалӗсене ярса тытрӗҫ — пуҫланчӗ вара мыскара. Кӑшкӑрашу та шав, пӑшал пенӗ сасӑсем; Казбич ҫеҫ утне утланнӑччӗ, халӑх хушшинче хӗҫӗпе сулкаласа урам тӑрӑх эсрелӗ пек ҫаврӑнкаларӗ. «Ют ӗҫкӗри мухмӑр — начар япала»,— терӗм те эпӗ Григорий Александрович аллинчен тытса:—Пирӗн кунтан часрах шӑвӑнни лайӑхрах пулӗччӗ!— терӗм.

— Кӗтер-ха кӑштах, мӗнпе пӗтет.

— Мӗнпе пӗтесси паллах ӗнтӗ, начар пулать кунта, ку азиатсен йӑли ҫавӑн пек: эрех кӳпсе тултарчӗҫ-ин,

[1] Эпӗ вулакансенчен Казбич юррине сӑвва хунӑшӑн ан айӑп тусамӑр тесе ыйтатӑп, паллах, ӑна мана прозӑпа каласа панӑ, анчах хӑнӑхни — иккӗмӗш натурӑ (Лермонтов асӑрхаттарни).

чикĕшмех тытăнаççĕ!— Эпир утсем çине утлантăмăр та килелле вĕçтертĕмĕр.

— Казбича мĕн пулнă вара?— чăтаймасăр ыйтрăм эпĕ штабс-капитанран.

— Мĕн пултăр иккен ун пек çынсене!— терĕ вăл, стаканри чейне ĕçсе ярса,— тарса хăтăлнă!

— Суранланман та пулнă-и?— тесе ыйтрăм эпĕ.

— Турă пĕлет-и ăна! Хурахсем те вилмеççĕ! Вĕсене эпĕ курkаланă та, сăмахран, акă, штыксемпе чикĕшсе пĕтĕмпех ала пек шăтса пĕтнĕ, хăй çапах та хĕçĕпе юнать-ха,— штабс-капитан пăртак чĕнмесĕр тăнă хыççăн çĕре урипе тапрĕ те малалла калама пуçларĕ.

— Çакăншăн каçарас çук вара хама нихçан та: шуйттанĕ илĕртрĕ-и мана крепоçа пырсан хам мĕн илтнине йăлтах Григорий Александровича каласа памашкăн; вăл кулкаларĕ — чееччĕ хăйне кура!— çав вăхăтрах мĕн те пулин тума шутласа та хунă.

— Мĕн тума-ши? Каласа парсамăр эппин.

— Нимĕн те тума çук вĕт! Калама пуçланă-тăк, каласа пĕтермеллех ĕнтĕ.

Çакăнтан вара пĕр тăватă кун иртсен Азамат крепоçа пычĕ. Яланхи пекех вăл Григорий Александрович патне кĕчĕ, ăна вăл кирек хăçан та тутлă çимĕçсемпе хăна тăватчĕ. Эпĕ те унтах. Лашасем çинчен сăмах хускатрĕç те, Печорин Казбич лашине мухтама тытăнчĕ: вăл çав тери çивĕч те, хитре те, хир качаки пекех, тет,— ĕнтĕ, ун сăмахĕпе калас пулсан, çавăн пек лаша пĕтĕм тĕнчипе те урăх çук, темелле.

Тутар ачин куçĕсем йăлтăртатса çуталчĕç. Печорин ăна асăрхаман пек тăвать; эпĕ сăмаха урăх еннелле пăрма тăрăшатăп, вăл пур — куç кĕретех пирĕн сăмаха Казбич лаши çинех сулăнтарать. Азамат пирĕн пата пымассерен çакăн пек истори пулса иртетчĕ. Виçĕ эрне иртсен, хайхи Азамат темĕнле шурăхса та типсе пынине асăрхарăм, шалтах романсенчи юратури пек ĕнтĕ. Мĕн пулса тăчĕ, тетĕп...

Каярахпа кăна пĕтĕмпе пĕлсе çитрĕм акă: Григорий Александрович çав тери йĕкĕлтесе çитернĕ иккен ăна, хуть те шыва сик. Пĕррехинче вăл ăна çавăн пек кала та хур: «Пăхатăп та, Азамат, çав ут питĕ килĕшрĕ пуль сана, анчах эсĕ ху ĕнсӳне курайман пекех нихçан та ăна кураймăн,— терĕ». «Кала-ха эппин, çав лашана сана парсан, мĕн тăваттăнччĕ эсĕ?»— тесе илĕртрĕ вăл ачана.

— Мĕн тумалла, çавна пĕтĕмпех тăвăттăм,— терĕ Азамат.

— Эппин сана тупса паратăп ăна эпĕ... Сăмахна тытатăп тесе тупа ту!

— Тупа тăватăп... Эсĕ те тупа ту!

— Питĕ лайăх! Лаша санăн пулĕ тесе тупа тăватăп; анчах мана эсĕ унщăн Бэла аппуна пар: Карагез унăн хулăмĕ пулĕ. Çапла тусан саншăн та тупăшлă пулма кирлĕччĕ.

Азамат чĕнмерĕ.

— Килĕшместĕн пулсан, кирек мĕн ту! Эпĕ сана арçын пулĕ терĕм, эсĕ ача кăна иккен-ха, сана юлан утпа çӳреме ытла ир...

Азамат хĕремесленсе кайрĕ. «Атте вара мĕн калĕ?»— терĕ вăл.

— Вăл ниçта та каймасть-и вара?

— Чăнах та-çке...

— Килĕшетĕн-и çапла?..

— Килĕшетĕп,— тесе пăшăлтатрĕ Азамат, вилнĕ пек кăвакарса.—Хăçан вара?— Акă Казбич кăна кунта килтĕр: вăл кунта пĕр вунă така илсе килме пулнăччĕ; ытти — ман ĕç пулĕ. Ас ту эппин, Азамат!

Хайхисем ĕçе майлаштарнă та... тĕрĕссипе каласан, питĕ начар ĕç! Кайран эпĕ Печорина хăйнех каларăм та, анчах вăл: чурăс черкес хĕрĕ ман пек савнă упăшкипе телейлĕ пулĕ, терĕ, мĕншĕн тесен кунти йăлапа эпĕ çапах та унăн упăшки пулăп, Казбич хураха вара пĕрре асăнтармаллах, терĕ вăл мана. Хăвăрах шутлăр-ха ĕнтĕ, мĕн каламаллаччĕ ман ăна хирĕç?.. Ун чухне эпĕ вĕсем çапла пĕр кавара килнине нимĕн те пĕлмен. Ак хайхи пĕррехинче Казбич пычĕ те, такасем тата пыл кирлĕ мар-и сире, тесе ыйтрĕ; эпĕ ăна тепĕр кун илсе килме каласа ятăм. «Азамат!— терĕ Григорий Александрович:—Карагез ыран ман алăра пулать; паян çĕрле Бэлăна кунта илсе килмесен, эсĕ Карагеза нихçан та кураймăн...»

— Юрĕ!— терĕ те Азамат, аула вĕçтерчĕ. Каçхине Григорий Александрович пăшалне çакрĕ те крепоçран тухса кайрĕ: ĕçне мĕнле тунă вĕсем, пĕлейместĕп,— анчах çĕрле çаксем иккĕшĕ те таврăннă, часовой çеç Азамат йĕнерĕ урлă хĕрарăм выртнине курса юлнă, хĕрарăмăн аллисемпе урисене çыхса хунă пулнă, пуçне пĕркенчĕкпе пĕркенĕ.

— Лаши мĕнлеччĕ?— тесе ыйтрăм эпĕ штабс-капитанран.

— Халех. Халех. Тепĕр кунне ирпе ирех Казбич пырса çитрĕ, сутма тесе вăл пĕр вунă така ертсе килчĕ. Лашине хÿме çумне кăкарчĕ те ман пата кĕчĕ, эпĕ ăна чей ĕçтертĕм; хурах пулин те, манăн хăначчĕ-çке-ха вăл.

Эпир унпа ун-кун çинчен сăмах сÿтме тытăнтăмăр... Унччен те пулмарĕ, пăхатăп. Казбич шартах сикрĕ, сăнран улшăнчĕ, тÿрех чÿрече патнелле ыткăнчĕ: чÿречи-инкекĕ — картиш еннелле пăхатчĕ.— «Мĕн пулчĕ сана?»— терĕм эпĕ.

— Манăн лашам!.. Лашам!— терĕ вăл, чĕтреве ÿксе.

Хама та лаша ури сасси илтĕннĕ пек туйăнчĕ: «Пĕр-пĕр казак килсе çитрĕ пулĕ»,— тесеттĕм.

— Çук! Урус яман, яман! [1]— тесе кăшкăрса ячĕ те тискер барс пек ним тума пĕлмесĕр тухса чупрĕ вăл. Пĕр-иккĕ сиксенех картишне çитрĕ, крепоç хапхи патĕнчи часовой унăн çулне пăшалпа пÿлсе хунăччĕ, вăл пăшалĕ урлах сиксе каçрĕ те çул тăрăх чупрĕ... Инçетре тусан тусать. Азамат йăлттам Карагезпа сиккипе вĕçтерет. Казбич чупса пынă çĕртех пăшалне йĕннинчен туртса кăларчĕ те персе ячĕ. Пĕр самант хушши вăл хăй вырăнĕнче пĕр сикмесĕр тăчĕ, унтан тивертейменнине пĕлчĕ те çухăрса ячĕ; пăшалне чул çине çĕклесе çапса пĕтĕмпех салатрĕ, вара çĕре ÿкрĕ те пĕчĕк ача пек макăрса ячĕ... Часах ун тавра крепоçри халăх пухăнчĕ; вăл никама та курмасть, лешсем кăлаçкаларĕç-калаçкаларĕç те сапаланчĕç, эпĕ такашăн памалли укçана ун çумне хума хушрăм; Казбич ăна тĕкĕнсе те пăхмарĕ, ÿпне ÿкнипех вăл вилнĕ пек выртрĕ. Ĕненетĕр-и эсир, вăл çапла çĕрлечченех, мĕн çĕр каçиччченех хускалмасăр выртрĕ. Тепĕр кунхине вара ирпе крепоçа пычĕ те ун лашине вăрласа каяканăн ятне калама ыйтрĕ. Лашине салтса утланса тараканĕ Азамат пулнине куракан часовой хăй курни çинчен тунма шутламан ĕнтĕ. Çав ята илтсенех Казбичăн куçĕ çиçсе илчĕ, вăл вара Азамат ашшĕ пурăнакан аула тухса кайрĕ.

— Ашшĕ епле вара?

— Ана курман çав Казбич; вăл пĕр ултă кунлăха таçта тухса кайнă пулнă, вăл килĕнче пулнă пулсан, епле вара Азамат хăй аппăшне вăрлама пултартăр-ха?

Ашшĕ килне таврăннă çĕре хĕрĕ те, ывăлĕ те пулман. Азамат чее пулнă çав: пĕр çаклансан пуçĕ

тĕрĕс-тĕкел юлас çуккине тавçăрса илнĕ-мĕн. Çавăнтан вара çухалнă та: пĕр-пĕр абрексен шайккине кĕнĕ те ĕнтĕ вăл чăрсăр пуçне таçта çав Терек е Кубань леш енче хунă пулмалла; çав кирлĕ те ăна!..

Тӳррипех калас-ха, ман пая та самай инкек тупăнчĕçке. Черкес хĕрĕ Григорий Александрович патĕнче иккенне пĕлсенех эпĕ эполетлă тумтирĕме тăхăнтăм та шпагă çакса ун патне пытăм.

Вăл малти пӳлĕмĕнче вырăн çинче выртатчĕ, хăрах аллине ĕнси хыçне хунăччĕ, тепринпе сӳннĕ чĕлĕмне тытнăччĕ; иккĕмĕш пӳлĕмне кĕмелли алăкне çăрапа питĕрнĕ, уççи çăра шăтăкĕнче çукчĕ. Çаксене пурне те çинчех асăрхарăм эпĕ... Усĕркелерĕм те атă кĕлисемпе алăк уратине шаккакаларăм,— вăл илтмĕш пулма хăтланчĕ.

— Прапорщик господин!— терĕм эпĕ хытă сасăпа,— курмастăр-и вара эпĕ хăвăр пата килнине?

— Ах, Максим Максимыч, сывлăх сунатăп! Чĕлĕм туртас теместĕр-и?— терĕ вăл, вырăн çинчен çĕкленмесĕр.

— Чимĕр-ха! Эпĕ Максим Максимыч мар: эпĕ штабс-капитан.

— Пур пĕрех. Чей ĕçес теместĕр-и? Пĕлсемĕрччĕ эсир эпĕ мĕнпе хертленнине!

— Пурне те пĕлетĕп,— терĕм эпĕ, кравать патне çывхарса.

— Апла тата лайăхрах: манăн каласа та кăтартас килмест-ха.

— Прапорщик господин, эсир айăпа кĕтĕр, уншăн манăн та ответ тытмалла пулать...

— Çитĕ ĕнтĕ сире! Мĕнле инкек пултăр-ха? Пирĕн тахçантанпах пурте çурмаран-çке.

— Мĕн шӳт тăвасси пултăр! Парăр кунта шпагăра!

— Митька, илсе кил-ха шпагăна!..

Митька шпагине илсе пычĕ. Хамăн ĕçе пĕтерсен, ун патне кравать çине пырса лартăм... «Итле-ха, Григорий Александрович, тӳррипех кала, лайăх мар вĕт капла»,— терĕм эпĕ.

— Мĕн лайăх марри?

— Эсĕ Бэлăна вăрттăн илсе килни... Ух, çав Азамата!.. Ну, тӳррипех каласа пар-ха,— терĕм эпĕ ăна.

— Юрататăп ăна эпĕ, мĕн тăвас ĕнтĕ манăн?..

Мĕн калăн-ха çакна хирĕç?.. Эпĕ нимĕн тума пĕлмерĕм. Çапах та, ашшĕ ăна ыйта пуçласан, тытса тăма юрамасть, терĕм эпĕ ăна кăшт чĕнмесĕр ларнă хыççăн.

— Кирлĕ те мар.

— Хĕрĕ кунтине пĕлет вĕт вăл?

— Мĕнле пĕлтĕр-ха вăл?

Эпĕ каллех нимĕн те калаймарăм...

— Итле-ха, Максим Максимыч!..—терĕ Печорин, вырăнĕ çинчен çĕкленсе,— эсир ырă çын вĕт,— енчен эпир çав тискерĕн аллине парсан, ăна вăл пусса пăрахатьçке е сутса ярĕ. Ĕçне турă, ăна пăсма кирлĕ мар ĕнтĕ, ăна ман патăмрах хăварăр, шпагăна хăвăр патăра илсе кайăр...

— Кăтартăр-ха эппин хĕрĕре,— терĕм эпĕ.

— Çак алăк леш енче вăл; эпĕ хам та паян ирпе кăлăхах курасшăн пултăм ăна: пĕркенчĕкне пĕркеннĕ те ларать кĕтесре, калаçмасть те, пăхмасть те, хир качаки пек, хăравçă. Эпĕ хамăрăн духанщицăна тара тытрăм-ха, вăл тутарла калаçма пĕлет, пĕрле çўрĕç, терĕм, ăна хам енне çавăрма та пулăшĕ, терĕм, пур пĕрех вăл урăх никамăн та пулмĕ,— тесе хушса хучĕ вăл, сĕтел çине чышкипе çапса. Эпĕ кунпа та килĕшрĕм... Мĕн тăвас тетĕн?.. Тĕрлĕрен пулаççĕ-çке çынсем, хăш-пĕрисемпе килĕшесех пулать.

— Мĕнле-ши вара?— тесе ыйтрăм эпĕ Максим Максимычран:—вăл чăнах та çавăрнă-ши ăна хăй енне, е лешĕ тăван килне каясшăн пулнипе тыткăнра çунса пĕтсех кайнă-ши?

— Чимĕр-ха, мĕншĕн тăван килне каяссишĕн пултăр? Крепоçран, аулри пекех, çав сăрт-тусемех курăнаççĕ-çке, леш чурăс çынсене урăх нимĕн те кирлĕ мар вĕт. Григорий Александрович Бэлăна кашни кунах епле те пулин парнесем илсе панă: малтанхи кунсенче Бэла çав парнесене йышăнман, сăмах хушмасăр, мăнаçлăн тĕртсе янă, вĕсем вара чĕлхи япшарланнă духанщицăна юлнă. Эх, çакă парнесем! Хĕрарăм мĕн-мĕн кăна тумĕши çав чечеклĕ тутăр татăкĕшĕн!.. Ун çинчен калаçмăпăр-ха эппин... Чылайччен тĕрмешрĕ унпа Григорий Александрович; çав вăхăтрах вăл тутарла та вĕренме тытăнчĕ. Бэла та пирĕн чĕлхене ăнкара пуçларĕ. Пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн вăл ун çине пăхма та хăнăхса çитрĕ, малтан куç айĕпе, чалăшшăн пăхкалатчĕ, хăй çапах та пĕрмай хуйхăратчĕ, хуллен кăна хăйсен юррисене те

юрлакалатчĕ, хăш чухне вара, юнашар пӳлĕмрен унăн сассине илтсен, мана та хуйхă пусатчĕ. Нихăçан та манас çук çакна: вĕсен умĕнчен иртсе пыраттăм та çапла, тепле майпа эпĕ чӳречерен пăхрăм; Бэла сак çинче ларатчĕ, пуçне кăкăрĕ çинелле уснăччĕ. Григорий Александрович ун умĕнче тăратчĕ. «Итле-ха, манăн пери,— тет вăл,— хăвах пĕлетĕн, эсĕ халь мар пулсан, ӳлĕмрен-и — пур пĕрех манăн пулатăн-çке,— мĕншĕн асаплантаратăн-ха мана? Е пĕр-пĕр чеченеца юрататăн-и? Апла пулсан эпĕ сана халех киле яратăп». Вăл кăшт çеç чĕтренсе илчĕ те пуçне пăркаларĕ. «Е эсĕ мана пачах кураймастăн-и?»— терĕ Печорин малалла. Хĕр ассăн сывласа илчĕ. «Е санăн тĕнӳ мана юратма чарать-ши?» Бэла шуралса кайрĕ те пĕр сăмах чĕнмерĕ. «Ĕнен мана,— терĕ Печорин.—Аллах пур йăхсемшĕн те пĕрре çеç, енчен вăл мана савма чармасть пулсан, мĕншĕн сана юратма чарса тăтăр иккен?»— Бэла, çак сăмахран тĕлĕннĕ пек пулса, ун çине тинкерсе пăхса илчĕ. Ĕненмен пек те пулчĕ вăл, çав вăхăтрах унăн шанас ĕмĕчĕ те палăрчĕ. Мĕнле куçĕсем, чăнах! Вĕсем кăвар пек йăлтăртатрĕç.

— Итле-ха, чунăмçăм, ырă Бэла!— терĕ малалла Печорин, — куратăн-çке эпĕ сана мĕнле савнине, сана хаваслантарасшăн пулса, эпĕ хамăн мĕн пуррине пĕтĕмпех пама хатĕр, телейлĕ тăвас килет сана манăн, енчен эсĕ каллех кулянма тытăнсан, эпĕ вилетĕп. Кала-ха, кăштах та пулин хаваслăрах пулăн-и?— Бэла, хăйен хура куçне унăн куçĕнчен илмесĕр, шухăша кайса тăчĕ, унтан вара, ачашшăн йăл кулса, унпа килĕшнĕ пек пуçне тайрĕ. Печорин ăна аллинчен тытрĕ те: чуп ту мана, тесе йăлăнма тытăнчĕ. Бэла ытлах хирĕçмерĕ, темиçе хутчен вăл: «Поджалуста, поджалуста, не нада, не нада»,— тесе кăна илчĕ. Печорин çине тăрсах чуп тутарасшăн пулчĕ. Бэла чĕтресе макăрса ячĕ. «Эпĕ сан патăнта тыткăнра пурăнатăп, эпĕ санăн тарçу,— терĕ вăл,— эсĕ мана ху мĕн хушнине тутарма пултаратăн ĕнтĕ»,— тесе каллех куççуль тăкма пуçларĕ.

Григорий Александрович хăйне çамкинчен чышкипе çапса илчĕ те тепĕр пӳлĕмне сиксе тухрĕ. Эпĕ ун патне кĕтĕм; аллисене кăкăрĕ çине хĕреслетсе, вăл каллемаллĕ утса çӳрет. «Мĕн пулчĕ?»— терĕм эпĕ ăна.— «Хĕрарăм мар вăл, эрелĕ!»— терĕ Печорин,—çапах та сире чăннипе калатăп, вăл пур пĕрех манăн пулать...»

Эпĕ пуçа пăркаларăм. «Тупăшатăр-и акă? Тепĕр эрнеренех!»— терĕ вăл:—«Юрĕ!»— тесе килĕшрĕм эпĕ. Алă çапрăмăр та уйрăлтăмăр.

Тепĕр кунхине вăл, акă, юри çын тытса тĕрлĕ япаласем туянма Кизляра янă пулнă. Тĕрлĕрен персидски пусма-тавар питĕ нумай тиесе килнĕччĕ, пурне те шутласа тухма та çук.

«Мĕнле шухăшлатăр, Максим Максимыч!— терĕ вăл мана, парнисене кăтартса.—Çакнашкал батарейăсене хирĕç тăрайĕ-ши Ази пики?» — «Эсир черкес хĕрĕсене пĕлместĕр-ха,— терĕм эпĕ,— вĕсем грузинкăсем пек мар, Кавказ леш енчи тутар хĕрĕсем пек те мар,—пачах вĕсем пек мар. Вĕсен хăйсен йĕрки пур, урăхла пăхса ӳстернĕ çав вĕсене»,— терĕм эпĕ. Григорий Александрович йăл кулса илчĕ те шăхăрса юрлам пек турĕ.

Эпĕ калани чăнах та тĕрĕсех ĕнтĕ: парнесем унăн кăмăлне çурри таран çеç çавăрчĕç; кăштах ачашланчĕ вăл, кăштах шанакан пулчĕ — ытлашшийĕ нимĕн те çук; аптранипе вара Печорин юлашки меслетне ĕçе кĕртесшĕнччĕ. Пĕр ирхине вăл утне йĕнерлеме хушрĕ, хăй черкесла тумланчĕ, унтан пăшалне çакса ун патне кĕчĕ. «Бэла,— терĕ вăл,— эпĕ сана мĕнле юратнине хăвах пĕлетĕн. Пĕлсе çитсен, мана юратĕ-ха тесе, сана эпĕ илсе кайма шутланăччĕ, йăнăшрăм иккен. Сыв пул! Хуçа пулса юл çакăнта, манăн мĕн кăна пур — пурте санăн; кăмăлу пулсан, аçу патне таврăн,— эсĕ ирĕкре. Айăпа кĕтĕм сан умăнта, çавăншăн хама хам инкек кăтартăп ĕнтĕ. Сыв пул! Эпĕ каятăп,— ăçта каяс манăн? Епле пĕлĕп ăна эпĕ! Нумаях та çӳрес çук пульă шыраса-и е хĕçпе касăлса вилессе: ун чухне вара ман çинчен аса ил те каçар мана».—Вăл кăштах пăрăнчĕ те юлашки хут аллине тăсрĕ. Лешĕ ун аллине тытмасть, сăмах та хушаймасть. Алăк хыçĕнче тăрса хушăкран кăна пăхрăм та эпĕ, хĕре йăлтах хĕрхентĕм, унăн чечен питкуçĕ пĕтĕмпех шурса кайрĕ! Сăмах паманнине кура, Печорин алăк патнелле ик-виçĕ утăм пусрĕ, хăй чĕтрет, каласа парам-ха сире, çав вăхăтра вăл шӳт туса каланине те чăнласах тума пултарнă пулĕччĕ. Çынни çавăн пекчĕ ĕнтĕ вăл, турă пĕлет ăна! Печорин алăк патне çитсе тĕртĕнчĕ çеç, Бэла сиксе те тăчĕ, йĕрсе ячĕ апăрша, унтан чупса пырса ун мăйĕнчен çакăнчĕ. Ененетĕр-и эсир? Эпĕ алăк хыçĕнче тăраттăм пулин те, йĕрсе ятăм, йĕрсех темелле мар та, çапах та кăмăлăм хуçăлчĕ çав.

Штабс-капитан шăп пулчĕ.

— Тÿррипех калатăп,— терĕ вăл малалла, мăйăхне пĕтĕркелесе,— хама пĕр хĕрарăм та нихăçан та çавăн пек юратманшăн калама çук ÿкĕнтĕм эпĕ.

— Вăрăма пычĕ-и вара вĕсен телейĕ?— тесе ыйтрăм эпĕ.

— Бэла пире каярахпа тÿррипех каласа пачĕ, Печорина малтанхи хут тĕл пулсанах вăл ăна час-часах тĕлĕкĕнче курса тĕлĕрнĕ, çинчен тата ун кăмăлне çавăнччен пĕр арçын та Печорин пек хускатайман. Чăнах та вĕсем питĕ телейлĕччĕ.

— Епле кичем иккен ку!— ирĕксĕрех кăшкăрса ятăм эпĕ. Чăнах та ĕç пит хуйхăллă пĕтет пулĕ тесе кĕтнĕччĕ, анчах пĕр кĕтмен çĕртен эпĕ улталантăм!

— Мĕнле-ха,— терĕм эпĕ малалла,— ашшĕ те пĕлмен-и вара хĕрĕ сирĕн патăрта крепоçра пулнине?

— Сиснĕ пулас вăл ăна. Анчах çавăнтан вара темиçе кун иртсен, старике вĕлерни çинчен илтрĕмĕр эпир. Вăл акă мĕнле пулнă тата...

Итлес кăмăлăм каллех çĕкленчĕ.

— Сирĕ çакна калас пулать, Казбич шухăшланă тăрăх, унăн лашине Азамат хăй ашшĕпе пĕр каварлă пулса вăрланă, имĕш. Эпĕ хам çавăн пек пулĕ тесе шухăшлатăп. Хайхи вара, пĕррехинче, Казбич аулран пĕр виçĕ çухрăм катара, çул хĕрринче, старике сыхласа тăнă; старик хĕрне шыранă çĕртен таврăннă; хăйпе пĕрле кайнă узденĕсем[1] кая тăрса юлнă — ку ĕç каç кÿлĕм пулса иртнĕ,—шухăша кайнă май старик лашине уттарса кăна пынă, сасартăк йывăç тĕми хыçĕнчен Казбич кушак пек сиксе тухнă та лаши çине хыçалтан сиксе утланнă, старикне кинжалпа чиксе çĕре ÿкернĕ, вара чĕлпĕрне тытнă та — шăваннă, хăш-пĕр узденĕсем çакна сăртран курса юлнă; хăваласа та пăхнă ăна, анчах хуса çитеймен.

— Лаши çухалнăшăн тавăрнă ĕнтĕ вăл,— терĕм эпĕ, хампа калаçакан мĕн калĕ-ха тесе.

— Паллах,— терĕ штабс-капитан,— хăйсен йăлине вăл тĕрĕс тунă темелле.

«Вырăс çынни те кунти халăх хушшинче пурăнсан çакăн пек йăласене хăнăхма пултарать-ши?»— тесе тĕ-

---

[1] Узденьсем — пăхăнса тăракансем пулнă, вĕсем хăйсен енĕпе княçсене пăхăннă.

лĕнсех кайрăм эпĕ; пĕлейместĕп, чăнах, тиркемелле-ши çакăн пек ăса, мухтамалла-ши, анчах вăл ăс-пуçăн калама çук пысăк пултарулăх пуррине, вăл уççăн та тĕрĕс шухăшлама пултарнине кăтартса парать, вăл вара кирек мĕнле усала та, ăна пĕтерме май çук пулсан, каçаратех.

Чейне те ĕçсе янă ĕнтĕ, тахçанах кӳлнĕ лашасем те сивĕре шăнса тăраççĕ; хĕвеланăç енчен уйăх шупкаланать, вăл инçетри тусен тăрринчи чаршав татăкĕсем пек çакăнса тăракан хура пĕлĕтсен ăшне пытанма хатĕрленсе çитнĕ. Эпир сакльăран тухрăмăр. Юлташăм каланă пек пулмарĕ, çанталăк уяртрĕ те пире тӳлек ир пуласса ĕмĕтлентерчĕ; инçетре тӳпе хĕрринчи çăлтăрсен карти тĕлĕнмелле илемлĕ тĕрĕ пек тĕрленсе пĕтнĕ те, ĕмĕрхи юрпа витĕннĕ тусен чăнкă çамкисене хĕвелтухăçĕнчи шупкарах çутă ерипен çутатса, тĕттĕм кăвак тӳпе тăрăх сарăлса пынăçемĕн çăлтăрсем те пĕрин хыççăн тепри сӳнеççĕ. Сылтăмра та, сулахайра та акăш-макăш тарăн варсем кичеммĕн те тискеррĕн хуралса курăнаççĕ, тул çутăлнине сиссе хăранă пек пулнă тĕтре, йăсăрланса та çĕлен пек явкаланса, сывăхри сăртсен çуркаланчăкĕ тăрăх аялалла шуса анать.

Пĕлĕтре те, çĕр çинче те, ирхи кĕлĕ вăхăтĕнче, сын чĕринчи пекех, хутран-ситрен кăна хĕвелтухăç енчен сулхăн çил вăшăрхать те лашасен пасарнă çилхине хускатать. Эпир тапранса кайрăмăр; пилĕк ырхан лаша пирĕн лавсене кукăр-макăр çул тăрăх Гуд-Гора тăвĕ çинелле йывăррăн сĕтĕрет, эпир хыçалтан çуран утса пыратпăр, лашасем ĕшенсе çитсен, кустăрмасен айне чулсем хуратпăр; пĕлĕт çинелле улăхнă пек туйăнать çул, мĕншĕн тесен куç мĕн чухлĕ курма пултарнă таранах вăл çӳлелле пырать, унтан вара ĕнертеннех Гуд-Гора тăрринче çимĕç кĕтсе тăран çăхан пек хулăн пĕлĕт ăшне кĕрсе çухалать; ура айĕнче юр кăчăртатать; сывлана чух сывлăш çитейменнипе ăш ыратакан пулчĕ, пуçа минутсерен юн капланса килет, çапах та манăн мĕн пур шăнăр тăрăх темĕнле хаваслăх сисĕмĕ сарăлнă пек пулчĕ, хам çав тери çӳлте тăнăшăн темĕнле хĕпĕртерĕм эпĕ:—паллах, ачалла сисĕм ĕнтĕ, тавлашассăм çук, анчах обществăри условисенчен уйрăлса, çутçанталăк патнелле çывхарнăçемĕн эпир ирĕксĕрех ачасем майлă пулса каятпăр: пурнăçра тем те пĕр курса иртни чĕре çумĕнчен пĕтĕмпех хăпăнать, чун-чĕрем çĕнĕрен тахçанхи пек тасалать те ӳлĕмрен вара каллех çавăн

пек таса пуласса ёмётлентерет. Камăн, ман пек, чул тусем тăрăх сĕтĕрĕнсе çÿреме, вĕсен тĕлĕнтермĕш сăн-сăпатне темĕнччен сăнаса, ту çинчи таса та симлĕ сывлăша тăрана пĕлмесĕр çăтма тÿрĕ килнĕ, çав ăнланатех ĕнтĕ манăн çав тĕлĕнмелле картинăсене ÿкерсе, вĕсем çинчен каласа кăтартас килнине. Акă эпир Гуд-Гора тăвĕ çине те улăхса çитрĕмĕр, чарăнса тăтăмăр та йери-тавра çавăрăнса пăхрăмăр: ун таврашĕнче шурка пĕлĕт çакăнса тăрать, вăл сиввĕн сывлани часах тăвăл хускаласса систерет; анчах хĕвелтухăç енче таврипех уяр та ылтăн тĕслĕ, çавăнпа эпир штабс-капитанпа иксĕмĕр тăвăл тухасси çинчен пачах манса кайрăмăр... Чăнах, штабс-капитан та манса кайрĕ, çутçанталăкăн илемĕпе унăн вĕçĕ-хĕррисĕр аслăлăхне ахаль çынсен чĕри тĕлĕнсе кайсах каласа паракансемпе çыракансенчен çĕр хут вăйлăрах та чĕрĕрех туйса илет.

— Эсир çак чаплă сăн-сăпата курма хăнăхса çитнĕ пулĕ ĕнтĕ?— терĕм ăна эпĕ.

— Çапла, пульă шăхăрнине те хăнăхма пулать-çке, урăхла каласан, чĕре сехĕрленсе сикнине те пытармашкăн хăнăхатăн.

— Эпĕ вара урăхла каланине те илтнĕ, пульă сасси хăш-пĕр ватă салтаксен кăмăлне те каять, имĕш.

— Тĕрĕсех вăл, пĕлессĕр килет пулсан, çав сасă кăмăллă та, анчах çапах та вăл чĕре ытла хăвăрт тапма тытăннăшăн çеç кăмăллă. Пăхăр -ха,— тесе хушса хучĕ вăл, хĕвелтухăç еннелле кăтартса,— епле ытарма çук.тавралăх!

Чăнах та, кун пек панорамăна тата ăçта та пулин курма тÿрĕ килĕ-ши: пирĕн умра аялта Койшаур айлăмĕ сарăлса выртать, ун урлă Арагвăпа тепĕр пĕчĕк шыв икĕ кĕмĕл çип пек тăсăлаççĕ; шупка кăвак тĕтре, ирхи хĕвел ăшшинчен сирĕлсе, çывăхри ту хушшинелле шăвать; сылтăмалла та, сулахаялла та юрпа та йывăç тĕмĕсемпе витĕннĕ ту тăррисем пĕр-пĕринчен çÿллĕ курăнса урлă каçаççĕ, инçетре акă çав тусемех,— анчах пĕрре те пулин пĕр евĕрлисем пулинччĕ,— вĕсен юрлă тăррисем çав тери хаваслă, çав тери çуттăн хĕрелсе ялкăшаççĕ, çавăнпа ĕмĕрлĕхех çакăнта пурăнма юлас килсе тăрать; аслатиллĕ çумăр пĕлĕтĕнчен хăнăхнă куç анчах уйăрма пултаракан тĕксĕм кăвак ту хыçĕнчен хĕвел кăшт çеç курăнчĕ; хĕвелрен çÿлерех юн тĕслĕ хĕрлĕ ярăм пур, ман юлташ çавна уйрăммăнах тинкерсе пăх-

са илчӗ. «Каларăм-çке сире,— терӗ вăл,— паян çанталăк пăсăлать тесе; вакамалла пирӗн, унсăрăн вăл пире Крестовойра хуса та çитӗ». «Тапранăр!»— тесе кăшкăрчӗ вăл ямшăксене.

Лавăн кустăрмисене сăнчăрсемпе çавăрса çыхрăмăр, каялла чакасран хунă савăлсене илтӗмӗр, лашасене çаватса анма пуçларăмăр, сылтăмра чул ту, сулахайра çав тери тарăн сакăлта, тӗпӗнче курăнакан осетинсен ялӗ чӗкеç йăви пек кăна палăрать. Эпӗ кунта час-часах çак икӗ лав пӗр-пӗринчен иртсе кайма çук тăвăр çул тăрăх сӗм çӗрле пӗр-пӗр курьер хăйӗн сиктӗрмеллӗ экипажӗнчен тухмасăр çулталăкра сахалтан та пӗр вунă хут иртсе кайни çинчен шухăшларăм та, чӗрем сӳлетсе кайрӗ. Пирӗн лавçăсенчен пӗри Ярославль вырăсӗ, тепри осетин: пичеври лашасене тăварса, тӗприне çав тери асăрханса çаватса пырать,— пирӗн ним шухăша илмен вырăс çынни ларкăч çинчен те анмарӗ! Эпӗ ăна хамăн чемодана та пулин хӗрхенсе ларкăч çинчен анма сӗнтӗм, мӗншӗн тесен манăн çав чемоданшăн тӗпсӗр сакăлтана анас кăмăлăм çукчӗ. Вăл мана хирӗç: «И, улпутăмçăм! турă пулăшсан, вӗсенчен начар çӳремӗпӗр-ха: эпир кунта малтанхи хут мар вӗт»,— терӗ. Чăнах та тӗрӗс каларӗ вăл: пыма кансӗрччӗ пулин те, эпир çитес çӗре чиперех çитрӗмӗр; енчен çынсем пурте çавăн майлă шухăшласан, пурнăç пирки ытла пăшăрханмалла та мар иккен, мӗншӗн тесен пурнăç тени вăл хăйшӗн ытла тертленнине те тăмасть...

Анчах Бэла историне вӗçне çитиех пӗлесшӗн пульха эсир?— каласах хурас-ха, эпӗ повеç çырмастăп, çул çинче мӗн курни çинчен кăна çыратăп, çавăнпа та штабс-капитана хăй калас килнӗ пек кăна калаттарма пултаратăп. Кӗтмеллех пулать ӗнтӗ, е кирлех пулсан, тата темиçе страница сиктерӗр те вулăр, анчах эпӗ сире ун пек тума сӗнместӗп, мӗншӗн тесен Крестовой Ту урлă каçасси (е Гамба[1] ятлă ученăй каларӗшле Ze Tontst-Chustophe) сире интереслентерме тивӗçлӗ. Çапла эпир Гуд-Гораран Чертовой Улăхне антăмăр... Акă романтикăллă ят! Эсир çав Чертовой улăх тенипех çын

[1] Гамба, Жан-Франсуа (1763—1833)— Франци çул çӳревçи, Францийӗн Тифлисри консулӗ, вăл кăнтăрти Российăна чылай курса çӳренӗ. Кавказ тăрăх çӳресе вăл Франци промышленноçӗ валли суту-илӳ тума çӗнӗ çул хывасшăн пулнă. Хăй çӳренӗ хыççăн Гамба «Кăнтăрти Российă тăрăх курса çӳрени» ятлă кӗнеке каларнă.

пырса кĕмелле мар чăнкă чул тусем хушшинче усал сывлăшăн йăви пур-тăр тесе шутлатăр пуль ĕнтĕ,— ун пек мар вара: Чертовой Улăх ячĕ чорт сăмахран мар, «черта» сăмахран тухса кайнă, тахçан авал кунта Грузи чикки пулнă. Ку улăх вара пирĕн тăван çĕршывăн Саратовпа Тамбоври пек е тата ытти лайăх вырăнсене аса илтерет, вăл юр кĕрчĕпе витĕннĕ.

— Акă Крестовой та,— терĕ мана штабс-капитан, хамăр Чертовой Улăхне çитсен юрпа витĕннĕ сăрт çинелле кăтартса; ун тăрринче тĕксĕм чул хĕрес курăнать, хĕрес патĕнчен аран-аран палăракан сукмак иртет, аяккинчи çула юр хÿсе кайсан, çав сукмакпа çÿреççĕ; пирĕн лавçăсем: тусем çинчен юр ишĕлсе анман-ха, тесе пĕлтерчĕç те, лашасене хĕрхеннипе пире тавра çулпа çавăрттарса кайрĕç. Çавăнтан тавраннă чухне эпир пĕр пилĕк осетина тĕл пултăмăр; вĕсем пире пулăшасшăн пулчĕç, пирĕн урапасене хыçалтан тĕксе тăвалла май тĕртме тытăнчĕç. Çулĕ чăнах та хăрушă, сылтăмра, пуç тăрринче, юр кÿмеркkисем çакăнса тăраççĕ, вĕсем çил вĕрнĕ-вĕрменех ту хушшине татăлса анассăн туйăнаççĕ; тăвăр çул хăш-пĕр тĕлте юрпа хывăннă, тĕллĕн-тĕллĕн ура путса анать, хăш-пĕр çĕрте тата хĕвел ăшăтнипе юр ирĕлнĕ те каçхи сивĕпе пăрланса ларнă, эпир хамăр та аран-аран утатпăр, лашасем шуса ÿкеççĕ. Сулахайра тарăн хушăк, аялта çавăнта шыв юхса тăрать; пĕрре вăл пăр айне кĕрсе пытанать, тепре чулсем урлă кăпăкланса сикет. Икĕ сехет иртеспе эпир аран Крестовой Ту тавра çаврăнса тухрăмăр, икĕ сехетре икĕ çухрăм! Çав вăхăтра пĕлĕт те анчĕ, яра пачĕ пăр, çума пуçларĕ юр. Ту хушшине çĕмĕрттерсе кĕнĕ çил Хурах Шăпчăк пек улать, шăхăрать, часах акă чул хĕрес те хĕвелтухăç енчен капланса килекен çăра тĕтре хумĕсен ăшне пытанчĕ... Сăмах çаврăннă май, çакна та калас: çав хĕрес çинчен ку тавраşра пĕр ĕненмелле мар халап çÿрет. Ку хĕресе, имĕш, пĕрремĕш Петр император Кавказ урлă иртсе кайнă чух лартнă пулать; анчах Петр пĕр енчен, Дагестанра çеç пулнă, тепĕр енчен тата, хĕресĕ çине пысăк саспаллисемпе: ку хĕресе Ермолов господин хушнипе 1824-мĕш çулта лартнă, тесе çырнă. Çапла çырнă пулин те, халапĕ çав тери сарăлса кайнă вара, çавăнпа эпир çырнине кăна ĕненме хăнăхман та, чăнах та, тахăшне ĕненмелле ĕнтĕ пирĕн.

Коби станцине çитиччен пирĕн пăрланнă чулсем

тăрăх та юр тăрăх ашса тата пĕр пилĕк çухрăм анмаллаччĕ. Лашасем ĕшенсе çитрĕç, хамăр та шăнса кайрăмăр; тăман пирĕн тавраşри çурçĕр енчи пекех, вăйлăрах та вăйлăрах вĕркет; юрри кăна салхурах та хурлăхлăрах илтĕнет. «Эсĕ те, мĕскĕнĕм, хăван анлă та ирĕк çеçен хирўсемшĕн макăратăн!— тесе шухăшларăм эпĕ,— унта санăн сивĕ çунаттусене сарма вырăн çитнĕ пулĕччĕ, кунта вара, тимĕр читлĕхри кăшкăрашса çапăнакан ăмăрткайăк пек, сана пăчă та хĕсĕк».

— Начар!— терĕ штабс-капитан,— пăхăр-ха, тĕтрепе юртан пуçне урăх йĕри-тавра нимĕн те курăнмасть,— тĕпсĕр сакăлтана анса каясса кĕтсех тăр, е пĕр-пĕр шăтăка кĕрсе ларăпăр; лере ав, аяларах, Байдарă урăмсурăм иртĕхнĕ пуль, ун урлă каçса та каяйрас çук. Эх, ку Ази ăшăма кĕрсе ларчĕ те! Çыннине те, шывне те ниепле те шанма çук!— лавçăсем кăшкăрса та ятлăçса лашисене çаптараççĕ, чăпăрккисем хистесе шăхăраççĕ пулин те, лашисем вырăнтан та тапранасшăн мар, тулхăраççĕ вĕсем, чăхăмлаççĕ. «Ваше благородие,— терĕ юлашкинчен пĕри,— эпир паян Кобине çитейместпĕр; май пур чухне сулахаялла çавăрма хушмастăр-и? Ав çавăнта, ту аяккинче, темĕн хури курăнать,—сакльăсем пулма кирлĕ çавăнта; çанталăк начар чухне иртен-çўренсем яланах унта чарăнаççĕ; эрехлĕх парсан, ăсатса ятрапăр, теççĕ вĕсем»,— тесе хушса хучĕ вăл, осетин çине кăтартса.

— Пĕлетĕп, тăванăм, сансăрах пĕлетĕп!— терĕ штабс-капитан.—Ку эсрелсем ĕнтĕ эрехлĕх тесен темĕн тума та хатĕр.

— Çапах та, тўррипех калăр-ха,— терĕм эпĕ,— вĕсемсĕр пире тата кансĕр пулнă пулĕччĕ-çке.

— Çаплине çаплах та,— тесе мăкăртатса илчĕ вăл,— ĕнтĕ вĕсем мана йăлăхтарсах çитерчĕç! Аçтан шăйăрмаллине шăршăпах пĕлеççĕ пулас, вĕсемсĕр çул та тупаяс çук, тейĕн.

Акă, эпир сулахаялла пăрăнтăмăр; чылай тертленнĕ хыççăн пĕр мĕскĕн хўтлĕхе чарăнтăмăр. Унта чулсенчен тунă икĕ сакльă пурччĕ. Чухăн хуçасем пире ытла тарават йышăнчĕç. Каярахпа пĕлсеттĕм эпĕ, вĕсене, тăвăл айне пулнă иртен-çўренсене пăхса тăччăр тесе, патшалăх тўлесе тăрантарать иккен. «Кирек мĕн пулсан та,— терĕм эпĕ, вучах хĕррине ларса,— халĕ эсир хăвăрăн

Бэла ҫинчен пуҫланӑ историйӗре каласа пӗтеретӗрех ӗнтӗ: ӗҫ унпах пӗтмен пулӗ-ха, тетӗп эпӗ».

— Мӗншӗн эсир ҫапла пулӗ-ха тесе ӗненсех тӑратӑр? — терӗ мана штабс-капитан, чеен кулнӑ майӑн куҫне хӗссе.

— Мӗншӗн тесен апла пӗтме пултараймасть: тӗлӗнмелле пуҫланнӑ япала тӗлӗнмеллех пӗтмелле.

— Эсир чӑнах та пӗлтӗр...

— Питӗ хаваслантаратӑр эппин.

— Сире хаваслан̣ма лайӑх, анчах эпӗ аса илсенех кулянма тытӑнатӑп. Лайӑх хӗрччӗ ҫав Бэла! Пыра киле эпӗ ӑна хам хӗрӗме хӑнӑхнӑ пекех хӑнӑхса ҫитрӗм, вӑл та мана кӑмӑл тӑватчӗ. Сире тӳррипех калас пулать, манӑн кил-йышӑм ҫук: аттепе анне ҫинчен эпӗ пӗр вун икӗ ҫул хушши нимӗн те пӗлместӗп, авланма хӗрарӑм палӑртса хумашкӑн ӗлӗкрех чухлаймарӑм, халь ӗнтӗ килӗшсех те каймасть; эпӗ хама йӑпатакан ҫынна тупнӑшӑн хӗпӗртенӗччӗ. Вӑл пире юрласа паратчӗ, лезгинкӑ ташласа кӑтартатчӗ... Мӗнле ташлатчӗ вара хӑй! эпӗ кӗпӗрнери хӗрсене курнкаланӑ та, Мускавра та пӗрре ҫапла, пӗр ҫирӗм ҫул каялла, благороднӑй собраниничче[1] пулсаттӑм, — анчах унти хӗрсен ӑҫта ӑна ҫитме!.. Григорий Александрович Бэлӑна пукане пек тумлантаратчӗ, лайӑх усратчӗ, ачашлатчӗ, ҫавӑнпа вӑл пирӗн патӑмӑрта ҫав тери чиперленсе ҫитнӗччӗ, тӗлӗнсех каймаллаччӗ; пичӗпе аллисем шуралчӗҫ, пит ҫӑмартисем хӗрелчӗҫ... Калама ҫук хаваслӑскерччӗ вара, — ялан мана тӑрӑхлатчӗ... Турӑ каҫартӑрах ӑна!..

— Эсир ӑна ашшӗ вилни ҫинчен пӗлтерсен мӗн пулчӗ?

— Вӑл хыпара эпир нумайччен пытарса тӑтӑмӑр, хӑнӑхса ҫиттӗр, терӗмӗр, унтан каларӑмӑр та, вӑл пӗр-икӗ кун хушши макӑрчӗ, каярахпа лӑпланчӗ.

Ӗҫсем пӗр тӑватӑ уйӑх хушши питӗ лайӑх пычӗҫ. Сире каларӑм пулас-ха эпӗ, Григорий Александрович сунара ҫӳреме юрататчӗ, тесе: хӑш чух ӑна вӑрманти хир сыснисем е хир качакисем хыҫҫӑн кайма питех те туртатчӗ вара, акӑ, хайхискер крепоҫ валӗ умне тухма та пӑрахрӗ. Пӑхатӑп та ҫапла, вӑл каллех шухӑша кая пуҫларӗ, аллисене каялла хуҫлатать те пӳлӗм тӑрӑх

[1] Благороднӑй собрани — хулари клуб, унта «ырӑ ҫын» текеннисене кана — улпутсене, офицерсене, чиновниксене кертне.

утса ҫӳрет; пӗрре хайхи никама каламасӑрах сунара тухса кайнӑ та ирччен ҫухалса ҫӳренӗ; ҫавӑн пек пӗрре пулчӗ, иккӗ пулчӗ, унтан вара тӑтӑшах ҫӳреме тытӑнчӗ... Ку лайӑх мар, тесе шутларӑм эпӗ: вӗсен хушшинчен хура кушак каҫнӑ пулмалла!

Пӗр ирхине кӗретӗп те вӗсем патне — хальхи пекех куҫ уменче-ха: Бэла хура пурҫӑн бешмет тӑхӑннӑ, кравать ҫинче ларать, шуралса кайнӑ хӑй, салху: эпӗ хӑрасах ӳкрӗм.

— Печорин ӑҫта?— тесе ыйтрӑм.

— Сунарта.

— Паян кайрӗ-и?— терӗм те, Бэла нимӗн те чӗнмерӗ, сӑмах уҫса калама та йывӑрччӗ ӑна.

— Ҫук, ӗнерех кайнӑ,— терӗ вӑл юлашкинчен, йывӑррӑн сывласа.

— Мӗнле те пулин инкек пулман-ши ӑна?

— Эпӗ ӗнер яра куна кунӗпех пӑшӑрхантӑм,— терӗ вӑл куҫҫуль витӗр,— тӗрлӗрен инкексем пуласса та шухӑшларӑм, ӑна тискер хир сысни амантнӑ пек те туйрӑм, е пӗр-пӗр чеченец ӑна тусем хушшине тытса кайнӑ пек туйӑнчӗ... Паян ӗнтӗ вӑл мана савма пӑрахнӑ пек те туйӑна пуҫларӗ...

— Чӑнах та, чунӑмҫӑм, эсӗ ҫавӑнтан хӑрушӑраххине нимӗн те шухӑшласа тупма пултараймарӑн пуль ҫав!— Вӑл йӗрсе ячӗ, унтан вара пуҫне мӑнаҫлӑн каҫӑртрӗ те, куҫҫульне шӑлса, малалла калама тытӑнчӗ:

— Вӑл мана юратмасть пулсан, мана киле ӑсатмашкӑн кам чӑрмантартӑр иккен? Эпӗ тытса тӑмастӑп-ҫке ӑна. Малашне те ҫакӑн пек пулсан, эпӗ хамах каятӑп; эпӗ ун чури мар: эпӗ княҫ хӗрӗ!..

Эпӗ ӑна ӳкӗтлеме тытӑнтӑм:

— Итле-ха, Бэла,— терӗм ӑна,— арку ҫумне ҫӗлесе янӑ пек, ялан кунта лармалла мар-ҫке унӑн: вӑл ҫамрӑк ҫын, тискер кайӑк хыҫҫӑн ҫӳреме юратать,— ҫӳрет-ҫӳрет те килет акӑ; эсӗ пӗрмаях ҫапла кулянса тӑрсан, ӑна йӑлӑхтарса та ҫитерӗн.

— Чӑнах та, чӑнах та!— терӗ вӑл,— эпӗ хавасларах пулӑп;— хайхи, ахӑлтатса, хӑйӗн бубенне илчӗ те манӑн умра юрласа ташлама та сикме пуҫларӗ; анчах ку нумая пымарӗ, вӑл каллех вырӑн ҫине тӗшӗрӗлсе анчӗ те питне аллисемпе хупларӗ.

Мӗн тумаллаччӗ ӗнтӗ манӑн? Пӗлетӗр-и, эпӗ нихҫан та хӗрарӑмсене йӑпатса курман, ӑна мӗнле лӑплантар-

маллине шухăшласа тупаймарăм, пĕр кана иксĕмĕр те нимĕн те чĕнмерĕмĕр... Çав тери лайăх мар пулса тăчĕ!

— Вал çине усăлса çӳреме пыратăн-и? Çанталăк лайăх!— терĕм эпĕ ăна юлашкинчен. Ку сентябрь уйăхĕнче пулчĕ. Чăн та, кунĕ тĕлĕнмелле лайăхчĕ, çутăччĕ, ытла шăрăх та марччĕ; пур тусем те чей чашки çинчи пек курăнатчĕç; эпир кайрăмăр, нимĕн шарламасăр крепоç валĕ тăрăх каллĕ-маллĕ утса çӳрерĕмĕр; каярахпа вăл çерем çине ларчĕ, эпĕ те ун çумне лартăм. Чăн та, аса илме те кулăшла, эпĕ ун хыççăн ача пăхакан пекех çӳреттĕм.

Пирĕн крепоç çӳллĕ вырăнта тăратчĕ. Çавăнпа вал çинчен пăхма илемлĕччĕ: пĕр енче темиçе çырма çурса пĕтернĕ сарлака уçланкăччĕ, вăл тусен тăррине çитичченех сарăлнă вăрман хĕррине тухатчĕ; ун çинче тĕллĕн-паллăн аулсем тĕтĕм кăларатчĕç, ут кĕтĕвĕсем çӳретчĕç,— тепĕр енче ăшăх çырма юхатчĕ, ун çумнелле Кавказăн тĕп тăрăхĕпе пĕрлешекен чуллă сăртсене витсе тăракан çăра ката тăсăлса анатчĕ. Эпир бастион[1] кĕтессинче лартăмăр та — çапла ик еннелле те йăлтах курса тăратпăр. Пăхатăп: вăрмантан такам кăвак лашапа тухрĕ те çывхарса пычĕ, юлашкинчен вара çырма леш енчен пирĕнтен пĕр çĕр чалăшра чарăнса, хăйен лашине урса кайнă пек çавăркалама пуçларĕ... Мĕн хăямачĕ, тетĕп ăшăмра...

— Бэла, пăх-ха,— терĕм эпĕ,— санăн куçу лайăх курать, мĕнле джигит çав, кама тĕлĕнтерме килнĕ вăл кунта?..

Вăл çаврăнса пăхрĕ те,— Казбич ку!— тесе кăшкăрса ячĕ.

— Ах, вăрă-хурах! Пирĕнтен кулма килнĕ-и вăл кунта?—тинкererех пăхатăп, Казбич пекех туйăнать: пичĕ тĕксĕм унăн, яланхи пекех, çĕтĕк-çатăк та таса марскер.—Ку ман атте лаши,— терĕ Бэла, мана алăран ярса тытса; — хăй çулçă пек чĕтрет, куçĕ йăлтăртатать. «Эхе!— тесе шухăшларăм эпĕ, —сан ăшăнта та, чунăм, хурах юнĕ çывăрмасть иккен».

— Кил-ха, кунта,— терĕм эпĕ хуралта тăракан салтака,— тĕрĕсле те пăшална, çав йĕкĕте ут çинчен антарса пар-ха мана,— пĕр тенкĕ кĕмĕл илĕн.

— Итлетĕп, ваше высокоблагородие; анчах вăл пĕр

[1] Бастион — укрепленири вал.

вырӑнта тӑмасть-ҫке...—Эсӗ тӑма хуш ӑна!— терӗм эпӗ кулса.—«Эй, юратнӑ ҫыннӑм!— тесе кӑшкӑрчӗ часовой, ӑна аллипе сулкаласа:—кӑшт тӑхта-ха, мӗн эсӗ кӑлтӑрмачӑ пек ҫаврӑнкалатӑн?— терӗ. Қазбич, чӑнах та, чарӑнса тӑчӗ те итлеме тытӑнчӗ: вӑл хӑйпе калаҫасшӑн пуль-ха тесе шутларӗ пулас. Апла ан пултӑр!.. Манӑн гренадер тӗллерӗ те... бах! персе ячӗ, тивертеймерӗ,— тарӗ ҫеҫ хыпӑнса илчӗ. Қазбич лашине урисемпе хӗстерчӗ те аяккинелле сиктерчӗ. Йӗнер пускӑчи ҫине тӑрса, хӑйсен чӗлхипе темӗн кӑшкӑрчӗ вӑл, саламачӗпе юнарӗ те вӗҫтере пачӗ.

— Епле намӑс мар сана!— терӗм эпӗ часовоя.

— Ваше высокоблагородие! Вӑл вилме кайрӗ, ҫав тери ирсӗр халӑх, часах вӗлерейместӗн ӑна,— терӗ вӑл.

Вӑхӑт кӑштах иртсен, Печорин сунартан таврӑнчӗ; Бэла ӑна мӑйӗнчен уртӑнчӗ, йынӑшмарӗ те вӑл, ӳпкелешмерӗ те ҫапла нумай ҫӳренӗшӗн... Эпӗ хам та Печорин ҫине ҫилленсе ҫитрӗм. «Итлӗр-ха,— терӗм эпӗ ӑна:— шыв леш енче халь кӑна кунта Қазбич ҫӳретчӗ, эпир ӑна пӑшалпа петӗмӗр, ун тӗлнех пулатӑрччӗ вӗт эсир? Горецсем вӗсем тавӑрма пӑхаҫҫӗ: мӗн, эсир Азамата пулӑшкаланине ӑнланмасть тетӗр-им ӑна? Эпӗ акӑ тупӑшма та хатӗр, паян вӑл Бэлӑна палларӗ тесе. Пӗлтӗр ӑна Бэла питӗ килӗшнӗччӗ, ҫавна пӗлетӗп эпӗ, ун ҫинчен мана Қазбич хӑех каласа панӑччӗ,— хулӑм укҫи ҫитерейсен, вӑл ӑна ҫураҫнӑ та пулӗччӗ, тен...» Печорин хайхи шухӑша кайрӗ:—«чӑнах та, асӑрхансах тӑмалла иккен... Бэла, паянтан вара эсӗ крепоҫ валӗ патне тухса ан ҫӳре»,— терӗ вӑл.

Қаҫхине эпӗ унпа нумайччен калаҫрӑм; вӑл ҫав мӗскӗн хӗр ҫине урӑх куҫпа пӑхма пуҫлани кӳрентерчӗ мана; ҫуршар кун сунарта ҫухалса ҫӳрет, килсен те Бэла ҫине сиввӗн пӑхакан пулчӗ; хутран-ситрен кӑна ӑна ачашлакалатчӗ; Бэла пӗтсе кайрӗ, чечен пит ҫӑмарти путса кӗчӗ, куҫӗ тӗксӗмленчӗ. «Бэла, мӗншӗн эсӗ ассӑн сывласа илтӗн? кулянатӑн-им ытла?»— тесе ыйтаттӑмччӗ хӑш чух. «Ҫук!»— тетчӗ вӑл. «Сана мӗн те пулсан кирлӗ-и?» «Ҫук!». Эсӗ тӑванусене тунсӑхланӑран пуль, тесен: «Манӑн тӑвансем ҫук»,— тетчӗ вӑл. Хӑш чухне кунӗпе те унран «ҫапла» та «ҫук» тенинчен пуҫне урӑх пӗр сӑмах та илтейместӗнччӗ.

Ҫакӑн ҫинчен калама тытӑнтӑм та эпӗ Печорина; «итлӗр-ха, Максим Максимович,— терӗ вӑл,— чӗрем

телейсĕр манăн: хама çавăн пек пăхса ӳстернĕ-ши вара, турă мана çавăн пек тунă-ши, пĕлместĕп; çакна çеç пĕлсе тăратăп акă: ыттисене инкек кӳретĕп пулсан, эпĕ хам та вĕсенчен кая мар телейсĕр. Апла калани вĕсене йăпантараймасть те-ха, анчах вăл чăннипех çавăн пек. Тахçан, ытла çамрăк чухнех-ха, атте-анне çуртĕнчен тухса кайсанах, хама мĕн илĕртет, çавна урса кайнă пек астивесшĕн пулса, укçа тăкнă, çав ырлăхсем, паллах ентĕ, йăлăхтарса çитерчĕç мана. Унтан вара эпĕ пысăк света[1] кĕтĕм те, часах мана унта та йăлăхтарса çитерчĕ; эпĕ илемлĕ пикесене савнă, вĕсем те мана юратнă, анчах вĕсен юратăвĕ ман шухăшпа ĕмĕте тарăхтарса кăна тăнă-мĕн, чĕрем пуш-пушах тăрса юлчĕ... Эпĕ вулама та, вĕренме те тытăнтăм, вĕренесси те йăлăхтарса çитерчĕ; ĕнтĕ чап та, телей те вĕсенчен килмест иккен, терĕм эпĕ, мĕншĕн тесен чи телейлĕ çынсемех тăмсай çынсем пек курăнчĕç, чаплă пулас-ха тени вара — ăнсăртран ăнăçни кăна, ăна тупас тесен, вичкĕн çеç пулмалла. Вара мана кичемлĕх пуса пуçларĕ. Часах мана Кавказа куçарчĕç, ку вăхăт вара кун-çулăмра чи телейли пулса тăчĕ. Чеченецсен пули айĕнче кичем пулмĕ, тенĕччĕ эпĕ — кăлăхах иккен; пĕр уйăх иртсен эпĕ пульă шăхăрнине те, вилĕм çывăхрах çӳренине те çав тери хăнăхса çитрĕм, пыра киле мана ӳпре сăхни те ытларах пăтăрмах кăтартнă пек туйăнатчĕ. Çавăнтан вара мана тата кичемрех пулса тăчĕ, мĕншĕн тесен манăн чи юлашки шанчăкăм та çухалчĕ. Бэлăна хамăн килте курса, чĕркĕм çине лартсан, унăн хура çӳç кăтрисене пĕрремĕш хут чуп тусан, эпĕ, айванскер, ĕнтĕ мана ăраскалăм хĕрхенчĕ пулĕ те пирĕшти ячĕ-ха, тесе шутланăччĕ... Каллех йăнăшрăм иккен: çутçанталăк ирĕкĕнче ӳснĕ хĕрĕн юратăвĕ паллă улпут хĕрĕ савнинчен кăшт кăна лайăхрах-мĕн; пĕрин тĕттĕмлĕхĕпе ырă чĕри, теприн тата арçынсен кăмăлне каяс тесе йăпăлтатса ейкеленни мана шалтах йăлăхтарса çитерчĕ. Пĕлес килет пулсан, эпĕ ăна халь те юрататăп-ха, темиçе минут хушши савăннăшăн çав тери тав тăватăп, уншăн хам пурнăçа татмашкăн хатĕр, çапах та унпа кичем мана... Те айван ĕнтĕ эпĕ ытла та, те усал тăвакан çын, пĕлейместĕп; анчах тĕрĕсси пĕрре: эпĕ те çавăн вырăнĕнчи çын пекех хĕрхенме тивĕçлĕ çын, унтан ытларах

[1] Пысăк свет — артистократсен обществи, ушкăнĕ.

та пулӗ, тен: ман чуна чаплă пурнăç пăснă, шухăшăм канăçсăр, чĕрем тăрана пĕлмен; мана пурте сахал пек; кулянассине те, савăнăça хăнăхнă пекех, час хăнăхнă, çавăнпа вара пурнăçăм та кунсерен пушанса пычĕ; манăн халĕ çул çÿресси кăна тăрса юлчĕ ĕнтĕ. Май пулсанах тухса каятăп,— анчах Европăна мар, турă хăтартăрах!— Америкăна, Аравие, Индие каятăп; кирек ăçта та пулин çитсе, çул çинче ÿксе вилĕп-и! Тен, тăвăл тавраше пулăшĕ, е тумхахлă çул-и — мана юлашки канăç кÿрессе шанса тăратăп эпĕ». Çапла вăл нумайччен калаçрĕ, сăмахĕсем вара асра нихçан манăçми тăрса юлчĕç, мĕншĕн тесен унашкал калаçнине эпĕ çирĕм пилĕк çулхисенчен пĕрремĕш çынран илтрĕм, урăхран илтес те çук-и, тен... Мĕн хăямачĕ иккен! Каласамăр эсир мана,— терĕ малалла штабс-капитан, ман енчелле çаврăнса,— эсир, ак, столицăра та халь çеç пулнă пулас: унти çамрăксем пурте çавăн пек-и вара?

— Çавăн пек калакан çынсем нумай, вĕсен хушшинче чăнласах калаканнисем те пур пулĕ; йăлăхса çитесси вăл, хай, модă пекех, обществăн çÿлти сийĕнчен пуçланса, аялти сийне анать те, ăна вара çĕтĕлсе пĕтичченех сĕтĕреççĕ; çавăнпа хальхи вăхăтра чĕререн салхуланнисем çав инкеке, шăпа выранне хурса, пытарма тăрăшаççĕ,— терĕм эпĕ.— Штабс-капитан ман сăмаха ăнланаймарĕ пулас, пуçне сулкаларĕ те чеен кулса илчĕ:

— Салхуланас йăлана французсем шухăшласа кăларнă пулĕ.

— Çук, акăлчансем.

— Э-э, акă мĕнле иккен!.. вĕсем яланах чи чарусăр ĕçке ерсе кайнă çынсемччĕ çав,— терĕ вăл.

Ирĕксĕрех эпĕ Мускаври пĕр улпут майрине аса илтĕм, вăл Байрон никам та мар, ĕçке ярăннă çын çеç пулнă, тесе ĕнентерчĕ,— анчах штабс-капитан сăмахне йывăра илме çук. Эрех ĕçес мар тенипе вăл хăйне хăй, тĕнчере пур инкек те эрех ĕçнинчен килет, тесе ĕнентерме тăрăшать.

Çав вăхăтра вăл хăйĕн калавне малалла тăсрĕ:

— Казбич урăх килкелесе çÿремерĕ. Анчах унччен килни ырра мар иккенне туйсах тăраттăм эпĕ, вăл мĕнле те пулин инкек пуçарасса кĕтсех тăмаллаччĕ.

Акă пĕррехинче Печорин мана хăйпе пĕрле хир сысни тытма кайма тимлерĕ; эпĕ нумайччен турткаланса тăтăм: мĕне кирлĕ иккен мана! Çапах та вăл мана хăйпе

пĕрле илсе кайрĕ-кайрех. Эпир пĕр пилĕк салтак илтĕмĕр те ирпе ирех тухса кайрăмăр. Хăмăшлăхсенче те вăрманта вун сехетчен çӳрерĕмĕр,— нимĕн те курмарăмăр. «Килелле таврăнар мар-и?— терĕм эпĕ. «Мĕн кутăнлашмалли пур? кунĕ çавăн пек телейсĕр пулчĕ!»— терĕм. Григорий Александрович çав шăрăхра ĕшенсе çитнĕ пулин те, кайăк тытмасăр таврăнасшăн пулмарĕ... Çынни çавăн пекчĕ ĕнтĕ вăл: шухăшланă-тăк, ăна чарса та ан тăр. Ахăртнех, ăна ача чухнех амăшĕ иртĕхтернĕ пулас... Акă кăнтăрла çитеспе çĕр çăтасшĕ хир сыснине шыраса тупрăмăрах,— бах! бах! персе ятăмăр эпир, тивертеймерĕмĕр, хир сысни хăмăш ăшне кĕрсе тарчĕ... çав тери телейсĕр кун пулчĕ çав! Эпир вара кăштах кантăмăр та килелле май уттартăмăр.

Чĕлпĕрсене алăран вĕçертнĕччĕ эпир, нимĕн шарламасăр юнашар уттарса пыратпăр, крепоç патнех çите пуçланăччĕ, ката урлă кăна тухмаллаччĕ. Сасартăк пăшал пенĕ сасă... Эпир пĕр-пĕрин çине пăхса илтĕмĕр: иксĕмĕре те пире пĕр шухăш тĕлĕнтерчĕ. Тӳрех пăшал сасси илтĕннĕ çĕрелле вĕçтертĕмĕр; пăхатпăр: вал патне пуçтарăннă салтаксем пире уялла кăтартаççĕ, уйра пĕр юлан ут ут-вĕттин вĕçтерсе пырать, йĕнерĕ çине темле шурă япала хунă. Григорий Александрович чеченецран та кая мар кăшкăрса ячĕ; унтан пăшалне тытрĕ те унталла сиктерчĕ; эпĕ ун хыççăн.

Сунар ăнăçман пирки пирĕн лашасем ĕшенсех çитменччĕ-ха: вĕсем малалла сиккипе пыраççĕ, кашни самантрах эпир çывхарса та çывхарса пыратпăр. Акă хайхи эпĕ Казбича палласа илтĕм, вăл хăй умне мĕн тытнине çеç уйăрса илейместĕп. Печорина хуса çитрĕм те: «Казбич ку!..»— тесе кăшкăртăм. Вăл ман çинелле пăхрĕ, пуçĕпе сулчĕ те утне чăпăрккапа çапрĕ.

Пыра киле вăл пиртен пăшалпа пемелĕх хушăра кăна тăрса юлчĕ; лаши ывăнса çитнĕччĕ-ши Казбичăн, те пирĕннинчен начартарахчĕ вара, анчах вăл хуçи мĕнле хистесен те питех васкасшăн пулмарĕ. Ман шухăшпа çав самантра вăл хăйĕн Карагезне те аса илчĕ пулмалла...

Пăхатăп: Печорин сиккипе пынă çĕртенех пăшалĕпе тĕллет... «Ан перĕр!— тесе кăшкăратăп ăна:—перекетлĕр пемеллине, çаплах хăваласа çитетпĕр ăна»,—тетĕп. Эх, çамрăксем çав! кирек хăçан та вара ытла хĕрсе каяççĕ... Анчах пăшал сасси янраса та кайрĕ, пульă лашин

кайри урине амантрĕ; хĕрсе кайнипе вăл тата вунă утăма яхăн сиксе илчĕ те çавăнтах такăнчĕ, чĕркуççи çине тĕшĕрĕлсе ўкрĕ. Казбич сикрĕ те анчĕ, тинех курттăмăр ака: хăй аллинче вăл пĕркенчĕкпе чĕркенĕ хĕрарăма тытнă... Вăл Бэла пулнă иккен... Мĕскĕн Бэла! Казбич пире хăйсен чĕлхипе темĕскер кăшкăрчĕ те кинжалне çĕклерĕ... Тăхтама вăхăт çук... Эпĕ те ака, мĕн пулать те мĕн килет тесе, персе ятăм; пульă Казбича хул пуççинчен лекрĕ пулас, мĕншĕн тесен вăл аллине сасартăк антарчĕ... Тĕтĕм сирĕлсен пăхатпăр та, çĕрте аманнă лаша выртать, ун патĕнчех Бэла; Казбич хăй пăшалне пăрахрĕ те йывăç тĕмисем хушшипе, кушак пек йăпшăнса, чул ту çинелле улăхать; манăн персе антарас килчĕ ăна — пăшала авăрламанччĕ! Лашасем çинчен сиксе антăмăр та Бэла патне пытăмăр. Эх, апăрша, вăл пĕр хускалмасăр выртать, суранĕнчен пĕр чарăнми юн юхать... Чĕринчен те чикмен-çке çав тискер çын, асаплантарасшăн пулса, çурăмĕнчен чикнĕ... шăлтах вăрă-хурахла тунă çав! Бэла нимĕн те пĕлмест. Эпир ун пĕркенчĕкне çуртăмăр та суранне май çитнĕ таран хытăрах туртса çыхрăмăр; Печорин кăлăхах унăн сивĕннĕ тутине чуп тăвать — Бэла тăна кĕреймерĕ.

Печорин лашине утланчĕ; эпĕ Бэлăна çĕклесе аранаран ун патне йĕнер çине лартрăм; вăл ăна аллипе çавăрса тытрĕ те, эпир каялла кайрăмăр. Темиçе минут хушши сăмах чĕнмесĕр пынă хыççăн: «итлĕр-ха, Максим Максимыч,— терĕ мана Григорий Александрович,— капла майпа ăна эпир чĕрĕн илсе çитерейменĕпĕр».— «Чăнах та!»— терĕм те эпĕ, вара лашасене эпир мĕн пур вăйпа чуптартăмăр. Крепоç алăкĕ патĕнче пире пĕр ушкăн халăх кĕтсе илчĕ; Бэлăна Печорин патне хуллен кăна çĕклесе кĕрсе, эпир лекаре чĕнтертемĕр. Лекарь ўсĕр пулин те пычĕ; суранне пăхрĕ, вара вăл Бэла пĕр кунтан ытла пурăнаймасть, тесе пĕлтерчĕ, анчах вăл йăнăшрĕ...

— Сывалчĕ-и? — тесе ыйтрăм эпĕ штабс-капитанран, хĕпĕртенипе аллинчен ярса тытса.

— Çук,— терĕ вăл:—лекарь йăнăшни пирки калас пулсан, Бэла тата икĕ кун пурăнчĕ..

— Анлантарса парăр-ха мана, Казбич ăна мĕнле майпа вăрласа кайнă?

— Акă мĕнле пулнă вăл: Печорин ăна: ниçта та ан тух, тесе хăварнă пулин те, вăл крепоçран çырма

хĕррине тухнă. Çанталăк питĕ шăрăхчĕ; вăл урисене шыва ярса чул çинче ларнă. Казбич йăпшăнса пынă та ун патне, кап! ярса тытнă, çавăнтах унăн çăварне хупласа, йывăç тĕми хушшине сĕтĕрсе кĕнĕ, унтан лаши çине утланнă та вĕçтере панă! Лешĕ çав хушăра кăшкăрса яма та ĕлкĕрнĕ; хыпăнса ӳкнĕ часовойсем персе те янă, анчах тивертеймен, шăпах çав вăхăтра эпир те пырса çитрĕмĕр.

— Казбич мĕншĕн вара ăна вăрласа каясшăн пулнă-ха?

— Ак тамаша! Çав черкессем вăрлама юратакан халăх-çке: мĕн урлă выртать, çавна илмесĕр чăтаймаççĕ вĕсем, тепĕр япала кирлех те мар, тейĕпĕр, вĕсем çапах та çавна вăрласа каяççех... Уншăн вĕсене айăпламалли çук ĕнтĕ! Çитменнине тата Казбич Бэлăна тахçантанпах юратса пурăннă-çке.

— Бэла вилчĕ-и вара?

— Вилчĕ: анчах питĕ нумай асапланчĕ, эпир те унпа самаях тертлентĕмĕр. Каçхине пĕр вунă сехетре Бэла тăна кĕчĕ; эпир ун патне пырса лартăмăр; вăл куçне уçсанах Печорина чĕнме пуçларĕ. «Эпĕ кунта, сан патăнтах, манăн джанечка (пирĕн пек калаçсан, чунăмçăм тени пулать),— терĕ вăл, ăна аллинчен тытса.— «Эпĕ вилетĕп!»— терĕ Бэла.—Эпир ăна лăплантарма пуçларăмăр, лекарь сана темле пулсан та сыватма пулчĕ, тетпĕр; вăл пуçне сулчĕ те стена çумнелле çаврăнса выртрĕ, вилесси килместчĕ çав унăн!..

Çĕрле вăл аташма пуçларĕ, пуçĕ вĕриччĕ унăн, вăхăчĕ-вăхăчĕпе вăл пĕтĕм тăлппăвĕпе сивĕ чир тытнă чухнехи пек чĕтренсе илчĕ, ашшĕ çинчен те, шăллĕ çинчен те темле çыхăнусăр сăмахсем калакаласа аташрĕ; унăн ту хушшинелле, килне каясси килчĕ пулас... Çавăн пекех вăл Печорин çинчен те калаçрĕ, ăна тĕрлĕрен ачаш ятпа асăнчĕ е хăйĕн джанечкинчен сивĕннишĕн ӳпкелешсе илчĕ.

Печорин пуçне алли çине тĕрентерчĕ те нимĕн шарламасăр ăна итлесе ларчĕ; анчах эпĕ унăн куç хăрпăкĕсем çинче пĕр тумлам куççулĕ те курмарăм; йĕрейместчĕ-ши вăл чăннипе те е хăйне хăй хытă тытма пултаратчĕ-ши,— пĕлместĕп: эпĕ хам вара çавăнтан ытла хĕрхенмеллине урăх нимĕн те курман.

Çутăлас умĕн аташма пăрахрĕ, шуралса халран кайнăскер, вăл пĕр сехете яхăн нимĕн тапранмасăр выртрĕ,

сывлани те аран-аран кăна палăратчĕ; унтан ăна çă-мăлтарах пек пулчĕ те, вăл калаçма пуçларĕ, анчах мĕн çинчен тейĕттĕрччĕ-ши эсир?.. Унашкал шухăш вилекен çыннăн кăна пулать пуль çав! Эпĕ Христос тĕнĕнчен мар, çавăнпа леш тĕнчере манăн чунăм нихçан та Григорий Александрович чунне кураймĕ, çăтмахра та унăн юлташĕ урăх хĕрарăм пулĕ, тесе кулянма пуçларĕ. Манăн ăна вилес умĕн тĕне кĕртес шухăш та пурччĕ; çавăн çинчен каларăм та ăна, вăл ман çине иккĕленсе пăхрĕ, нумайччен сăмах хушаймарĕ: юлашкинчен вара, ĕнтĕ мĕнле тĕнпе çуралнă, çав тĕнпех вилем, терĕ. Çапла кун иртрĕ. Мĕн тери улшăнчĕ вăл çав кунхине! Сăнсăр пит çăмартисем путса анчĕç, куçĕсем тата пысăкланчĕç, тути çунать. Хăй калама çук вĕриленчĕ, кăкăрĕнче хĕртнĕ тимĕр выртать, тейĕн.

Тепĕр каç çитрĕ: эпир куç хупмарăмăр, ун вырăнĕ патĕнчен те уйрăлмарăмăр. Тем пек асапланчĕ вăл, ахлатрĕ, ыратни кăшт тамалсанах Григорий Александровича: мана çăмăлтарах ĕнтĕ, эсĕ çывăрма кай, тесе йăлăна пуçларĕ, ун аллине чуп турĕ, хăй аллинчен кăлармарĕ ăна. Ир умĕн хайхи вилĕм çывхарнине сисе пуçларĕ, ниçта кайса кĕрейми тапкаланма тытăнчĕ, çыхса янине салтса пăрахрĕ те, каллех унăн юн юхма пуçларĕ. Суранне çыхса лартнă хыççăн вăл пĕр самантлăха лăпланчĕ, Печорина: эсĕ мана чуп ту, тесе йăлăнчĕ. Печорин кравать патне чĕркуçленсе ларчĕ, унăн пуçне минтер çинчен çĕклесе, хăйĕн тутине унăн сивĕнекен тутипе тивертрĕ, лешĕ чĕтĕрекен аллипе ăна мăйĕнчен ыталаса илчĕ, çапла чуп тунă чухне вăл ăна хăйĕн чунне парасшăн пулчĕ, тейĕн... Çук, мĕн тесен те вăл шăпах вăхăтра вилсе кайрĕ çав. Енчен ăна Григорий Александрович пăрахнă пулсан, мĕн пулатчĕ-ши вара? Çавăн чухнех-и, ӳлĕмрен-и, вăл ăна пур пĕрех пăрахнă пулĕччĕ-çке.

Пирĕн лекарь ăна ăшăтса, тĕрлĕ микстурă ĕçтерсе чылай асаплантарчĕ пулин те, Бэла тепĕр кунхине кăнтăрлачченех лăпланса выртрĕ, пĕр сăмах та каламарĕ вăл, мĕн хушнине пурне те итлерĕ. «Чимĕр-ха!— терĕм эпĕ лекаре,— эсир хăвăрах каларăр-çке, вăл пур пĕрех вилет, тесе, мĕне кирлĕ пулччăр ĕнтĕ сирĕн им-çамăрсем?»— терĕм. «Çапах та, Максим Максимыч, кӳренӳ ан юлтăр»,— тесе тавăрчĕ вăл мана — питĕ лайăх кăмăл ĕнтĕ, ним каламалли те çук!

Кăнтăрла иртсен, Бэла шыв ĕçес килнипе аптрама пуçларĕ. Эпир чӳречесене уçса ятăмăр, анчах тулта пӳртринчен те пăчăччĕ, вара кравачĕ патне пăр лартрăмăр,— пур пĕрех усси пулмарĕ. Эпĕ пĕлеттĕм ĕнтĕ: тӳсме çук ĕçес килни вăл вилĕм çывхарнине пĕлтерет, çавăнпа эпĕ ун çинчен Печорина каласа патăм. Бэла вырăн çинчен пуçне çĕклерĕ те: «шыв парăр!..»— терĕ хăрăлтатакан сассипе.

Печорин катан пир пек шуралса кайрĕ, стакан ярса тытрĕ те шыв тултарса пачĕ. Эпĕ аллăмпа куçа хупрăм та, ас тумастăп ĕнтĕ, темĕнле кĕлĕ тума тытăнтăм... Çапла, тăванăм, çынсем мĕнле вилнине госпитальсенче те, вăрçă хирĕнче те пайтах куркаланă та эпĕ, анчах ку вара йăлтах ун пек мар, çук, йăлтах урăхла!.. Тӳррипе каласан, мана акă тата мĕн кулянтарать: эпĕ ăна ашшĕ пекех юрататтăм пулин те, вилес умĕн вăл ман çинчен пĕрре те асăнмарĕ... Ну, ăна турă каçартăрах та!.. Чăннипе каласан, кам иккен эпĕ, вилес умĕн те ман çинчен асăнмашкăн?

Вăл шывне сыпрĕ кăна, хăйне çăмăлтарах пек туйрĕ, тепĕр виçĕ минутран вилсе те кайрĕ. Тути çине тĕкĕр хутăмăр — тĕкĕр пасармасть!.. Печорина пӳлĕмрен çавăтса тухрăм та, крепоç валĕ патнелле утрăмăр. Аллăмăрсене çурăм хыçнелле тытрăмăр, пĕр сăмах вакламасăр, эпир юнашарăн нумайччен каллĕ-маллĕ утса çӳрерĕмĕр: унăн пит-куçĕ çинче пăшăрханнă паллă çук та, çавăнпа эпĕ йăлтах кӳренсе çитрĕм: хам ун вырăнĕнче пуласпулсан ĕнтĕ—кулянсах вилмелле. Унтан вара вăл çĕр çине, пĕр сулхăнарах вырăна пырса ларчĕ те хăйăр çинче темĕн чĕркелеме пуçларĕ. Çын кăмăлне тупас пек, ăна йăпантарас тесе, эпĕ калаçма пуçларăм; вăл пуçне çĕклерĕ те кулса ячĕ... унăн куллипе ман сан-çурăмăм та çӳçенсех кайрĕ... эпĕ тупăк тутарма утрăм.

Тӳррипе каласан, эпĕ шухăшăма йăпатасшăн кăна тытăнтăм çав ĕçе. Манăн термаламă[1] татăкĕ пурччĕ, тупăкне çавăнпа сăртăм, та Григорий Александрович Бэла валлиех илсе тултарнă черкессен кĕмĕл галунĕсемпе илемлетрĕм.

Тепĕр кунхине эпир Бэлăна крепоç тулашне, çырма хĕррине, хăй юлашки хут ларнă тĕлех пытартăмăр; халĕ

[1] Термаламă — çирĕп пурçăн е пурçăнпа хӳтăш тĕртсе тунă пусма.

унăн тăпри тавра шурă акацисемпе бузинă тĕмисем ӳссе тулнă ĕнтĕ. Эпĕ хĕрес лартасшăнччĕ те, анчах темĕнле, лайăх мар пек туйăнчĕ: çапах та вăл Христос тĕнне йышăнманччĕ-çке-ха...

— Печорин мĕнле вара?— тесе ыйтрăм эпĕ.

— Печорин нумайччен сывлăхсăр пурăнчĕ, начарланса çитрĕ, мăнтăрăн; анчах çавăнтан вара эпир Бэла çинчен нихçан та сăмах пуçарман: ун çинчен калаçни хăйшĕн лайăх мар пулассине туяттăм эпĕ, мĕншĕн калаçас-ха? Пĕр виçĕ уйăхран ăна пĕр полка куçармалла турĕç те, вăл вара Грузие тухса кайрĕ. Эпир унпа çавăнтан вара тĕл пулман... Чăнах та, ас тăватăп, нумаях та пулмасть, такам мана вăл Российăна таврăнни çинчен каласа панăччĕ, анчах корпус тăрăх приказсенче нимĕнле сас-хура та пулман. Тепĕр тесен тата, хыпарсем пирĕн пата питĕ кая юлса çитеççĕ-çке.

Кунта вара вăл, кичем аса илӳсене пусарас тенипе пулас, çĕнĕ хыпарсене çулталăк кайран пĕлни мĕн тери кăмăллă марри çинчен нумайччен каласа пачĕ.

Пӳлмерĕм те ăна эпĕ, итлемерĕм те.

Тепĕр сехетрен çула тухма май пулчĕ; тăман лăпланчĕ, çанталăк уяртрĕ те, эпир тухса кайрăмăр. Çул тăрăх эпĕ ирĕксĕрех çав Бэла çинчен те Печорин çинчен сăмах хускатрăм.

— Илтмен-и кайран, Казбича мĕн пулнă-ши вара?— тесе ыйтрăм эпĕ.

— Казбича-и? Тем пулнă вара, пĕлейместĕп... Илтнĕччĕ эпĕ çапла, шапсугсен сылтăм флангĕнче темĕнле Казбич, хăюллăскер, пур тетчĕç, вăл, имĕш, хамăрăннисем персе тăнă вăхăтра та хăйĕн хĕрлĕ бешмечĕпе çав тавраšрах утса çӳренĕ пулать, пульă çывăхран шăхăрса иртсен, вăл питĕ те хисеплĕн пуçне таять, тет; анчах пĕлме çук, вăлах-ши вара!..

Кобире эпир Максим Максимычпа уйрăлтăмăр: эпĕ почтă лавĕ çине ларса кайрăм, лав йывăр пирки вăл манпа пыраймарĕ. Эпĕ урăх нихçан та тĕл пуласса шанманччĕ, çапах та тĕл пултăмăр, кирлех пулсан, каласа парам акă, ун историйĕ пысăк... Çапах та тĕрĕссипе калăр-ха, Максим Максимыч хисеплеме тивĕçлĕ çын вĕт?.. Эсир çакна йышăнатăр пулсан, эпĕ хамăн ытла та вăрăм калавăмшăн хĕпĕртенĕ те пулăттăм.



# II
## МАКСИМ МАКСИМЫЧ

Максим Максимычпа уйрӑлсан, эпӗ часах Терекпе Дарьял тӑвӗсен хушшине вӗҫтерсе тухрӑм, Казбекра ирхи апат турӑм, Ларсра чей ӗҫрӗм, унтан вара каҫхи апат тӗлне Владикавказа ҫитме ӗлкӗртӗм. Тусем ҫинчен е нимӗне пӗлтермен кӑшкӑрашнӑ сасӑсем ҫинчен, унта пулса курман ҫынсемшӗн уйрӑмах нимӗн те кӑтартса паман картинӑсем ҫинчен ҫырса, сире йӑлӑхтарам мар-ха, тата статистикӑ енӗпе асӑрхаттарнисене те ҫырса тултармӑп, пур пӗрех вӗсене никам та вуламӗ.

Эпӗ гостиницӑна ҫитсе чарӑнтӑм, иртсе ҫӳрекенсем пурте унта чарӑнаҫҫӗ. Чарӑнаҫҫӗ пулин те, кунта яшка пӗҫерсе пама е хир чӑххи ӑшалама никама та хушаймӑн, мӗншӗн тесен ку гостиницӑна виҫӗ инвалида шанса панӑ та, вӗсем виҫҫӗшӗ те вара ытла айван, ҫитменнине ура ҫине тӑрайми ӗҫсе ӳсӗрӗлеҫҫӗ, вӗсемпе ӗҫ тума ҫук.

Мана кунта: тата виҫӗ кун хушши пурӑнмалла, тесе пӗлтерчӗҫ, мӗншӗн тесен «оказии» Екатериноградран килмен-ха, ҫавӑнпа вӑл каялла кайма та пултараймасть. Тупӑнать-ҫке инкек! Анчах ҫул ҫӳрекен вырӑс ҫыннине начар каламбур [1] лӑплантараймасть, ҫавӑнпа та эпӗ, вӑхӑта ирттерес тесе, хама Максим Максимыч Бэла ҫинчен каласа панине ҫырса хума шутларӑм, ҫав

[1] Каламбур — сӑмах вылятса шӳт туни, ҫивчӗ сӑмах калани.

повеç темиçе повеçĕн вăрăм ярăмĕнче пĕрремĕш сыпăк пулассине малтан шутламанччĕ те эпĕ; ас тăвăр-ха, хăшчухне пĕр пĕчĕк япалашăнах кайран çав тери йывăр килет-çке!.. Тен, эсир «оказии» мĕн иккенне те пĕлместĕр пулĕ-ха? Вăл хӳтĕлесе пыраканни тени пулать, унта çур ротă пехотă та тата пĕр тупă пулать, вĕсем Владикавказран Кабарда урлă Екатеринограда çӳрекен лавсене хӳтĕлесе пыраççĕ.

Малтанхи куна эпĕ питĕ кичем ирттертĕм: тепĕр кун акă ирпе картишне пĕр лав пырса кĕчĕ... Э! Максим Максимыч!.. Эпир тахçанхи туссем пек тĕл пултăмăр. Эпĕ ăна хамăн пӳлĕме вырнаçма сĕнтĕм. Вăл турткаланса тăмарĕ, хул пуççийĕмрен лăпкаса илчĕ те, кулансӑ туса, тутине чалăштарчĕ. Култармăш та çав!..

Максим Максимыч апат пĕçерме питĕ ăста: фазана вăл тĕлĕнсе каймалла лайăх ăшаларĕ, ăна тăварланă хăяр шывĕпе сапрĕ; тӳррипех калас пулать вара, вăл пулман пулсан, типĕллех çимелле пулатчĕ ĕнтĕ манăн. Пĕр бутылкă кахетински эрех апатăмăр пĕр чашкăра çеç иккенне асăнтармарĕ те пире, чĕлĕмсене тивертрĕмĕр те вырнаçса лартăмăр: эпĕ чӳрече патне лартăм, вăл хутнă кăмака çумне ларчĕ, кунĕ нӳрлĕрехчĕ, сулхăнччĕ. Эпир нимĕн те чĕнмерĕмĕр. Ĕнтĕ мĕн çинчен калаçмаллаччĕ-ши пирĕн?.. Вăл мана хăй çинчен пĕтĕмпех каласа панăччĕ, манăн каласа памалли нимĕнех те çукчĕ. Эпĕ чӳречерен пăхрăм. Анлăн юхакан Терек хĕрринчи йывăçсем хушшинче унта та кунта сапаланчăк лутра çуртсем курăнаççĕ, леререх тата кăвак тусем, шăллă стена пек, палăраççĕ. Вĕсен хыçĕнчен шурă çĕлĕкне тăхăннă Казбек[1] курăнать. Ăшăмра эпĕ вĕсене «сывă юлăр», тетĕп: уйрăлас килместчĕ ман вĕсенчен...

Эпир пайтахчен çапла лартăмăр. Хĕвел ту хыçне пытанать, лапамсенче шурăрах тĕтре сарăлать. Çав вăхăтра пире урамран шăнкăрав сасси илтĕнсе кайрĕ, лавçăсем те кăшкăркаларĕç. Гостиницă картишне таса мар çи-пуçлă армянсем лавсемпе кĕрсе тулчĕç, вĕсем хыççăн тата çул çӳремелли пушă коляскă та çитсе чарăнчĕ: коляски çăмăл пырать, ăна питĕ ăста тунă вара, пăхмашкăн та вăл ют çĕршывран килнине асăнтарать, ун хыççăн венгеркă[2] тăхăннă пĕр пысăк мăйăхлă çын

[1] Казбек — Кавказ тăвĕсен чи çӳллĕ тӳпи.
[2] Венгеркă — курткă йышши капăр сăхман.

утса пырать; лакей тесен, вăл питех те чипер тумланнă темелле, чĕлĕмĕн кĕлне пит маттуррăн шаккаса кăларнине тата ямшăк çине кăшкăркаланине пăхсан, вăл мĕнле чипра иккенне тĕрĕсех пĕлме пулать. Паллах ĕнтĕ, вăл пĕр-пĕр кахал улпутăн иртĕхсе кайнă тарçи — вырассен фигаро[1] пекреххи пулмалла. «Кала-ха, ыр çыннăм,— тесе кăшкăртăм эпĕ ăна чӳречерен,— окази килчĕ-и вара?»— терĕм. Вăл самаях чăрсăррăн пăхса илчĕ, галстукне тӳрлетрĕ те пăрăнчĕ, ун умĕнчен иртсе пыракан армянин çеç, кулкаласа: «тĕрĕс, окази килчĕ, ыран ирпе каялла каять»,— терĕ уншăн. «Мухтав турра!— терĕ Максим Максимыч, çав вăхăтра чӳрече патне пырса тăнăскер.—Епле тĕлĕнмелле чипер коляскă!— хушса хучĕ вăл:—ĕнтĕ мĕнле те пулин чиновник Тифлиса следствине каять пуль. Пирĕн таврашри тусене пĕлмест пулас-ха. Çук, юратнă çыннăм, шӳт тăватăн, кунта эсĕ хамăр коляскăсене мар, акăлчансенне те тĕрĕс-тĕкел хăвармăн! Кам пулчĕ-ши ку — кайса пĕлер-ха эппин...» Эпир коридора тухрăмăр. Коридор вĕçĕнчи хăрах енчи пӳлĕмĕн алăкĕ уçах тăратчĕ. Лакейпа лавçă унта чемодансем çĕклесе кĕретчĕç.

— Итле-ха, шăллăм,— тесе ыйтрĕ унтан штабс-капитан:—камăн ку чечен коляски?.. Э?.. Çав тери чипер коляскă!..—Лакей, чемоданне салтнă май, çаврăнса пăхмасăрах хăй тĕллĕн темĕскер мăкăртатса илчĕ. Максим Максимыч тарăхса кайрĕ: хисеплеме пĕлмен çынна хул пуççийĕнчен тытрĕ те вăл: «эпĕ санран ыйтатăп, тăванăм...»— терĕ.

— Кам коляски?.. Хам улпутăн...

— Кам-ха санăн улпуту?

— Печорин...

— Мĕн терĕн эсĕ? Мĕн? Печорин-и?.. Ах, турăçăм!.. Кала-ха, Кавказра службăра пулман-и вăл?..— хаваслăн кăшкăрса ячĕ Максим Максимыч, мана çанăран туртса. Куçĕнче унăн савăнăç çиçсе тăрать.

— Пулнă пулас та, эпĕ вĕсем патĕнче нумайранпа мар-ха...

— Апла иккен... юрĕ!.. Григорий Александрович-и?.. Çапла чĕнеççĕ вĕт ăна? Эпир сан улпутупа туслă пул-

---

[1] Фигаро — вичкĕн, аслă ултавçă парикмахер — Франци драматургĕ Бомарше (1732—1799) çырнă «Севильский цирюльник» (1775) тата «Свадьба Фигаро» (1784) ятлă комедисен геройĕ.

нă,—терĕ вăл, лакее хул пуççийĕнчен кăмăллăн çапса, лешĕ сулăнсах кайрĕ...

— Итлĕр-ха, сударь, эсир мана чăрмантаратăр,— терĕ лакей, сиввĕн пăхса.

— Эккей, эсĕ, шăллăм!.. Пĕлетĕн-и, эпир сан улпутупа çав тери туслă пулнă-çке, пĕрле пураннă... Хăй ăçта юлчĕ-ха вăл тата?..

— Печорин каçхи апат тума каç выртмаллипех Н... полковник патĕнче юлчĕ,— тесе пĕлтерчĕ лакей.

— Каçхине вăл кунта кĕрсе тухмасть-и?— терĕ Максим Максимыч:—е эсĕ, тăванăм, мĕншĕн те-пулин каймастăн-и ун патне?.. Кайсан, кала-ха, Максим Максимыч кунта, те, çаплах кала... вăл пĕлет... Эпĕ сана эрех илмеллĕх сакăр вунă пус парăп...

Çавнашкал сахал сĕннине илтсен, лакей йĕрĕннипе пит-куçне пĕркелерĕ, анчах Максим Максимыч хушнине тума çапах та сăмах пачĕ.

— Халех чупса килет ак!..—терĕ мана Максим Максимыч, хĕпĕртенипе: — ăна кĕтме хапха умнех тухса ларам-ха... Эх!.. Н... полковника паллаймастăп-çке, питĕ шел...

Максим Максимыч хапха умĕнчи сак çине тухса ларчĕ, эпĕ хамăн пӳлĕме кĕтĕм. Тӳррипех калатăп, эпĕ хам та çав Печорин килессине кăшт тӳсеймесĕртерех кĕтсе тăтăм; штабс-капитан каласа панă хыççăн эпĕ ăна кăмăлласах каймарăм, çапах та унăн характерĕнчи хăш-пĕр енĕсем мана калама çук лайăх пек туйăнчĕç. Тепĕр сехетрен акă пĕр инвалид вĕресе тухнă сăмаварпа чейник илсе кĕчĕ.—«Максим Максимыч, чей ĕçес килмест-и?»— тесе кăшкăртăм эпĕ чӳречерен.

— Тавах сире, темĕн ĕçесех килмест-ха.

— Эй, ĕçсемĕр, ас тăвăр, каç пулчĕ-çке ĕнтĕ, сивĕ пулать.

— Темĕн мар; ĕçĕрех...

— Эппин, хăвăр кăмăлăр! —терĕм те пĕчченех чей ĕçме тытăнтăм эпĕ; пĕр вунă минут иртсен, хайхи манăн старик те кĕчĕ:—«Чăнах та тĕрĕс калатăр эсир,— терĕ вăл,— тем тесен те, чей ĕçсен лайăхрах пулĕ,—эпĕ ăна вĕтеттĕм те... Çынни тахçанах ун патне кайрĕ, мĕншĕн те пулин тытăнса тăчĕ пулин çеç». Вăл васкаварлăн пĕр куркине ĕçсе ячĕ те иккĕмĕшне ĕçесшĕн те пулмарĕ, темĕнле пăшăрханнă пек пулса, каллех хапхаран тухса кайрĕ: старике Печорин хисеплеменни кӳрентерчĕ ĕнтĕ,

çинчен тата, хăй унпа туслă пулни çинчен мана вăл иртнĕ кунсенче кăна каласа парсаччĕ, тата пĕр сехет каялла кăна вăл унăн ятне илтсенех «акă чупса килет вăл» тенĕччĕ.

Вăхăт чылай иртрĕ, тĕттĕм те пулчĕ, эпĕ каллех чӳречене уçрăм та Максим Максимыча: çывăрма вăхăт çитрĕ, тесе чĕнме пуçларăм; вăл хăй тĕллĕн темĕн мăкăртатрĕ, тепĕр хут та чĕнтĕм ăна — вăл урăх чĕнмерĕ.

Эпĕ, шинельпе витĕнсе, сак çинчи çуртана сӳнтермесĕрех çывăрма выртрăм. Сĕм çĕрле мана Максим Максимыч вăратман пулсан, эпĕ, ыйхăланăскер, лăпкăнах çывăрнă пулăттăм. Вăл сĕтел çине чĕлĕмне хучĕ, пӳлĕм тăрăх каллĕ-маллĕ уткаларĕ, кăмакара темĕн пăтраткаларĕ, унтан вара тин çывăрма выртрĕ, çапах та темĕнччен ӳсĕркелесе хăшкăлчĕ, енчен енне çаврăнкаласа выртрĕ...

— Хăнкăласем çыртмаççĕ-и сире?—тесе ыйтрăм эпĕ.

— Хăнкăласем çав...—терĕ вăл, сывлăшне йывăррăн çавăрса.

Тепĕр кун эпĕ ирех вăрантăм; Максим Максимыч манран та маларах тăнă-мĕн. Эпĕ ăна хапха умĕнчи сак çинче ларнине куртăм.—«Манăн комендант патне кайса килмелле те, Печорин килсенех мана чĕнтерме пĕр-пĕр çынна ярăр-ха, тархасшăн»,— терĕ вăл мана.

Эпĕ килĕшрĕм; вăл çамрăк чухнехи пек çăмăллăн чупса кайрĕ.

Ир уçă та илемлĕ. Ту çинче ылтăн пĕлĕтсем капланчĕç, вĕсем сывлăшри тусен çĕнĕ ушкăнĕ пек курăнаççĕ, хапха умĕнче пысăк площадь сарăлса выртать; ун хыçĕнчи пасар халăхпа вĕркет, паян вырсарникун: çара уроллă осетин ачисем, çурăмĕсем хыçне караслă пыл тултарнă хутаççисене çакнă та ман тавра явăнса çӳреççĕ, эпĕ вĕсене хăваласа ятăм; шухăшăм вĕсем çинче марччĕ манăн, ырă штабс-капитан пăшăрханнине эпĕ хам чĕре патнех иле пуçларăм.

Вунă минут та иртмерĕ, площадь вĕçĕнче эпир кĕтнĕ çын курăнса та кайрĕ. Вăл Н. полковникпа пыратчĕ, лешĕ ăна гостиницă патне çитерчĕ те хăй крепоç патнелле пăрăнчĕ; эпĕ çавăнтах пĕр инвалида Максим Максимыча чĕнме ятăм.

Печорина хирĕç лакей тухрĕ те: халех кӳлетпĕр тесе пĕлтерчĕ; лакей ăна сигарă ещĕкне тыттарчĕ, унтан вара, темиçе приказани илсе, хăй ĕçне тума кайрĕ. Унăн

улпучĕ сигарне тивертсе ячĕ, пĕр-ик хутчен анаслакаласа илчĕ те хапхан тепĕр енне сак çине пырса ларчĕ. Халĕ ĕнтĕ сире унăн портретне ӳкерсе парам.

Вăл вăтам пӳллĕ; унăн яштака та çинçе кĕлетки тата сарлака хул пуççийĕ вăл çирĕп çын пулнине, куçса çӳрес пурнăçри мĕн пур инкеке те йĕпе-сапана тӳссе ирттерме пултарнине кăтартать. Ана столицăри иртĕхтерекен пурнăç та, пуçĕнчи тăвăллă шухăшĕсем те çĕнтереймен. Вăл хăйĕн бархăтран çĕлетнĕ тусанлă сюртукне аялти тӳмисемпе çеç тӳмеленĕ, çавăнпа вăл хăй çине чăлт шурă кĕпе тăхăннине лайăхах курма пулать, ку тирпейлĕ çыннăн йăлине кăтартать ĕнтĕ, вараланса пĕтнĕ перчеткисем хăйĕн аристократла пĕчĕк аллисем валли ятнешĕлетнĕн туйăнаççĕ, хăрах перчеткине хывсан, эпĕ унăн шупка пӳрнисем ытла ырханнинчен тĕлĕнтĕм. Утнă чух вăра тирпейсĕр те лӳпперрĕн пырать, аллисене сулкаламаннине те асăрхарăм эпĕ, вăл ĕнтĕ çыннăн вăрттăнтарах характерне кăтартакан паллă! Эпĕ хам асăрханине кăна калатăп, хам сăнаса пĕлнĕ тăрăх çеç, çавăнпа манăн сире çапла калани тĕрĕс тесе пĕр сăмахсăрах ĕнентерес шухăшăм çук. Вăл сак çине ларсан, унăн тӳрĕ кĕлетки, çурăмĕнче пĕр шăмă та пулман пек, авăнса кĕчĕ: ку вара унăн темĕнле халсăрлăхне кăтартса парать. Вăл хăй Бальзакăн вăтăр çулхи вĕçкĕн хĕрарăмĕ, бал хыççăн ывăнса çитсе, хăйĕн çемçе пуканĕ çинче ларнă пекех ларать. Унăн пит-куçне пĕрремĕш хут пăхсан, эпĕ ăна çирĕм виçĕ çултан ытла та парас çукчĕ, каярахпа вара вăтăр çулта теме те хатĕр пултăм. Кулнă чухне унăн питĕнче темле ача кăмăлĕ пур, ӳчĕ унăн хĕрарăмăнни пек, темле çемçе, ачаш ӳт; мĕн çуралнăранпах кăтра сарă çӳçĕ шупкарах кăна тăнлă çамкине илемлĕн кăтартса тăрать... Нумайччен сăнанă хыççăн çеç ун пичĕ çинче пĕр-пĕрин урлă каçса каякан пĕркеленчĕк йĕрĕсене асăрхама пулать, тарăхнă е пăшăрханнă самантсенче вĕсем лайăххрах та палăраççĕ пулĕ. Çӳçĕ унăн çутă пулсан та, мăйăхĕ те, куç харшийĕ те хура,— çыннăн йăхне пĕлтерекен паллă, шурă лаша та хура çилхеллĕ пулать-çке. Портрета çырса пĕтерес умĕн эпĕ тата çакна калас тетĕп: сăмси унăн кăшт каçăртарах, шăлĕ шап-шурă, куçĕ чакăр; унăн куçĕ пирки манăн тата темиçе сăмах каламалла пулать-ха.

Куçĕ унăн хăй кулнă чухне те кулмасть! Хăш-пĕр çынсен çакнашкал тĕлĕнмелле уйрăмлăх пуррине асăр-

хама тӳрĕ килмен-и сире?.. Вăл вара е çын усаллине, е яланах тарăннăн хуйхăрнине кăтартать. Усăнарах аннă куç хăрпăкĕ айĕнчен вăл темĕнле фосфор çутипе ялкăшать, тейĕпĕр,— апла калама юрать пулсан. Ăшра хĕрӳлĕх пуррине е шухăш вăйлăланнине кăтартни марха ку: куçа йăмăхтаричен çутатать те, çапах та сиввĕн пăхать, яка хурçă çути евĕрлĕ вăл, нумайччен те пăхса тăмасть хăй, анчах тинкерсе, йывăррăн пăхса илет те именмесĕр каланă сăмах намăслантарнă пек вăтантарать, нимĕн туйăмсăр лăпкă кăмăлпа пăхмасан, ăна чăрсăр пăхать теме те пулать. Эпĕ ун пурнăçĕнчи хăш-пĕр енĕсене пĕлнипе çеç çакăнта каланă сăмахсем ман асăма килсе кĕчĕç пулĕ-ха, урăх çын пулсан, ун çинчен йăлтах урăхла шухăшланă пулĕччĕ, анчах эсир Печорин çинчен эп каланисĕр пуçне урăх никамран та илтме пултараймастăр, çавăнпа та сирĕн эпĕ сăнласа панипе çырлахмаллах. Çакна та каласа хăварас тата: сăнарĕ унăн начар мар, унăн илемлĕ сăн-пичĕ уйрăммăнах хĕрарăмсене килĕшмелле.

Лашисене кӳлнĕччĕ ĕнтĕ, пĕкĕ ункинче вăхăчĕ-вăхăчĕпе шăнкărав янраса тăрать, лакейĕ те пурте хатĕрри çинчен пĕлтерме Печорин патне икĕ хутчен те пычĕ, анчах Максим Максимыч çапах килмест-ха. Печорин, Кавказ тăвĕсен кăвакарнă тăррисем çине пăхса, шухăша кайрĕ, тухса каймашкăн вăл пачах та васкаман пек туйăнчĕ. Эпĕ ун патне пырса тăтăм: «Сирĕн кăшт тăхтама кăмăлăр пур пулсан, эсир ĕлĕкхи тусăра курнă пулăттăрччĕ»,— терĕм ăна эпĕ.

— Ах, чăнах та!— терĕ вăл васкасарах,— мана ĕнерех каланăччĕ-ха; анчах ăçта вăл? — Эпĕ площадь еннелле çаврăнса пăхрăм та пĕтĕм вăйпа чупакан Максим Максимыча куртăм... Темиçе минутран вăл пирĕн пата та çитсе тăчĕ: хăй хашкаса сывлать, питĕнчен тар юхать; кăвакарнă çӳç пайăркисем, çĕлĕкĕ айĕнчен сапаланса тухса, тарланипе çамки çине çыпăçнă; чĕркуççийĕсем чĕтреççĕ... вăл Печорина мăйĕнчен ыталасшăн пулчĕ, анчах лешĕ, кăмăллăн кулкаларĕ пулин те, аллине сивлеккĕн тытрĕ. Штабс-капитан пĕр самантлăха хытса тăчĕ, унтан вара ун аллине икĕ аллипе те хыттăн ярса тытрĕ, хăй çапах та сăмах калаймарĕ-ха.

— Çав тери хавас эпĕ, Максим Максимыч! Ну мĕнле пурăнкалатăр?— терĕ Печорин.

— ...Эсĕ тата?... Эсир тата?...— мăкăртатрĕ старик

куççульне кăтартса.— Миçе çул хушши... миçе кун... ăçталла каятăр капла?

— Персие каятăп, унтан тата лерелле...

— Халех-и?... Тăхтăр-ха, хаклă тусăм!.. Халех уйрăлатпăр та-и?.. Курманни мĕн чухлĕ пулатчĕ....

— Манăн каймалла, Максим Максимыч,— терĕ Печорин кĕскен.

— Турă çырлахтăр, турă çырлахтăрах! Ăçта çав териех васкатăр вара?.. Тем пек калаçас килетчĕ манăн сирĕнпе... Мĕн чухлĕ ыйтса пĕлес килетчĕ... Ну, мĕнле, отставкăра-и?.. Мĕнле?.. Мĕн тукалатăр?..

— Нимĕн те туман!— терĕ Печорин кулкаласа.

— Пирĕн крепоçри пурнăçа ас тăватăр-и-ха?.. Сунара çӳреттĕмĕр, епле ытармалла мар çĕршывччĕ!.. Эсир пеме çав тери юрататтăрчĕ вĕт... Бэла тата?..

Печорин кăшт кăна шуралчĕ те пăрăнса тăчĕ.

— Ас тăватăп, ас тăватăп!— терĕ вăл, анаслас килмен çĕртенех анаслаcа...

Максим Максимыч ăна тата пĕр-ик сехет хушши хăйпе пĕрле юлма сĕнчĕ.—Эпир лайăх апатланăпăр кунта,— терĕ вăл,— манăн икĕ фазан пур, кахетински те кунта питĕ лайăххи... Грузири пек мар та, çапах чи лайăх йышши... Калаçкалăпăр та... эсир мана хăвăр Петербургра мĕнле пурăнни çинчен каласа парăр. Юрĕ-и?..

— Чăнах та, манăн нимĕн каласа памалли те çук, хаклă Максим Максимыч. Эппин сывă юлăр, манăн кайма вăхăт çитрĕ... эпĕ васкатăп... Тавтапуç сире манманшăн...— тесе хушса хучĕ вăл, ăна аллинчен тытса.

Старик куç харшине пĕркелентерчĕ... Кулянчĕ те вăл, çилленчĕ те, çавсене тем пек пытарас тесе тăрăшрĕ пулин те:—Мĕнле манмалла!— тесе мăкăртатрĕ вăл... эпĕ нимĕн те манман... Ну, юрĕ!.. Эпĕ сирĕнпе çакнашкал тĕл пулма шутламанччĕ...

— Ну, çитĕ ĕнтĕ, çитĕ!— терĕ Печорин, ăна тусла ыталаса.—Эпĕ çавăн чухнехи пек мар-и вара?.. Ĕнтĕ мĕн тăвас?.. Кашнин хăйĕн çулĕ... Тепре тĕл пулма та тӳрĕ килчĕ-ши — турă кăна пĕлет!..—Çапла калаçсах вăл колляскă çине хăпарса ларчĕ; ямшăк тилхеписене турткалама тытăнчĕ.

— Тăхта-ха, тăхта!— тесе, сасартăк кăшкăрса ячĕ Максим Максимыч, коляскă алăкĕнчен тытса: — Кĕçех манса кайман... Ман çумра сирĕн хутсем тăрса юлнă, Григорий Александрович... Эпĕ вĕсене хампа пĕрлех

илсе çӳретĕп... Сире Грузире тупма шутланăччĕ, акă, турă ăçта курмалла турĕ... Мĕн тумалла ĕнтĕ вĕсемпе?..

— Кирек мĕн тăвăр!— терĕ Печорин.—Сывă пулăр...

— Эсир Персие каятăр эппин?.. Хăçан таврăнатăр?— тесе кăшкăрчĕ Максим Максимыч коляскă хускалса кайнă хыççăн.

Коляскă чылай инçете кайрĕ, Печорин аллине çӳлелле çĕклесе кăтартрĕ, ăна: темле пулĕ ĕнтĕ! Кирлех те мар-çке, тепĕр тесен!..— тенĕ пек ăнланма пулатчĕ.

Шăнкăрав сасси те, чуллă çул çинче кустăрмисем тăнкăртатни те тахçанах илтĕнми пулчĕ,— мăнтарăн старик çапах та çав вырăнтан хускалмарĕ, тарăн шухăша кайрĕ вăл.

— Çапла,— терĕ Максим Максимыч каярахпа, нимĕн те пулса иртмен пек кăтартма тăрăшса, тарăхнă май ун куçĕсем вăхăчĕпе куççулĕпе йăлтăртатса тăратчĕç пулин те:—Эпир унпа чăнах та туслăччĕ, анчах эпир туслă пулни мĕнех тăтăр иккен хальхи ĕмĕрте!— терĕ вăл кулянса.—Мĕне кирлĕ иккен эпĕ ăна! Пуян мар эпĕ, чинăм та çук, çулсем те унпа пĕрле çӳремеллисем мар... Куртăр-и, мĕнле капăрланса кайнă вăл тепĕр хут Петербургра пулнă хыççăн... Коляски мĕнле!.. Пурлăхĕ мĕн чухлĕ!.. Лакейĕ те мĕнле мăн кăмăллă!— ку сăмахсене вăл йĕрĕнсе кулнă пек каларĕ.—Калăр-ха,— терĕ вăл малалла, ман еннелле çаврăнса...—ну, мĕн шутлатăр эсир ун çинчен?.. Кам хăвалатăр-ха ăна халь Персие?.. Кулăшла, тупата туршăн кулăшла!.. Эпĕ пĕлсех тăраттăм вăл çилхăван иккенне, ун çине шанма та çук... хĕрхенмелле вара, чăнах, ырă ятпа мар тĕп тăвать вăл хăйне... урăхла тата майĕ те çук унăн. Эпĕ яланах калаттăм-ха, ĕлĕкхи тусусене манаканран пархатар çук вара тесе...—Ку тĕлте вăл, хăй ăшĕ вăрканине кăтартас мар тесе, çаврăнчĕ те картиш тăрăх уткалама тытăнчĕ, хăй урапин кустăрмисене пăханçи пек турĕ, çав вăхăтрах унăн куçĕнчен минутсерен куççуль сăрхăнать.

— Максим Максимыч,—терĕм эпĕ ун патне пырса,— мĕнле хутсем нарса хăварчĕ сире Печорин?

— Кам пĕлет ăна! Темле çырусем...

— Мĕн тăватăр эсир вĕсемпе?

— Мĕн тумалла унпа?.. Патронсем тума хушăп акă.

— Парăр вĕсене мана.

Тĕлĕнсе пăхрĕ вăл ман çине, ятлаçса темĕн мăкăртатрĕ, унтан чемоданне пăлхатма пуçларĕ; акă вăл пĕр

тетрадьне туртса кăларчĕ те тарăхнипе ăна çĕклесе ывăтса ячĕ; унтан тепĕрне те, виççĕмĕшне те, вуннăмĕшне те çавăн пекех çĕрелле вăркăнтарчĕ; унăн кӳреннинче те мĕнле ача йăлăнтарăшĕ те пур, мана вăл кулăшла те шел пек курăнчĕ.

— Акă вĕсем пурте, пĕтĕмпех сире пулччăр,— терĕ вăл.

— Эпĕ вĕсемпе мĕн тăвас тенĕ, çавна тума пултаратăп-и?

— Хуть те хаçатсене пичетлĕр. Ĕçĕм çук манăн!.. Мĕн вара, эпĕ унăн тусĕ-и, тăванĕ-и! Пĕр мачча айĕнче эпир чылай пĕрле пурăннă та ĕнтĕ, кампа пĕрле пурăнма тӳрĕ килмен иккен мана?..

Эпĕ хутсене пуçтартăм та, штабс-капитан ӳкĕнесрен шикленсе, хăвăртрах илсе кайрăм. Часах акă тепĕр сехетрен окази тапранса каясси çинчен те пĕлтерме пычĕç; лашасене кӳлме хушрăм. Çĕлĕк тăхăннă вăхăтра штабс-капитан ман пӳлĕме пырса кĕчĕ; вăл çула кайма хатĕрленмест пулас: темĕнле ирĕксĕрленнĕ пек те сиввĕн пăхать.

— Максим Максимыч, эсир каймастăр-им вара?

— Çук.

— Мĕншĕн апла?

— Эпĕ коменданта курман-ха, манăн ăна хысна япалисене парса хăвармалла...

— Эсир ун патĕнче пултăр-çке?

— Пуласса пултăм та,— терĕ вăл такăнарах...— килĕнче пулмарĕ-çке вăл... эпĕ кĕтсе тăраймарăм.

Эпĕ ăнлантăм ăна: мăнтарăн старик, çуралнăранпа та вăл службă ĕçне хăйне кирлишĕн пĕрремĕш хут кăна пăрахнăччĕ пулĕ те, уншăн та ăна епле тав турĕç иккен!..

— Питĕ те шел,— терĕм эпĕ ăна,— питĕ те шел, Максим Максимыч, пирĕн акă вăхăт çитмесĕрех уйрăлмалла пулать.

— Аçта пире, вĕренмен стариксене, сирĕн хыççăн хăвалама! Эсир сумлă та мăнаçлă çамрăксем: черкессен пулисем айĕнче чух — эпир апла та капла та... кайран вара тĕл пултăр та пирĕн пеккисене алă пама та вăтанатăр.

— Çапла ӳпкелешнине хам çине илейместĕп эпĕ, Максим Максимыч.

— Вăл çаплах та-ха, эпĕ сăмах çаврăннипе кăна каласа хутăм; телей сунатăп, çитес çĕре лайăх çитмелле пултăр.

Эпир сивĕ кăмăлпах уйрăлтăмăр. Ырă Максим Максимыч кутăн та чăкăлтăш штабс-капитан пулса тăчĕ иккен! Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен Печорин ăна: те асăрхаманнипе, те мĕнле те пулин урăх сăлтавпа, ун мăйĕнчен уртăнас вырăнне аллине çеç тăсрĕ. Ытла кичем-çке çамрăк çын хăйĕн чи лайăх ĕмĕчĕпе шанчăкне çухатнине пăхса тăма; халиччен вăл этемĕн ĕçĕпе туйăмне кĕрен чатăр витĕр кăна курса тăнă та халь акă сирнĕ ĕнтĕ çав чатăра, çапах та çамрăкăн хăйĕн ĕлĕкхи аташăвĕсене çĕнелнисемпе улăштарас шанчăкĕ пур, вĕсем ĕлĕкхи пекех иртеççĕ пулин те, ĕлĕкхи техĕмпех пулсан та, унăн çĕннипе улăштарас шанчăкĕ пур-ха... Анчах мĕнпе улăштармалла ĕнтĕ вĕсене Максим Максимыч çулĕсенче? Ирĕксĕрех чĕре хытса ларать, чун хупăнать...

Эпĕ пĕр-пĕчченех çула тухса кайрăм.



# Печорин журналĕ[1]

## *Умсăмах*

Нумаях пулмасть-ха, Печорин Персирен таврăннă чух вилнĕ, тенине илтсеттĕм эпĕ. Ку хыпар мана питĕ савăнтарчĕ: вăл мана унăн çырăвĕсене пичетлеме ирĕк парать. Эпĕ урăх çын çырнă произведени умне хамăн ята лартма май пуррине те усă куратăп. Эй, турăçăм, çавăн пек айăпсăр ултавшăн вулакансем мана кӳренмĕçин юрĕччĕ ĕнтĕ...

Халь, ак, хам нихçан та палламан çыннăн чĕринчи вăрттăн шухăшĕсене мĕн пирки эпĕ пурне те пелтересшĕн пулнине ăнлантарса парас тетĕп. Эпĕ унăн тусĕ пулнă пулсан, нимех те марччĕ-ха: чăн-чăн тусăн усал чарусăрлăхне кашниех ăнланать; анчах Печорина эпĕ хамăн пурнăçра та аслă çул çинче пĕр хут кăна курнă; паллах ĕнтĕ, ун çине вĕчĕ тытмастăп эпĕ, унăн тусĕ пуланçи курăнса, ăна инкек-синкек çулăхтăр та, вилĕм илсе кайтăр, тесе ылханмастăп, ӳпкелешме, канашсем пама, тăрăхлама, хĕрхенме пултараймастăп.

Ун çырăвĕсене темиçе хут вуланă хыççăн, вăл хăйĕн начар енĕсемпе айăпĕсем çинчен хăйне чĕрне хури чухлĕ те хĕрхенмесĕр, чĕри хушнипе çырса пынă тесех ĕненетĕп эпĕ. Этем чунĕн историйĕ, начар чун çинчен калать пулин те, пĕтĕм халăх историйĕнчен интереслĕрах та, усăллăрах та пулĕ-и, тен, уйрăммăнах çав историе хайне хăй сăнаса пиçĕхнĕ ăс-тăнпа çырнă пулсан, кăмăла хускатассипе е тĕлĕнтерессипе мухтанма юратмасăр çырнă пулсан, усăллă пулма кирлĕ. Руссо[2] исповечĕн мĕн тесен те çитменлĕхĕ пур: вăл ăна хăйĕн тусĕсене вуласа панă.

---

[1] Журнал — кунта: çырусем тенине пĕлтерет, кунсерен çырса пынисем.

[2] Жан-Жак Руссо (1712—1788) — Франци писателĕ, философĕ, революциллĕ тата буржуаллă идеологĕ. «Исповедь» унăн автобиографийĕ, вăл унта хăйĕн пурнăçĕ çинчен тĕлĕнмелле уççăн каласа панă.

Çапла вара çынсене усă кӳме ĕмĕтленни çеç мана хамăн алла áнсăртран кĕнĕ журналăн сыпăкĕсене пичетлесе кăларма хистет. Эпĕ кунта çынсен чăн ячĕсене пурне те улăштартăм пулин те, кунта кам çинчен калани, çавсем хăйсене палласа илме пултарĕç, тата кунти тĕнчерен ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайнă çыннăн тивĕççĕр ĕçĕсене тӳрре кăларĕç-и, тен, унсăрăн вĕсем халичченех ăна çеç айăплана пулĕччĕç-ха: эпир вĕт мĕн ăнланнине кирек хăçан та тенĕ пекех каçаратпăр.

Çак кĕнекене эпĕ Печорин Кавказра пурăнни çинчен каланине çеç кĕртрĕм. Ман алăра тата тепĕр хулăн тетрадь юлчĕ-ха, унта вăл хăйĕн пĕтĕм пурнăçĕ çинчен каласа парать. Хăçан та пулин вăл тĕнче çине тухĕ, ăна та тишкĕрĕç, анчах халь эпĕ ку ответлăха тĕрлĕрен сăлтавсем пирки хам çине илме хăяймастăп.

Хăш-пĕр вулакансем Печорин характерĕ çинчен хам мĕн шухăшланине те пĕлесшĕн пулĕç. Ман ответăм — çак кĕнекен ячĕ. «Апла пулсан, ку вара хаяррăн кулса тăрăхлани!» — тейĕç вĕсем.— Пĕлместĕп, темле ĕнтĕ.



# I

## ТАМАНЬ

Тамань хули — Российăри тинĕс хĕррисенче ларакан хуласенчен чи начар та пĕчĕк хула. Эпĕ унта кĕçех выçă вилеттĕм, çитменнине тата мана унта шыва путарма та тăчĕç. Эпĕ ямшăк лашисемпе çав хулана ытла каçа юлса çитрĕм. Ямшăк ĕшеннĕ учĕсене хула хĕрринчи пĕртен пĕр чул çурт хапхи умне пырса тăратрĕ. Часовойĕ, Хура тинĕс казакĕ, шăнкăрав сассине илтсенех, ыйхă тĕлĕшпе: «Кам килет?»— тесе тискеррĕн кăшкăрса пăрахрĕ. Урядникпе десятник тухрĕç, эпĕ вĕсене хам офицер иккенне, çапăçусенче çўрекен отряда хысна ĕçĕпе кайни çинчен ăнлантарса патăм та хваттер тупса пама ыйтрăм. Десятник пире хула тăрăх ертсе кайрĕ. Хăш пўрт патне кăна пыратпăр — пурне те йышăннă.

Çанталăк сивĕччĕ, эпĕ, виçĕ каç çывăрмасăр халран кайнăскер, çиллене пуçларăм. «Илсе кай мана ăçта та пулин, вăрă-хурах! Шуйттан патĕнче те пулин вырăн тупса пар!»— тесе кăшкăрса пăрахрăм. Десятник ĕнсине хыçкаласа:—Пур тата тепĕр хваттер те, анчах, ваше благородие, унта килĕшсех каймĕ, темĕн, тасах мар унта!— терĕ. Унăн юлашки сăмахĕ мĕне пĕлтернине ăнкарса илеймесĕрех, эпĕ ăна малалла утма хушрăм. Унтан вара, ирсĕр тăкăрлăксем тăрăх чылайччен

çапкаланса çӳренĕ хыççăн, çав таврашра ишĕлнĕ кивĕ хӳмесем çеç асăрхарăм та, каярахпа шăпах тинĕс хĕрринче ларакан пĕр пĕчĕк пӳрт умне çитсе чарăнтăмăр.

Тулли уйăх манăн çĕнĕ пӳртĕн шурă стенисемпе хăмăшпа витнĕ тăррине çутатса тăрать. Чул хӳмепе çaвăрса тунă кил картинче пӳртрен те пĕчĕккĕ кивĕрех кăна тепĕр лаçă пăхса ларать. Стена хĕрринче тинĕс çыранĕ чăнкă анать, аялта вара вĕçĕмсĕр шавласа тăракан тĕттĕм кăвак хумсем чӳхенеççĕ. Çав канăççăр, çапах та хăйне парăнакан çанталăк çине уйăх лăпкăн пăхать. Ун çутинче эпĕ çыранран катара тăракан икĕ карапа куратăп, шупка пĕлĕт çинче вĕсен хура мачти урлашкисем, эрешмен карти евĕрлĕ, пĕр хускалмасăр палăраççĕ. «Пристаньте карапсем пур, ыран Геленджика тухса каятăп»,— тесе шухăшларăм эпĕ.

Лини казакĕ ман патăмра денщик ĕçне туса тăрать. Эпĕ ăна чемодана илсе юлма, лавне каялла яма хушрăм та хам кил хуçине чĕнетĕп — сас паракан çук, шаккатăп — хирĕç тухакан çук... Мĕскерле ку? Тăрсан-тăрсан тин çенĕкрен пĕр вунă тăватă çулхи ача мĕшĕлтетсе тухрĕ.

— Хуçи ăçта?— Çук.— Мĕнле, пачах çук-и?— Пачах. Кил хуçи арăмĕ тата?— Слободкăна чупрĕ.— Кам мана алăк уçса кĕртĕ?— терĕм эпĕ, алăкне урапа тапса. Алăк хăех уçăлчĕ: пӳртрен нӳрлĕ шăршă çапрĕ. Шăрпăк çутса ятăм та çунакан шăрпăка ача сăмси патне илсе пытăм: ачан шур илнĕ куçĕсене курах кайрăм. Вăл суккăр, çуралнăранпах суккăр иккен вăл. Хăй ман умра пĕр хускалмасăр тăрать, эпĕ унăн сăнарне пăхкалама пуçларăм.

Тунмастăп, суккăрсемпе уксах-чăлахсене, хăлхасăр та чĕлхесĕрсене, ал-урасăрсене, курпунлисене тата ытти çавăн пеккисене ытла шансах каймастăм эпĕ. Этемĕн сăнарĕпе чунĕ хушшинче яланах темле, тĕлĕнмелле çыхăну пуррине час-часах асăрхакаланă эпĕ: этем хăй кӳлепин пĕр-пĕр пайне çухатсан вара, унăн чунĕ те пĕрпĕр туйăмне çухатнă пек туйăнатчĕ мана.

Çапла ĕнтĕ, эпĕ суккăр ачан сăн-питне пăхкалама пуçларăм, анчах мĕн калас-ха манăн унăн куççăр питнепăхнипех?.. Хĕрхеннĕ кăмăлпа пайтахчен пăхса тăтăм ун çине, çак самантрах акă унăн çӳхе тутисем аран-аран палăрмалла йăл кулса илчĕç, хам та пĕлместĕп вара, темшĕн çавă ман кăмăла питех те хуçрĕ. Пуçăмра

асăрханса тăрас, тенĕ шухăш вĕлтлетрĕ,— ку суккăр ача, хам шухăшланă пек, ытла суккăрах та мар пулĕ-ха, куçа шур илнĕ пек тума май çук-ши, тесе, эпĕ юриех хама ĕнентересшĕн пултăм, мĕне кирлĕ-ши тата куçа шурă илтермешкĕн. Анчах мĕн тăвăн-ха? Эпĕ кирек хăçан та çынсене шансах кайман ĕмĕте усратăп çав...

«Эсĕ хуçа ывăлĕ-и?»— тесе ыйтрăм эпĕ юлашкинчен. — «Çук». — «Кам вара эсĕ?» — «Тăлăх, мĕскĕн».— «Хуçа арăмĕн ачисем пур-и?» — «Çук — хĕрĕ пурччĕ, вăл та тинĕс леш енне тутарпа ерĕшсе кайнă». — «Мĕнле тутарпа?» — «Кам шуйттанĕ пĕлтĕр-и ăна! Крым тутарĕ, Керчри кимĕçĕ».

Эпĕ пӳрте кĕтĕм: пӳртре икĕ тенкел пур, пĕр сĕтел, кăмака çумĕнче пĕр пысăк арча пур. Стена çинче пĕр турăш та çук — ырра мар ку япала! çĕмрĕк чӳрече витĕр тинĕс çилĕ вăркăшса кĕрет. Эпĕ чемоданран çурта кăларса тивертрĕм те япаласене вырнаçтарма тытăнтăм: хĕçпе пăшала кĕтесе тăратрăм, пистолета сĕтел çине хутăм, буркăна сак çине сарса хутăм, казак тепĕр сак çине сарса выртрĕ. Тепĕр вунă минутран вăл хăрăлтаттарма та тытăнчĕ, эпĕ кăна ниепле те çывăраймастăп, сĕмлĕхре манăн тавра пĕрмаях шурă куçлă ача явăнса çӳрет.

Çапла пĕр сехете яхăн иртрĕ. Чӳрече витĕр уйăх çутатса пăхать, унăн çути пӳртĕн çур урайĕнче вылянкаласа тăрать. Сасартăк урай урлă каçакан çап-çутă йĕр çийĕпе пĕр мĕлке вĕлтлетсе иртрĕ. Эпĕ çĕклентĕм те чӳрече витĕр пăхрăм: чӳрече умĕнчен такам тепĕр хут чупса иртрĕ те таçта кĕрсе çухалчĕ. Ку чун чăнкă çыран айккипе чупса кайма пултарнине эпĕ пуçа та илейместĕп, анчах урăх ниçталла кайма та май çук-çкеха унăн. Выртнă çĕртен çĕклентĕм те çийĕме аçам уртса ятăм, кинжала çакрăм, вара шăппăн утса пӳртрен тула тухрăм: мана хирĕç суккăр ача утса кĕрет. Эпĕ хӳме çумне лăпчăнтăм. Ача, сыхланса кăна утса, ман çумранах иртсе кайрĕ. Хул хушшине вăл темле çыхă хĕстернĕ, пристань еннелле çаврăнчĕ те тăвăр кăна чăнкă сукмакпа аялалла анма пуçларĕ. «Çав кунхине чĕлхесĕррисем калаçма пуçлĕç, суккăррисем куçлă пулса тăрĕç»,— тесе, шухăшласа илтĕм вара эпĕ, ăна куçран çухатас мар тесе, ун хыçнереххĕн утса кайса.

Çав вăхăтра пĕлĕт уйăха хупăрла пуçларĕ, тинĕсрен тĕтре çĕкленчĕ: ун витĕр çывăхри карап çинчи хунар

çути те аран палăрса тăрать... Тинĕс хĕрринче кăпăклă хумсем халех ăна шыва путарас пек явăнаççĕ. Эпĕ чăнкă çыран аяккипе аран-аран анкаларăм та пăхатăп: хайхи суккăр ача аяла ансан кăшт чарăнса тăчĕ, унтан сылтăмалла пăрăнчĕ, шыв хĕррипе кĕçех шыва кĕрсе каяс пек утса пырать; ăна хум çĕклесе каяссăнах туйăнать, анчах вăл ланкашкасенчен сыхланса, чул çинчен чул çине епле хăюллăн сиксе каçнине аса илсен, вăл кун пек çĕрте пĕр хут кăна çÿременнине часах тавçăртăм. Юлашкинчен вăл, темĕн итленĕ пек пулса, чарăнса тăчĕ, çĕрелле кукленсе ларчĕ те çыххине хăй çумне хучĕ. Эпĕ çыран хĕрринчи пĕр пысăк чул хыçĕнче пытанса пăхса тăратăп. Темиçе минутран вара хирĕçле енчен пĕр шурă мĕлке курăнса кайрĕ. Çав мĕлке, суккăр ача патне пырса, ун умне пĕшкĕнсе ларчĕ. Çиле май вĕсем мĕн çинчен калаçни вăхăтран вăхăта мана та илтĕнкелерĕ.

«Суккăр, эсĕ-и ку? Тăвăл вăйлă. Янко килеймест пулĕ»,— терĕ хĕрарăм сасси.—«Янко тăвăлран хăрамасть»,— таварчĕ суккăрĕ. «Тĕтре çăралать»,— пÿлчĕ ăна каллех хĕрарăм хăйĕн хурлăхлă сассипе.

— Тĕтреллĕ чух хурал тăракан пароходсем хушшипе иртсе кайма çăмăл,— таварчĕ ăна лешĕ.—«Эхер те вăл шыва путсан?» — «Мĕнех иккен? Вырсарникун чиркĕве çĕнĕ лентăсăр каятăн вара»,— терĕ суккăрĕ.

Унтан вĕсем шăпланчĕç: çапах та мана пĕр япала тĕлĕнтерчĕ: суккăр ача манпа украинла калаçатчĕ. халĕ акă вырăсла тап-таса калаçать.

— Куратăн-и эпĕ тĕрĕс каланине,— терĕ каллех суккăр ача, аллисене çапкаласа илсе.—Янко тинĕсрен те, çил-тăвăлран та, тăманран та, çыран хĕрринчи хуралсенчен те хăрамасть. Итле-ха: ку вăл шыв шăмпăлтатни мар, эп улталанас çук,— унăн вăрăм кĕсменĕсем çапăнни çапла илтĕнет.

Хĕрарăм ура çине сиксе тăчĕ те, пăшăрханнă пек пулса, тинĕс еннелле, инçете пăхма пуçларĕ.

— Йăнăшатăн эсĕ, суккăр, эпĕ нимĕн те курмастăп,— терĕ вăл.

Ĕнтĕ кимĕ пек япалана курасчĕ-ха тесе, эпĕ темĕн пек тинкерсе инçете пăхрăм пулин те, нимĕн те кураймарăм. Çапла вунă минута яхăн иртрĕ. Кĕçех хум сăрчĕсен хушшипе хура пăнчă курăнса кайрĕ: пĕрре пысăкланчĕ вăл, тепре пĕчĕкленчĕ. Вăйлă хумсене çурса, пĕрре çÿлелле хăпарса, тепре аялалла анса, çыран хĕр-

ринелле хуллен кăна пĕр кимĕ килет. Кимĕпе ишекенĕ вара, ҫирĕм ҫухрăм сарлакăш тинĕс ури урлă ҫакăн пек тăвăл асăхнă каҫхине ишсе каҫма хăйнăскер, маттур та харсăр ҫын пулмалла, ку ĕҫе тума шухăш тытнăскерĕн сăлтавĕ те пысăк пулма кирлĕ! Ҫакăн пек шухăшласа, эпĕ, чĕрем хускалнипе, ирĕксĕрех мĕскĕн кимĕ ҫине пăхса тăтăм. Анчах вăл, кăвакал пек, чăмса илет те, унтан каллех ҫуначĕсене сарса, кĕсменĕсемпе хăлаҫланса, кăпăк сирпĕнчĕкĕ хушшипе ҫăткăн авăрсенчен сике-сике тухать. Акă вăл сулăнса ҫыран хĕррине ҫапăнĕ те пĕрчĕк юлмиччен саланса кайĕ, тесе шухăшласа тăраттăм эпĕ, анчах вăл хăяккăн кăна пăрăнса, курăклă пĕр пĕчĕк сăмсаха ним инкек-синкексĕрех пырса кĕчĕ. Кимĕ ҫинчен вăтам пӳллĕ ҫын сиксе тухрĕ, пуҫне вăл така тирĕнчен ҫĕлетнĕ тутар ҫĕлĕкне тăхăннă. Аллипе сулчĕ те, виҫҫĕшĕ те кимĕ ҫинчен темĕн кăлара тытăнчĕҫ. Питех те нумай. япала кăларчĕҫ вĕсем, ҫавăн пек йывăр тиенĕ кимĕ епле майпа шыва путманнине эпĕ ку таранччен те ăс ҫавăрса ҫитерейместĕп. Хул пуҫҫи ҫине кашниех пĕрер ҫыхă хурса, вĕсем ҫыран хĕрринелле тухрĕҫ, часах эпĕ вĕсене куҫран ҫухатрăм. Манăн киле таврăнмалла пулчĕ. Анчах та, калас пулать, ку тĕлĕнмелле ĕҫ мана пăшăрхантарчĕ, эпĕ аран-аран ир ҫитессе кĕтсе илтĕм.

Казак ыйхинчен вăранчĕ; эпĕ тумтир тăхăнса ларнине асăрхасан питех те тĕлĕнчĕ вăл, ҫапах та ăна сăлтавне каласа памарăм. Эпĕ ҫутҫанталăка курса савăнтăм. Шупка пĕлĕт татăкĕсемпе сапăнса тулнă кăвак тӳпе ҫине тата катари симĕс-кăвак йĕрпе тăсăлнă ҫыранăн шурă маяк башниллĕ сăртпа пĕтекен инҫетри Крым ҫĕрĕ ҫине пайтах вăхăт хушши пăхса тăтăм, Геленджика миҫе сехетре тухса каяссине комендантран ыйтса пĕлес тесе, эпĕ Фанагори крепоҫне тухса утрăм.

Анчах, ҫĕр ҫăттăрах ҫав. Комендант мана нимех те татăклăн татса калаймарĕ. Пристаньте тăракан пароходсем пурте е хурал карапĕсем е купцасен пулнă. Вĕсене тиеме те тытăнман-ха. «Тата пĕр виҫĕ-тăватă кунтан почтă пароходĕ килĕ-и, тен,— терĕ мана комендант,— ун чухне курăпăр». Эпĕ салхуллă та ҫиллес таврăнтăм киле. Ҫитсессĕнех манăн казак темĕнрен сехĕрленнине асăрхарăм.

— Питĕ начар кунта, ваше благородие!— терĕ вăл мана.

— Çапла çав, тăванăм, пĕр турă кăна пĕлет эпир кунтан хăçан тухса каяссине!— терĕм эпĕ. Çакăн хыççăн вăл пушшех лăшăрханса ўкрĕ, ман çума пĕшкĕнсе, шăппăн çапла каларĕ:

— Ырă мар кунта! Эпĕ паян Хура тинĕс çинчи хам паллакан уряднике тĕл пултăм, пĕлтĕр вăл пирĕн отрядраччĕ. Хамăр ăçта чăраннине каласа парсанах, вăл мана «унта усал çынсем пурăнаççĕ!»— терĕ. Чăнах та, мĕнле суккăр-ха вăл! Кирек ăçта те пĕччен çиех çўресен: пасара та, çăкăр илме те, шыв ăсма та каять вăл... кунта ăна апла-капла çўренине асăрхамаççĕ пулас, хăнăхса çитнĕ пулмалла.

— Мĕнле-ха вара! Хуçа арăмĕ тухкаласа çўрерĕ-и?

— Паян, эсир çук чух, карчăкпа хĕрĕ килчĕç.

— Мĕнле хĕр? Унăн хĕрĕ çук.

— Турă пĕлет ăна, хĕрĕ пулмасан кам пултăр-ха тата: авă, карчăкĕ те пўртрех ларать-ха.

Эпĕ лаççа кĕтĕм. Кăмакине питех те вăйлă хутса янăччĕ, унта апат та пĕçереççĕ. Апачĕ ĕнтĕ, чухăнсемшĕн пулсан, ытла та лайăх темелле. Карчăк ман сăмаха хирĕç: эпĕ хăлхасăр, нимĕн те илтместĕп, тесе çеç тавăра-тавăра хурать. Мĕн тăвăн-ха унпа? Эпĕ кăмакана çатăркасем пăрахса ларакан суккăр ачапа калаçма пуçларăм. «Айта-ха, суккăр шуйттан çури,— терĕм эпĕ ăна хăлхинчен ярса илсе,— кала! Эсĕ çĕрле çыхă çĕклемĕпе ăçта сĕтĕрĕнсе çўрерĕн-ха, э?»— терĕм. Сасартăк ман суккăр йĕрсе ячĕ, кăшкăрма та ахлатма пуçларĕ. «Ăçта пулнă эпĕ? Ниçта та пулман... çыхăпа тетĕн-и? Мĕнле çыхăпа?» Карчăк хайхи, эпир калаçнине итлесе, мăкăртатма та пуçларĕ: «Мĕн çав мĕскĕн çинчен шухăшласа кăларатăр? Мĕншĕн тапăнатăр эсир ăна? Мĕн турĕ вăл сире?»— терĕ вăл. Мана ку ĕç йăлăхтарса çитерчĕ. Ку юмахăн туппине пур пĕрех тупатăп, тесе тулалла тухрăм.

Буркăпа пĕркентĕм те, хўме çумĕнчи чул çине ларса, таврари инçете пăхма пуçларăм. Ман умра çĕрлехи тăвăлпа хускалнă тинĕс сарăлса выртать. Унăн тĕлĕрме пуçланă хула сĕрлевĕ евĕр шавĕ иртнĕ кун-çула аса илтерчĕ, шухăшăмсене çурçĕрелле, хамăрăн сивĕ столицăна куçарчĕ. Аса илўсемпе хĕпĕртенĕ май, эпĕ урăх нимĕн çинчен те шухăшламарăм... Çапла, пĕр сехете яхăн-и, ытларах та-и ирттертĕм пулĕ... Сасартăк ман хăлхана темĕскерле юрă майлă сасă пырса кĕни илтĕн-

чĕ. Ку чăнахах та юрă пулчĕ иккен, хĕрарăм сасси, чечен те таса сасă,— анчах ăçта-ха вăл?.. Итлетĕп акă: кĕвви кунсерен илтĕнекенни пек мар, пĕрре вăрăммăн та хурлăхлăн, тепре васкавлăн та уçăмлăн янăрать, çаврăнса пăхатăп та — таврара никам та çук. Тата итлетĕп акă — сасă пĕлĕтрен аннă пек. Пуçа çĕклесе пăхатăп: эпĕ пурăнакан пўрт тăрринче çивĕтне салатса янă хĕрача тăра парать, хăй ярăм-ярăм тăрăхла кĕпе тăхăннă арçури пекех ĕнтĕ! Хĕвел çути кўçне ан йăмăхтартăр тесе, аллипе хупласа, инçетелле тинкерсе пăхать, кулкаласа илет те çавăнтах хăй тĕллĕн калаçа пуçлать, çав вăхăтрах юрласа та ярать.

Эпĕ ку юррăн кашни сăмахне ас туса юлтăм:

Вĕç-хĕррисĕр ирĕкре—
Симĕс тинĕс тăрăх,
Карапсем çўреççĕ-çке—
    Шура парăслăскерсем.
Çав карапсен хушшипе
Пĕчĕкçеççĕ кимĕ
Парăссемсĕрех ишет—
    Мăшăр кĕсменпе.
Ахăрать-и тăвăлĕ,—
Кивĕ карапсем
Çунатсене çĕклесе
    Ыткăнаççĕ тинĕсе.
Пуç тайма пуçлатăп эп
Хумлă тинĕсе:
«Хаяр тинĕс, ан тивсемччĕ
    Манăн киммĕме;
Манăн кимĕ турттарать:
Хаклă йышши япала,
Тĕттĕм каç унпа ишет
    Харсăр яш ача».

Ирĕксĕрех пуçăма, иртнĕ каçхине те çак сассах илтрĕм-çке, теекен шухăш пырса кĕчĕ. Минутлăха шухăша кайрăм. Тата тепĕр хут пўрт тăрринелле пăхса илтĕм, анчах хĕр курăнмарĕ. Кĕçех вăл урăх юрра юрлакаласа, ман çумранах чупса иртрĕ, пуç пўрнисемпе шаклаттаркаласа илчĕ те карчăк патне чупса кĕчĕ, унта вара вĕсен тавлашу пуçланчĕ. Карчăк çилленсе кайрĕ, хĕрĕ хыттăн ахăлтатса кулма пуçларĕ. Акă, куратăп хайхискер, манăн тинĕс хумĕсен хĕрĕ каллех сиккелесе чупса килет. Ума çитсен, вăл чарăнса тăчĕ те, эпĕ пуррине кура тĕлĕннĕ пек пулса, мана куçран тинкерсе пăхрĕ, унтан вара вăрт çаврăнчĕ те васкамасăр пристань

еннелле утса кайрӗ. Ӗç кунпах пӗтмерӗ-ха: яра кунӗпех вӑл ман хваттер умӗнче çаврӑнкаласа çӳрерӗ, юрлассипе сиккелесси пӗр минутлӑха та чарӑнмарӗ унӑн. Тӗлӗнмелле чӗрчун! Унӑн сӑн-питӗнче вӑл ӑсран кайнине палӑртаканни нимӗн те çук; ӑсран кайма мар-ха, унӑн чӗрӗ те вичкӗн куçӗ ман çине шӑтарас пек пӑхать, темле магнитла тӳртӑм хӑвачӗ пур пек туйӑнать мана унӑн куçӗнче, кашни пӑхмассерен вӑл мӗн те пулин ыйтасшӑн пек туйӑнать. Анчах эпӗ калаçма пуçласанах вӑл, йӗкӗлтенӗ пек, кулса илет те ман умран тара парать.

Тӗрӗссипе каласан, эпӗ нихçан та ун евӗрлӗ хӗрарӑма курманччӗ. Ана илемлӗ теме çук, анчах манӑн илем тӗлӗшпе те хам малтанах пӗлсе тӑрасси, хама хам ӗненterес йӑлам пур. Вӑл хӗрте ӑратлӑх нумай... Хӗрарӑмсен ӑратлӑхӗ, лашасен ӑратлӑхӗ пекех, пысӑк япала, çак шухӑша çамрӑк Франци шыраса тупнӑ. Вӑл, урӑхла каласан, ӑратлӑх (çамрӑк Франци мар), пуринчен ытла çын уттинче тата алли-уринче палӑрать: уйрӑммӑнах тата сӑмси пит нумай япалана пӗлтерет. Тӗрӗс сӑмса Российӑра пӗчӗк уран та сахал тӗл пулать. Манӑн юрӑ ӑсти вун сакӑр çултан иртмен пулмалла. Унӑн çав тери хӳхӗм пӗвӗ, пӗр хӑйне çеç килӗшекен майпа пуç тайни, вӑрӑм та сарӑ çӳçӗ, кӑшт çеç хӗвелпе пиçӗхнӗ ӗнсипе хул пуççийӗсем темле ылтӑнӑн йӑлтӑртатса тӑни, уйрӑммӑнах тӳрӗ сӑмси — çаксем мана пурте ытармалла мар илӗртрӗç. Вӑл тӳртӗн çеç пӑхнӑ хушӑра эпӗ сыхланса тӑмаллине туйса илтӗм, вӑл ӑнкармалла мар кулкаланӑ хушӑра хӑй ӑшӗнче темӗн пытарса тӑнине туйрӑм, анчах мана унӑн тӳрӗ сӑмси ӑнран ячӗ, сӑнпитне пӑхсан малтанах мӗнле çын иккенне пӗлес хӑватӑм пур тесеччӗ-çке эпӗ. Мана Гетен Миньонӗ аса килчӗ, вӑл хӑйӗн нимӗçле сисӗм-туйӑмӗпе шухӑшласа тунӑ тӗлӗнмелле хӗрӗн сӑнарӗ курӑннӑ пек туйӑнчӗ мана. Чӑнах та, вӗсем хушшинче пӗрпеклӗх питех те нумайччӗ, çав тери канӑçсӑрланса, лара-тӑра пӗлмесӗр çӳренӗ хушӑрах сасартӑк шӑпланса ларса пӗр хускалми пулни, шухӑшлаттаракан юптаруллӑ калаçусем, сиккелесе илнисем, хӑйне майлӑ юрӑсем — пурте çавӑнни пекех...

Каç пулас умӗн эпӗ ӑна алӑк умӗнче чарса тӑтӑм та çакӑн пек калаçу хускатрӑм:

«Чипер пике, кала-ха мана, мӗскер турӑн эсӗ паян пӳрт тӑрринче?»— тесе ыйтрӑм эпӗ. «Çил ӑçтан вӗрнине

пăхрам»,— терĕ вăл. — «Мĕн тума кирлĕ пулчĕ вăл сана?» — «Аçтан çил вĕрет, çавăнтан телей килет». — «Мĕнле апла? Телейне юрласа чĕнтĕн-и вара эсĕ?»— «Аçта юрă юрланать, унта телей пулать». — «Эхер те юрланипех ăнсăртран инкек тупăнсан?» — «Мĕнех вара? Аçта лайăххи пулмасть, унта усалли пулать, усалпа ырлăх хушши инçех мар». — «Сана кам вĕрентнĕ çав юрра юрлама?» — «Никам та вĕрентмен, асăма килет те юрлатăп. Камăн илтмелле, çав илтет; камăн илтмелле мар, вăл ăнланаймасть».— «Мĕн ятлă вара эсĕ?»— «Кам шыва кĕртнĕ, çав пĕлет».— «Кам шыва кĕртнĕ?» — «Аçтан пĕлес ăна ман». — «Эккей, вăрттăнскер, эпĕ вĕт сан çинчен пĕр япала пĕлетĕп. (Ун сăнĕ ним чухлĕ те улшăнмарĕ, тутине те хускатмарĕ вăл, сăмах ун çинчен пыман пекех пулчĕ.) Эсĕ çĕркаç çыран хĕрринче пулнине пĕлетĕп эпĕ». Кунта хайхи эпĕ, ăна шиклентерес тесе, хам мĕн курнине тĕпĕ-йĕрĕпех каласа патăм, вăл шухăша та илмерĕ, ахăлтатса кулса ячĕ:— «Нумай курнă пулĕ те, сахал пĕлетĕр. Пĕлнине вара питĕрсех усрăр»,— терĕ вăл. — «Эпĕ, сăмахран, çакăн çинчен коменданта пĕлтерме шухăш тытсан?»— терĕм те эпĕ, хаярланнă пек пулса, ун çине шăтарас пек пăхса илтĕм. Сасартăк вăл сиксе тăчĕ те юрласа ячĕ, унтан вара, йывăç тĕмĕ хушшинчи хăранă вĕçен кайăк пек, таçта кĕрсе çухалчĕ. Манăн юлашки сăмахсем ытла вырнаçусăр тухрĕç иккен; вĕсем сиввĕн илтĕнессе асăрхаманччĕ те эпĕ, каярахпа тин вĕсем пирки манăн ӳкĕнмелле пулчĕ.

Тĕттĕм пула пуçласанах эпĕ казака чей вĕретме хушрăм, çурта çутса ятăм та, çул çинче туртмалли чĕлĕмĕме тивретсе, сĕтел умне пырса лартăм. Иккĕмĕш стакана ĕçнĕ çĕре кĕтмен çĕртенех алăк чĕриклетрĕ, ман хыçра çӳхе кĕпе чăштăртатни те ура сасси илтĕнсе кайрĕ. Эпĕ шартах сикрĕм, çаврăнса кăна пăхрăм, хыçăмра хайхи хĕр — манăн тинĕс хумĕсен хĕрĕ — тăра парать. Шăппăн, сăмах чĕнмесĕр пырса ларчĕ вăл ман ума, хăй ман çинелле тинкерсе пăхать. Хам та пĕлместĕп вара, темшĕн вăл ман çине тĕлĕнмелле ачашшăн пăхнă пек туйăнчĕ: вăл çапла пăхса тăни мана тахçан ĕлĕк çавăн пекех пĕр ачашшăн пăхаканскер ман пурнăçпа выляниме аса илтерчĕ. Вăл хăйĕнчен мĕн те пулин ыйтса пĕлессине кĕтет пулас, анчах эпĕ ытла именнипе сăмах та чĕнейместĕп. Унăн пит-куçĕ ăшĕ вăрканипе шурса

кайнă, аллине сĕтел çине шăлкалать, хăй кăшт çеç палăрмалла чĕтренкелесе илет, кăкăрĕ унăн е çÿлелле хăпарать е, сывлăш питĕрĕннĕ пек пулса, хускалмасăр тăрать. Çак мыскара мана йăлăхтара пуçларĕ, эпĕ ку шăплăха ахаль сăмах майĕпех пĕтересшĕн пулса, ăна пĕр стакан чей сĕнме шухăшларăм; сасартăк вăл сиксе тăчĕ те аллисемпе мана ыталаса тытрĕ, мана çемçе те кăвар пек вĕри тутипе хĕрÿллĕ чуп туса илчĕ. Куçăм хуралса кайрĕ, пуçăм çаврăнчĕ, пĕтĕм çамрăк хĕрÿлĕхĕмпе ыталаса илтĕм те ăна хам çума мĕн пур вăйăмпа чăмăртарăм. Анчах вăл ман алăран çĕлен пек шăвăнса тухрĕ, унтан, хăлхаран çеç: «Кĕçĕр çĕрле, пурте çывăрса кайсан, çыран хĕррине тух»,— тесе пăшăлтатрĕ те пÿлĕмрен çĕмрен пек сиксе тулалла вĕçрĕ. Çенĕкре вăл чейнике йăвантарса ячĕ, урай варринче çунса ларакан çуртана сÿнтерсе хăварчĕ. «Эккей, эсрел хĕрĕ»,— тесе кăшкăрса ячĕ казак, улăм çинче майлашса выртса, кăштах юлнă чейпе ăшăнма ĕмĕтленнĕскер, тинех ман ăс килсе çитрĕ.

Тепĕр икĕ сехетрен, пристань çинче çынсем шавлама чарăнсан, эпĕ хамăн казака ыйхăран вăратрăм: «Эпĕ пистолетпа персе ярсанах çыран хĕррине чупса тух»,— терĕм ăна. Вăл куçне чарса пăрахрĕ те шухăшласа тăмасăрах: «Итлетĕп, ваше благороди»,— терĕ. Пистолета пиçиххи çумне хĕстертĕм те тула тухрăм. Хайхи хĕр мана çыран хĕрринче кĕтсе тăрать. Хăй питех те çăмăл тумланнă, хÿхĕм пĕвĕ çине пысăках мар тутăр уртса янă.

— Утăр ман хыççăн!— терĕ вăл мана, алăран тытса. Эпир аялалла анма пуçларăмăр. Тепле майпа эпĕ ĕнсене хуçмарăм — ăнкараймастăп; аялта эпир сылтăмалла пăрăнтăмăр, унтан хам пĕлнĕ çулпала утрăмăр. Уйăх тухман-ха, икĕ çăлтăр кăна, тинĕс çинчи икĕ маяк пек, тĕксĕм кăвак тÿпере йăлтăртатать. Йывăр хумсем, пĕр тикĕссĕн те сулăмлăн кĕрлесе, пĕрин хыççăн тепри хутланса килеççĕ те çыран хĕрринчи тăлăх кимме кăштах çĕклентерсе иртеççĕ. «Ларар-ха кимĕ çине»,— терĕ манăн хĕр. Эпĕ турткаланса тăтăм — тинĕс тăрăх ахалех уçăлса çÿреме юратсах каймастăп эпĕ,— анчах каялла чакма май çук ĕнтĕ. Вăл кимĕ çине сиксе ларчĕ, эпĕ те ун хыççăн кĕрсе лартăм. Асăрхама та ĕлкĕреймерĕм, ишме пуçланă та иккен. «Мĕне пĕлтерет ку?»— терĕм эпĕ çилленерех.—«Ку ĕнтĕ эпĕ сана юратнине пĕлте-

ретӗ»,— тесе сӑмах хушрӗ вӑл мана,— тенкел ҫине ларнӑ май, аллисемпе пӗвӗме ыталаса тытса... Унӑн пит ҫӑмартийӗ манӑн пит ҫӑмартипе пӗрлешрӗ, хам питӗм ҫинче унӑн ҫулӑм пек вӗри сывлӑшне туйрӑм эпӗ. Сасартӑк шыва темӗн шӑмпӑлтатса ӳкрӗ: эпӗ пиҫиххине тытса пӑхрӑм — ҫумра пистолетӑм ҫук. Эх, кунта вара тем пуласран асӑрханса тӑрас шухӑш ман чӗрене ҫурсах ячӗ; пуҫа юн тапса тулчӗ. Хыҫалалла ҫаврӑнса пӑхатӑп та, ҫыранран эпир аллӑ хӑлаҫа яхӑн шалалла ишсе кӗнӗ-мӗн. Ишме пӗлместӗп-ҫке эпӗ! Хӗре хам ҫумран тӗртсе уйӑрма тӑрӑшатӑп. Вӑл мана тумтирӗмрен кушак пек ҫатӑрласа тытнӑ, сасартӑк мана, пӗрре тӗртсе, кӑштах шыва кӑларса ӳкеретчӗ. Кимӗ сулӑнса кайрӗ, эпӗ аран тытӑнса юлтӑм; пирӗн хушӑра хаяр кӗрешӳ пуҫланчӗ. Урса кайнипе ман халӑм та хутшӑнчӗ, анчах вӑл меллӗрех кӗрешме пултарнине часах туйса илтӗм. «Мӗн кирлӗ сана?»— тесе кӑшкӑрса ятӑм эпӗ унӑн пӗчӗк аллине хыттӑн чӑмӑртаса; пӳрнисем те шатӑртатрӗҫ унӑн, хӑй ҫапах та кӑшкӑрмарӗ. Ку асаплӑха хӑйӗн ҫӗленле кӑмӑлӗпе тӳссе ирттерчӗ.

— Эсӗ: куртӑм, тетӗн,— терӗ вӑл,— эсӗ кайса калатӑн!— унтан пӗтӗм вӑйран тӗртсе, мана кимӗ ҫинчен шывалла усӑнтарчӗ, иксӗмӗр те кимӗ ҫинчен пилӗк таран шывалла усӑнса тӑтӑмӑр, унӑн ҫӳҫӗ шывах перӗнет; ҫакӑ вара чи хӑрушӑ самант пулчӗ: эпӗ чӗркуҫҫипе кимӗ тӗпӗнчен хирӗнтӗм те хӑрах аллӑмпа унӑн ҫивӗтне ярса тытрӑм, теприне мӑйӗнчен ярса илтӗм те, тинех вӑл тумтирӗмрен аллисене вӗҫертрӗ, вара пӗр самантрах ӑна эпӗ хум ҫинелле ывӑтса ятӑм.

Тӗттӗмленсе ҫитнӗччӗ ӗнтӗ, тинӗс кӑпӑкӗсем хушшинче унӑн пуҫӗ ик-виҫӗ хут курӑнса илчӗ те, вара ӑна эпӗ урӑх кураймарӑм.

Кимӗ тӗпӗнче эпӗ ҫурмаран хуҫӑлнӑ кӗсмен тупрӑм, ҫавӑнпа чылай нушаланнӑ хыҫҫӑн аран-аран пристане ҫитсе чарӑнтӑм. Ҫыран хӗррипе, хам чарӑннӑ пӳрт патнелле утнӑ май, эпӗ ирӗксӗрех, хай, иртнӗ каҫхине суккӑр ача тинӗс урлӑ ишсе килнӗ ҫынна кӗтсе тӑнӑ вырӑн еннелле пӑхса пытӑм. Уйӑх тӳпене ҫӗкленнӗччӗ, ҫыран хӗрринче темле шурӑ тумтирлӗ ҫын ларнӑ пек курӑнчӗ. Ку мӗскер иккенне пӗлес тесе, эпӗ ун патне йӑпшӑнса пытӑм та чӑнкӑ анакан ҫыран хӗрринчи курӑк ҫине тӑсӑлса выртрӑм. Пуҫа кӑшт ҫӗклесе пӑхсан кунтан мана аялта мӗн туни аванах курӑнать. Хамӑн шыври хӗре

курах кайрăм; тĕлĕнмерĕм эпĕ, хĕпĕртенĕ пек те пултăм. Вăл хăйĕн вăрăм çӳçĕнчен тинĕс шывне пăрса кăларать, йĕпеннĕ кĕпи унăн хӳхĕм пӳ-сине, çӳллĕ кăкăрĕсене аванах палăртса тăрать. Часах акă инçетре кимĕ те курăнса кайрĕ; çак кимĕ çыран хĕрринелле васкаса çывхарчĕ, ун çинчен иртнĕ каçхи пекех тутар çĕлĕкне тăхăннă пĕр çын тухрĕ, çӳçне вăл казахсем пек кастарнăччĕ, чĕн пиçиххийĕ çумĕнче унăн вăрăм çĕççи курăнса тăрать. «Янко, пĕтрĕмĕр»,— терĕ хĕр. Малалла питех те хуллен калаçма пуçларĕç вĕсем, эпĕ нимĕн те илтсе юлаймарăм. «Ăçта-ха пирĕн суккăр?»— терĕ юлашкинчен Янко, сассине çĕклентерсе. «Эпĕ ăна янăччĕ»,— тени илтĕнчĕ. Тепĕр темиçе минутран çурăмĕ çине михĕ хунă суккăр ача килсе те çитрĕ. Унăн миххине кимĕ çине хучĕç.

«Итле-ха, суккăр!— терĕ Янко.—Эсĕ леш вырăна сыхласа усра-ха. ...Пĕлетĕн-и? Унта хаклă таварсем... кала (эпĕ ятне илтсе юлаймарăм), эпĕ текех унăн тарçи мар ĕнтĕ; ĕçсем начарланса пыраççĕ; вăл мана текех кураймĕ; ытла хăрушă халĕ, урăх çĕре ĕç шырама каятăп, ман пек пултаракан çынна тупаймасть вăл урăх. Тата çакна та кала, ĕçленĕшĕн лайăх тӳлесе пынă пулсан, Янко ăна пăрахман пулĕччĕ, те, манăн кирек ăçта та çулăм уçă, ăçта çил вĕрет те, тинĕс шавлать — çавăнта!» Кăшт чарăнса тăнă хыççăн Янко каллех малалла калаçма пуçларĕ. «Хĕр манпа пĕрле пырать,— терĕ вăл,— ăна кунта юлма юрамасть. Карчăка кала,— терĕ вăл,— вилме вăхăт çитнĕ сана, те: ытлашши пурăнать, намăса та пĕлес пулать кăштах, те. Вăл пире текех кураймĕ ĕнтĕ».

— Эпĕ вара ăçта?— терĕ суккăр салху сасăпа.

— Мĕн тума кирлĕ эсĕ мана?— тени илтĕнчĕ.

Çак вăхăтрах манăн тинĕс хумĕсен хĕрĕ кимĕ çине сиксе кĕчĕ те юлташне аллипе сулчĕ; лешĕ суккăр алли çине темĕн хучĕ те: «Ме, ху валли премĕксем илĕн,— терĕ.—«Çак анчах-и?»— терĕ суккăр.—«Акă,. ме сана тата»,— терĕ лешĕ. Çĕре ӳкнĕ укçа чул çумне перĕнсе чăнкăртатса янрарĕ. Суккăр ача ăна илмерĕ. Янко кимĕ çине ларчĕ; çыран енчен çил вĕрет: вĕсем пĕчĕк парăса çĕклерĕç те часах тинĕселле ишсе кĕрсе кайрĕç. Тĕксĕм хумсем хушшипе уйăх çути айĕн шурă парăс нумайччен курăнса тăчĕ. Суккăр ача çаплах çыран хĕрринче ларать-ха. Акă, ман хăлхана ĕсĕклесе йĕнĕ сасă та илтĕн-

се кайрĕ. Суккăр ача чăнах та çапла нумайччен йĕрсе ларчĕ... Мана салху пусса илчĕ. Мĕншĕн мана ăраскалăм çак тӳрĕ кăмăллă контрабандистсен лăпкă ушкăнне хутăштарса ячĕ-ши? Шăпах тăракан çăл куçĕ çине чул пăрахнă пек, эпĕ вĕсен канăçлăхне пăлхатрăм, хам та, çав чул пекех, кĕç-вĕç шыва анса каяттăм.

Эпĕ киле таврăнтăм. Çенĕкре йывăç чашкă çинче çунса пĕтеймен çурта çăтăртатса тăрать. Манăн казак, хам ăна çывăрма хушманччĕ пулин те, пăшалне аллине тытнипех çывăрса кайнă. Эпĕ ăна чăрмантарас темерĕм, çуртана илтĕм те пӳрте кĕтĕм. Çĕр çăттăрах! Манăн шкатулкă, кĕмĕл йĕнĕллĕ хĕç, тусăм панă дагестан кинжалĕ,— нимĕн те юлман манăн. Тинех вара эпĕ хайхи ылханлă суккăр мĕнле япаласем йătса пынине туйса илтĕм. Казака сиввĕн тĕрткелесе вăратрăм та ятласа тăкрăм, çилленсе илтĕм, анчах нимĕн тума та çук! Суккăр ача çаратни çинчен, вун сакăр çулхи хĕр хама кĕç-вĕç шыва путарма тăни çинчен пуçлăхсене каласа панă пулсан, ытла та кулăшла пулмĕччĕ-ши вара? Мухтав турра, ирхине мана Таманьрен тухса кайма май килчĕ. Карчăкпа суккăр ачана мĕн пулни çинчен нимĕн те пĕлместĕп. Мана, çула тухнăскере, çитменнине тата почтă лашисене илме тивĕçлĕ хутпа хысна ĕçшĕн çӳрекен офицера, мĕн ĕç пултăр-ха çынсен хуйхисемпе савăнăçĕ çумĕнче!

Пĕрремĕш пайĕн вĕçĕ



# Иккĕмĕш пайĕ

## (Печорин журналĕн вĕçĕ)



### II

### МЕРИ КНЯЖНА

*Майăн 11-мĕшĕ*

Ĕнер эпĕ Пятигорска çитрĕм, хула хĕрринче Машук тăвĕн лапкинчи чи çӳллĕ вырăнта хваттер илтĕм: аслати авăтса çумăр çунă чухне пĕлĕтсем ман пӳрт тăррине çитиех анаççĕ. Паян ирхине 5 сехетре чӳречене уçрăм та, ман пӳлĕме çурт умĕнче ӳсекен чечек шăрши çапрĕ. Черешньăн чечеклĕ турачĕсем мана чӳречерен пăхаççĕ, хăш-пĕр чухне вара çил çĕкленет те, çав чечексем çыру сĕтелĕ çине тăкăнаççĕ. Тулли илемлĕ сăн-сăпат мана виçĕ енчен те курăнать. Хĕвеланăçĕнче пилĕк тăрăллă Бешту кăвакарса ларать, «паллана тăвăлăн юлашки пĕлĕчĕ»[1] пек, çурçĕр енче перссен çăмламас çĕлĕкĕ евĕрлĕ Машук тăвĕ çĕкленет, çак енчи тӳпене вăл пĕтĕмĕшпех хупăрласа илнĕ; хĕвелтухăçнелле пăхма савăнăçлăрах: ман умра аяларахра вĕр-çĕнĕ хула тĕрленсе ларать, симлĕ çăл куçĕсем шăнкăртатса юхаççĕ, тĕрлĕ

[1] Пушкин çырнă «Туча» сăвăран илнĕ малтанхи йĕрке (1835).

чӗлхеллӗ халӑх шавлать,— лере тата, катара, амфитеатр пек кӗпӗрленсе, кӑвакарса, тӗтреленсе тусем тӑсӑлаҫҫӗ, тавра курӑм хӗрринче юрпа витӗннӗ ту тӑррисен кӗмӗл тӗпекӗ тӑсӑлать. Қазбекран пуҫланса икӗ пуҫлӑ Эльборус патне ҫитиех пырать вӑл... Савӑнӑҫлӑ-ҫке ҫакӑн пек ҫӗрте пурӑнма! Хӗпӗртес килнӗ туйӑм пӗтӗм юн тымарӗнче вылянса тӑрать. Сывлӑш, пӗчӗкҫӗ ача чуп тунӑ пекех,— таса та уҫӑ; хӗвелӗ ҫап-ҫутӑ, тӳпе кӑнкӑвак, мӗнех кирлӗ-ши тата! Мӗне кирлӗ иккен кунта чун-чӗрен хӗрӳ сисӗмӗсем, ӗмӗтсем, иртнишӗн куляннисем... Ҫапах та вӑхӑт ӗнтӗ. Елисаветински Ҫӑл куҫ патне каятӑп, шывпа сывалма килнисем ирпеле унта пурте пухӑнаҫҫӗ, теҫҫӗ.

. . . . . . . . . . . . . . .

Хула варринелле ансан, бульвар тӑрӑх утрӑм, унта эпӗ салхуллӑ ушкӑнсене тӗл пултӑм, вӗсем майӗпен кӑна ту ҫинелле улӑхатчӗҫ; кунта пуринчен ытла ҫеҫен хир улпучӗсен ҫемйисем: ҫавсем иккенне часах тавҫӑрса илме те пулать, упӑшкисем вӗсен модӑран туха пуҫланӑ кивӗ сюртуксем тӑхӑннӑ, майрисемпе хӗрӗсем вара питӗ хитре тумланнӑ: шывпа сывалма пынӑ ҫамрӑксене вӗсем йӑлтах шута илсе пӗтернӗ пулас, мӗншӗн тесен вӗсем ман ҫине те питех ӑшӑ кӑмӑлпа пӑха-пӑха илчӗҫ: Петербургра ҫӗлетнӗ сюртукӑм улталарӗ вӗсене, анчах, ҫийӗмре ҫар эполечӗсене курсанах, вӗсем тарӑхса, аяккалла пӑхса иртрӗҫ.

Вырӑнти влаҫсен майрисем, симлӗ шыв хуҫисем теес пулать ӗнтӗ вӗсене, кӑмӑллӑрах; вӗсен лорнетсем [1] пур, мундир ҫине пӑхсах каймаҫҫӗ вӗсем, Қавказра вӗсем номерлӗ тӳме айӗнче хӗрӳллӗ чӗре курма хӑнӑхнӑ, шурӑ карттус айӗнче вӗреннӗ ҫын ӑсне асӑрхама пӗлсе ҫитнӗ. Ҫав хӗрарӑмсем питӗ те кӑмӑллӑ, нумайччен савса тӑма пӗлеҫҫӗ! Вӗсене савакан ҫынсем ҫулсерен улшӑнса пыраҫҫӗ, кунти хӗрарӑмсем ырма пӗлми кӑмӑллӑ пулма пултарнин сӑлтавӗ те ҫакӑнтах-и, тен. Ансӑр сукмакпа Елисаветински Ҫӑл куҫӗ патнелле хӑпарнӑ май, эпӗ арҫын ушкӑнӗнчен иртсе кайрӑм, вӗсен хушшинче штатскисемпе ҫар ҫыннисем те пур, кайран пӗлтӗм эп, вӗсем симлӗ шывшӑн ҫунакан этемсем хушшинче хӑйне евӗр уйрӑм виҫере тӑраҫҫӗ иккен. Ӗҫме ӗҫеҫҫӗ те вӗсем — анчах шыв мар; уҫӑлса ҫӳреме тухсах

[1] Лорнет — авӑрлӑ куҫлӑх.

каймаççĕ, çула май тенĕ пек кăна хĕрарăмсем хыççăн çÿреççĕ: картла выляççĕ-выляççĕ те, кичем пулса çитрĕ тесе, ÿпкелешме тытăнаççĕ. Вĕсем вĕçкĕнсем: хăмăшпа кармаклана стаканĕсене кÿкĕртлĕ йÿçĕ шыв çăлне чикеççĕ те ытла ăнланакан пек пăхса тăраççĕ, штатскисем çутă кăвак галстуксемпе çÿреççĕ, çар çыннисем çухи айĕнчен брыжжисене[1] кăларса яраççĕ. Вĕсем провинцири кил-йышсем çине çав тери пăхаççĕ, хăйсене яхăнне çывăхартман столицăри аристократсен хăна килĕсем çинчен асăна-асăна ахăлтатаççĕ.

Акă хайхи çăл та... Çывăхрах, çăлпа юнашар, тÿрем вырăна хĕрлĕпе витнĕ пÿрт туса лартнă, кунта ваннă, леререхре галлерейă, унта çумăр çунă чухне уçăлса çÿреме тухаççĕ. Сакă çинче аманнă офицерсем лараççĕ, таянмалли туйисене вĕсем хăйсен çумне хунă,— шупка сăнлă та салхуллă вĕсем. Тÿрем вырăнта шыв тапса тухасса кĕтсе, майрасем каллĕ-маллĕ йăпăртатса çÿреççĕ. Вĕсен хушшинче питĕ чипер сăн-питлисем те пĕр иккĕ-виççĕ пур. Машук сакăлтисене хупласа тăракан виноград аллейисен айĕнче хушăран иккĕн çеçларма юратакан майрасен ула-чăла шлепкисем вĕлтлетсе иртеççĕ, çавăн пек шлепке çумĕнче кирек хăçан та вара е çар çыннин карттусне асăрхакаланă эпĕ е тирпейсĕр çавра шлепкеллисене кураттăм. Чăнкă ту çинче павильон туса лартнă, ăна Эол арфи[2] теççĕ, унта çутçанталăк илемне юратакансем тăратчĕç, вĕсем Эльборус çине телескоппа пăхма хатĕрленеççĕ; çавсен хушшинче икĕ гувернер[3] хăйсем пăхса ÿстерекен ачасемпе, юхăнчăк чирĕнчен чĕрĕлме килнĕскерсемпе, пынă.

Эпĕ ту хĕрринче чарăнса тăтăм, сывлăш çавăрса илтĕм, пĕчĕк пÿрт кĕтессине таянса таврари илемлĕхе пăхса тăратăп, сасартăк хам хыçрах паллана çын сасси илтĕнчĕ:

— Печорин! Нумайранпа-и кунта?

Çаврăнса пăхатăп: Грушницкий! Эпир пĕр-пĕрне ыталаса илтĕмĕр. Эпĕ унпа çапăçури отрядра паллашнăччĕ... Унăн хăрах урине пульă лекнĕччĕ, кунта вăл манран пĕр эрне маларах тухса килнĕ.

---

[1] Брыжжи — крахмалпа çунă çуха.

[2] Эол арфи — сывлăш хумханнипе сасă паракан хĕлĕхлĕ инструмент. Авалхи грексен Эол ятлă юмахри çил туррин арфи.

[3] Гувернер — аристократла е буржуаллă çемьере ачасене пăхса, вĕрентсе ÿстерекен çын.

Грушницкий — юнкер. Службăра вăл çулталăк хушши кăна тăрать-ха, хăйне уйрăм вĕçкĕнленсе, хулăн шинельпе çӳрет. Унăн георгиевски салтак хĕресĕ пур. Хăй вăл чипер те яштакскер, хурарах кăна, хура çӳçлĕ: сăнран пăхсан ăна пĕр 25 çулта теме пулать, хăй вăл 21 çула çитнĕ-çитмен пулин те. Калаçнă чухне вăл пуçне хыçаларах каçăртса тăрать, сулахай аллипе минутсерен тенĕ пек мăйăхне пĕтĕркелесе илет, кун пек чухне вара вăл сылтăм аллипе туйи çине таянать. Калаçасса хăвăрт калаçать, сăмахĕсене ытла эрешлентерме юратать: пурнăçра май килнĕ чух кирек хăш самантра та калама юрăхлă хатĕр çивчĕ сăмахсемпе калаçаканнисенчен пĕри ĕнтĕ вăл, ун пек çынсене чăн-чăн илемлĕх нимĕн чухлĕ те хускатмасть, вĕсем хăйсене хăйсем пысăка хурса, хăйсен калама çук пысăк туйăм пур пек, кăмăлĕ хĕрсе тăнă пек, акăш-макăш хуйхă-суйхă чăтса ирттернĕ пек тыткалаççĕ хăйсене. Эффект кăтартас ĕмĕчĕ вара — вĕсен каçса кайса киленесси; провинцири хĕрсемпе хĕрарăмсен кăмăлĕсене çавăн пек çынсем ытармалла мар килĕшеççĕ. Ватăларах пырсан, вĕсем вара е лăпкă улпутсем пулаççĕ е ĕçке ерсе каяççĕ, хăш-пĕр чухне ăна та, кăна та кĕтме пулать вĕсенчен. Чунĕсенче вĕсен час-часах ырă ĕç тăвас ĕмĕт те пур, анчах поэзи таврашĕ пĕр пуслăх та çук вара. Грушницкий декламацилес тесен каçсах каять: вăл сире сăмах айне тăватех, калаçу вара пĕчĕк сăмахранах виçерен тухса каять, нихçан та тавлашаймастăмччĕ эпĕ унпа. Эсир хирĕç пырсан, сăмах тавăрса каламасть вăл, итлемест те вăл сире. Эсир калаçса чарăнатăр кăна, вăл хăй сăмахне пуçарса ярать те вĕçĕмсĕр калаçать. Ун сăмахĕ эсир халь çеç каланă шухăшпа мĕнле те пулин çыхăнса тăрать те-и, тен, анчах, чăннипе каласан, вăл унччен пуçланă сăмахнех малалла тăсать. Вăл çивчĕ чĕлхеллĕ çын: унăн эпиграммисем[1] час-часах йăпантарма пултараççĕ, анчах нихçан та кирлĕ çĕре лекеймеççĕ, усал та мар вĕсем: вăл никама та пĕр сăмахпа çапса хуçаймасть; çынсене те, вĕсен айван енĕсене те пĕлеймест вăл, мĕншĕн тесен хăй ĕмĕрĕнче вăл хăй çинчен кăна шухăшлать. Унăн пĕтĕм ĕмĕчĕ те роман геройĕ пуласси. Çынсене вăл вара час-часах ĕнентерме тăрăшатчĕ: эпĕ тĕнчере

[1] Эпиграммă — кĕскен каланă сăмахпа е сăвăпа, çивчĕ чĕлхепе хаяррăн тăрăхлани.

пурӑнма ҫуралман, эпӗ темӗскерле, никам чухласа илейми асаппа пурӑнма кӑна ҫуралнӑ, тетчӗ; ку чӑнах та ҫавӑн пек иккенне хӑй те ӗненес патнех ҫитетчӗ вара. Ҫавӑнпа ӗнтӗ вӑл хӑйӗн хулӑн салтак шинельне ҫав тери мӑнаҫланса тӑхӑнса ҫӳретчӗ те. Эпӗ ӑна ӑнкарса ҫитрӗм, ҫавӑнпа вӑл мана юратмасть те, ҫиелтен пӑхсан, эпир унпа питӗ туслӑ пурӑнатпӑр темелле. Грушницкие ҫапӑҫура пурте харсӑр ҫын, теҫҫӗ, эпӗ ӑна шӑпах кӗрешӳ вӑхӑтӗнче курнӑ: хӗҫпе хӑлаҫланать хӑй, кӑшкӑрашса малалла та кӗрет, анчах малалла кӗнӗ чух вӑл куҫне хӗсет. Ку ӗнтӗ темле вырӑс харсӑрлӑхӗ мар вара!..

Эпӗ те ӑна юратмастӑп, сисетӗп: хӑҫан та пулин пӗрпӗр тӑвӑр ҫул ҫинче манӑн унпа тӗл пулмаллах пулать, пире иксӗмӗртен пӗрне ырӑ пулас ҫук.

Кавказа та вӑл ҫав романтикла фанатизма пулах ҫитнӗ; эпӗ туятӑп акӑ, ашшӗ ялӗнчен тухса каяс умӗн, калӑпӑр, вӑл кӳршӗри пӗр-пӗр чипер хӗре тӗл пулсан, эпӗ службӑра пурӑнасшӑн ҫеҫ мар, вилӗм шырама каятӑп, тенех ӗнтӗ вӑл салхуланнӑ сассипе, ҫак тӗле ҫитсен вара, куҫне аллипе хупларӗ пулӗ те: «Мӗншӗн тесен,— терӗ пуль,— ҫук, кӑна сирӗн (е санӑн) пӗлмелле мар! Пӗлсен, сирӗн таса чунӑр ҫӳҫенсе кайӗ! Мӗне кирлӗ, тепӗр тесен? Мӗнех тӑратӑп эпӗ сирӗн умӑрта? Анланайӑр-ши эсир мана?..» Тата темӗн те пӗр ҫавӑн евӗрлӗ каланах ӗнтӗ ӑна.

Пӗррехинче вӑл мана ҫакна та каланӑччӗ: эпӗ К. полка мӗншӗн килсе кӗни ҫинчен никам та пӗлмест, тенӗччӗ, вӑл сӑлтав ӗмӗр-ӗмӗрех пӗлӗтпе иксӗмӗр хушшӑмӑрта вӑрттӑнлӑх пулса юлӗ, тенӗччӗ.

Ӗнтӗ мӗн каласан та Грушницкий хӑй ҫинчи трагедиллӗ мантие[1] хывса пӑрахнӑ самантсенче самаях кӑмӑла килекен ҫынччӗ, ун пек чухне ӑна курсан, кӑмӑл уҫӑлать вара. Ман ӑна хӗрарӑмсем хушшинче курас килет: кунта вӑл, чӑнах та, тӑрӑшать пулмалла!

Эпир ӗлӗкхи туссем пек тӗл пултӑмӑр. Кунта эпӗ шывпа сывалма килнӗ ҫынсем мӗнле пурӑнни ҫинчен, вӗсем хушшинчи паллӑ ҫынсем ҫинчен унран ыйтса пӗле пуҫларӑм.

— Эпир самаях прозӑллӑ пурнӑҫпа пурӑнатпӑр,— терӗ вӑл таранӑн сывласа илсе:—ир ҫинче шыв ӗҫекен-

[1] Манти — шалпар плащ. Грушницкин «хурлӑхлӑ мантийӗ» ҫинчен каланӑ чухне, вӑл актерла, ӗненмеллех мар хӑтланнине аса илтерет.

нисем — ытти чирлӗ ҫынсем пекех, аран-аран хускалкалаҫҫӗ, каҫсерен эрех ӗҫекеннисем, ытти сывӑ ҫынсем пекех, тӳсме ҫуккисем. Хӗрарӑмсем пур, анчах вӗсемпе нумаях йӑпанаймӑн: вӗсем вистла выляҫҫӗ, тумланасса начар тумланаҫҫӗ, французла вара питӗ начар калаҫаҫҫӗ. Кӑҫал Мускавран пӗр Лиговская княгиньӑ ҫеҫ хӗрӗпе килнӗ; вӗсемпе паллашман эпӗ. Ҫийӗмри салтак шинелӗ хам никама та кирлӗ маррине пӗлтернӗн туйӑнать мана, ирӗксӗрех хӗрхенсе пӑхтарать вӑл ман ҫине; ҫав хӗрхенӳ маншӑн калама ҫук йывӑр, ыйткалакана хӗрхеннӗпе пӗрех.

Ҫав самантра ҫӑл патнелле хамӑр ҫумранах икӗ майра иртсе кайрӗҫ: пӗри ҫамрӑк темелле, тапри вара ҫамрӑк та кӗрнеклӗ. Шлепкисем хупланипе вӗсене питкуҫран кураймарӑм та эпӗ, анчах тумланасса вара вӗсем питӗ пӗлсе тумланнӑ: нимӗн те ытлашши ҫук вӗсен ҫинче. Ҫамрӑкки ҫухаллӑ кӗпе тӑхӑннӑ, хӳхӗм мӑйӗ тавра ҫӑмӑл кӑна пурҫӑн тутӑр явӑнса тӑрать. Пушмакӗсем пӗчӗкҫеҫҫӗ те, тулли мар урисене ҫав тери илемлетеҫҫӗ, вӗсем унӑн ури сыппи патне ҫитиех ҫӑт тытӑнса тӑраҫҫӗ; ҫакна курсан, илемлӗхе чухлайман этем те тӗлӗннипе ахлатса илмелле. Унӑн ҫӑмӑл та сӑпайлӑ уттинче таса хӗр илемӗ пурри палӑрать, вӑл мӗнлине каласа пама майӗ те ҫук, ӑна куҫпа курсан ҫеҫ ӑнланма пулать. Вӑл пирӗн умран иртнӗ чухне унтан темскерле чухласа илмелле мар ырӑ шӑршӑ сарӑлчӗ, хӑш-пӗр чухне савнӑ хӗр ҫырнӑ ҫыруран ҫавӑн пек ырӑ шӑршӑ кӗрет.

— Акӑ Лиговская княгиньӑ,— терӗ Грушницкий,— унпа пӗрле унӑн хӗрӗ Мери,— вӑл ӑна акӑлчансем майлӑ чӗнет,— вӗсем кунта виҫӗ кун ҫеҫ пурӑнаҫҫӗ-ха.

— Ҫапах та ун ятне пӗлме ӗлкӗрнӗ-ха эсӗ?

— Ансӑртран ҫеҫ илтсеттӗм эпӗ. Вӗсем пек ҫӳлте тӑраканнисем мӑн кӑмӑллӑ, пирӗн пек ҫар ҫыннисем ҫине тискер кайӑкла ҫынсем ҫине пӑхнӑ пек пӑхаҫҫӗ. Номерлӗ карттус айӗнче ӑс пур-и, ҫук-и, хулӑн шинелӗн шал енче чӗре тапать-и, ҫук-и пирӗн, пӗлесшӗнех те мар вӗсем.

— Мӗскӗн шинель!— терӗм эпӗ кулкаласах,— ав ҫав улпут кам тата! Акӑ, вӑл вӗсем патне пычӗ-ха, вӗсен ырӑ кӑмӑлне тупасшӑн стакан тыттарать!

— Э! Вӑл Мускав вӗҫкӗнӗ Раевич! Вӑл выляма пултараканскер. Куратӑн-и, унӑн кӑвак жилечӗ тӑрӑх

яванса анакан ылтăн вăчăрине? Туйи епле тата хулăн— Робинзон Крузонни[1] пекех! Сухалĕ те епле тата, çӳçне те а Ja monzik евĕрлĕ кастарнă.

— Эсĕ пĕтĕм этем йăхне çилленнĕ.

— Çилленмелле те...

— Э! чăнах-та-и?

Çак вăхăтра майрасем çăл патĕнчен пăрăнса пирĕнпе танлашрĕç. Грушницкий, туйи çине таянса, хăйне драмăлла кăтартма ĕлкĕрчĕ те мана хирĕç французла хыттăн калама пуçларĕ:

— Mon cher, fe hais les hemmes pour ne pas les mêprser, car autrement la vie serait une farce troh degoutan'e[2].

Чипер княжна пирĕн еннелле çаврăнчĕ те оратор çине чылайччен тĕлĕнсе пăхса тăчĕ. Вăл пăхни мĕне пĕлтернине чухласа илме май пулмарĕ, çапах та вăл ун çине йĕкĕлтемесĕр пăхрĕ, çавăнпа эпĕ Грушницкие ăшăмра чунранах саламларăм.

— Ну княç хĕрĕ Мери, çав тери чиперскер,— терĕм эпĕ ăна.—Куçĕ унăн бархат евĕрлĕ,— шăпах бархат пек çав: ун куçĕ çинчен калаçнă чух çак сăмаха яланах асăнта тытма сĕнетĕп эпĕ, куç хăрпăкĕсем çав тери вăрăм унăн, унăн куçне хĕвел çути те ӳкмест. Юрататăп эпĕ çавăн пек йăлкăшман куçсене: вĕсем ытла çепĕç, ăпкана пек пăхаççĕ... тепĕр тесен, унăн пит-куçĕнче лайăххи те урăх çук пулас... шăлĕсем мĕнле тата, йăлтах шурă-и. Ăна пĕлмелле! Сан илемлĕ сăмахна хирĕç кулмарĕ те вăл, питĕ шел.

— Эсĕ чипер хĕр çинчен калаçнă чух акăлчан лаши çинчен сăмахланă пек калаçатăн,— терĕ Грушницкий, кăмăлсăрланса.

— Mon cher,—терĕм эпĕ ăна, хăй калаçнă пекрех калаçма тăрăшса:—je meprise les femmes pour ne pas les aimer, cär autrement la vie serait un melodrame trop ridicule[3].

---

[1] Робинзон Крузо — Англи писателĕ Даниел Дефо (1659—1731) çырнă произведенири герой, пултаруллă çын сăнлăхĕ. Робинзон пĕрпеччен никам пурăнман утрав çине кайса лекет, унта вара кирек мене те хăварт тавçăрса илме пултарнине, тăрăшса ĕçленине пула, нумай йывăрлăхсене, чăрмавсене çĕнтерет вăл.

[2] Савнă тусăм, çынсене кураймастăп эпĕ, вĕсенчен йĕрĕнме пуçласран шикленсе курайми пултăм; унсăрăн пурнăç та тӳсме çук йĕрĕнмелле фарс пулса тăнă пулĕччĕ... (фарс — çăмăл комеди.)

Эпĕ çаврăнтăм та унтан аяккинерех пăрăнтăм. Вара çур сехете яхăн виноград пахчинче аллейăсем тăрăх, известкăллă ту сăмсахĕсем тăрăх, вĕсен хушшинче çакăнса тăракан йывăç тĕмисен таврашĕнче çÿрерĕм. Çанталăк шăрăхлатма пуçласан килелле васкарăм. Йÿç кÿкĕртлĕ çăл куçĕ патĕнчен иртнĕ чух, сулхăнра сывлăш çавăрса илес тесе, эпĕ галлерейă патĕнче чарăнса тăтăм, çакăнта ларнă чух манăн пĕр кăмăла каймалли сценă курма тĕл килчĕ. Ку сценăра вылякансем акă мĕн тăваççĕ: княгиньă Мускав вĕçкĕнĕпе галлерейăра ларать, вĕсем иккĕшĕ те темĕн çинчен питĕ тимлĕн калаçатчĕç. Княжна юлашки стаканне ĕçсе янă пулас та, çăл патĕнче шухăша кайса, уткаласа çÿрет. Грушницкий шăпах çăл патĕнче тăрать. Тÿремре урăх никам та çук.

Эпĕ кăштах çывхартăм та галлерейă кĕтессине пытантăм. Çак самантра Грушницкий хăй стаканне хăйăр çине ÿкерчĕ те, ăна илме хăтланса, пĕшкĕнме тăрăшать: суранлă ури ăна ытла чăрмантарать. Мĕскĕн! Тинки тухрĕ ĕнтĕ унăн, туйи çине тепле майпа та таянса пăхать, кăлăхах, унăн пит-куçĕнче чăнах та ытла пысăк асап курни палăрчĕ.

Мери княжна çаксене манран та лайăхрах курса тăрать.

Ун патне вăл вĕçен кайăкран çăмăлтарах чупса çитрĕ, пĕшкĕнчĕ, стаканне илчĕ те, вара пÿ-сине çав тери илемлĕн хускатса, стаканне ун аллине тыттарчĕ; унтан вăл калама çук хĕрелсе кайрĕ; галлерейă çинелле çаврăнса пăхрĕ, амăшĕ нимĕн те курманнине тавçăрсан, çав сехетрех лăпланчĕ пулас. Грушницкий ăна тав тăвас тесе çăварне кăна уçнăччĕ, леш таçта пăрăнса та ĕлкĕрчĕ. Тепĕр самантранах княжна галлерейăран амăшĕпе тата хайхи капăр çынпа пĕрле тухрĕ, Грушницкий умĕнчен иртсе кайнă чух вăл хăйне çав тери чинлă та мăн кăмăллă тытнă пек турĕ,— çаврăнса та пăхмарĕ, лешĕ ун çине сунса тăракан куçĕсемпе пăхнине те асăрхамарĕ вăл. Грушницкий ăна сăртран анса бульварти çăка хушшине кĕрсе çухаличченех пăхса ăсатрĕ... Акă унăн шлепки урам урлă вĕлтĕртетсе иртрĕ; вăл Пятигорскри чи лайăх çуртсенчен пĕрне пырса кĕчĕ. Ун хыççăн княгиньă иртсе кайрĕ те хапхи умĕнче Раевичпа пуç тайса уйрăлчĕ.

---

3 Савнă тусăм, херарăмсене савас мар тесе, вĕсене малтанах тиркетĕп, унсăрăн пурнăç ытла та кулăшла мелодрамă пулса тăнă пулĕччĕ. (Мелодрамă — чун-чĕре сисĕмĕсене кăтартакан драмă).

Ҫавӑн чухне кӑна мӗскӗн вӗри юнкер эпӗ кунтах иккенне асӑрхарӗ.

— Эсӗ куртӑн-и? — терӗ вӑл, ман алла хыттӑн чӑмӑртаса.— Ана шӑпах ангел темелле вӗт!

— Мӗншӗн? — тесе ыйтрӑм эпӗ, нимӗн те пӗлмен пек пулса.

— Курмарӑн-и вара эсӗ?

— Ҫук, куртӑм: сана вӑл стаканна илсе пачӗ. Ҫавӑнта пӗр-пӗр хуралҫӑ пулнӑ пулсан ӗнтӗ, вӑл та ҫавӑн пекех тунӑ пулӗччӗ, хайне эрех сыпма укҫа парасса шанса, вӑл тата васкасарах тунӑ пулӗччӗ-ха. Ӗнтӗ ним каламалли те ҫук, вӑл сана хӗрхенчӗ: аманнӑ уру ҫине пуссан, эсӗ ытла асапланнӑ пек пултӑн.

— Пит-куҫӗнче чунӗ ялкӑшнине курса тӑнӑ чух нимӗн чухлӗ те хускалмарӗ-и сан чуну?

— Нимӗн чухлӗ те.

Эпӗ суйрӑм, анчах манӑн ӑна уртарас килетчӗ. Манӑн мӗн ҫуралнӑранпах ҫынна хирӗҫ пырас йӑлам пур, пӗтӗм кун-ҫулӑмра манӑн чӗре е ӑс-тӑн хушнипе вырӑнсӑр хирӗҫ пыни паларать. Савӑнса хӗпӗртекенни пурри мана шартлама сивӗпе сивӗтет, эпӗ вара хама, енчен час-часах мӑран флегматикпа[1] тӗл пулмалла пулсан, ҫав тери шухӑша парӑнма юратакан ҫын пулнӑ пулӑттӑм, тетӗп. Тӳррипе калас-ха тата, ҫав самантра ман чӗрене хам тахҫан пӗлнӗ кӑмӑлсӑр туйӑм ҫӳҫентерсе иртрӗ, вӑл туйӑм — хапсӑнассиччӗ ӗнтӗ; «хапсӑнасси» тесе хӑйсах каларӑм эпӗ, мӗншӗн тесен хамран нимӗн те пытармастӑп. Элле, тупӑнӗ-ши пӗр-пӗр йывӑра илмен ҫамрӑк ҫын, калӑпӑр, чипер хӗре тӗл пулса, хӑй вӑхӑтне вӑл кӑлӑхах ирттернӗ май, ун ҫине пӑхма та пуҫлать пулсан, анчах хӗрӗ пӗр кӗтмен ҫӗртен урӑх качча, лешӗн пекех паллманскере, кӑмӑллать пулсан, кӳренме пӗлмен ҫамрӑк тупӑнӗ-ши, тетӗп эпӗ (паллах ӗнтӗ, пысӑк светри ҫамрӑксене илетпӗр-ха эпир, хӑйсен кӑмӑлӗсене вылянтарма хӑнӑхнӑ ҫамрӑксене).

Эпир Грушницкипе сӑмах вакламасӑрах ту ҫинчен антӑмӑр та пирӗн сар пике кӗрсе пытаннӑ пӳртӗн чӳречи умӗн бульвар тӑрӑх утрӑмӑр. Пике чӳрече умӗнче ларатчӗ. Грушницкий мана аларан кӑрт туртрӗ те ун ҫине нимӗн пӑлӑртми ачашшӑн пӑхса илчӗ. Апла пӑхни хӗрсе-

---

[1] Флегматик — лӳппер ҫын.

не килĕшсех каймасть. Эпĕ ун çине лорнет витĕр пăхрăм та Грушницкий пăхнине хирĕç вăл ăшшăн кулса янине асăрхарăм, ман чăрсăр лорнет ăна хытах тарăхтарчĕ. Чăнах та, мĕнле хăять-ха Кавказри çар çынни Мускаври княç хĕрĕ çине кĕленче кантăкĕ витĕр пăхмашкăн?..

*Майăн 13-мĕшĕ*

Паян ир ман пата доктор кĕчĕ: ячĕ унăн Вернер, анчах хăй вăл вырăс. Мĕн тĕлĕнмелли пур унта? Эпĕ пĕр Иванова паллаттăм та, хăй вăл нимĕçчĕ.

Вернер пур енчен те питĕ лайăх çын. Вăл скептик, пур медиксем пекех, материалист, çавăнпа пĕрлех тата поэт та, кулса мар — ĕçре яланах поэт, сăмахĕпе те часчасах поэт, анчах пĕтĕм пурнăçĕнче те вăл икĕ сăвă та çырман. Вăл этем чĕрин пĕтĕм чĕрĕ хĕлĕхĕсене виле шăнăрĕсене тĕпчесе пĕлнĕ пек вĕреннĕ, анчах хăй пĕлнипе вăл нихçан та усă курма пĕлмен: çапла пулать-çке хăшпĕр чухне, чаплă анатомик та сивĕ чиртен сыватма пултараймасть! Вернер яланах хăйĕн чирлĕ çыннисенчен вăрттăн тăрăхласа кулма юрататчĕ, анчах пĕрре пĕр вилекен салтак умĕнче вăл епле куççуль тăкнине те куртăм эпĕ... Вернер чухăн çыннччĕ, çапах миллионсем çинчен ĕмĕтленетчĕ, анчах укçашăн тесен вăл пĕр утăм та ытлашши ярса пусас çукчĕ: вăл мана пĕрре, тусăма лайăх тăвиччен тăшмана лайăх тăватăп, терĕ, мĕншĕн тесен тус-пĕлĕшне лайăх туни ырă ĕçе сутни пулать, çав вăхăтра тăшмана мĕн чухлĕ ырă тунă, мĕн чухлĕ ырă кăтарттнă, çавăн чухлех курайманлăх та ӳссе пырать. Вернерăн чĕлхи усалччĕ: унăн эпиграммине итленĕ хыççăн хăш-пĕр ырă кăмăллă çын та тăр-ухмах ятне илткеленĕ; унпа хирĕçлекенсем, шывпа сиплекен кĕвĕç медиксем, Вернер хăй сыватакан чирлĕ çыннисенчен кулса карикатурăсем ӳкерет, тесе элек сарнă,— чирлĕ çыннисем вара çилленнипе пурте тенĕ пекех унран сивĕннĕ. Унăн тусĕсем, Кавказри службăра тăракан чăн-чăн лайăх çынсем, кăлăхах унăн вараланнă ятне тасана кăларма тăрăшнă.

Унăн сăн-сăпачĕ, пĕрре пăхнипех кăмăла каймасан, пыра киле кăна пит-куçĕнчи тĕрĕсех мар йĕрсенче пайтах хура-шур тӳснĕ, таса та хисеплĕ чуна курма вĕренсе çитсен тин килĕшекен пулать. Хăш-пĕр чухне унашкал çынсене хĕрсем ăнран кайиччченех юратса пăрахни те сахал пулман, вĕсен илемсĕрлĕхне чи çамрăк та розă пек

чипер эндимионсен[1] илемлĕхĕпе те улăштарман. Сума сăвасах пулать çав хĕрарăмсене: вĕсем çын ăшĕнчи илемлĕхе туйма пĕлеççĕ; çавăнпа пулĕ Вернер евĕрлĕ çынсем хĕрарăмсене çав тери хĕрӳллĕн юратаççĕ те.

Вернер лутра çын, ача пек хыткан та халсăр; хăрах ури унăн, Байронăнни пек, тепринчен кĕскерех; пуçĕ унăн, пĕвĕпе танлаштарсан, калама çук пысăк пек туйăнать: çӳçне шакла кастарать, çавăнпа та унăн пуç шăмми çинчи тикĕс мар вырăнсем, хире-хирĕçле уйрăмлăхсем темĕнле çыхланнипе, френолога[2] тĕлĕнтерне пулĕччĕç. Унăн лăпланма пĕлмен пĕчĕк хура куçĕсем эсир мĕн шухăшланине пĕлме тăрăшаççĕ. Тумтирне пăхсан, вăл, тирпейлĕхе юратса, мĕнле тăхăнмаллине лайăх пĕлни курăнать; типшĕмрех кăна пĕчĕк аллисенче шупка сарă перчетке. Яланах вăл сюртукне те, галстукне те, жилетне те хура тĕслине тăхăнать. Çамрăксем ăна Мефистофель[3] тесе ят панă; çавăншăн вăл çилленнĕ пек те пулнă, анчах чăннипе каласан, çапла чĕнни ăна йăпантарнă та. Эпир унпа пĕрне-пĕри часах ăнланса лайăх юлташлантăмăр, мĕншĕн тесен туслашма пултараймастăп эпĕ: икĕ тусран пĕри кирек хăçан та теприн чури пулать, хăйсем акă, çавăн чури пултăм-ха, тенипе килĕшеççĕ пулсан та: — эпĕ чура пулма пултараймастăп, хушма ку яхăнта халăм çук, хушасси — ывăнтаракан ĕç, мĕншĕн тесен унпа пĕрлех тата улталасси те пулать; питех кирлĕ пулсан, манăн тарçăсем те, укçам та пур! Акă эпир унпа мĕнле юлташлантăмăр: эпĕ Вернера С... ра йышлă та шавлă çамрăксем хушшинче тĕл пулсаттăм; калаçу юлашкинчен философиллĕ-метафизикăллă пулса кайрĕ; кам, мĕн çине епле пăхни çинчен калаçкалаттăмăр та, кашни темĕн те пĕре ĕненнине пĕлтĕмĕр.

— Эпĕ акă, сăмахран, пĕр çак шухăша кăна тытатăп...— терĕ доктор.

---

[1] Эндимион — грексен авалхи тĕн йăлисем тăрăх чи хăватлă турăсенчен пĕрин,— Зевс ятлă туррăн ывăлĕ, вăл çамрăк та питĕ хитре пулнă.

[2] Френолог — Галль (1758—1822) этемĕн психикă тĕлĕшпе уйрăмлăхĕсем пуç мимин пĕр-пĕр участоксемпе çыхăнса тăни çинчен вĕрентни хыççăн пыраканскер.

[3] Мефистофель — Гете çырнă «Фауст» ятлă произведени геройĕ; Фаустпа пĕрле çӳрекенскер, этемĕн чи лайăх туртăмĕсене ĕненмесĕр пурăнакан яланхи скептик, пур çĕрте те усалпа иккĕленӳсем сараканскер.

— Мĕнле шухăша? — тесе ыйтрăм эпĕ халиччен чĕнмесĕр ларакан çын шухăшне пĕлес килнипе.

— Халĕ-и, ӳлĕмрен-и, пĕр-пĕр чипер кун хам вилсе каяссине ĕненетĕп.

— Эпĕ сирĕнтен пуянрах иккен,— терĕм эпĕ,— манăн çав шухăшсăр пуçне тепĕр шухăш та пур: пĕр-пĕр ĕренкесĕр каçхине тем инкеке пула çуралнă эпĕ.

Пире пурте кирлĕ мара калаçатăр терĕç, анчах вĕсенчен пери те эсир каланă сăмахран ăслăраххине каламарĕç. Çав самантран вара эпир пĕр-пĕрне ушкăнра лайăх палласа илме пуçларăмăр. Час-часах иксĕмĕр курнăçаттăмăр та пурнăçра пулман япаласем çинчен иксĕмĕр пĕрне-пĕри минретнине асăрхичченех питĕ хĕрсе калаçаттăмăр. Вара Цицерон[1] каларăшле, Римри авгурсем[2] пек куçсенчен пăхса, эпир ахăлтатса кула пуçлаттăмăр, унтан вара каçа лайăх ирттернипе савăнса, килелле каяттăмăр.

Вернер ман пӳлĕме кĕнĕ чухне эпĕ диван çинче алла пуç айне хурса, мачча çинелле пăхса выртаттăм. Вăл тӳйине кĕтесе таянтарса хучĕ, çемçе пукан çине ларчĕ, анасларĕ те тулта ытла шăрăхлатни çинчен пĕлтерчĕ. Эпĕ хама шăнасем кансĕрлеççĕ терĕм те, шăплантăмăр.

«Ăс тăватăр-ха, юратнă доктор,— терĕм эпĕ;— ухмахсемсĕр çут тĕнчере те питĕ кичем пулнă пулĕччĕ... Пăхăр-ха, акă эпир иксĕмĕр ăслă çынсем ĕнтĕ, пур япала çинчен те вĕçĕ-хĕррисĕр тавлашма май пур иккенне пĕлетпĕр эпир, çавăнпа тавлашмастпăр та, эпир пĕр-пĕрин чи вăрттăн шухăшĕсене пурне те пĕлсе тăратпăр темелле; пĕр сăмах хускатсан та, пирĕншĕн пĕтĕм истори. Хамăрăн кашни туйăмăн тĕшне виçĕ хутлă хуппи витĕр куратпăр. Кулянмалли пирĕншĕн кулăшла пулать, кулăшли хуйхăрттарать, чăннипе каласан, эпир хамăрсăр пуçне пурин çине те уямасăр пăхатпăр. Çапла вара пирĕн хушшăмăрта сисĕмсемпе шухăшсене улăштарасси пулма пултараймасть: пĕр-пĕрин çинчен эпир питĕ лайăх пĕлсе çитрĕмĕр, ытлашшине пĕлме кирлĕ те мар пире,

[1] Цицерон — (пирĕн эрăчченхи 106—34 çç.) — Римри чаплă оратор, вăл философ тата государствă деятелĕ пулнă. Цицерон каласа кăтартнă тăрăх, авгурсем вара, пĕр-пĕринпе тĕл пулсан (тепĕр асăрхаттарнине пăх), пĕр-пĕрин куçĕсенчен пăхса ăшшăн кулнă — çынсем ытлашши çăмăл ĕненнинчен тăрăхланă.

[2] Авгурсем — авалхи Римри жрецсем. Вĕсем малашне пулас пурнăçа кайăксем вĕçнĕ тăрăх, выльăх-чĕрлĕх ăшĕ тăрăх каласа панă пулать.

халĕ ĕнтĕ çĕнĕ хыпарсем пĕлтересси çеç юлать. Эппин, каласа парăр-ха мана мĕнле те пулин пĕр-пĕр çĕнĕ хыпар?

Чылай калаçнипе ырса, эпĕ куçа хупрăм та анаслярăм.— Сирĕн урлă-пирлĕ сăмахăрта çапах та идейă пур,— терĕ вăл пăртак шухăшланă хыççăн.

— Иккĕ! — терĕм эпĕ.

— Пĕрне эсир калăр эппин, тепĕрне сире эпĕ калăп.

— Юрĕ, пуçлăр! — терĕм эпĕ, мачча çине çав-çавах пăхнă май ăшра кулкаласа.

— Сирĕн ĕнтĕ сим шывпа чĕрĕлме килнисем çинчен пĕлес килет, çавăнпа та эпĕ эсир камшăн çапла тăрăшнине сисетĕп те, унта сирĕн çинчен ыйтса пĕлекенсем те пулчĕç.

— Доктор! Пирĕн нимĕн те калаçма юрамасть: эпир пĕр-пĕрин ăшĕнче мĕн пуррине вуласах пĕлетпĕр.

— Халĕ тата тепри...

— Тепĕр идейи çакăн пек: манăн сире итлес килетчĕ, итлени ывăнтарсах каймасть вăл, тепĕр тесен. Тата калаçман чух ытлашшине нимĕн те каласа ямастăн; виççĕмĕшĕнчен, урăх çыннăн вăрттăн шухăшне пĕлме пулать; тăваттăмĕшĕнчен, сирĕн пек ăслă çынсем итлекенсене калаçакансенчен ытларах юратаççĕ. Халĕ ĕç пирки калаçăпăр; Лиговская княгиньă мĕн каласа пачĕ сире ман çинчен?

— Вăлах тесе шутлатăр-и?.. Хĕрĕ мар-и?

— Вăлах тетĕп, иккĕленместĕп те.

— Мĕншĕн апла?

— Мĕншĕн тесен хĕрĕ Грушницкий çинчен çеç ыйтса пĕлет.

— Эсир калама çук чухлатăр. Княжна çав салтак шинельне тăхăннă çамрăк çынна дуэльшĕн айăпласа салтаксен ретне куçарнă пулĕ, тесе шутлать.

— Эсир унăн йăнăш шухăшне тӳрлетмерĕр пулсан.

— Паллах, тӳрлетмерĕм.

— Пуçламăшĕ пур! — тесе кăшкăрса ятăм эпĕ хĕпĕртенипе.— Ку мыскара мĕнле пĕтесси пирки эпир тăрăшса пăхăпăр. Араскалăм хама кичем ан пултăр тесе тăрăшать те-ха.

— Малтанах туйса тăратăп, акă, эсир Грушницкие тапăнма шут тытнине,— терĕ доктор.

— Малалла калăр, доктор...

— Княгиньă сире паллатăп, терĕ. Эсир вăл çынна

Петербургра ăçта та пулин курнă пулĕ,—терĕм эпĕ ăна... Ятăра та пĕлтертĕм сирĕнне... вăл пĕлнĕ иккен сан ятна. Сирĕн историйĕр унта пысăк шав тунă пулас... Княгиньă сирĕн хăтланăвăрсем çинчен каласа пачĕ, ĕнтĕ вăл пур элексем çумне хăйĕн шухăшĕсене те хушрĕ пулĕ... Хĕрĕ пикенсех итлерĕ. Унăн туйăмĕнче эсир çĕнĕлле çырнă романăн геройĕ пулса тăтăр... Княгиньă йăнăшнине пĕле тăркачă ăна хирĕç пымарăм эпĕ.

— Ытла та ăслă-çке эсĕ, тусăм! — терĕм ăна эпĕ, аллăма тăсса.

Доктор ман алла чĕререн чăмăртарĕ те малалла калама пуçларĕ:

— Кăмăлăр пулсан, эпĕ сире паллаштарăп...

— Хăтарăр паллашасран! — терĕм эпĕ, алăсемпе хăлаçланса,— геройсене паллаштараççĕ-и вара? Вĕсем хăйсем юратас çынсене тӳрĕ вилĕмрен çăлса çеç паллашаççĕ, урăхла пулмалла та мар...

— Эсир чăнах та княжна хыççăн сĕтĕрĕнес тетĕр-и вара?..

— Çук, ун çинчен ан та шухăшлăр!.. Доктор, тинех савăнатăп акă: эсир мана ăнланаймарăр-ха!.. Ку мана кăштах йывăра та илтерет те-ха, доктор,— терĕм эпĕ малалла самант хушши нимĕн чĕнмен хыççăн,— эпĕ хамăн вăртăн шухăша нихçан та хам уçса памастăп, вĕсене çынсем хăйсем тавçăрса илнине калама çук юрататăп, мĕншĕн тесен кирлĕ чухне вара эпĕ вĕсен умĕнче яланах тунма пултаратăп. Халь ĕнтĕ эсир мана амăшĕпе хĕрĕн сăнарне сăрласа парăр. Мĕнле çынсем вĕсем?

— Амăшĕ пĕр 45 çулсене çитнĕскер,— терĕ Вернер,— унăн вар-хырăмĕ лайăх ĕçлет, юнĕ пăсăлнă вара; пит çăмартийĕсем çинче хĕрлĕ пăнчăсем пур. Юлашки çурма пурнăçне вăл Мускавра ирттернĕ те канлĕхре ытла хулăнланса кайнă. Вăл илĕртекен анекдотсене юратать, пӳлĕмре хĕрĕ çук пулсан, хăй те хăш-пĕр чухне вырăнла мар ĕçсем çинчен кала-кала кăтартать. Вăл мана хĕрĕ кăвакарчăн пек айăпсăрри çинчен те пĕлтерчĕ. Ĕçĕм те çук та-ха ун пирки... ан пăшăрхан, тесшĕнччĕ ăна эпĕ, ун çинчен никама та каламăп, тесшĕнччĕ! Амăшĕ ревматизмран чĕрĕлет, хĕрĕ мĕнрен сывалнине мурĕ пĕлет-и? Эпĕ вĕсене иккĕшне те кунне икĕ стакан кӳкĕрт шывĕ ĕçтермелле турăм, эрнере икĕ хутчен шыв хушнă ваннăра çăвăнма хушрăм. Княгиньă çынна хушкалама хăнăхман пулас; хĕрĕн ăс-хакăлне те пултарассине хисеплесе

пăхать, хĕрĕ Байрона акăлчанла вуланă, алгебрă та пĕлет: Мускаври хĕрсем вĕренме туртăнаççĕ иккен ку чухне, лайăх та-çке, чăнах! Пирĕн арçынсем питĕ кăмăллах мар, кăмăлне каяс-ха тесе тăрăшни вара ăслă хĕрарăмшăн килĕшӳсĕр. Амăшĕ çамрăк çынсене питĕ юрататть; хĕрĕ вĕсене ним вырăнне хуман пек пăхать: Мускав йăли. Вĕсем Мускавра 40 çулхи вичкĕн çынсене çеç итлесе пурăнаççе.

— Эсир Мускавра пулнă-и, доктор?

— Пулнă, эпĕ унта кăштах ĕçлесе пăхнă.

— Малалла калăр.

— Ĕнтĕ йăлтах каласа пĕтертĕм пулмалла... Э! акă тата: княжна юрату çинчен, сисĕм-туйăм çинчен калаçма юрататть пулас... Вăл пер хĕл хушши Петербургра пурăннă, хули килĕшмен вара ăна, çыннисем те килĕшмен: ахăртнех ăна унта сиввĕн йышăннă пулĕ.

— Эсир паян никама та курмарăр-и вĕсем патĕнче?

— Епле курмарăм пулать? Куртăм, пĕр адъютант пурччĕ унта, пĕр хăюсăртарах гвардеец та тата пĕр çак кунсенче çеç килнĕ темĕнле хĕрарăм, княçĕ енчен килекен тăванĕ пулас, питĕ чиперскер хăй, анчах ытла хĕне кайнă пулмалла... Эсир пусă патĕнче ăна куртăр та пулĕ? Вăтам пӳ-силлĕ вăл, сарă кăна, чечен пит-куçлă çын, сăнĕ ӳслĕк чирĕпе аптранă çыннăнни пек, сылтăм пит çăмарти çинче пĕчĕкçĕ кăна тур палли пур: унăн пит-куçĕ мана тĕлĕнсе каймалла кĕрнеклĕн курăнчĕ.

— Тур палли тетĕн! — мăкăртатрăм эпĕ шăл витĕр.— Чăнах та-и?

Доктор ман çине пăхрĕ те, аллине ман чĕре çумне хурса, хаваслăн: — эсир палланă ăна! — тесе пĕлтерчĕ.— Чĕрӳ яланхинчен вăйлăрах тапнăн туйăнчĕ.

— Халĕ сирĕн те хĕпĕртеме черет çитрĕ! — терĕм эпĕ,— ĕнтĕ сирĕн çине кăшт шанатăп; эсир мана улталас çук. Эпĕ çав хĕрарăма курман-ха, анчах эсир каланă тăрăх, хам ĕлĕк юратса тăнă пĕр хĕрарăм пулĕ тесе сĕметлетĕп... Эсир ăна ман çинчен пĕр сăмах та ан калăр: енчен вăл мĕн те пулин ыйтса пĕлес пулсан, ман çинчен эсир ырă ятпа ан асăнăр.

— Юрать те пулĕ,— терĕ Вернер, хул пуççине пăркаласа.

Вăл тухса кайсан, чĕреме калама çук пысăк хуйхă пусрĕ. Шăпамăр çапла пире каллех Кавказра пĕрлештерет-ши, е мана курас тесе ятне кунта килнĕ-ши вăл?..

Эппин менле тĕл пулăпăр-ха тата?.. Çавах-ши вăл, чăнах?.. Туйса тăни улталакан марччĕ мана. Тахçан пулса иртни тĕнчере урăх никама та мана пăхăнтарнă пек пăхăнтармасть пулĕ. Иртнĕ куляну е хаваслăх çинчен асăнтарни ман чĕрене ыраттарсах хавшатать те çав ыратса тухнă сассах янратать...

Анкă-минкĕлле çуралнă иккен эпĕ: нимĕн те манмастăп-çке, нимĕн те!

Кăнтăрлахи апат хыççăн ултă сехет тĕлнелле эпĕ бульвара тухрăм: унта пĕр ушкăн пуçтараннăччĕ. Княгиньă хĕрĕпе тенкел çинче ларатчĕ, вĕсем тавра пухăннă çамрăксем пĕрне-пĕри пӳлсе, савăнса калаçатчĕç. Эпĕ, вĕсенчен кăшт аяккарах пăрăнса, тепĕр тенкел çине пырса лартăм, паллинă Д... офицерсене иккĕшне те чарса тăтăм та вĕсене темĕн çинчен каласа патăм; эпĕ калани ытла кулăшла пулчĕ пулас та, вĕсем ăнран каясса çити ахăлтатма тытăнчĕç. Часах княжна патĕнчен те хăш-пĕрисем мана итлес тесе пычĕç; пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕнех хайхискерсем пурте ман ушкăна хутшăнчĕç. Эпĕ чарăна пелмесĕр каласа кăтартатăп: анекдотсем манăн ăнран каймалла ăслă тухаççĕ, эпĕ хамăр умран иртсе каяканне пĕр тăрăхланисем чăтса тăма çук хаяр пулаççĕ... Пухăннă халăха çапла хĕвел аничченех хаваслантартăм.— Княжна амăшĕпе алла-аллăн тытăнса ман умран темиçе хут та иртсе кайрĕ, вĕсемпе пĕрле пĕр лĕчĕк ухсах старик çӳрет; хĕрĕ ман çине темиçе хутчен те кӳреннĕ пек пăхкаласа илчĕ: хăйне çапах та мана асăрхаман пек тытасшăн пулчĕ...

— Мĕн каласа пачĕ вара вăл сире? — тесе ыйтре вăл, лайăх мар пуласран вĕсем патне калле çаврăннă пĕр çамрăк çынран,— пĕр-пĕр интереслĕ истори пулĕ ĕнтĕ, вăрçăри хăйĕн паттăр ĕçĕсем çинчен кала-кала кăтартать пулĕ-ха?..— Çакна вара илтĕнмеллех каларĕ вăл,. мана тĕртесшĕнччĕ пулĕ те... «А-ха! — тесе шутларăм эпĕ,— çилленмеллипех çиллентĕн иккен эсĕ, савнă хĕрĕм; тăхтăр-ха, вăл кăна пулĕ-и ӳлĕмрен!»

Грушницкий ăна тискер кайăк пек сăнаса çӳрет, куçне те илмест унран: мĕн те пулин хурсах тавлашатăп, вăл хăйне княгиньăпа паллаштарăр тесе ыранах камран та пулин ыйтать ĕнтĕ. Лешĕ хапăл тусах йышăнĕ, кичем мар-им вара ăна?

Икĕ кун хушшинче ман ĕçсем акăш-макăш малалла кайрĕç. Княжна мана тĕппипех кураймасть; мана хам çинчен кăларнă ик-виçĕ эпиграммăна калакаласа та пачĕç ĕнтĕ, самай тивекенскерсем те, çапах та вĕсем питĕ кăмăла каяканскерсем. Вăл калама çук тĕлĕнет пулать, епле-ха эпĕ, лайăх обществăна хăнăхнăскер, çав обществăн Петербургри пултăрĕсемпе те инкĕшĕсемпе çав тери çывăх тăраканскер, унпа паллашма тăрăшмастăп-ха. Кунсеренех акă пусă патĕнче, бульварта тĕл пулатпăр эпир: ăна юратаканĕсемпе чаплă адъютанчĕсене, Мускавран килнисемпе тата ыттисене те аяккалла пăхтарас тесе, эпĕ пĕтĕм вăя хуратăп та, мана яланах вĕсене пăрма май килет, темелле. Ĕлĕкренех эпĕ хам пата хăнасем пуçтарма юратмастăмччĕ: халĕ манăн кашни кун пӳрт тулли халăх, кăнтăрла та каçхине те вĕсем хăна пулаççĕ, картла выляççĕ—манăн шампански княжнан асамлă куç вăйĕ илĕртнинчен те вăйлăрах иккен!

Ĕнер эпĕ ăна Челахов магазинĕнче тĕл пулсаттăм та, вăл тĕлĕнмелле чаплă персидски кавир туянасшăнччĕ. Хĕрĕ амăшне: ан хытса тăр ĕнтĕ, тесе тимлет; çав кавир унăн пӳлĕмне ытармалла мар илем кӳртнĕ пулĕччĕ, имĕш!.. Эпĕ 40 тенкĕ хаклăрах патăм та туянтăм; çавăншăн вăл ман çине калама çук сиввĕн пăхса илчĕ. Кăнтăрлахи апат тĕлĕнче, хамăн черкес лашине çав кавирпе витсе, юриех вĕсен умĕнчен ирттерме хушрăм. Вернер çав вăхăтра вĕсем патĕнче пулнă иккен, кайран каласа пачĕ вара, çав сценăн эффекчĕ питĕ драмăллă пулнă, тет. Княжна мана хирĕç çынсене çĕклесшĕн имĕш, унпа пĕрлех çӳрекенсенчен икĕ адъютанчĕ мана питĕ сиввĕн пуç тайнине хам та асăрхарăм эпĕ, хăйсем вĕсем кунсеренех ман патăмра хăна пулаççĕ.

Грушницкине вара пĕлме те çук: аллисене çурăм хыçне тытса çӳрет, никама та палламасть; ури те унăн сасартăк тӳрленсе çитрĕ: кăшт çеç уксахлать вăл ĕнтĕ. Княгиньăпа калаçма та, хĕрне пĕр-пĕр комплимент калама та ĕлкĕрнĕ пулас; лешĕ, ан хăра, çынсене уйăрма пĕлсех каймасть пулĕ те, Грушницкий пуç тайнине хирĕç ытла ăшшăн кулкаласа илет.

— Эсĕ Лиговскаясемпе паллашасшăн та мар-и? — терĕ вăл мана ĕнер.

— Шухăшăм та çук паллашма.

— Чим-ха, вара вăл чи кăмăллă кил-йыш-çке! Унта çак тавраşри чи лайăх йыш пухăнать...

— Тусăм, мана çав тавраşра марри те калама çук йăлăхтарса çитерчĕ. Эсĕ ху вĕсем патĕнче пулкалатăн-и?

— Пулаймарăм-ха; эпĕ хĕрĕпе пĕр икĕ хутчен кăна калаçнă, унтан ытла та мар. Хăвах пĕлетĕн, кунта йăли çакнашкал пулсан та, чĕнмесĕр çÿреме лайăх мар пек туйăнать... Енчен эпĕ эполетсемпе пулсан, ĕçĕм те урăхлаччĕ...

— Тупрăн тата! Сана капла тата килĕшерех парать! Эсĕ хăвăн ăнăçлă тивлетÿпе усă курма пĕлместĕн-ха... Салтак шинелĕ сана кирек хăш ырă кăмăллă пике умĕнче те асап чăтса курнă герой пек кăтартать.

Грушницкий кăмăллăн кулса ячĕ.

— Аçтан ун пек пулма пултарать! — терĕ вăл.

— Княжна сана юратса та пăрахрĕ пулĕ, тетĕп эпĕ.

Вăл хăлхи-мĕнĕпех хĕрелсе кайрĕ те çилленнĕ пек пулчĕ. Э, мăн кăмăллăх! Эсĕ Архимед[1] рычакĕ, Архимед санпа çĕр чăмăрне çĕклеме ĕмĕтленнĕ!..

— Яланах шÿт тăвассипе эсĕ! — терĕ вăл, хăйне çилленнĕ пек тытса,— вăл мана питĕ сахал пĕлет-ха...

— Хĕрарăмсем хăйсем пĕлменнисене çеç юратаççĕ.

— Эпĕ ун кăмăлне каясшăнах та мар: кăмăллă килйышпа паллашас тенипе кăна, çавăнпа та эпĕ кирек мĕне те пулин шанса тăратăп пулсан, ытла кулăшла пулнă пулĕччĕ... Акă сирĕн, сăмахран илсен, пачах урăхла ĕç! Эсир, Петербургри çĕнтерÿçĕсем, куçпа пăхатăр çеç, хĕрарăмсем ирĕле те пуçлаççĕ... Пĕлетĕн-и, Печорин, княжна мĕн калать сан çинчен?..

— Мĕн калать? Вăл ман çинчен сана мĕн те пулин165ларĕ-те-и ĕнтĕ?..

— Çапах та ан савăн-ха, эпĕ пĕрре пусă патĕнче кĕтмен çĕртен курса калаçсаттăмччĕ унпа: виççĕмĕш сăмахĕнчех вăл: кам çав господин, кăмăлсăр та йывăррăн пăхаканскер? — тесе ыйтрĕ; — ун чухне вăл сирĕнпе пĕрлеччĕ,— терĕ. Хăй хĕрелсе кайрĕ те ку ĕç хăш кун пулнине те каласшăн пулмарĕ.— Кунне калама кирлех те

[1] Архимед (пирĕн эрăчченхи 287—212 çç.) — авалхи вăхăтри чи паллă физиксемпе математиксенчен пĕри, вăл Сицили утравĕн тĕп хулинче — Сиракузăра пурăннă. Романра Архимед: «Парăр мана тĕренмелли вырăн, эпĕ çĕр чăмăрне те çавăрса хурăп», тенине систерсе каланă.

мар сирӗн,— терӗм ӑна эпӗ,— вӑл кун ӗмӗрех ман асра пулӗ терӗм... Печорин, тусӑмҫӑм! Сана саламламастӑп эпӗ. Сан ҫинчен вӑл начар шухӑшлать... Юрамастчӗ-ҫке ун пек, мӗншӗн тесен Мери питӗ чипер хӗр!..

Каласа хӑварас-ха, Грушницкий кӑштах палланӑ хӗрарӑм ҫинчен калаҫнӑ чух, е тата ун кӑмӑлне кайнӑ та пулсан, манӑн Мери, манӑн София тесе ҫеҫ тӑрать.

Нимӗн кулмасӑр тавӑртӑм ӑна эпӗ:

— Чӑнах та, вӑл начар мар... Анчах асӑрхан, Грушницкий! Вырӑс хӗрӗсем нумайӑшӗ качча тухасси ҫинчен шухӑшласа мар, халаплӑ юратупа пурӑнаҫҫӗ. Ҫавӑн пек юрату вара ытла та канӑҫсӑр. Княҫ хӗрӗ йӑпанма юратаканнисенчен пӗри пулас, сан ҫумӑнта ӑна пӗр-икӗ минут хушши кичем пулсан, эсӗ ӗмӗрлӗхех пӗтрӗн вара: эс калаҫмасан, мӗншӗн калаҫманнине пӗлесшӗн пулӗ вӑл, калаҫсан, ун кӑмӑлне нихҫан та тупаймӑн, ӑна санӑн кашни минутрах мӗнпе те пулин илӗртмелле пулать; саншӑн пулсан вӑл ҫын сӑмахне пурин умӗнче те 10 хутчен пӑрахӑҫа кӑларса, ҫавӑнтах: пире ҫапла пӳрнӗ ӗнтӗ, тет; вара хӑйне ырӑ ятлӑ тӑвасшӑн, санах асаплантарма пуҫлать, кайран тата сана йӑлтах курас килмест, тет. Эсӗ ӑна пӑхӑнтараймасан, пӗрремӗш хут чуп туни те сана иккӗмӗш хут чуп тума тивӗҫтермест, сан умӑнта хӑй йӑлӑхиччен ейкеленет те пӗр-икӗ ҫултан вара, амӑшне итлем пек туса, пӗр-пӗр чӑлаха качча тухса каять; кайран хӑйнех вӑл: эпӗ телейсӗр, тет, эпӗ пӗр ҫынна ҫеҫ юрататтӑмччӗ, тет, сана юратнӑ пулать ӗнтӗ, анчах турӑ ҫырман, имӗш, мӗншӗн тесен унӑн савнӑ ҫынни салтак шинелӗпе пулнӑ, ҫав кӑвак шинель айӗнче ҫулӑмлӑ та ырӑ чӗре тапатчӗ ҫав, тесе ӗнентерме пуҫлать вӑл хӑйне...

Грушницкий чӑмӑрӗпе сӗтел ҫине ҫапрӗ те пӳлӗм тӑрӑх каллӗ-маллӗ утма тытӑнчӗ.

Ашӑмра кулса ятӑм эпӗ, телейӗме кура, вӑл асӑрхаймарӗ пулас эпӗ кулнине. Ӗнтӗ юратсах пӑрахнӑ ҫав вӑл ӑна, мӗншӗн тесен вӑл тата ытларах шанакан пулчӗ; таҫтан вӑл куҫлӑ кӗмӗл ҫӗрӗ те тупнӑ, ҫӗррине ҫак таврашра кӑна тунӑ... Эпӗ ӑна пӑхкаларӑм та акӑ мӗн асӑрхарӑм: ҫӗррин шал енче вӗтӗ саспаллисемпе Мери ятне ҫырнӑ, юнашарах тата ҫав стакана илсе панӑ паллӑран та паллӑ кунӑн числине кӑтартнӑ. Эпӗ пӗлмӗш пултӑм. Юратса тӑни ҫинчен ирӗксӗр калаттарасшӑн мар ӑна

эпĕ, хӑй каласа патӑр, ун чухне вара эпĕ тӑраничченех савӑнӑп...

. . . . . . . . . . . . . .

Паян эпĕ нумай ҫывӑрнӑ, тӑтӑм та пусӑ патне пытӑм — ĕнтĕ никам та ҫукчĕ унта, кун шӑрӑхлансах пырать, шурӑ лӑпсӑрkka пĕлĕтсем аслатиллĕ ҫумӑр пуласса систереҫҫĕ. Юрлӑ тусем патĕнчен вĕсем васкавлӑн шӑваҫҫĕ; Машук тӑрри сӳнтернĕ факел пек тĕтĕмленет; унӑн йĕри-таврашĕнчи кӑвак пĕлĕт, малалла шунӑ ҫĕртен ҫакланса чарӑннӑ пек пулса, ҫĕлен пек явӑнса йӑшӑлтатать. Сывлӑш электричествӑпа тулса тӑрать. Эпĕ грот патнелле каякан виноград аллейине кĕтĕм; ытла кичемччĕ мана. Эпĕ доктор каласа панӑ тур паллиллĕ ҫамрӑк хĕрарӑм ҫинчен шухӑшларӑм... Мĕншĕн кунта вӑл? Вӑлах-ши тата? Мĕншĕн вӑлах тесе шухӑшлатӑпха эпĕ? Мĕншĕн ҫавӑ тесех шанса тӑратӑп эпĕ? Пит ҫӑмарти ҫинче тур палли пур хĕрарӑмсем сахал-и тĕнчере? — Ҫапла май шухӑшласах эпĕ грот патне пырса тӑтӑм. Пӑхатӑп: ҫавӑн усӑ сулхӑнĕнче чул тенкел ҫинче пĕр хĕрарӑм ларать, улӑм шлепкепе вӑл, хура явлӑкпа пĕркеннĕ, пуҫне кӑкӑрĕ ҫинелле уснӑ; шлепки унӑн питне хӳтĕлет. Эпĕ, ӑна шухӑшласа ларма чӑрмантарас мар тесе, каялла ҫаврӑнма шутланӑччĕ, вӑл ман ҫине пӑхса та илчĕ.

— Вера! — кӑшкӑрса ятӑм эпĕ ирĕксĕрех.

Вӑл шартах сикрĕ те шуралса кайрĕ.— Эсир кунта иккенне пĕлтĕм эпĕ,— терĕ вӑл. Ун ҫумне лартӑм та аллинчен тытрӑм. Унӑн кӑмӑллӑ сассине илтсенех, ман чĕрене тахҫан манса кайнӑ хускану хыпса илчĕ; вӑл хӑйĕн тарӑн та тӳлек куҫĕпе ман ҫинелле пӑхрĕ: темĕн ятланӑ пек те ĕненмен пек пӑхрĕ вӑл ман ҫине.

— Эпир нумайранпа пĕрне-пĕри курман,— терĕм эпĕ.

— Нумайранпа ҫав, иксĕмĕр те ытла улшӑннӑ вара.

— Апла пулсан, эсĕ мана урӑх юратмастӑн-и?..

— Эпĕ качча тухнӑ!..— терĕ вӑл.

— Татах-и? Ĕлĕкрех те ҫавӑн пек сӑлтав пурччĕ-ҫке сирĕн, ҫапах та...

Вӑл хӑй аллине манӑн алӑран туртса илчĕ те, унӑн пит ҫӑмартисем хĕрелсе кайрĕҫ.

— Иккĕмĕш упӑшкуна юрататӑн пулĕ эсĕ?

Сӑмахне тавӑрмасӑр вӑл тепĕр еннелле ҫаврӑнса ларчĕ.

— Е вăл ытла кӳлешет-и?

Шăпах.

— Мĕн тăвас тен? Вăл çамрăк, чипер, уйрăммăнах пуян пулĕ, эсĕ хăратăн тата...— Эпĕ ун çине пăхрăм та хăраса ӳкрĕм. Пит-куçĕ унăн тем пек тарăхнине кăтартать, куçĕнче куççуль йăлтăртатать.

— Кала-ха мана,— пăшăлтатса илчĕ вăл каярахпа,— сана питĕ савăнтарать-им ман асапăм? Манăн сана курайми пулмалла ĕнтĕ. Пĕр-пĕрне пĕлме пуçланăранпа эсĕ мана асапран пуçне нимĕн те кăтартмарăн...— Унăн сасси чĕтренсе кайрĕ, вăл ман паталла тайăлчĕ те пуçне ман кăкăрăм çине хучĕ.

«Пулĕ те,— шухăшларăм эпĕ,— çавăншăн юратнă-та эсĕ мана: савăнăç манăçать çав, хуйхă-суйхă пек мар...»

Эпĕ ăна хытă ыталаса илтĕм, çавăн пек нумайччен пĕрле лартăмăр. Юлашкинчен пирĕн тутасем çывхарчĕç те, эпир хĕрӳллĕн, каçăхса кайса чуп турăмăр; аллисем унăн пăр пек сивĕччĕ, пуçĕ пĕçеретчĕ. Пирĕн хушшăмăрта калаçу пуçланса кайрĕ. Çав калаçăва хут çине çырни нимĕн усси те пулмĕ, ăна тепĕр хут каласа пама та май çук, ас туса юлмашкăн та май çук: итальянски оперăри пек, сасăсен пĕлтерĕшĕ сăмахсен пĕлтерĕшне ăнлантарса та хушса пырать.

Вăл мана хăй упăшкипе, çав бульварта кăштах курса юлнă ухсах старикпе, пачах паллаштарасшăн мар: ывăлне хĕрхеннипе ăна вăл качча тухнă иккен. Упăшки пуян та, ревматизмпа аптăрать. Эпĕ ун упăшкинчен пĕртте кулмарăм; вăл ăна ашшĕ вырăнне хурса хисеплет, упăшки тесен тата улталĕччĕ те-и... Тĕлĕнмелле япала вăл этем чĕри, хĕрарăмсен чĕри пушшех те тĕлĕнтерет вара!

Вера упăшки, Семен Васильевич Г... в, Лиговская княгиньăн катари хурăнташĕ. Вăл унпа юнашарах пурăнать; Вера час-часах княгиньă патĕнче пулкалать; эпĕ ăна Лиговскаясемпе паллашма сăмах патăм, çынсем ан сисчĕр тесе княжна хыççăн сĕтĕрĕнсе çӳрĕп вара. Çапла майпа манăн ĕмĕт нимĕн чухлĕ те пăтранмасть, хама та савăнăçлă пулать...

Савăнăçлă терĕм!.. Эпĕ телей шырас тапхăртан иртнĕ ĕнтĕ, чун-чĕре хавалĕпе кама та пулин хĕрӳллĕ савас вăхăт урлă каçнă çав; маншăн халь хама юратаканнисем çеç пулччăр, унта та пурте мар, ĕмĕрлĕхе пĕри çывăхланни те çителĕклĕ пулĕччĕ тетĕп: мĕн тăвас, мăнтарăн чĕрен йăли çавăн пек-çке!..

Ак çакна вара яланах ăнкараймастăмччĕ. Эпĕ нихçан та савнă хĕрĕн чури пулман. Ытла çине тăмасăрах вĕсен кăмăлĕпе чĕрине хам еннелле çавăрнă. Мĕншĕн апла иккен? Эпĕ нимĕн пирки те, нихçан та кулянманнишĕн-ши, вĕсем кашни минутрах мана хăйсен аллинчен вĕçертесрен хăраса тăнă пулĕ, е вăл вăйлă организмăн магнитлă хăвачĕ-ши? Е пăхăнмалли кăмăллă хĕрарăма халиччен курма май килменнипе-ши?

Тӳррипех калас пулать, эпĕ характерлă хĕрарăмсене юратмастăпах: вĕсен ĕçĕ-и вăл характерлă пуласси!..

Чăнах та, халĕ аса илтĕм-ха акă: пĕррехинче, пĕррехинче çеç, эпĕ пĕр çирĕп кăмăллă хĕрарăма савсаттăм та, ăна нихçан та вара хам еннелле çавăраймарăм... Эпир тăшманлă пулса уйрăлтăмăр, унпа эпĕ пилĕк çул каярах тĕл пулнă пулсан, урăхла уйрăлнă пулăттăмăр-и, тен.

Вера хĕне кайнă, питĕ чирлĕ вăл, анчах хăй палăртасшăн мар: эпĕ унăнне ӳслĕк чирĕ пулĕ тетĕп е çынна пĕтерекен сивĕ чир пуласран хăратăп, вăл вырăссем хушшинче палăрман, пирĕн чĕлхере унăн ячĕ те çук.

Эпир гротра ларнă чухне аслатиллĕ çумăр çума пуçларĕ те пире çур сехет ытлашширех тытса тăчĕ. Вера хăйне савса тăрас пирки тупа тутармарĕ мана, хамăр уйрăлнăранпа ыттисене юратмарăн-и, тесе те ыйтмарĕ... Вăл мана ĕлĕкхи пекех шанать; çавăнпа эпĕ те ăна улталассăм çук; тĕнчере вăл маншăн хам улталама пултараймаи пĕртен пĕр хĕрарăм. Пĕлетĕп, эпир часах акă каллех уйрăлатпăр, тен, ĕмĕрлĕхех те пулĕ: иксĕмĕр те мĕн виличченех тĕрлĕ çулпа уйрăлса кайăпăр, çапах та эпĕ ăна çав тери ăшшăн аса илĕп; эпĕ ăна çакăн çинчен яланах каланă, çавăнпа вăл, хама ĕненсех каймасть пулин те, шанса тăрать.

Акă уйрăлтăмăр та эпир: вăл йывăç тĕмисемпе чул тусем хыçне пытаниччченех эпĕ ун хыççăн пăхса юлтăм. Малтанхи хут уйрăлнă чухнехи пекех, чĕрем ыратас пек тапать. Мĕн тери хĕпĕртерĕм эпĕ çак туйăмшăн! Çамрăклăх каллех хăйĕн симлĕ тăвăлĕсемпе таврăнасшăн мар-и ман патăма, е вăл, асăнмалăх, юлашки хут çаврăнса пăхса, юлашки парне хăварни çеç-и?.. Шухăшлама та кулăшла, пăхма эпĕ халь те ача, тейĕн: питĕм шуранкарах, çапах вăл таса-ха, кĕлеткем çепĕç те яштака, çăра кăтра çӳç явăнать, куçсем çунаççĕ, юн вĕрет...

Киле таврăнсан, эпĕ утăма утлантăм та çеçен хирелле вĕçтертĕм; йăлттам утпа çӳллĕ курăк çийĕн, пушă

хирти çиле хирĕç кустарса пыма юрататăп эпĕ, ырă шăршлă сывлăша антăхса çăтатăп вара, лайăхрах палӑракан япаласен тĕтреллĕ хĕррисене уйăрса илес тесе, минутсерен кăвак инçетелле пăхатăп. Чĕрене мĕнле хуйхă пуссан та, шухăша темĕнле инкек йывăрлатсан та, пурте пĕр самантрах иртсе каять, чĕрем çăмăл, ăспуç пăшăрханнине çан-çурăм ĕшенни çĕнтерет. Кăнтăрти хĕвелпе хĕрелнĕ кăтра ту тăррине курсан, кăвак пĕлĕте курсан е пĕр чул ту çинчен тепĕр чул ту çине сикекен юхан шыв сассине илтсен, эпĕ хĕрарăмсем çинчен пĕтĕмпех манса каятăп.

Хăйсен вышкисем çинче анаслакан казаксем мана, пĕр нушасăр та шухăшсăр çӳренине курсан, нимĕн калăма та аптăрарĕç пулĕ, тетĕп эпĕ, мĕншĕн тесен вĕсем мана, тумтирĕме кура, черкес вырăнне йышăнчĕç пулмалла. Чăнах та, черкес костюмĕпе ут çине утлансан, нумайăшĕ мана: эсĕ кабардинецсенчен те ытларах кабардинец пек, тетчĕç. Пулма та пултарать, çав пархатарлă тумпа эпĕ каснă-лартнă денди, пĕр галунĕ те ытлашши мар; хĕç-пăшалăма ытла тĕрĕлесе пĕтермен, çĕлĕкĕм ытла çăмламас мар, ытла кĕске çăмлă та мар; ноговицăсемпе пушмакăма шăпах юрăхлă тунă; бешметăм шурă, черкескăм йăлтăркка хăмăр. Горецсем ут çинче мĕнле ларса çӳренине пайтах сăнанă эпĕ. Хам та çавсем пекех ăста çӳренине ыттисем мухтасан, кăмăла уçма çук вара манăнне. Уй тăрăх пĕччен сĕтĕрĕнсе çӳреме кичем ан пултăр тесе, эпĕ тăвата лаша тытатăп: пĕри хам валли, виççĕшне тусăмсем валли; вĕсем ман лашасемпе хавасланса çӳреççĕ, анчах нихçан та манпа пĕрле каймаççĕ. Кăнтăрла иртни 6 сехет çитсен, эпĕ апат çиме вăхăт иккенне ас туса илтĕм; утăм ĕшенсе çитнĕччĕ; эпĕ Пятигорскран нимĕç колонине каякан çула тухрăм. Ку колоние шывпа сипленекенсен обществи час-часах пикнике çӳрет. Манăн çул йывăç тĕмисен хушшипе авкаланса тăсăлать, вăл çӳллĕ курăксен сулхăнĕнче шыв шарласа юхакан пĕчĕк шырлансене анса хăпарать; йĕри-тавра Бештау, Змеиная, Железная тата Кукша ту кăвак кӳмеркисем амфитеатр пек çĕкленсе тăраççĕ. Кунти чĕлхепе балкăсем текен шырлансенчен пĕрне ансан, эпĕ лашама шăварма чарăнтăм; çак хушăра çул тăрăх шавлă та чаплă кавалькадă кунталла килнине куртăм, хĕрарăмсем хура та кăвак амазонкăсемпе, каччисем вара черкессенни пек те мар, чул хуларисенни пек те мар,

темле тумтир тăхăннă; малта Грушницкий Мери княжнапа пырать.

Шывпа сипленекен хĕрарăмсем кăнтăр кунĕнчех халĕ те черкессем тапăнасран шикленеççĕ; çавăнпа пулĕ Грушницкий хăй шинелĕ çинчен хĕç те икĕ пистолет çакса янă, çав паттăрла тумпа вăл самаях кулăшла курăнать. Çӳллĕ йывăç тĕми мана вĕсенчен хупласа тăрать; анчах çулçă витĕр эпĕ вĕсене йăлтах куратăп, вĕсене пит-куçран пăхнипех калаçу ытла ачаш сăмахсемпе пынине тавçăрса илтĕм. Акă хайхисем шырлан хĕррине çитрĕç те, вĕсен сăмахĕсен вĕçне илтсе юлтăм:

— Эсир ĕмĕрлĕхех Кавказра юласшăн-и вара? — терĕ княжна.

— Мĕн иккен маншăн Российă? — тавăрчĕ ăна хирĕç Грушницкий,— вăл çĕршывра пин-пин çын хăйсем пуян пирки ман çине йĕрĕнсе пăхаççĕ, çав вăхăтрах кунта— кунта çак хулăн шинель те мана сирĕнпе паллашма чăрмантармарĕ...

— Чăрмантарма кăна та мар...— терĕ княжна, хĕрелсе.

Грушницкин пит-куçĕ çуталса кайрĕ. Вăл малалла сăмахларĕ:

— Кунта, тискер çынсен пулисем айĕнче, манăн пурнăç шавлăн та сисĕмсĕр, хăвăрт иртрĕ. Ман çине тура кашни çул пĕр хĕрарăма пĕр хут пăхтарсан, ун чухнехи пек пĕр хут...

Çав вăхăтра вĕсем ман тĕле çитрĕç, эпĕ лашама чăпăрккапа çапрăм та тĕмĕ хыçĕнчен вĕçтерсе тухрăм...

«Ах турă, черкес!..» — тесе кăшкăрса ячĕ княжна хăранипе.

Вăл тĕрĕс мар каланине пачах ĕнентерес тесе, эп. ăна кăшт тайăлса французла ответлерĕм:

— Ne cratgnez rien, madame, je ne suis pos plus dangereuh gne votre cavalier[1].

Хĕр нимĕн те калаймарĕ, анчах мĕншĕн? Йăнăшнипе-ши е манăн сăмах чăрсăрла пек туйăнчĕ-ши? Юлашки шухăшăм тĕрĕс пулнă пулсан юрĕччĕ. Грушницкий ман çине кăмăлсăр пăхса илчĕ.

Çĕрле, 11 сехет тĕлнелле, эпĕ бульварти çăка аллейине уçăлса çӳреме тухрăм. Хула çывăратчĕ, хăш-пĕр чӳре-

---

[1] Ан хăрăр, сударыньă,— хăвăр каччăртан ытлашши хăратакан çын мар эпĕ.

чесенче кăна çутăсем куранкалатчĕç. Машукпа сыпăннă чул тусен тăррисем виçĕ енчен курăнаççĕ. Машук тăр-ринче хаяра систерекен шурă пĕлĕт выртать, уйăх хĕвел-тухăçĕнче хăпарать, юрпа витĕннĕ тусем катаран кĕмĕл тĕслĕ çуталаççĕ. Часовойсем сасă пани çĕрле юхса вырт-ма уçнă вĕри çăл куçĕсен кĕрлевĕпе хутшăнать. Вăхăчĕпе урамра ут чупни те нагаец урапи чĕриклетни илтĕнет, тутарсен хурлăхлă юрри янрать. Тенкел çине лартăм та шухăша кайрăм... Тусăмпа калаçса, хамăн шухăшсене пĕлтерес килнине туятăп эпĕ, анчах кампа калаçас?.. «Мĕн тăвать халь Вера?» — тесе шухăшлатăп эпĕ... Çак самантра ун аллине чăмăртамалла пулсан, эпĕ темĕн тума та хатĕрччĕ.

Сасартăк эпĕ хăвăрт та тикĕс мар утнине илтетĕп... Грушницкий пулас... Чăнах та çавă!

— Аçтан?

— Лиговская княгиньă çуртĕнчен,— терĕ вăл питех те мăн кăмăллăн.— Мери тĕлĕнмелле юрлать иккен...

— Пĕлетĕн-и-ха? — терĕм эпĕ ăна: — вăл эсĕ юнкер иккенне пĕлмест, вăл сана пĕр-пĕр айăпшăн офицертан кăларнă çын вырăнне хурать...

— Пулма та пултарнă! Манăн ĕçĕм çук унта!..— терĕ вăл сӳрĕккĕн.

— Эпĕ ăна сăмахран çеç калатăп...

— Пĕлетĕн-и эсĕ ăна паян епле кӳрентернине? Ха-личчен илтмен чăрсăрлăх, тет ăна вăл; эпĕ вара, сан хутна кĕрсе, вăл питĕ лайăх воспитани илнĕ-çке, сире ним чухлĕ те кӳрентересшĕн пулмарĕ, тесе аран-аран ĕнентертĕм. Сана вăл тем пирки тăрăхласа пăхать, тет, хăйне питĕ пысăка хурать, тет.

— Вăл йăнăшмасть вара... Эсĕ тата унăн хутне кĕрес теместĕн-и?

— Халех ун хутне кĕме пултараймастăп çав-ха...

«Э-хе!— тесе шухăшласа илтĕм эпĕ:— Шанчăкĕ пур та пулас ĕнтĕ унăн...

— Тепĕр енчен илсен, вăл саншăнах начар,— терĕ малалла Грушницкий; — халь сана вĕсемпе паллашма йывăр пулать, хĕрхенетĕп сана! Чи кăмăллă çуртсенчен пĕри вĕт вăл...

Эпĕ ăшра кулса илтĕм.

— Чи кăмăлли вăл халĕ маншăн хамăн кил,— терĕм эпĕ, анасланă май, унтан кайма тесе тăтăм.

— Кала-ха тӳррипех, эсӗ хӑвна ху ӳпкелетӗн вӗт?..

— Мӗн кирлӗ мара калаҫатӑн! Каяс тесен, эпӗ ыран каҫхинех княгиньӑ патӗнче пулатӑп...

— Курӑпӑр...

— Ҫитменнине тата, сана лайӑх тӑвас тесе, княжна хыҫҫӑн та ҫӳрекелӗп...

— Вӑл санпа калаҫас тет пулсан...

— Сан сӑмах ӑна йӑлӑхтарса ҫитериччен ҫеҫ кӗтсе тӑрӑп эпӗ... Сывӑ пул.

— Эпӗ ҫӳрекелетӗп-ха кӑштах, халӗ тем парсан та ҫывӑраяс ҫук ӗнтӗ... Итле-ха, каяр-ха ресторацине, унта выляҫҫӗ вӗт... маншӑн халӗ вӑйлӑ туйӑмсем кирлӗ.

— Выляса яма сӗнетӗп сана... .

Эпӗ киле кайрӑм.

*Майӑн 21-мӗшӗ*

Пӗр эрнене яхӑн иртрӗ, анчах эпӗ Лиговскисемпе халӗ те паллашман-ха. Майлӑ вӑхӑт пуласса кӗтетӗп. Грушницкий, мӗлке пекех, княжна хыҫҫӑн йӗрлесе пурӗрте те ҫӳрет: вӗсем вӗҫӗмсӗр калаҫаҫҫӗ, хӑҫан вӑл ӑна йӑлӑхтарса ҫитерӗ-ши? Амӑшӗ ҫакӑн ҫине ҫаврӑнса та пӑхмасть, мӗншӗн тесен вӑл унӑн пулас кӗрӳшӗ мар. Ҫаплах шухӑшлаҫҫӗ те амӑшӗсем. Эпӗ вӑл ик-виҫ хутчен ӑшшӑн пӑхнине асӑрхарӑм,— кӑна пӗтерсе лартас пулать.

Ӗнер пусӑ патне Вера та пӗрремӗш хут пынӑччӗ... Гротра эпир тӗл пулнӑранпа вӑл килӗнчен те тухман. Стаканӑмӑрсемпе пӗр вӑхӑтрах шыв ӑсрӑмӑр та, вӑл мана пӑшӑлтатса каларӗ:

— Эсӗ Лиговскисемпе паллашасшӑн мар-и!.. Эпир пӗр-пӗрне унта ҫеҫ курма пултаратпӑр...

Ӳпкелешет!.. Йӑлӑхсах ҫитрӗм! Ҫапла ӳпкелешнине тивӗҫрӗм ҫав ӗнтӗ эпӗ.

Каласах хӑварам-ха: ыран ресторацире бал пулать, унта манӑн та пулмалла, эпӗ хайхи княжнапа мазуркӑ ташлатӑп.

*Майӑн 22-мӗшӗ*

Рестораци залӗ улпут таврашсен пухӑвӗ пулса тӑчӗ. 9 сехетре пурте пухӑнчӗҫ. Княгиньӑ хӑйӗн хӗрӗпе каярах юлса кӗчӗ, хӗрӗ питӗ чипер тумланма пӗлет те, хӗрарӑмсем ун ҫине пурте хапсӑнса пӑхаҫҫӗ. Хӑйсене кунти аристократсем тесе шутлакансем вара, хапсӑннине кӑтартас

мар тесе, ун тавра пухăнчĕç. Мĕн тăвас тейĕн çав? Хĕрарăмсем пур çĕрте тĕрлĕрен ушкăнсем пулаççĕ те, пуяннисем пĕр ушкăнра, чухăннисем тепринче. Чӳрече патĕнче, халăх хушшинче, Грушницкий тăрать, пит-куçне вăл кантăк çумнерех тытнă та пики çинчен куçне илмесĕр пăхса тăрать: ун умĕнчен иртнĕ чух пики ăна кăшт палăрмалла пуçне тайрĕ. Грушницкий хĕвел пек çуталса кайрĕ... Ташă пуçланчĕ, вальс каласа ячĕç. Шпорăсем чăнкăртатаççĕ, платйи аркисене çĕклентererех çаврăнма та тытăнчĕç.

Эпĕ пĕр тачка хĕрарăм хыçĕнче тăраттăм, вăл хăйне тĕрлĕрен тĕксемпе эрешлесе пĕтернĕччĕ, платйин капăрĕ фижмăсем тăхăннă вăхăта аса илтерет, путăклă ула-чăла ӳчĕ хура тафтаран тунă мушкăсен телейлĕ ĕмĕрĕнчен пек. Мăйĕ çинчи чи пысăк шĕпĕнне фермуарпа витнĕ. Вăл хăйĕн кавалерне, драгун капитанне, çапла калать:

— Çав Лиговская княжна тӳсме çук ирсĕр хĕрача! Шухăшлăр-ха, вăл мана тĕртрĕ те каçару та ыйтмарĕ, çинчен тата, каялла çаврăнса, ман çине лорнетпа пăхса илчĕ... Ку питех те лайăх мар!.. Мĕнпе мухтанать-ши вăл тата? Ăна вĕрентмеллеччĕ те пĕрре...

— Уншăн ĕç тăмĕ! — тесе тавăрчĕ те капитан—тепĕр пӳлĕме тухса кайрĕ.

Эпĕ тӳрех княжна патне пырса тăтăм; кунта пĕр палламан хĕрарăмсемпе те ташлама юрать иккен, çав йăлана кура, эпĕ ăна хампа пĕрле пĕр вальс ташлама чĕнтĕм.

Хĕпĕртенипе вăл савăнăçне аран-аран пытарса тăчĕ, çапах та хăйне часах алла илчĕ, вара вăл хăйне нимĕн те пулман пек тыткаларĕ. Аллине хул пуççийĕм çине хучĕ, пуçне кăштах аялалла чикрĕ те, эпир ташлама пуçларăмăр. Эпĕ çавăн пек çинçе пилĕклĕ те кĕрнеклĕ хĕре курман вара! Унăн уçă сывлăшĕ питĕмрен сĕртĕнет, урăм-сурăмăн вальс ташланă чухне хăш-пĕр уйрăлнă çӳç пайăркисем хутран-ситрен ман пĕçерекен пит тăрăх шăвăнаççĕ... Эпĕ виçĕ çаврăм ташларăм (вăл тĕлĕнмелле лайăх çаврăнать). Ташланă май хашкакан пулчĕ, куçĕ тĕттĕмленнĕ пек пулчĕ, çурма уçă тутипе вăл аран-аран: «Тавтапуç сире»,— тесе пăшăлтатрĕ.

Кăштах сăмах чĕнмесĕр тăнă хыççăн эпĕ, ытла йăваш пек пулса, унпа калаçрăм:

— Эсир мана палламастăр пулин те, эпĕ сире кӳрентеркелерĕм пулать, княжна... Эсир мана чăрсăр тесе шутланă теççĕ... чăнах та тĕрĕс-и вăл?

— Эсир мана халĕ те çавăн пекех шутлаттарас тетĕр-им? — тесе таварчĕ вăл, йĕкĕлтесе кулам пек туса. Çак вăхăтра унăн пит-куçĕ ытла та килĕшмелле курăнчĕ.

— Эпĕ сире мĕнле те пулин кӳрентерме хăйнă пулсан вара, каçару ыйтма хăймашкăн та ытларах ирĕк парсамăрччĕ мана... Вара эсир ман пирки йăнăш шухăшланине кăтартса та панă пулăттăм эпĕ, чăнах...

— Ана тумашкăн сире питĕ йывăр пулать.

— Мĕншĕн апла?..

— Мĕншĕн тесен эсир пирĕн пата çӳреместĕр, çакăн пек балсем час-часах пулас çук.

Ку ĕнтĕ вĕсен алăкĕ маншăн ĕмĕрлĕхех хупăннине пĕлтерет, тесе шухăшларăм эпĕ...

— Пĕлетĕр-и, княжна,— терĕм вара, кăштах кӳренсе,—хăйне хăй ӳпкелекен айăплă çынна нихçан та тĕртсе ямалла мар: тарăхнипе вăл тата икĕ хут ытла айăплăрах пулса кайма пултарать... Ун чухне вара...

Пирĕн тавра ытти çынсем кулкалани те пăшăлтатни ман сăмахăма вăхăтсăр татрĕ, эпĕ çаврăнса пăхрăм. Манран ик-виçĕ утăмра арçын ушкăнĕ тăрать, унта чипер княжна ятне яма килĕшнĕ драгун капитанĕ те пур; вăл темĕншĕн питĕ савăнать, аллине сătăркалать, ахăлтатса кулать, юлташĕсене куç хĕсет. Сасартăк вĕсен хушшинчен пĕр вăрăм мăйăхлă, хĕрлĕ питлĕ, çине фрак тăхăннă çын уйрăлчĕ те тӳрех княжна патнелле тайкаланса утса пычĕ: вăл ӳсĕрччĕ. Нимĕн калама пĕлмен княжнана хирĕç чарăнса тăчĕ те аллисене çурăм хыçнелле тытрĕ, пăтранчăк хăмăр куçĕпе ун çинелле пăхса, хăрăлтатакан çинçе сассипе:

— Пермете... ну, мĕн калаçмалли пур унта!.. Нимĕн те мар, сире мазуркă ташлама çеç чĕнетĕп...— терĕ.

— Мĕн кирлĕ сире? — тесе ячĕ хĕр чĕтрекен сассипе; хăй, хутне кĕме йăлăннă пек пулса, йĕри-тавра пăхса илчĕ. Амăшĕ таçта катараччĕ, çывăхра хăй паллакан кавалерсенчен пĕри те çукчĕ: пĕр адъютант çаксене йăлтах курчĕ пулас та, анчах çак историе хутшăнас мар тесе, çынсен хыçне пытанчĕ.

— Мĕн вара? — терĕ ӳсĕр çын, хăйне паллăсем парса хĕтĕртекен драгун капитанне куç хĕссе.— Кăмăл тумастăр-и тата?.. Эпĕ ĕнтĕ каллех сире мазуркă ташлама чĕнетĕп... Эсир мана ӳсĕр тесе шутлатăр пуль? Вăл темĕн мар!.. Ирĕкрех пулать, шантарсах калама пултаратăп сире...

Ытла сехĕрленнипе хĕр ăнсăр пулса ӳкме те пултаратчĕ.

Эпĕ ӳсĕр çын патне пырса тăтăм, ăна аллинчен çатăртаттарса тытрăм та, ун çине хыттăн пăхса, пăрăнма сĕнтĕм: «Мĕншĕн тесен,—хушса хутăм эпĕ,—княжна мазуркă ташласа тахçанах мана сăмах парсаччĕ»,—терĕм.

— Апла вара нимĕн тума та çук!.. Тепĕр чухне! — терĕ те вăл кулса ячĕ, унтан хăйĕн намăсланнă юлташĕсем патнелле утса кайрĕ, лешсем ăна çав самантрах урăх пӳлĕмелле çавăтса тухрĕç.

Княжна ман çине кăмăллăн та таранлăн пăхса илчĕ.

Амăшĕ патне пырса, ăна вăл пĕтĕмпех каласа пачĕ, лешĕ мана ушкăнра шыраса тупрĕ те тав турĕ. Вăл мана пĕлни çинчен те каларĕ, ман инкесемпе те пиллĕк-улттăшĕпе туслă пулнă вăл, имĕш.

— Епле пулма пултарнă-ха халиччен те эпир сирĕнпе паллашманни,— тесе хучĕ вăл,—тӳррипех калăр-ха, эсир хăвăр кăна айăплă-çке уншăн, пуринчен те пăрăнса çӳретĕр, ун пек туни вырăнсăр. Манăн çурт сывлăшĕ сирĕн кичемлĕхĕре сирессе ĕмĕтленетĕп эпĕ... Тĕрĕс мар-и?

Эпĕ вара çавăн пек вăхăт валли кашни çынах хатĕрлесе хунă сăмахсенчен пĕрне каларăм.

Кадрильсем калама çук вăрăма тăсăлчĕç.

Юлашкинчен мазуркă янраса кайрĕ; эпир княжнапа пĕрле лараттăмăр.

Ĕнтĕ ӳсĕр улпут çинчен те, иртнĕ вăхăтра хама мĕнле тытни çинчен те, Грушницкий çинчен те эпĕ пĕрре те асăнтармарăм. Киревсĕр сценă хыççăн именесси пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕнех сӳрĕлчĕ, унăн чечен пит-куçĕ çуталса кайрĕ, вăл питĕ кăмăллă шӳт тума пуçларĕ; сивчĕ каласас темесĕрех хăй вара сивчĕ калаçать, сăмахĕ чĕрĕ те ирĕккĕн юхать; хăш чух таран шухăшлах калаçать... Вăл мана тахçанах килĕшни çинчен эпĕ катаран кăна систерсе хутăм. Вăл пуçне тайрĕ те кăштах хĕрелсе кайрĕ.

— Эсир тĕлĕнмелле çын! — терĕ вăл кайран, хăйĕн бархатлă куçне ман çинелле çĕклесе, именсе кулнă май.

— Эпĕ сирĕнпе паллашасшăн марччĕ,— терĕм эпĕ малалла,— мĕншĕн тесен сире савакансем питех те нумай, эпĕ вĕсем хушшинче йăлтах çухалса каясран хăрасаттăм.

— Кăлăхах хăранă вара эсир! Вĕсем вĕт пурте ытла кичем çынсем...

— Пурте-и? Чăнах пурте-и?

Вăл, темĕн аса илесшĕн пулса, ман çине тинкерсе пăхрĕ, унтан каллех кăштах хĕрелсе кайрĕ те юлашкинчен вара татсах: — пурте! — терĕ.

— Манăн тусăм Грушницкий те-и?

— Вăл сирĕн тусăр-и вара? — терĕ вăл, ĕненмен пек пулса.

— Тусăм çав.

— Вăл кичем çынсен хисепне кĕмест те ĕнтĕ...

— Анчах телейсĕррисен шутне кĕрет, — терĕм эпĕ кулкаласа.

— Тĕрĕс те! Эсир кулатăр-и вара? Манăн сире унăн вырăнĕнче тытас килетчĕ...

— Мĕнех вара? Эпĕ хам та тахçан юнкер пулнă-çке. Çав вăхăт, чăнах та, пурнăçăмри чи лайăх вăхăтчĕ!

— Вăл юнкер-и вара? — терĕ те хĕр васкавлăн, унтан темĕн хушасшăн пулчĕ.— Эпĕ шухăшласаттăм...

— Мĕн шухăшласаттăрччĕ вара эсир?..

— Темĕн мар!.. Ку хĕрарăм кам тата?

Çакăнта пирĕн калаçу урăххи çине куçрĕ те Грушницкий çинчен урăх сăмах пулмарĕ.

Акă мазурккă пĕтрĕ, эпир уйрăлтăмăр — тепре курнăçиччен. Хĕрарăмсем килĕсене кайса пĕтрĕç... Эпĕ каçхи апата кайрăм та Вернера тĕл пултăм.

— Аха! — терĕ вăл: — Эсир апла иккен. Хăвăр тата княжнапа ăна вилĕмрен хăтарнă майпа çеç паллашас теттĕрччĕ.

— Эпĕ тата лайăхрах турăм,— тесе тавăртăм эпĕ ăна,— ячĕ каясран çăлса хăвартăм!..

— Мĕнле пулчĕ-ха вăл? Каласа парăр!..

— Çук, хăвăрах тавçăрса илĕр, эсир вĕт тĕнчере мĕн пуррине йăлтах тавçăраканскер!

*Майăн 23-мĕшĕ*

Каçхине, пĕр çичĕ сехет тĕлĕнче, эпĕ бульварта уçăлса çӳреттĕм. Грушницкий мана катаранах курчĕ те ман пата пычĕ: хĕпĕртенипе унăн куçĕсем темĕнле кулăшла йăлтăртатаççĕ. Вăл ман алла хыттăн чăмăртарĕ те трагикла сасăпа каларĕ:

— Тав тăватăп сана, Печорин... Ăнланатăн-и эсĕ мана?..

— Çук, анчах нимĕн пирки те тав тумаллиех çук,— терĕм эпĕ, кăмăлăмра нимĕнле ырă ĕç те тума çуккине кура.

— Мĕнле апла? Ĕнер вара? Эсĕ маннă та-и?.. Мери мана йăлтах каласа пачĕ...

— Мĕскер тетĕн? Эсир вара халĕ пурин пирки те пĕр сăмахра-и? Тав тăвасси те-и?

— Итле,— терĕ Грушницкий питĕ мăнаçлăн,— малашне те манăн тусăмах пулас тетĕн пулсан, тархасшăн эпĕ юратнинчен ан кул. Куратăн-и: эпĕ ăна ăнран кайичченех юрататăп... вăл та мана çавăн пекех юратать пулĕ, тесе шухăшлатăп, çапла пуласса шанса тăратăп... Манăн санран ыйтмалли пур: эсĕ паян каçхине вĕсем патĕнче пулатăн, пурне те асăрхăп тесе сăмах пар мана; эсĕ кунашкал япаласенче пултарнине пĕлетĕп эпĕ, эсĕ хĕрарăмсене манран лайăхрах пĕлетĕн... Хĕрарăмсем! Хĕрарăмсем! Кам ăнлантăр вĕсене! Вĕсен ăшă кулли куçпа пăхнине хирĕç тăрать, вĕсен сăмахĕсем шантараççĕ те илĕртеççĕ, сассисем вара сивĕнтереççĕ... Хăш чухне вĕсем пирĕн чи вăрттăн шухăша та самантрах тавçăрса илеççĕ, хăш чухне чи уççăн систернине те ăнланаймаççĕ. Акă княжнанах илес: ĕнер унăн куçĕ ман çинелле пăхсанах хĕрӳллĕн хĕмленетчĕ, паян темле тĕксĕм те сивĕ.

— Вăл шывпа сывалнинчен те килет пулĕ,— тесе тавăртăм эпĕ.

— Эсĕ кирек ăçта та начар енне çеç куратăн... материалист! — хушса хучĕ вăл йĕрĕнсе.— Ĕнтĕ урăххи çинчен калаçар,— унтан вăл хăй каланипе çырлахса савăнса кайрĕ.

Тăххăрмĕш сехетре эпир княгиньăсем патне пĕрле кайрăмăр.

Верăсен умĕнчен иртсе пынă чух эпĕ ăна чӳрече патĕнче куртăм. Пĕр-пĕрин çине кăштах пăхса илтĕмĕр. Вăл часах пирĕн хыççăн Лиговскаясен гостинăйне пырса кĕчĕ. Княгиньă мана унпа паллаштарчĕ, пирĕн хурăнташ, терĕ вăл, чей ĕçрĕмĕр; хăнасем нумай пулчĕç, пурте пĕрле калаçса ларчĕç. Эпĕ княгиньăн кăмăлне каясшăн пултăм, шӳт тукаларăм, темиçе хут ăна чĕререн култартăм; хĕрĕ те пĕр хутчен çеç мар куласшăн пулчĕ те, анчах пĕр йышăннă виçерен тухас мар тесе, хăйне хăй тăп тытса тăма пĕлчĕ вăл. Кулянарах ларни килĕшет тесе шутлать вăл, йăнăшмасть те пулĕ, тен. Эпĕ хама хаваслă тытни хĕре илĕртсех каймасть. Çакăншăн Грушницкий те питĕ савăнать.

Чей ĕçнĕ хыççăн пурте зала кĕтĕмĕр.

— Пёлсе тытатăп-и эпё хăма, Вера? — терём эпё ун умёнчен иртсе кайнă чух.

Вăл ман ҫине савса та тав туса пăхса илчё. Эпё ун пек пăхкаланине хăнăхса ҫитнё ёнтё, анчах ёлёк вăл маншăн ырлăхчё-ҫке. Княгиньă хăйён хёрне фортепьяно патне кёртсе лартрё, пурте унран мён те пулин юрласа парасса кётеҫҫё, эпё нимён те шарламарăм, шавланине пула, Верăпа пёрле чӳрече патне кайса тăтăм, вăл мана пире иксёмёре те хака тăракан хыпар пёлтерёп, тенёччё... Анчах нимён те тухмарё...

Эпё ҫапла пăрахса кайни княҫ хёрёшён лайăх мар пулчё, вăл ман ҫине пёр хутчен ҫиллес куҫпа пăхса илнинченех тавҫăртăм эпё ăна... Эх, ҫав сăмахсăр калаҫăва эпё тёлёнсе каймалла час ăнкаратăп-ҫке, кёске кăна пулать те вăл, пурин ҫинчен те лайăх пёлтермелле илтёнет!..

Хёр юрласа ячё: сасси унăн янравсăр та мар, хăй ҫапах та начар юрлать. Тӳррипе каласан, эпё ăна питех итлемерём те. Анчах Грушницкий вара чавсипе рояль ҫине таянсах ăна куҫпа ҫисе ярассăн пăхса тăчё, ҫурма сассипе вăл минутсерен ăна ҫапла калать:

— Итле-ха,— терё мана Вера,— эпё сана хам упăшкапа паллаштарасшăн мар, анчах санăн княгиньăна мёнле майпа та пулин килёшме тăрăшмалла, апла тумашкăн сана йывăр мар, мён кирлине пурне те тума пултаратăн вёт эсё. Эпир пёрле кунта ҫеҫ курнăҫăпăр.

— Ҫапла кăна-и?..

Вăл хёрелсе кайрё те малалла каларё.

— Эпё санăн чуру иккенне пёлетён вёт эсё, эпё нихҫан та сана хирёҫмен... ҫавăншăн мар... хамшăн марҫке; ҫавна ху та лайăх пёлетён! Тархаслатăп сана: пёр сăлтавсăр шанмасăр ан асаплантар мана, сивёнем пек пул, эпё часах вилетёп те пулё, кунран кун вăйсăрланса пынине сисетёп акă... ҫапах та эпё малашнехи пурнăҫ ҫинчен шухăшлама пултараймастăп, пёр сан ҫинчен кăна шухăшласа тăратăп. Эсир, арҫынсем, ăшă куҫпа пăхни епле савăнтарнине ăнланмастăр, алă пани мёнле хисепленине пёлейместёр... акă эпё тупа тусах калатăп, санăн сассуна пётём чун хавалёпе итлетёп эпё, ăна илтсен вара калама ҫук тарăн ырлăх туятăп, чи хёрӳллён чуп туни те ăна ҫитес ҫук.

Ҫав хушăра Мери юрлама чарăнчё. Ăна мухтанă сасăсем илтёнсе кайрёҫ; эпё ун патне puринчен кайран

пырса тăтăм та унăн сасси пирки çапла темĕн иртĕнерех каласа хутăм.

Тутине вăл йĕрĕннĕ пек туре, пуçне пăркаларĕ те, виртлем пек туса, кăшт кукленсе илчĕ.

— Пит те лайăх-ха эсир çапла калани,— терĕ вăл,— мĕншĕн тесен эсир эпĕ юрланине нимĕн те итлемерĕр; музыкăна, тен, юратсах каймастăр пулĕ?..

— Эпĕ-и? Пит те юрататăп!.. Пуринчен ытла кăнтăрлахи апат хыççăн.

— Грушницкий тĕрĕс калать иккен, сирĕн туйăм ытла та мăка тесе... хамах куратăп акă, эсир музыкăна гастрономи енĕпе çеç юрататăр пулас.

— Каллех те йăнăшатăр-ха эсир: эпĕ гастроном мар, манăн вар-хырăм ытла начар ĕçлет. Анчах музыкăна итлени кăнтăрлахи апат хыççăн çывăрттарать, апат хыççăн çывăрни вара сывлăхшăн усăллă, çапла эпĕ музыкăна медицинă енĕпе юрататăп. Акă каçхине урăхла пулать, каçхине вăл манăн нервăсене канăç памасть; мана вара ытла кичем пусать-и е ытларах хаваслнатăп-и. Кичемленмешкĕн те, хавасланмашкăн та сăлтав çук пулсан, вăл та, ку та ывăнтарать, çинчен тата хăвна кичем тытни çын хушшинче ытла кулăшла тухать, ытлашши савăнни те лайăх мар...

Вăл итлесе пĕтермесĕрех аяккалла пăрăнчĕ, Грушницкий патне ларчĕ те, вĕсен хушшинче вара темĕнле калаçу пуçланчĕ: княжна унăн çаврăнăçлă сăмахĕсене хирĕç пăтранчăк сăмахсемпе тавăрчĕ пулмалла, хăй çав вăхăтрах тимлĕн итлем пек турĕ: Грушницкий, вăл мĕншĕн пăшăрханса пăхнине, мĕншĕн унăн чĕри вăрканине пĕлесшĕн пулса, ун çине тĕлĕнсе пăхкаларĕ.

Анчах сирĕн шухăшăра тавçăрса илтĕм эпĕ, чипер пике, сыхланăр! Эсир мана çавăн пекех тавăрасшăн иккен-ха, чĕрре кĕретĕр, ĕç тухаймĕ сирĕн! Эсир мана хирĕç вăрçă пуçлатăр пулсан, эпĕ те хĕрхенўсĕр кĕрешĕп.

Каç иртиччен эпĕ темиçе хут та вĕсем калаçнă çĕре юри хутшăнма тăтăм, анчах пике ман çине самаях сивĕн пăхкаларĕ, юлашкинчен, эпĕ, хама кичем пулнă пек туса, пăрахса кайрăм. Княжна хĕпĕртет; Грушницкий те çавăн пекех. Хĕпĕртĕр-ха, тусăмсем, васкасах хĕпĕртĕр... сирĕн хĕпĕртесси нумай юлмарĕ. Мĕн тăвар ĕнтĕ? Манăн малтан сисесси пур... Хĕрарăмпа паллашсан эпĕ кирек

[1] Тĕлĕнмелле! Чипер!

хăçан та вăл мана юратассине е юратас çуккине пĕр йăнăшмасăр туятăп...

Kaçăн юлашки пайне эпĕ Верăпа пĕрле ирттертĕм, ĕлĕкхи çинчен тăраниччен калаçрăм вара... Мĕншĕн вăл мана ытла та юаратать-ши, нимĕн те пĕлместĕп! Çитменнине тата вăл мана, пĕтĕм чăркăшлăхăма, манăн мĕн пур усал енĕмсене пĕтĕмпех пĕлсе çитнĕ хĕрарăмсенчен пĕри-çке... Чăнах та, усалли çав таранах кăмăла каятьши вара?..

Эпир Грушницкипе пĕрле тухрăмăр, урамра вăл мана алăран тытрĕ те нумайччен пĕр чĕнмесĕр пынă хыççăн:

— Ну, мĕн калăн? — терĕ.

«Эсĕ ухмах», тесшĕнччĕ эпĕ ăна хирĕç, анчах каламасăр тӳссе тăтăм, хул пуççийĕме кăна хĕскелесе илтĕм.

*Майăн 29-мĕшĕ*

Çав кунсенче эпĕ хам йышăннă йăларан пĕрре те пăрăнмарăм. Княжнана манăн калаçу кăмăла кайма тытăнать,— эпĕ ăна хамăн пурнăçра пулса иртнисем çинчен калакаласа патăм та, вăл мана тĕлĕнмелле çын вырăнне шутлама пуçларĕ. Эпĕ тĕнчере пуринчен те кулатăп, уйрăммăнах тĕрлĕ туйăмсенчен; çакă ăна хăратма та тытăнать. Вăл ман умра Грушницкипе çепĕç калаçу пуçарма хăяймасть, çавăнпа вăл Грушницкий хăтланчăшĕнчен темиçе хут та тăрăхласа кулкаларĕ, Грушницкий ун патне пырса тăрсанах эпĕ йăвашшăн пăхнă пек тăватăп та вĕсене иккĕшне çеç хăваратăп; малтан хĕр уншăн хĕпĕртерĕ те, е хĕпĕртенĕ пек кăтартасшăн кăна пулчĕ-и вăл, унтан хайхи мана çилленчĕ, каярахпа Грушницкие çилленсе çитрĕ.

— Эсир хăвăра хисеплесех каймастăр! — терĕ вăл мана ĕнер. Мĕн пирки эсир мана Грушницкипе хаваслăрах пулать тесе шутлатăр?

— Тусăм телейĕшĕн хамăн ырлăха сĕнетĕп сана,— терĕм эпĕ.

— Манăнне те сĕнетĕр иккен,— тесе хушса хучĕ вăл.

Ун çине тинкерсе пăхрăм та эпĕ сăмах хушмарăм. Унтан вара кунĕпех унпа пĕр сăмах та калаçмарăм. Kaçхине вăл темĕн ытла шухăшлăччĕ, паян ирпе пусă патĕнче тĕл пулсан вăл мана тата шухăшлăрах пек курăнчĕ. Эп ун патне пынă чух Грушницкие сӳрĕккĕн итлетчĕ вăл, лешĕ юри çутçанталăкпа савăнатчĕ пулас, анчах хĕр мана курчĕ те, асăрхаман пек пулса, хыттăн кулма

тытăнчĕ (питех те вырăнлă пулмарĕ). Эпĕ аяккарах кайса тăтăм та ун хыççăн вăрттăн пăхкалама тытăнтăм: вăл хăйпе калаçаканнинчен çаврăнса тăчĕ, икĕ хутчен анаслаcа илчĕ. Грушницкий чăннипех йăлăхтарса çитернĕ ĕнтĕ ăна. Тата икĕ кун калаçам мар-ха унпа.

*Июнĕн 3-мĕшĕ*

Час-часах хамран ыйтатăп вара: мĕншĕн ытла çине тăрса çав çамрăк хĕрĕн юратăвне тупасшăн çунатăп-ха, ăна улталасшăн та мар-çке, качча та илес çук ăна эпĕ? Мĕне кирлĕ-ши вара ун пек ейкеленни? Вера мана пур пĕрех лайăхрах савать, княжна нихçан та Вера чухлĕ савас çук; вăл маншăн никам çĕнтерейми сар пике пек туйăнсан, эпĕ ăна çавăрма йывăр пулать тенипе çеç интересленнĕ пулăттăм...

Анчах нимĕн чухлĕ те çавăншăн мар! Эппин канăçсăр юратас туртăм мар ĕнтĕ ку: вăл пире çамрăк яшă çулĕсенче çеç асаплантарать, хамăра тӳсме пултарайман хĕрарăм шыраса тупиччен пĕр хĕрарăмран тепĕр хĕрарăм патне пăрса ярать вăл: вара эпир пĕр хĕрарăма çеç юратма пуçлатпăр — чăн-чăн, вĕçĕмсĕр юрату пуçланать, математикă енĕпе илсен, ăна эпир лĕр пăнчăран тĕнче тăрăх тӳрремĕн ӳкекен йĕр пек туса кăтартнă пулăттăмăр; çав йĕрĕн вĕçне çитмешкĕн пур пĕрех май çук.

Мĕншĕн тăрăшатăп-ха эппин эпĕ? Грушницкирен кĕвĕçнипе-и? Мĕскĕн! Эпĕ хапсăннине вăл ним чухлĕ те тăмасть. Е ку çывăх çын техĕмлĕн аташнине пĕтерсе хума тĕртекен ирсĕр те ниепле майпа çĕнтермелле мар сисĕм-ши? Вăл нимĕн тума пĕлменнипе: манăн мĕне ĕненмелле ĕнтĕ, тесе ыйтсан, эпир ăна çапла каласшăн вара:

— Тусăм, манпа çавăн пекех пулнă! Çапах та эсĕ куратăн акă, эпĕ вăхăтра апатланатăп, вăхăтра лăпкă çывратăп, кăшкăрмасăр та куççуль тăкмасăр вилессе шанатăп!

Çамрăк та чечен чуне, чечеке ларса сарăлма çеç пуçланă чуна хăвăн çумна çывхартнинче ытармалла мар киленӳ пур çав! Вăл, ирхи хĕвелĕн пирвайхи пайăркине хисеплесе, хăйĕн чи ырă шăршине сарса яракан чечек пек; çак самантра татмалла та ĕнтĕ çак чечеке, унăн пылакне чун саванниччен çĕтатăн та унтан вара çул çине кăларса пăрахатăн: кам та пулин илĕ те-и çавна. Эпĕ хам ăшăмра тăрана пĕлми непсĕм пуррине туятăп, çул

ҫинче мĕн тĕл пулнине йăлтах хыпса ҫăтатăп: ҫынсем асапланнипе савăнни ҫине эпĕ хам кăмăлăма ҫырлахтарас тесе кăна пăхатăп, хам чун хавалне упраса усрама пулăшакан ҫимĕç ҫине пăхнă пек пăхатăп. Чун-чĕрери хĕрӳ туйăмсене пула ăнран кайиччен алхасма пултараймастăп ĕнтĕ эпĕ; чыслăха юратнăран кун-ҫулра пулнă сăлтавсем кăмăлăма пусарса хучĕç, анчах вăл урăхла майпа палăрчĕ, мĕншĕн тесен чыслăха юратни вăл нимĕн те мар, влаҫшăн хыпса ҫунни кăна, ман кăмăла кӳме вара чи малтанах хам таврара мĕн-мĕн пуррине йăлтах хама пăхăнтарни кирлĕ, хама юраттарнине хускатмалла, пĕтĕмпех парăнтармалла, хăратса тăмалла— ҫакă мар-и вара влаҫăн чăн аслă тупсăмĕ? Нимĕн тивĕçсĕрех эпĕ камăн та пулин асапне е савăнăҫне кӳрекен сăлтав пулса тăрасси — пирĕн мăн кăмăллăхăн чи сĕтеклĕ ҫимĕçĕ мар-и-мĕн? Эппин мĕн-ха вара телей? Тăраннă мăн кăмăллăх. Эпĕ хама хам тĕнчери ҫынсенчен пуринчен те лайăхрах та пултаруллăрах тесе шутланă пулсан, телейлĕ пулнă пулăттăм; хама пурте юратнă пулсан, эпĕ хамра иксĕлми юрату хăватне тупнă пулăттăм. Усал япала усаллинех ҫуратать, чăн пирвай асапланса курни тепĕрне асаплантарнинче мĕнле савăнăç пуррине ăнланма пулăшать; усал ĕç тăвас шухăш ҫын пуҫне ахальтенех пырса кĕме пултараймасть, унпа пурнăҫра усă курас тенипе кăна пулать вăл; шухăшсем вĕсем — пурнăҫран килнĕ япаласем тенĕ тахăшĕ: вĕсем ҫурални вĕсене формă парать, ҫав формă вара ĕçе кĕресси пулса тăрать; кам пуҫĕнче ытларах шухăш ҫуралать, ҫавăн ĕçĕ те ыттисенчен ытларах пулать; ҫакна пула чиновник сĕтелĕ ҫумне сăнчăрланнă гени вилет-и е ухмаха тухать-и, ҫавăн пекех акă маттур та тулли вăй-хăватлă этем, пĕр май лăпкăн пурăнса, шалкăм ҫапнипе вилсе каять.

Чун-чĕрен хĕрӳ туйăмĕ те ҫавах, вăл шухăш пуҫланса аталаннине пĕлтерет: вĕсем ҫамрăк чĕре хăнисем, кам та пулин, вĕсене пула, ĕмĕр тăршшĕпех вĕчĕрхенсе пурăнма шухăшлать пулсан, ҫавă вара айван ăслă этем; лăпкă юхан шывсем нумайăшĕ кĕрленкĕрен пуҫланса каяççĕ, анчах мĕн тинĕсе ҫитиччен вĕсенчен пĕри те кĕрлесе те кăпăкланса юхмасть. Ҫав сăпă лăпкăлăх час-часах вĕсенче пытанса тăракан чакми вăй пуррине ҫеç кăтартать; тулли те тарăн сисĕмсемпе шухăшсем урса каймалла май ҫĕкленмеççĕ: чун тени вăл асапланса, киленсе курнă хушăрах хăй ĕçне хăй питĕ аван пĕлсе тăрать,

чăн та çапла пулма кирлине тата та çирĕпрех ĕненет; аслатиллĕ çумăр пулмасан, хĕвел хĕртнипе хăй типсе кайма пултарнине чухлать вăл, хăйĕн пурнăçĕнче вырнаçать,— мĕн тăвас тенине тăвать, хăйне хăй, пĕчĕк ачана тивĕçлĕн айăпланă пек, айăпласа ĕçе кĕртет вăл. Çавăн пек çӳле çĕкленсе хăйне хăй тĕплĕн ăнланса çитсен çеç этем тени туррăн чăн тӳрĕлĕхне хаклама пултарать.

Çак страницăна çине-çинех вуласа тухнă май эпĕ хам тĕп шухăшăмран ытла аякка пăрăннине асăрха пуçларăм... Мĕнех эппин тата? Ку журнала хам валли кăна çыратăп-çке-ха эпĕ, апла пулсан, кунта мĕн-мĕн çырса хăварни йăлтах, пурте, ӳлĕм маншăн хаклăран та хаклă аса илӳсем пулĕç.

. . . . . . . . . . . .

Грушницкий килчĕ те мана мăйран ыталаса илчĕ,— ăна офицера кăларнă. Эпир шампански ĕçрĕмĕр. Ун хыççăнах Вернер доктор кĕчĕ.

— Эпĕ сире ырă сунмастăп,— терĕ вăл Грушницкие.

— Мĕншĕн?

— Мĕншĕн тесен салтак шинелĕ сире питех те килĕшет, çавăнпа тӳррипех калар, кунта, шывпа сывалнă çĕрте, çĕлетнĕ армейски пехотнăй мундир сире пур пĕрех тĕлĕнтерекен çын тăваймасть. Эсир ыттисенчен пачах уйрăмччĕ, халĕ вара ыттисемпе пĕрех пулса тăтăр.

— Калаçăр, калаçăр, доктор! Эсир мана хĕпĕртеме чăрмантармастăр. Вăл пĕлмест-ха,— терĕ мана Грушницкий хăлхаран,— çав эполетсем мана мĕн чухлĕ шанчăк панине... Эх, эполетсем, эполетсем! Сирĕн çăлтăрăр, çул кăтартакан çăлтăрсем... Çук! эпĕ халь калама çук телейлĕ.

— Эсĕ пирĕнпе провал патне уçăлса çӳреме пыратăн-и? —тесе ыйтрăм эпĕ унран.

— Эпĕ-и? Мундир хатĕр пуличчен тем парсан та княжнан куçĕ умне курăнмастăп.

— Савăнăçу çинчен пĕлтерме хушмастăн-и ăна?

— Çук, тархасшăн ан кала... Эпĕ ăна тĕлĕнтересшĕн...

— Çапах та, кала-ха мана, сан ĕçӳсем мĕнле пыраççĕ унпа?

Вăл нимĕн калама та пĕлмерĕ, шухăша кайрĕ: мухтанасси те килчĕ унăн,— иментерет те, чăннине каласа пама намăс.

— Мĕнле шутлатăн эсĕ, юратать-и вăл сана?..

— Юратать-и? Итле-ха, Печорин, епле ăнланатăн эсĕ!.. Мĕнле çав тери хăвăрт пулма пултарать вăл? Ытах, юратать пулсан та, йĕркеллĕ хĕр ăна каласа памасть ĕнтĕ...

— Питĕ лайăх! Эппин, йĕркеллĕ çын хăйĕн юратăвĕ çинчен шарламалла мар, çапла-и?..

— Эх, тăванăм! Пурин те хăйĕн йĕрки пур-çке; нумайăшне сăмахпа каламаççĕ, тавçăрса кăна илеççĕ...

— Чăнах та... анчах куçран пăхса курăнакан юрату хĕрарăмшăн нимĕн те мар вăл, сăмахпа калани вара... Сыхлан, Грушницкий, шахвăртать вăл сана...

— Вăл- и? — тесе тавăрчĕ вăл, куçне пĕлĕтелле çĕклетсе, хăй кăмăлĕ тулнипе кулкаласа.— Хĕрхенетĕп эпĕ сана, Печорин!..

Вăл кайрĕ.

Каçхине темĕн чухлĕ халăх çыран патĕнчи провал патне тухса кайрĕç.

Кунти ученăйсен шухăшĕпе ку провал тахçан сӳннĕ кратер пулнă имĕш, урăх ним те мар; вăл Машук сăвекĕнче, хуларан пĕр çухрăмра тăрать. Ун патне йывăç тĕмисемпе чулсем хушшинчи тăвăр кăна сукмакпа каймалла; ту çине улăхнă чух эпĕ княç хĕрĕн аллине тытрăм, вăл вара мĕн уçăлса çӳресе таврăничченех хăй аллине вĕçертмерĕ.

Пирĕн калаçу тӳрмен сăмахран пуçланчĕ: эпĕ кунта кам килнĕ те кам килмен тесе паллана çынсене суйлама тытăнсаттăм, малтан вĕсен кулăшла енĕсене, унтан усал енĕсене кăтартса патăм. Юнăм вĕресе хускалчĕ манăн, кулкаласа çеç пуçланăскере чĕререн тарăхса пĕтермелле пулчĕ. Малтан ку уншăн вăйă пек кăна туйăнчĕ, кайран хăратсах пăрахрĕ.

— Эсир хăрушă çын! — терĕ вăл мана.— Эпĕ сирĕн чĕлхӳ тĕлне пуличчен вăрманти çын вĕлерен çĕççи айне пулнă пулăттăм... Чăннипех калам-ха сире: хăçан та пулин сирĕн ман çинчен усал сăмахпа калас килет пулсан, çĕçĕ илĕр те пусăр мана эсир,—ку сирĕншĕн питех йывăр пулас çук пуль тетĕп.

— Эпĕ çын вĕлерекен пек-и вара!..

— Унтан та ытларах...

Пĕр самантлăха шухăша кайрăм та ун сăмахне чĕрене илнĕ пек пулса каларăм.

«Чăнах та, манăн телейĕм мĕн ачаранпах çавăн пек

пулнă çав. Пурте ман куçăмра нихçан пулман усал йăла йĕрĕсем шыранă; çавсем пур пулĕ тесе те шутланă, пыра киле вĕсем пула та пуçланă. Тахçан эпĕ йăвашчĕ — мана юла юпать тесе айăпларĕç: эпĕ вара шухăшăма пытарса тăракан пултăм. Ырăпа усала та эпĕ чĕреренех туйса тăнă; мана никам та ачашламан, пурте кÿрентеретчĕç, эпĕ вара усала ас туса тăракан пултăм; эпĕ тĕксĕмччĕ, ытти ачасем хавасланатчĕç те çатăлтататчĕç; эпĕ хама вĕсенчен çÿлерех тăратăп тесе шутлаттăм,—мана кайрах тăрататчĕç, эпĕ хапсăнакан пулса кайрăм. Пĕтĕм тĕнчене юратма хатĕрччĕ эпĕ,— мана никам та ăнланаймарĕ: эпĕ хайхи курайми пулма вĕрентĕм. Манăн тĕссĕр çамрăклăх хампа тата обществăпа кĕрешнипех иртсе кайрĕ; çын куласран хăраса, эпĕ хамăн чи лайăх сисĕмĕмсене чĕре тĕпне пытараттăм; вĕсем унтах вилчĕç. Чăннипе калаттăм эпĕ — мана ĕненместчĕç: эпĕ улталама вĕрентĕм; эпĕ светпа обществă пускăчисене лайăхрах пĕлсен, пурнăç йĕркине ăста пĕлсе çитрĕм, хăватăма çухатса та тăрăшса илекен хам тупăша ыттисем нимĕн тăрăшмасăрах, ăсталанмасăрах илетчĕç, вĕсем телейлĕ пулнине кураттăм. Вара манăн кăкăра тарăху кĕре пуçларĕ; пистолет кĕпçипе сыватмалли тарăху мар, вашаватлăхпа, ырă кăмăллă кулăшпа витĕнекен сивĕ те халсăр тарăхниччĕ вăл. Кăмăлăм чăлах пулса тăчĕ манăн, чĕремĕн çур пайĕ пурăнаймарĕ, типсе те хăрса, пăнтăхса ларчĕ, вилчĕ вăл, эпĕ ăна касса илтĕм те ывăтрăм, çав вăхăтрах тепĕр пайĕ хусканатчĕ-ха, кашни çынна усă кăтартасшăн пурăнатчĕ, çавна вара никам та асăрхаймарĕ, мĕншĕн тесен унăн пĕтнĕ çур пайĕ çинчен никам та пĕлмерĕ, анчах акă эсир мана ун çинчен аса илтертĕр те, эпĕ сире ун эпитафине[1] вуласа патăм. Пĕр сăмахпа каласан, нумайăшне эпитафисем кулăшла пек туйăнаççĕ, маншăн апла мар, вĕсен айĕнче мĕн выртнине аса илсен, эпитафисем вĕсем кулăшла пулмаççĕ. Эпĕ сире хамăн шухăша хисепсĕр теместĕп: енчен вăл сирĕншĕн кулăшла пек туйăнсан, кулăрах тархасшăн; тепĕр хут та калам сире, вăл мана нимĕн чухлĕ те кÿрентерес çук.

Çав самантра унпа куçма куç пултăмăр: унăн куççуль сăрхăнчĕ: алли манăн алă çине тĕреннĕ май чĕтренсе илчĕ: пит çăмартийĕ çунать; вăл хĕрхенет мана! Хута кĕрес тенĕ пек туйăм пур хĕрарăмсене те çав тери çă-

[1] Эпитафи — тупăк çине çырни.

мăллăн парăнтараканни унăн пиçĕхсе çитмен чĕрине кĕрсе кайрĕ. Уçăлса çӳренĕ вăхăтра та вăл хăйне сӳрĕк тытрĕ, никам умĕн те авкаланмарĕ, ĕнтĕ çаках темĕн çинчен те калать!

Эпир провал патне çитрĕмĕр; хĕрарăмсем хăйсен кавалерĕсенчен уйрăлчĕç, анчах вăл ман алла çапах вĕçертмерĕ. Кунти шукăльсен. çивчĕ сăмахĕсем култармарĕç ăна; чăнкă сакăлтак патĕнче тăни те хăратмарĕ, çав вăхăтрах ытти пикесем вара çухăраççĕ те куçĕсене хупаççĕ.

Каялла таврăннă чухне эпĕ хамăн кичем калаçăва пуçармарăм; манăн нимĕне пĕлтермен ыйтусемпе вак-тĕвек шӳтлени çине вăл кĕскен те сӳрĕккĕн таварса пычĕ.

— Савнă-и эсир кама та пулин? — тесе ыйтрăм эпĕ унран юлашкинчен.

Вăл ман çине кăн пăхрĕ те пуçне пăркаларĕ — унтан каллех шухăша кайрĕ; ĕнтĕ темĕн калас килетчĕ те унăн, мĕнрен пуçламаллине кăна пĕлмерĕ; ăшĕ вăркарĕ унăн... Мĕн тумалла ĕнтĕ? Вĕлтĕрке çанă начар хӳтлĕх çав, çавăнпа электричествă хĕмĕ манăн аларан ун аллине куçрĕ; юрату пурте çапла пуçланать темелле, çавăнпа эпир час-часах ултава та кĕретпĕр — хĕрарăмсем пире хамăр сывлăхшăн та тӳрĕ кăмăлла пулнăшăн юратаççĕ тесе; паллах ĕнтĕ, çав енсем пире таса вут-хĕм йышăнмашкăн унăн чĕрине çавăраççĕ, хатĕрлентереççĕ, тейĕпĕр, çапах та, ĕçĕ пĕрремĕш хут сĕртĕнни кăна татса парать.

— Эпĕ паян сирĕнпе питех те кăмăллă пултăм, çапла мар-и? — терĕ мана хĕр каялла таврăннă чухне кулкаласа.

Эпир уйрăлтăмăр.

Вăл хăйне хăй йывăра илет ĕнтĕ; вăл хăйне манпа сивĕрех пулнăшăн хăйнех ӳпкелет... Э, ку вара малтанхи чи пысăк савăнăç! Ыран вăл мана ырă кăтартасшăн пулĕ акă, çавăн пек пуласса эпĕ пăхмасăрах курса тăратăп-çке, çавăнпа кичем те.

*Июнĕн 4-мĕшĕ*

Паян эпĕ Верăна куртăм. Вăл мана кӳлешнипе тарăхтарса çитерчĕ. Княжна ăна хăйĕн чĕрери чи çывăх сăмахне шанса калама шутланă пулас: тӳррипех каламалла, тупнă та иккен кама каласа пама!

— Ĕç ăçталла туртнине чухлатăп эпĕ, — терĕ мана Вера. — Тӳррипех каласа пар ĕнтĕ мана, эсĕ ăна юрататăн вĕт?

— Эпĕ ăна юратмастăп пулсан вара?

— Апла пулсан, мĕншĕн ăна эсĕ йĕрлетĕн, пăшăрхантаратăн, мĕншĕн ăшне вăркататăн унăнне!.. Эх, эпĕ сана лайăх пĕлетĕп! Итле-ха, енчен эсĕ мана ĕнентерес тетĕн пулсан, эрнерен Кисловодска пыр; ырантан тепĕр кунне эпир унта куçатпăр. Княгиньă пăртаклăха кунта юлатьха. Хваттерне юнашар ил; эпир çăл патĕнчи пысăк çуртра, мезонинра пурăнатпăр, аялта Лиговская княгиньă пулать, çав çурт хуçийĕнех тепĕр çурт пур, çавăнпа юнашар, ăна йышăнман-ха халь... Пыратăн-и?

Эпĕ пыма пултăм та çав кунах вăл хваттере йышăнма çын ятăм.

Каçпа,ултă сехетре, Грушницкий ман пата пычĕ, хăйĕн мундирĕ ыран шăпах бала кайма хатĕр пуласси çинчен пĕлтерчĕ.

— Тинех ĕнтĕ эпĕ унпа çĕрĕпех ташлăп... Вăт тăраниччен калаçăп ĕнтĕ! — тесе хушса хучĕ вăл.

— Балĕ хăçан вара?

— Ыран-çке! Пĕлместĕн-и? Пысăк уяв, ăна ирттерме кунти начальниксем хăйсем çине илнĕ...

— Кайрăмăр бульвара...

— Тем парсан та ку ирсĕр шинельпе каймастăп...

— Епле апла, эсĕ ăна юратми те пултăн-и?..

Эпĕ пĕчченех кайрăм та, Мерине тĕл пулса, ăна мазуркă ташлама чĕнтĕм. Вăл тĕлĕннĕ пек пулче, савăнчĕ те пулас.

— Эсир, хай, пĕркунхи пек, кирлĕ чухне çеç ташлатăр пулĕ тенĕччĕ эпĕ,— терĕ вăл кăмăллăн кулкаласа...

Грушницкий çуккине пачах та асăрхамасть пулас вăл.

— Ыран эсир хĕпĕртесе тĕлĕнетĕр-ха,— терĕм эпĕ ăна.

— Мĕнрен?..

— Ăна калама юрамасть... Балра эсир хăвăрах тавçăрса илĕр.

Эпĕ каçа княгиньă патĕнче ирттертĕм; Верăпа пĕр кулăшла стариксĕр пуçне хăнасенчен урăх никам та пулмарĕ. Кăмăлăм уçăлнипе эпĕ нимĕн хатĕрленмесĕрех тĕрлĕрен тĕлĕнмелле историсем каласа патăм: княжна мана хирес ларнă та эпĕ сўпĕлтетнине тарăннăн тимсĕлсе те ачашшăн итлесе ларать, çавăнпа манăн именмелле те пулчĕ. Аçта кайса кĕчĕ-ши унăн лара-тăра пĕлменни,

чеченленни те йӑлӑнтарасси, ӑҫта ҫухалчӗ-ши унӑн чӑрсӑр пӑхасси те йӗрӗнсе куласси?..

Вера ҫаксене йӑлтах асӑрхарӗ; унӑн чирлӗ питне тарӑн кулянӑ пуснӑ; вӑл чӳрече патӗнче мӗлке ӳкнӗ ҫӗрте сарлака креслӑ ҫинче ларать... Эпӗ ӑна ытла хӗрхентӗм...

Вара эпӗ хам Верӑпа епле паллашнине, юратӑвӑн пӗтӗм драмӑллӑ историне каласа кӑтартрӑм, ячӗсене пурне те шухӑшласа кӑна кӑларнӑччӗ.

Хамӑн ҫепӗҫлӗхе, хамӑн ӑш вӑрканине, хавасланнине ҫав тери чӗррӗн кӑтартса патӑм; унӑн характерне, вӑл мӗн тунисене ҫав тери лайӑх енчен кӑтартса патӑм та, унӑн вара ирӗксӗрех эпӗ княжнапа ытла ҫепӗҫленсе каласнине каҫармалла пулчӗ.

Вӑл ура ҫине тӑчӗ, пирӗн пата пырса ларчӗ... эпир вара докторсем хамӑра вун пӗр сехетре ҫывӑрма хушнине ҫур ҫӗр иртсен икӗ сехетре тин аса илтӗмӗр.

*Июнӗн 5-мӗшӗ*

Бал пуҫланиччен пӗр ҫур сехет малтан ман пата армейски пехотнӑй мундирне ялкӑштарса Грушницкий пырса кӗчӗ. Виҫҫӗмӗш тӳми ҫумне йӗс вӑчӑра ҫаклатса янӑччӗ, ун ҫине икӗ хутлӑ лорнет ҫакнӑ; калама ҫук пысӑк эполечӗсене амур ҫунаттисем пек туса, ҫӳлелле тавӑрнӑ; атти чӗриклетет, сулахай аллине хӑмӑр лайковӑй перчеткипе карттусне тытнӑ, сылтӑмӗпе кӑтралатнӑ ҫӳҫ пайӑркине самантсерен тӳрлеткелесе илет. Ун пит-куҫӗ ҫинче кӑшт именкелени те, ҫавӑнпа пӗрлех тата хӗпӗртени те палӑрать; тепӗр чух пулсан, вӑл ҫапла уяври пек тумланнине тата мӑнаҫлӑн утнине курсан, ахӑлтатсах кулаттӑмччӗ пулӗ ӗнтӗ эпӗ, анчах ҫав вӑхӑтра ман кулас шухӑшӑм ҫукчӗ.

Карттусӗпе перчеткине сӗтел ҫине хывса хучӗ те вӑл, хай, мундире турткаласа, тӗкӗр умӗнче юсанма пуҫларӗ; шӑртпа ҫӗклентерсе тӑракан ҫӳллӗ подгалстушникне вӑл тем пысӑкӑш хура тутӑрпа чӗркенӗ — ҫухави айӗнчен ҫавӑ ҫур вершук ытла тухса тӑратчӗ, сахалтарах пек туйӑнчӗ тӗ ӑна, вӑл ҫавна хӑлхи патне ҫитиех туртса кӑларчӗ; мундирӗн ҫухави ытла тӑвӑр пулнӑ та ӑна пӑвса тӑратчӗ, хӑйне тирпейлӗхе кӗртсе пӗтернӗ хыҫҫӑн мӑйӗ пӑвӑнса тӑнипе унӑн пит-куҫӗ юнпа тулнӑ пек хӗрелсе кайрӗ.

— Ҫак кунсенче эсӗ манӑн княжна хыҫҫӑн ытла ҫӳренӗ теҫҫӗ, чӑнах-и? — терӗ вӑл ман ҫине пӑхмасӑрах.

— Аҫта пирӗн пек ухмахсен чей ларса ӗҫме,— терӗм ӑна эпӗ, Пушкин ҫырнӑ юрӑри тахҫан иртнӗ вӑхӑтри чи пултаруллӑ тӑсланкӑсенчен пӗрин мухтаннӑ сӑмахне аса илсе.

— Қала-ха, мундир лайӑх ларать-и ман ҫийӗмре?.. Эх, шеремет жичӗ!.. хул хушши айӗнче епле касать иккен!.. Санӑн духи ҫук-и?

— Чим-ха, мӗн кирлӗ тата сана, ахаль те санран розӑ помади шӑрши ҫапать.

— Вӑл пырать-ха... пар-ха кунта...

Вӑл галстукӗ ҫине те, сӑмса тутӑрӗ ҫине те, ҫаннисен ӑшне те духи ярса ҫур кӗленче пушатрӗ.

— Эсӗ ташласшӑн-и? — тесе ыйтрӗ вӑл.

— Шухӑшламастӑп.

— Эпӗ княжнапа иксӗмӗрӗн мазуркӑ ташшине пуҫламалла пуласран хӑратӑп-ха, пӗр фигурӑ та йӗркеллӗн пӗлместӗп вӗт эпӗ...

— Эсӗ ӑна мазуркӑ ташлама чӗннӗ-и вара?

— Ҫук-ха...

— Ас ту, сана пӳлекенсем ан пулччӑр...

— Чӑнах та-ши? — терӗ вӑл, хӑйне ҫамкинчен ҫапса,— сыв пул... эпӗ ӑна хапха умӗнче кӗтсе тӑрам-ха...— Вӑл карттусне ярса тытрӗ те тухса чупрӗ.

Тепӗр ҫур сехетрен эпӗ те тухса утрӑм. Урамра тӗттӗм те пушахчӗ, пуху ҫурчӗ тавра, е трактирта, тейӗпӗр-и, халӑх кӗпӗрленсе тӑратчӗ, чӳречи витӗр ҫутӑ курӑнать; каҫхи ҫил ман патала полк музыкӗн сассине илсе ҫитерет. Эпӗ хуллен кӑна утатӑп: мана кичем...— Чӑна таши,— тетӗп эпӗ,— манӑн ҫӗр ҫинчи пӗртен пӗр тивлетӗм те ҫын ӗмӗтне татасси кӑна-ши? — тетӗп. Ас пӗлен кунҫулӑмра ман валли кирек хӑҫан та ют ҫынсен драмисене сӳтес ӗҫ тупӑнать, мансӑрӑн пӗри те вилме те, тарӑхма та пултараймасть тейӗн ҫав! Эпӗ пиллӗкмӗш актри кирлӗ ҫын иккен; ирӗксӗрех эпӗ пуҫ касаканӑн е чун сутаканӑн ирсӗр рольне вылятӑп-мӗн. Мӗншӗн ҫапла тӑвать-ши кун-ҫул? Вӑл мана мещенле трагедисем тӑвакан е ҫемье романӗсем ҫыракан, е, сӑмахран, «Библиотека для чтения» [1] валли повеҫсем ҫыраканне уйӑрса хуман-ши? Аҫтан пӗлес тейӗн? Сахал-и вара пурнӑҫ пуҫланӑ чухне,

[1] «Библиотечка для чтения» — ун чухнехи уйӑхра пӗрре тухса тӑракан сӑмахлӑхӑн, наукӑсен, художествӑсен, промышленноҫӑн тата модӑсен журналӗ. Вӑл Петербургра тухса тӑнӑ.

калăпăр, ăна Александр Великий пек е лорд Байрон пек ирттерме шутларĕ те, пыра киле, хăй ĕмĕрĕпех титулярнăй советник пулса юлчĕ...

Залăна кĕрсен, эпĕ арçынсен хушшине кĕрсе тăтăм та пăхкалама тытăнтăм. Грушницкий княжнапа пĕрле вăл темĕн çав тери хĕрӳллĕн калаçать; лешĕ ăна сӳрèккĕн итлет, веерне тути патнерех тытса, аяккалла пăхать; унăн пит-куçĕнче чăтăмсăррăн кĕтни курăнать, куçĕпе йĕри-тавра такама шырать вăл; эпĕ, вĕсем мĕн çинчен калаçнине итлес тесе, хуллен кăна хыçалтан пырса тăтăм.

— Эсир мана асаплантаратăр, княжна! — тет Грушницкий.— Сире курман хушăра эсир калама çук улшăннă...

— Эсир те улшăннă,— тет лешĕ, ун çине хăвăрттăн пăхкаласа, вăрттăн тăрăхланине лешĕ тавçăрса та илеймест.

— Эпĕ-и? Эпĕ улшăннă-и? Эх, нихçан та! Эсир пĕлетĕр ĕнтĕ эпĕ улшăнма пултарайманнине! Сире пĕрре çеç курнă çын сирĕн таса сăн-сăпатăра нихçан та манас çук...

— Чарăнăр...

— Мĕншĕн итлесшĕн мар-ха эсир, иртнĕ вăхăтра мана час-часах çав тери кăмăл туса итлеттĕрччĕ-çке?..

— Мĕншĕн тесен эпĕ пĕр япала çинченех темиçе хут калание юратмастăп,— терĕ лешĕ кулса.

— Эх, епле ытла йăнăшрăм иккен эпĕ! Çак эполетсем те пулин мана шанма ирĕк парĕç, тесе шутланă эпĕ, ухмах... Çук, манăн ĕмĕрех çав хам курайман салтак шинелĕпе çӳренĕ пулсан, лайăхрах пулнă пулĕччĕ, вăлах сире ман çине çаврăнса пăхтарнă пулĕ...

— Чăнах та, сире шинель ытларах килĕшет...

Çав вăхăтра эпĕ пырса тăтăм та княжнана пуç тайрăм, вăл кăштах хĕрелсе кайрĕ, унтан васкаварлăн:

— Тĕрĕс мар-и, мсье Печорин, мсье Грушницкие сăрă шинель ытларах килĕшет вĕт...— терĕ.

— Сирĕнпе килĕшместĕп эпĕ,— тесе тавăртăм ăна,— мундирпа вăл тата кăшт çамрăкрах пек курăнать,— терĕм.

Капла калание Грушницкий тӳсеймерĕ: пур ача-пăча пекех вăл хăйне пысăка хурасшăн; пичĕ çинчи юрату инкекĕсемпе юлнă йĕрсене пурнăç çулĕсем хăварнă йĕрсем тесе шутлать. Вăл ман çине сиввĕн пăхса илчĕ те, урипе тапса, аяккалла кайса тăчĕ.

— Тӳррипех каларӑ-ха,— терӗм эпӗ пикене,— вӑл яланах питӗ кулӑшла ҫынччӗ те, ҫапах та вӑл сире халиччен интереслӗрех пек туйӑнатчӗ-ҫке... шинельпе ҫӳренӗрен-и?..

Вӑл аялалла пӑхрӗ те нимӗн те каламарӗ.

Грушницкий бал иртичченех княжнана йӗрлерӗ, е унпа хирӗҫ тӑрса ташларӗ вӑл, е пӗрле ҫӳрерӗ; вӑл ӑна куҫпа ҫисе ярасса ҫитрӗ, ассӑн сывлать, йӑлӑнса та ӳпкелешсе йӑлӑхтарать. Виҫҫӗмӗш кадриль хыҫҫӑн пике ӑна шалтах курайми пулчӗ.

— Кӑна кӗтменччӗ ӗнтӗ эпӗ санран,— терӗ Грушницкий, ман пата пырса.

— Мӗне?

— Эсӗ унпа ташлатӑн-и мазуркӑ? — тесе ыйтрӗ вӑл мӑнаҫлӑн,— вӑл мана ҫапла каларӗ...

— Мӗнех вара? Эпӗ ӑна пытармастӑп-ҫке?

— Паллах... ҫапла пуласса кӗтсех тӑмаллаччӗ манӑн ҫав хӗрачаран... кокеткӑран... кайран тавӑрӑп-ха эпӗ!

— Хӑвӑн шинельне е хӑвӑн эполетусене ӳпкеле, ӑна мӗн айӑпламалли пур? Эсӗ текех ун кӑмӑлне килменнишӗн вӑл айӑплӑ-и вара?..

— Эппин мӗншӗн шантарать-ха вӑл?

— Мӗншӗн шантӑн вара эсӗ? Ӗмӗтленсе мӗншӗн те пулин тӑрӑшнине ӑнланатӑп-ха эпӗ, анчах мӗн тума шанмалла?

— Эсӗ тупӑшса ҫӗнтертӗн, анчах пӗтӗмӗшпех марха,— терӗ вӑл сивлеккӗн кулса.

Мазуркӑ ташши пуҫланчӗ. Грушницкий княжнана кӑна суйлать, ытти йӗкӗтсем те минутсерен ӑна суйлаҫҫӗ: ку ӗнтӗ мана хирӗҫ пӗр кавара килнине пӗлтерет; эппин лайӑхрах та-ха: унӑн манпа калаҫасси килӗ, ӑна чӑрмантараҫҫӗ,— апла унӑн манпа темӗн пек курса калаҫасси килекен пулать.

Пӗр-икӗ хутчен унӑн аллине чӑмӑртарӑм эпӗ; иккӗмӗш хут чӑмӑртанӑ чух вӑл хӑй аллине пӗр сӑмахсӑр туртса кӑларчӗ.

— Эпӗ ҫывӑраймастӑп ӗнтӗ кӗҫӗрхи каҫ,— терӗ вӑл мана, мазуркӑ ташши пӗтсен.

— Грушницкий айӑплӑ-ҫке.

— Ҫук, ҫук!— терӗ те вӑл, унӑн пичӗ ҫав тери шухӑшлӑ та кулянӑ пек пулса тӑчӗ, ҫавӑнпа эпӗ, хама ӗнтӗ темле пулсан та, ун аллине чуп тума сӑмах патӑм.

Килĕсене саланма пуçларĕç. Княжнана каретăна лартнă чухне эпĕ унăн пĕчĕк аллине хамăн тутасем патне тытса пăчăртарăм. Тулта тĕттĕмччĕ, çавăнпа ăна никам та курмарĕ!

Залăна питĕ хавасланса кĕтĕм.

Пысăк сĕтел хушшинче çамрăксем апатланаççĕ, вĕсен хушшинче Грушницкий те пур. Эпĕ кĕрсен пурте шăп пулчĕç: сăмах ман çинчен пынă пулас. Иртнĕ балрампа нумайăшĕсем ман çине мăртăхаççĕ, пуринчен ытла леш хайхи драгун капитанĕ, халĕ акă Грушницкий тăрăшнипе мана хирĕç тăшманла ушкăн пухаççĕ пулас. Çав тери мăнаçлăн та хăюллăн пăхать Грушницкий.

Хĕпĕртетĕп: эпĕ тăшмансене юрататăп, анчах христианла мар. Вĕсем мана савăнтараççĕ. Юнăма вĕрилентереççĕ. Яланах сыхă тăмалла, кашни куç мĕнле пăхнине, кашни сăмах мĕне пĕлтернине туймасăр ирттермелле мар, çынсен шухăшĕсене чухламалла, пĕр каварлăха çапса хуçмалла, улталаннă пек те пулмалла, унтан вара сасартăк чеелĕхсемпе усал шухăшсенчен тунă пысăк та йывăр çурта пĕрре тĕртсех пĕтĕмпех ўпне тўнтермелле— акă мĕне пурнăç тетĕп эпĕ.

Мĕн каçхи апат иртичченех Грушницкипе драгун капитанĕ пăшăлтатса та куç хĕскелесе ларчĕç.

*Июнĕн 6-мĕшĕ*

Паян ирпе Вера хăй упăшкипе пĕрле Кисловодска тухса кайрĕ. Эпĕ вĕсен каретине Лиговская княгиньă патне кайнă чухне тĕл пултăм. Вăл мана пуç тайрĕ, куçĕнче мана ўпкелени курăнать.

Кам айăплă-ха? Мĕншĕн вăл манпа улах çĕрте курнăçасшăн мар? Юрату вăл, вут пек,— çимĕççĕр сўнекенскер. Кўлешни вара сăмахăмран ытла та тума пултарĕ-и, тен?

Сехет хушши лартăм эпĕ княгиньă патĕнче. Мери тухмарĕ, чирленĕ. Каçхине бульвара та тухмарĕ вăл. Çĕнĕрен ушкăнланнă шайкă лорнетсем çакса тухнă, чăннипех хăрушăланса кайнă. Княç хĕрĕ чирленĕшĕн хĕпĕртерĕм те эпĕ: вĕсем ăна мăшкăл кăтартнă пулĕччĕç. Грушницкий çўçĕ тусса кайнă, хăй ытла çилленсе пăхать, чăнах та кўреннĕ пек, кăмăлĕ хуçăлнă пек туйăнать унăн, анчах вĕсен тарăхни те кулăшла тухать-çке, пулаççĕ те çынсем!..

Киле таврӑнсан, эпӗ хама темскер ҫитменнине асӑрхарӑм. Эпӗ хӗре кураймарӑм! Вӑл чирлӗ! Ӑнниипех, юратса пӑрахрӑм-и вара эпӗ?.. Мӗн кирлӗ мара калаҫмалли пур!

*Июнӗн 7-мӗшӗ*

Вун пӗр сехетре ирпе, Лиговская княгиньӑ шӑпах Ермолов ваннинче тарланӑ сехетре, эпӗ вӗсен пӳрчӗ патӗнчен иртсе пыраттӑм. Княжна чӳрече умӗнче пуҫне усса ларатчӗ; мана курчӗ те сиксе тӑчӗ.

Эпӗ малти пӳлӗмне кӗтӗм; никам та ҫукчӗ, унти йӗрке ирӗклине пула, хам килни ҫинчен пӗлтермесӗрех хӑна йышӑнакан пӳлӗме кӗтӗм.

Княжнан илемлӗ пит-куҫӗ шуралса та тӗссӗрленсе кайнӑ. Вӑл фортепьяно патӗнче хӑрах аллипе ҫемҫе пукан хыҫӗнчен тайӑнса тӑрать, алли пӑртак чӗтретчӗ, хуллен ҫеҫ ун патне пырса тӑтӑм та:

— Эсир мана ҫилленетӗр-и?..— терӗм.

Ешенсе ҫитнӗ тарӑн куҫӗпе вӑл ман ҫине пӑхрӗ те пуҫне сулкаласа илчӗ, тутисем темӗн каласшӑн пулчӗҫ те калаймарӗҫ; куҫҫулӗ тухрӗ унӑн, вара ҫемҫе пукан ҫине ларчӗ те питне аллисемпе хупларӗ.

— Мӗн пулчӗ сире? — терӗм эпӗ, ӑна аллинчен тытса.

— Эсир мана хисеплеместӗр!.. Хӑварӑр мана!..

Эпӗ темиҫе утӑм турӑм... Вӑл пукан ҫине лайӑхрах ларчӗ, куҫӗ йӑлтӑртатса пӑхать...

Алӑк хӑлӑпне тытрӑм та, чарӑнса тӑрса, каларӑм:

— Каҫарӑр мана, княжна! Эпӗ ӑсран кайнӑ ҫын пек турӑм... Урӑх ун пек пулмӗ: хам енчен мӗн тумаллине тӑвӑп эпӗ... Ман чӗрере халиччен мӗн пулса иртнине мӗншӗн пӗлмеллеччӗ сирӗн? Пур пӗрех ӑна эсир нихҫан та пӗлеймӗр, сирӗншӗн вӑл лайӑхрах та пулӗ. Сывӑ пулӑр.

Тухса кайнӑ чухне вӑл макӑрнине илтрӗм пулас эпӗ.

Каҫченех Машук таврашӗнче утса ҫӳрерӗм, калама ҫук ӗшентӗм те киле таврӑнсан вара ним тӑва пӗлмесӗр вырӑн ҫине ҫитсе ӳкрӗм.

Ман пата Вернер килсе кӗчӗ.

— Эсир Лиговская княжнана качча илет теҫҫӗ, чӑнах-и ҫав хынар? —тесе ыйтрӗ вӑл манран.

— Мӗнле апла?

— Пӗтӗм хула ҫапла шавлать; ман патӑмра сывалакансем те пурте ҫапла калаҫҫӗ, вӗсем вӗт ҫавӑн пек халӑх: пурне те пӗлеҫҫӗ!

«Ку ёнтĕ Грушницкий ĕçĕ!» — тесе шухăшларăм эпĕ.

— Доктор, çак сăмахсем суя иккенне ĕнентерес тесе, сире эпĕ вăрттăн кăна калам-ха, ыран эпĕ Кисловодска тухса каятăп...

— Княжна та-и?..

— Çук, вăл тата пĕр эрнелĕхе юлать...

— Эсир авланмастăр апла пулсан?..

— Доктор, доктор! пăхăр-ха ман çине: авланакан каччă пек-и вара эпĕ е çавăн майлăрах-и?

— Эпĕ ăна каламастăп та, хăш чухне пулкалать-çке, хăвăрах пĕлетĕр...— терĕ вăл, чеереххĕн кулкаласа,— ырă çыннăн авланмаллах пулать, тата хăшĕсен амăшĕсем те хăйсен хĕрĕсене чармаççĕ... Çавăнпа эпĕ сире çывăх юлташла калам, асăрхансарах çÿреме сĕнетĕп. Кунта шывсем çинче сывлăш калама çук хăрушă: лайăхрах шăпана тивĕçлĕ чаплă каччăсемех кунтан тÿрех венчете кайнине сахал курнă-и эпĕ?.. Ĕненетĕр-и, мана та авлантарасшăн пулчĕç вĕт кунта! Пĕр уездра пурăнакансен хĕрне, шуранкаскерне, тупасшăнччĕ. Эпĕ, ухмах, туй иртсен унăн сăнарĕ улшăнать тесе хур, амăшĕ, янавар, куççуль витĕр тав туса вĕт, хăй хĕрне пĕтĕм пурлăхĕпех — аллă чун пуласчĕ-и çав,— сĕнсе парать. Анчах эпĕ ун пек тума пултараймастăп, терĕм...

Вернер ёнтĕ мана хăтартăм-ха тесех тухса кайрĕ.

Ун сăмахĕнчен эпĕ княжнапа хам çинчен хулара тĕрлĕ киревсĕр сас-хура сарăлнине ăнлантăм: уншăн Грушницкие ахалех иртмĕ-ха!

*Июнĕн 10-мĕшĕ*

Акă ёнтĕ эпĕ Кисловодска килни виçĕ кун çитрĕ. Верăна кунсеренех эпĕ пусă патĕнче те, уçăлса çÿренĕ чухне те куратăп. Ирпе вăрансанах чÿрече умне ларатăп та лорнет витĕр унăн балконĕ çинелле пăхатăп, вăл тахçанах тумланса тăма ĕлкĕрнĕ; кăчăк туртассине çеç кĕтет; вара пÿрт умĕнчен пусă патнелле анакан садра ăнсăртран тĕл пулнă пек тăватпăр эпир. Ку таврашри сиплĕ çилпе унăн пит-куçне тĕс кĕнĕ, вăйĕ те хутшăннă. Ахальтен мар çав Нарзана паттăр çăл куçĕ теççĕ. Кунта пурăнакансем каланă тăрăх, Кисловодскри сывлăш савăшас енне туртать пулас, çавăнпа, имĕш, Машук патĕнче пуçланнă романсем пурте кунта хăйсен вĕçне çитеççĕ-мĕн. Чăнах та, кунта пур çĕрте те улах вырăн, ем-ешĕл тусем хушшипе шавлăн кăпăкланса сиксе юхакан шыв хĕрринчи çăка аллейисен чăтлăхĕ те, урлă та пирлĕ çĕкленекен

тěксěм ту хушшисем те, кăнтăрти çуллě курăкпа та шурă акаци пăсěпе тулнă техěмлě сывлăш та, лапă вěçěнче пěр-пěринпе пěрлешсе, Подкумок енне ут-вěттин сикекен сулхăн шывсен тěлěнмелле ытарайми сасси те — пурте юмахри пек туйăнать. Çак енчен ту хушши сарлакарах кăна симěс айлăма тухать; ун тăрăх тусанлă çул авкаланать. Кирек хăçан та вара çавăн çине пăхсан мана каретă килнě пек туйăнать, каретă чўречинчен илемлě питкуç курăннă пек мана. Ĕнтě пайтах каретăсем иртсе кайрěç те çав çул тăрăх, анчах эпě кěтекенни курăнмасть. Крепоç хыçěнчи слободкăра пурăнакансем йышлăланчěç; манăн хваттертен темиçе утăмра, тěмеске çине туса лартнă ресторацире, икě рет тополь хушшипе каçсерен çутă курăнать; унта çур çěр иртичченех стакан сасси янрать.

Кахетински эрехпе минерал шывне ниçта та кунтинчен ытла ěçмеççě.

> Анчах çак ик ěçе пěрле хушма
> хатěррисем нумай та,— эп вěсем пек мар[1].

Грушницкий хăйěн шайкипе кашни кун трактирте шавлать, мана вăл сайра хутра çеç пуç таять.

Вăл кунта ěнер çеç килнě, çапах та виçě старикпе ятлаçма ěлкěрнě те, лешсем, имěш, унран малтан ваннăна ларасшăн пулнă пулать. Ĕнтě, чăнах та, инкек тěлне пулсан, вăл вăрçас хастарлăхне те çěклентерет темелле.

*Июнěн 11-мěшě*

Акă вěсем те çитрěç. Вěсен каретин сассине илтнě чух эпě чўрече умěнче ларатăм: чěрем кăрт сикрě... Мěне пěлтертěр ку? Юратса пăрахрăм-и эпě, чăнах?.. Çав тери айван иккен эпě, темěн те кěтме пулать манран.

Эпě вěсем патěнче апатлантăм. Княгиньă ман çине питě ăшшăн пăхкалать, хěрě патěнчен те уйрăлмасть... ěç начар иккен! Ун вырăнне Вера мана княжна пирки кўлешет: турăмах иккен хам ěмěтленнине! Хěрарăм хăйпе тан юратакана кўрентерес тесе мěн кăна тумасть-ши? Ас тăватăп-ха акă, пěри мана эпě теприне савнăшăнах юрататчě. Нимěн те çук çав хěрарăм ăсě пек тěлěнтерекен япала. Вěсене мěнле те пулин ўкěте кěртме питě йывăр, хăйсене хăйсем ўкěтлеттерессе çитермелле вěсене,

[1] Грибоедовăн «Аса пула инкек» комедирен илнě сăмахсем.

хăйсем малтанхи шухăшĕсене пĕтерсе лартакан йĕрки вара вĕсен пи́тех те çаврăнăçлă; вĕсен диалектикине пĕлсе çитес тесен, хăвна шкулта вĕрентнĕ логикăн[1] правилисене пурне те пăрахмалла. Сăмахран, калăпăр, яланхи майсенчен пĕри акă çапла пулать: Ку çын мана юратать иккен те, эпĕ качча тухнăскер, çавăнпа манăн юратмалла мар.

Хĕрарăмсен майĕ:

Манăн ăна юратмалла мар, мĕншĕн тесен эпĕ качча тухнăскер; анчах та вăл мана юратать, çавăнпа та...

Кунта вара темиçе пăнчă, ăс-пуç малалла нимĕн те каласа памасть-çке, ун вырăнне пуринчен ытла: чĕлхе, пуç, вĕсен хыççăн, хай, чĕре, те калаçма пуçлать, вăл пурах пулсан.

Енчен çак çырăвăмсем хăçан та пулин хĕрарăм тĕлне лексен, мĕн пулĕччĕ-ши? — Элек! — тесе кăшкăрĕччĕ вăл тарăхнипе.

Поэтсем çырмашкăн та хĕрарăмсем çавсене вулама пуçланăранпа (уншăн вĕсене чĕререн тав тăватпăр) вĕсене ĕнтĕ мĕн чухлĕ пирĕшти ятне паман-ши, хăйсен айванлăхне пула çав комплимента ĕненнĕ, анчах çав поэтсемех Нерона[2], укçашăн тесе, çурма турă туса хисепленĕ...

Вĕсем çинчен çапла тарăхса калани вырăнлах та пулмĕ, эпĕ вĕт тĕнчере вĕсемсĕр пуçне ниме те юратман, вĕсемшĕн канăçлăха та, хисеплĕхе те, пурнăçăма та пама хатĕр пулнă... Анчах эпĕ кӳреннипе мар-çке, хисепĕм мăшкăла юлассипе мар-çке, çав хам витĕр курма хăнăхнă халаплă чатăра сирсе тăкасшăн тăрăшатăп. Çук, эпĕ вĕсем çинчен татса калани те

Аспа сивлек асăрхани те
Чĕрен асаплă паллисем[3]

çеç пулнă.

Хĕрарăмсем хăйсене пур арçынсем те ман пекех лайăх пĕлчĕрччĕ тесе ĕмĕтленмелле, мĕншĕн тесен вĕсенчен хăрама пăрахнăранпа, пĕчĕк çитменлĕхĕсене пĕлсе çитнĕренпе эпĕ вĕсене çĕр хут та ытларах юрататăп.

---

[1] Логикă — тĕрĕс шухăшланин законĕсем çинчен вĕрентекен наукă.

[2] Нерон (54—68) — авалхи Рим императорĕ, историре вăл иртĕхнипе, асканлăхпа тата хаярлăхпа палăрать.

[3] А. С. Пушкинăн «Евгений Онегин» ятлă романĕнчен илнĕ сăвă.

Пĕркунхине Вернер хĕрарăмсене: «Тасс[1] хайĕн «Ирĕке тухнă Иерусалимра» каласа панă тухатмăшлăнă вăрманпа танлаштарнăччĕ. Тытăн кăна,— тенĕччĕ вăл,— сан çине вара пур енчен те çав тери хăрушă япаласем вăркăнĕç; тивĕçлĕх, мăнаçлăх, хисеплĕх, халăх сăмахĕ, тăрăхласси, курайманлăх... Пăхмасăрах тӳррĕн ут; унтан пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕнех асар-писер хăрушлăхсем çухалаççĕ те, сан умăнта тӳлек те çутă ĕшне уçăлать, çав ĕшне варринче симĕс мирт ешерет. Малтанхи утăмрах чĕрӳ кăрт сиксен е каялла çаврăнса пăхсан, инкек курасса кĕтсех тăр вара!»

*Июнĕн 12-мĕшĕ*

Паян каçхине темĕн те пĕр пулса иртрĕ. Кисловодскран пĕр виçĕ çухрăмра, ту хушшинче, Подкумок юхса иртнĕ çĕрте Çĕрĕ текен чăнкă сăрт пур; вăл — çутçанталăк тунă хапха; ку хапха çӳллĕ сăртра çĕкленсе тăрать, хĕвел вара анас умĕн çавăн витĕр тĕнче çине юлашки хут çулăмлăн пăхса илет. Пĕр пысăк ушкăн çав чул хапха витĕр хĕвел аннине пăхма тухса кайрĕ. Тĕрĕссипе каласан, вĕсенчен ĕнтĕ никам та хĕвел аннине курас тесе шухăшламан. Эпĕ княжна çумĕнче пыратăп; киле таврăннă чух пирĕн Подкумок шывĕ урлă каçмаллаччĕ. Ту таврашĕнчи юхан шывсем чи пĕчĕккисем те ытла хăрушă, вĕсен тĕпĕ чăн-чăн калейдоскоп пек: хумсем çапăннипе кашни кунах вăл улшăнса тăрать; ĕнер чул выртнă çĕрте паян лакăм пулса тăрать. Эпĕ княжна лашине çавăртăм та шыва кĕтĕм, шывĕ чĕркуççирен те тарăн мар; юхăма хирĕç чалăшшăн каçатпăр. Хăвăрт юхакан юхан шыв урлă каçнă чух шыва пăхма юрамасть теççĕ, çавăнтах пуç çаврăнакан пулать имĕш. Мери княжнана çакăн çинчен малтанах асăрхаттарма ас туман эпĕ.

Юхан шыв варринче, чи хăвăрт юхнă çĕре çитсен, Мери сасартăк йĕнер çинче сулкаланса илчĕ. «Пуç çаврăнать!» тесе ячĕ вăл вăйсăр сасăпа... Хăпăл-хапăл ун патнелле пĕшкĕнтĕм те çепĕç кĕлеткине аллăмпа çавăрса тытрăм.

— Çӳлелле пăхăр! — терĕм ăна эпĕ...— вăл темĕн мар, ан хăрăр кăна, эп сирĕнпе пĕрле.

---

[1] Тасс (Тассо) Торквато (1544—1595) — Итали поэчĕ. Вăл хайĕн «Ирĕке тухнă Иерусалим» ятлă чи пысăк произведенийĕнче (1575) Крестовăй походсем çинчен каласа парать.

Ана çăмăлтарах пулчĕ, вăл ман алăран вĕçерĕнесшĕн туртăнчĕ, анчах эпĕ унăн çепĕç кĕлеткине тата хытăрах ыталаса илтĕм; ман пит унăн пит çăмартине кĕçех перĕнмест; унран вĕри çапать.

— Мĕн тăватăр эсир манпа?.. Турă çырлахтăрах...

Вăл чĕтренине те нимĕн тума пĕлменнине пăхмарăм, тутасем унăн çемçе пит çăмартине перĕнчĕç; вăл шартах сиксе илчĕ те нимĕн те шарламарĕ; эпир хыçалтан пыраттăмăр, пире никам та курмарĕ. Типпе тухсан пурте учĕсене юрттарма пуçларĕç. Мери хăйĕн лашине туртса чарчĕ; эпир юлтăмăр: эпĕ калаçманни ăна пăшăрхантаратех ĕнтĕ, анчах эпĕ, мĕн пулать-ха тесе, пĕр сăмах та каламастăп. Çак инкекрен вăл мĕнле майпа хăтăлнине курас килетчĕ манăн.

— Эсир мана кураймастăр-и е ытла юрататăр-и! — терĕ вăл юлашкинчен куççуль витĕр.— Эсир манран куласшăн та пулĕ, чуна вылятасшăн пулĕ те манăнне, унтан пăрахасшăн пулĕ... çавăн пек туни ытла ирсĕр пулнă пулĕччĕ, акă ун çинчен шухăшласанах... Эх, çук! — тесе хушса хучĕ вăл шанчăклă чи ачаш сасăпа.— Ман чĕремре нимĕн те çук-çке хисеплеме тивĕçсĕрри, тĕрĕс мар-и? Эсир ытла чăрсăр пулнине... манăн каçармалла, манăн каçармалла ăна, мĕншĕн тесен хамах ирĕк патăм-çке... Калаçăр-ха, калаçăр ĕнтĕ, манăн сирĕн сассăра итлес килет! — Юлашки сăмахĕсенче унăн кăмăлĕ чăтайманнипе эпĕ ирĕксĕрех кулса ятăм; юрать-ха, тĕттĕмлене пуçларĕ... Эпĕ нимĕн те тавăрса каламастăп.

— Эсир чĕнместĕр-и? — терĕ вăл малалла.— Сире юрататăп тесе мана чи малтан калаттарасшăн пуль-ха эсир?

Чĕнмерĕм...

— Çапла калаттарасшăн-и эсир? — терĕ вăл малалла, ман еннелле хăвăрт çаврăнса... Вăл хăюллăн пăхнинче те çирĕп сассинче темĕнле хăрушлăх пур пек туйăнчĕ мана...

— Мĕн тума? — терĕм эпĕ, хул пуççийĕме пăркаласа.

Вăл хăйĕн лашине çапрĕ те ансăр та хăрушă çул тăрăх ут-вĕттин чуптарса кайрĕ; çав тери хăвăрт кайнипе эпĕ ăна аран-аран хăваласа çитрĕм, вăл ыттисемпе пĕрлешме ĕлкĕрнĕччĕ ĕнтĕ. Мĕн килне çитичченех вăл шавласа та кулса пычĕ. Хăйне тыткаланинче унăн нимĕн тума пĕлменни курăнать; ман çине вăл пĕрре те çаврăнса пăхмарĕ. Вăл ытла хавасланнине пурте асăрхарĕç.

Çавăнпа амăше те, хăйĕн херĕ çине пăхса, чĕререн хепертет; хĕрĕн вара нервисем çеç урмăшнă: вăл çĕр каçипех çывăраймĕ, темиçе хут макăре-ха. Çав шухăш мана калама çук савăнтарать: хăш-пĕр чухне эпĕ вампире ăнланатăп çав... Хам акă çапах та ырă çамрăк ятне илтесшĕн, çитменнине тата çав ята илтесшĕн çине тăрсах тăрăшатăп!

Лашасем çинчен ансан, хĕрарăмсем княгиньă патне кĕчĕç; ăшăм выртмарĕ хамăн, пуçăмра кĕпĕрленнĕ шухăшсене вĕçертес тесе, ту çинелле васкарăм. Сулхăн çил уççăн сывласа савăнтарать. Сăрт хыçĕнчен уйăх хăпарнă. Ман таканламан лашан кашни пусăмĕ ту хушшисен шăплăхне çурса илтĕнет; шыв сикки патĕнче эпĕ утăма шăвартăм та, пĕр-икĕ хутчен кăкăр тулли кăнтăрти каç сывлăшне сывласа илсен, каялла çаврăнтăм. Эпĕ слободкă витĕр килетĕп: хăй çутисене сӳнтеретчĕç ĕнтĕ. Крепоç валĕ çинчи часовойсем тата таврари пикетсенчи[1] казаксем пĕр-пĕрне вăрăммăн сас параççĕ...

Слободкăри çырма хĕррине туса лартнă пӳртсенчен пĕринче ытла çуттăн курăннине асăрхарăм; вăхăчĕ-вăхăчĕпе йĕркесĕр шавлани те, кăшкăрашни те илтĕнет, унта çар çыннисем ĕçкĕ ĕçеççĕ ĕнтĕ. Лаша çинчен антăм та чӳрече патне йăпшăнса пытăм; чӳрече хупăлчине тачă хупман пирки ĕçекенсене куртăм, вĕсен сăмахĕсене те илтрĕм. Ман çинчен калаçаççĕ иккен.

Эрехпе хĕрсе кайнă драгун капитанĕ, пурне те шăп пулма сĕнсе, сĕтел çине чышкипе çапрĕ.

— Улпутăмсем! — терĕ вăл.— Ку ниме те юрăхсăр Печорина вĕрентес пулать! Петербургри çав халь çеç йăвисенчен вĕçсе тухнă сарă сăмсасем яланах пуçесене каçăртаççĕ, вĕсене сăмсисенчен шаккамалла! Вăл яланах таса перчеткепе те çутатнă атăпа çӳрет те, хăй çеç чаплă пурăнатăп тесе шутлать.

— Тата епле мăнаçлăн кулать-ха! Çапах та эпĕ шансах тăратăп, вăл хăравçă, хăравçă вăл!

— Эпĕ те çавăн пек шутлатăп,— терĕ Грушницкий.— Вăл пурне те шӳтпе ирттерсе яма юратать. Эпĕ ăна пĕрре темĕн те пĕр каласа пĕтертĕм, тепри пулсан, мана çавăнтах касса пăрахмалла, анчах Печорин йăлтах кулăшла еннелле çавăрса хучĕ. Чăнах та, эпĕ ăна дуэльре

[1] Пикет — хурал тăракан пост.

ҫапăҫма чĕнмерĕм, мĕншĕн тесен унăн хăйĕн чĕнмеллеччĕ; ҫитменнине ҫыхланас та килместчĕ...

— Грушницкий ун ҫине ҫилленет, мĕншĕн тесен вăл унран княжнана туртса илнĕ,— терĕ тахăшĕ.

— Акă тата мĕн шухăшласа кăларчĕҫ! Эпĕ, чăнах та, княжна хыҫҫăн пăртак ҫӳрекеленĕ те ҫавăнтах ăна пăрахнă, мĕншĕн тесен авланас теместĕп-ха, хĕртен кулассиси вара ман ĕҫ мар.

— Чăнах та, эпĕ сире ĕнентерсех калатăп, вăл хăравҫăран та хăравҫă, Печорин ҫинчен калатăп, Грушницкий ҫинчен мар,— Грушницкий маттур, ҫитменнине тата вăл манăн тӳрĕ тус! —терĕ каллех драгун капитанĕ.— Улпутăмсем! Кунта никам та ун хутне кĕмест-и? Никам та? Питĕ аван! Унăн паттăрлăхне пĕлес килет-и сирĕн? Ку сире савăнтарĕ...

— Пĕлес килет те, анчах мĕнле!

— Итлĕр, апла пулсан: Грушницкий ун ҫине уйрăммăнах ҫилленнĕ, ҫавăнпа ăна — пĕрремĕш роль! Вăл пĕрпĕр айванлăхшăн ҫулăхĕ те Печорина, дуэле чĕнĕ... чимĕр-ха: вăт ҫавă кирлĕ... Чĕнет дуэле: аван! чĕнни, хатĕрленни, условисем — ҫаксем пурте май ҫитнĕ таран чаплă та хăрушă пулса иртеҫҫĕ,— ку ĕҫе эпĕ хам ҫине илетĕп, эпĕ санăн секунданту пулатăп, мĕскĕн тусăм! Питĕ лайăх! Анчах пистолечĕсем ăшне вара пульăсем хумастпăр эпир — акă мĕн. Эпĕ сире халех каласа паратăп, Печорин хăраса ӳкет — ултă утăмран тăратăп вĕсене, тепĕр тесен, килĕшетĕр-и эсир?

— Лайăх шухăшласа кăларнă!.. Килĕшетпĕр!.. Мĕншĕн килĕшес мар? — тенисем илтĕнчĕҫ пур енчен те.

— Грушницкий, эсĕ мĕнле?

Грушницкий мĕн калассине эпĕ чăтма ҫук кĕтетĕп; ҫакăнта ăнсăртран килсе тухман пулсан, ҫак ухмахсем манран кулма пултарни ҫинчен шухăшласанах эпĕ ҫав тери тарăхса кайрăм. Енчен, Грушницкий килĕшмен пулсан, эпĕ ăна ыталаса илнĕ пулăттăм. Анчах та пĕр хушă ним шарламасăр тăнă хыҫҫăн вăл, хăйĕн вырăнĕнчен тăрса, капитана алă пачĕ те мăнаҫлăн каларĕ: «Юрать, эпĕ килĕшетĕп»,— терĕ.

Ушкăнĕпех мĕнле хăпартланса кайнине ҫырса кăтартма та кансĕр.

Икĕ тĕрлĕ сисĕмпе хумханса, эпĕ киле таврăнтăм. Пĕрремĕшĕ — салхулăхчĕ. Мĕншĕн вĕсем мана пурте кураймаҫҫĕ-ха? тесе шухăшлатăп эпĕ. Мĕншĕн? Е эпĕ

кама та пулин кӳрентертӗм-ши? Ҫук. Ҫӑнах та, эпӗ пӗрре пӑхсанах ырӑ сунмалла мар ҫынсем пек-ши? Эпӗ сисетӗп: наркӑмӑшлӑ хаяр ҫилӗ пӗчӗккӗн-пӗчӗккӗнех тулать ман ӑшӑмра. Сыхланса тӑр, Грушницкий! тетӗп эпӗ, пӳлӗм тӑрӑх каллӗ-маллӗ уткаласа. Манпа ун пек шӳт тумаҫҫӗ. Сирӗн ухмах юлташӑрсем юрлани сире ытла хакла ларма пултарать. Эпӗ сирӗн валли вылямалли япала мар!

Эпӗ ҫӗрӗпех ҫывӑрмарӑм. Тул ҫутӑлнӑ ҫӗре эпӗ померанец пек саралса кайрӑм.

Ир ҫинче эпӗ княҫ хӗрне пусӑ патӗнче тӗл пултӑм.

— Эсир чирлӗ-и? — терӗ вӑл, ман ҫине тинкерсе пӑхса.

— Эпӗ ҫӗрӗпех ҫывӑраймарӑм.

— Эпӗ те ҫавӑн пекех... Эпӗ сире айӑпларӑм... кӑлӑхах та пулӗ? — Анчах хӑвӑр шухӑшӑрсене каласа парӑр, эпӗ йӑлтах каҫарма пултаратӑп...

— Йӑлтах-и?..

— Йӑлтах... чӑннипе кӑна каласа парӑр... хӑвӑртрах... пӗлсемӗр эсир, хӑвӑра ҫапла тыткаланине тӳрре кӑларас тесе пайтах шухӑшларӑм эпӗ: ман тӑвансен енчен чӑрмавсем пуласран хӑратӑр пулӗ... вӑл нимех те мар; вӗсем пӗлсен... (ун сасси чӗтренсе илчӗ) эпӗ вӗсене лӑплантарӑп. Е сирӗн хӑвӑр кун-ҫулӑр... анчах пӗлӗр, юратнӑ ҫыншӑн эпӗ хамӑн мӗн пуррине йӑлтах лама тӑрӑшӑп... Эх, часрах сӑмах парӑр,— хӗрхенӗр... Эсир манран йӗрӗнместӗр вӗт, тӗрӗс мар-и?

Вӑл мана алӑран ярса тытрӗ.

Княгиньӑ пирӗн умра Вера упӑшкипе пыратчӗ, ҫавӑнпа вӑл нимӗн те кураймарӗ; анчах пире уҫӑлса ҫӳрекен чирлӗ ҫынсем курма пултараҫҫӗ, вӗсем ҫав ӗнтӗ сӑмах юптарса чи йӗкӗлтекенсем, ҫавӑнпа эпӗ вӑл хӗрӳллӗн чӑмӑртанӑ алла хӑвӑрт туртса илтӗм.

— Эпӗ сире пӗтӗмпех чӑннипе каласа паратӑп,— терӗм ӑна эпӗ.—Тӳрре тухма та тӑрӑшмӑп, хам мӗн тунине те ӑнлантарса памӑп. Эпӗ сире юратмастӑп.

Унӑн тути кӑштах шуралса кайрӗ...

— Кайӑр кунтан,— терӗ вӑл аран илтӗнмелле.

Эпӗ хул пуҫҫийӗме пӑркаласа илтӗм те ҫаврӑнса утрӑм.

*Июнĕн 14-мĕшĕ*

Хăш чухне эпĕ хамран хам йĕрĕнетĕп... çавăнпах йĕрĕнместĕп-ши эпĕ ыттисенчен те?.. Ырă ĕçсем патне те туртăнайми пултăм. Хама хам кулăшла пуласран хăратăп эпĕ. Тепри ман вырăнта княжнана качча тухма çеç сĕнĕччĕ, анчах авланас тени мана темле юмахри пек тыткалать: эпĕ хĕрарăма темĕнле хĕрӳллĕ юратсан та, вăл мана хăйне качча илмеллине кăшт систерсенех,— сыв пул вара юрату! Манăн чĕре чул пулса каять те, ăна вара çĕнĕрен нимĕн те ăшăтаймасть. Эпĕ кирек-мĕн курса тӳсмешкĕн те хатĕр, пурнăçăма та, чысăма та,— çаксене пурне те çирĕм хут çухатмалла пулсан та хĕрхенместĕп... анчах хам ирĕкĕме сутмастăп. Мĕншĕн вăл маншăн ытла хаклă-ши? Мĕн усси ман унран?.. Ăçта кайма хатĕрлетĕп эпĕ хама? Мĕн кĕтетĕп иккен малашлăхран?.. Чăнах, нимĕн те кĕтместĕп. Мĕн çуралнăранпах эпĕ темрен шикленетĕп, темĕне сисетĕп... Тĕрлĕрен çынсем пур-çке, хăшĕсем акă нимĕнсĕрех эрешменсемпе таракансенчен, шăшисенчен хăраççĕ, тӳррипех калас-ши, эпĕ ача чухнех пĕр карчăк ман пирки аннене юмăç ярса панă; хаяр арăмĕнчен вилмелле, тенĕ вăл ман пирки; ку мана ун чухнех ытла тĕлĕнтерчĕ: авланасси çине çав тери йĕрĕнсе пăхакан пултăм... анчах вăл калани мана тĕрĕсе килес пек туйăнать; çапах та эпĕ май килнĕ таран çавă каярах килтĕрччĕ тесе тăрăшăп-ха.

*Июнĕн 15-мĕшĕ*

Ĕнер кунта Апфельбаум ятлă фокусник килчĕ. Ресторации алăкĕ çине çав асăннă тĕлĕнмелле фокусник, акробат, химик тата оптик паян каçхине, 8 сехетре, пархатарлисен пухăвĕн (урăхла — ресторации) залĕнче чаплă представлени пани çинчен хисеплĕ публикăна пĕлтерекен вăрăм афишкă кăларса çапнă; билетсем икĕ тенкĕ çурăшар.

Пурте тĕлĕнмелле фокусника кайса курма хатĕрленеççĕ; Лиговская княгиньăн хĕрĕ сывă мар пулин те билет илнĕ.

Паян кăнтăрлахи апат хыççăн эпĕ Вера чӳречи патĕнчен иртсе пыраттăм; вăл пĕр-пĕчченех балкон çинче ларатчĕ; ман ура умне пĕр пĕчĕк çыру ӳкрĕ.

«Паян каçхине, 10-мĕш сехетре, пысăк пусма тăрăх ман пата кил: упăшкам Пятигорска кайрĕ, ыран ирпе тин таврăнать. Манăн çынсем те, горничнăйсем те килте

пулмаççӗ. Вӗсене эпӗ, çавӑн пекех тата княгиньӑ çыннисене те, билетсем салатса патӑм. Эпӗ сана кӗтетӗп, мӗнле пулсан та кил».

— А-ха! — тесе шухӑшларӑм эпӗ: — хам калана пекех пулса тӑчӗ.

Сакӑр сехетре эпӗ фокусника курма кайрӑм. Публикӑ тӑхӑр сехет вӗçӗнче пухӑнса çитрӗ; представлени пуçланчӗ. Кайри тенкелсем çинче эпӗ Верӑпа княгиньӑ тарçи-тӗрçисене палларӑм. Пурте пухӑннӑ кунта.—Грушницкий малти ретре лорнетпа ларать. Фокусник хӑйне сӑмса тутри, сехет, çӗрӗ тата урӑх мӗнле те пулин япала кирлӗ пулсанах пӗрмай унран ыйтать.

Грушницкий ӗнтӗ чылайранпа мана пуç таймасть, паян тата пӗр икӗ хутчен ман çине самаях чӑрсӑрла пӑхса илчӗ. Эпир пӗр-пӗринпе татӑлнӑ чухне çаксене ӑна йӑлтах аса илтерӗп-ха.

10-мӗш сехет тӗлӗнче эпӗ тӑтӑм та тухрӑм.

Тулта тӗттӗмччӗ, куçран йӗп чиксен те курӑнмасть. Таврари тусен тӳписенче йывӑр та сивӗ пӗлӗтсем выртаççӗ: сайра хутра кӑна рестораци тавра ларакан тополь тӑррисем çилпе шавласа илеççӗ; рестораци чӳречисем патӗнче халӑх тӗпӗртетет. Эпӗ ту çинчен антӑм та хапха патнелле çаврӑнса васкарах утма пуçларӑм. Сасартӑк хыçӑмран такам пынӑ пек туйӑнчӗ мана. Чарӑнса тӑтӑм, йӗри-тавра пӑхкаласа илтӗм. Тӗттӗмре нимӗн те уйӑрса илме çук; çапах та эпӗ, сыхланас тесе, уçӑлса çӳренӗ пек, пӳрт йӗри-тавра çаврӑнтӑм. Княжна чӳречи патӗнчен иртсе кайнӑ чухне эпӗ хам хыçра каллех ура сасси илтрӗм: ман умран шинельпе пӗркеннӗ çын чупса иртрӗ. Ку мана пӑшӑрхантарма пуçларӗ; çапах эпӗ крыльца патне йӑпшӑнса пытӑм та тӗттӗм пусма çине йӑпӑр-япӑр чупса кӗтӗм. Алӑк уçӑлчӗ; пӗчӗк алӑ ман алла ярса тытрӗ...

— Сана никам та курмарӗ-и?—шӑппӑн каларӗ Вера, ман çума лӑпчӑнса.

— Никам та!

— Халӗ эсӗ ӗненетӗн-и эпӗ сана юратнине? Эх, эпӗ нумайччен иккӗленсе тӑтӑм, асаплантӑм, анчах эсӗ манпа мӗн тӑвас тетӗн, çавна тӑватӑн.

Чӗри унӑн хытӑ тапатчӗ, аллисем пӑр пек сивӗччӗ. Ӳпкелешӳ те кӳлешӗ, юншӑхласси пуçланчӗ:— Чӗрӳнте мӗн пуррине тӳррипе йӑлтах каласа пар, эсӗ манран сивӗннине эпӗ хуллен-хулленех чӑтса ирттерӗп, мӗншӗн тесен эпӗ сана çеç телейлӗ тӑвасшӑн,— терӗ вӑл мана.

Эпӗ вӑл каланине пӗтӗмпех ӗненмерӗм, ҫапах та тупа туса, сӑмах парса ӑна лӑплантартӑм.

— Эсӗ Мерине качча илместӗн-и эппин? Юратмастӑн-и ӑна?.. Вӑл шухӑшлатчӗ-ха вара... итле-ха, вӑл сана ӑнран каясса ҫити юратса пӑрахнӑ, мӗскӗн!..

. . . . . . . . . . . . . . .

Ҫур ҫӗр иртни ик сехет тӗлӗнче эпӗ чӳречене уҫрӑм та, икӗ тутӑра пӗр-пӗринчен ҫыхса, ҫӳлти балконран аялти балкон ҫине колоннӑ тӑрӑх антӑм. Мери пӳлӗмӗнче ҫаплах ҫутӑ пурччӗ-ха. Темӗн тӗртрӗ мана унӑн чӳречи патнелле. Чаршавне карсах лартаймӑн та, эпӗ пӳлӗмре мӗн пуррине пӗлес килнипе шалалла пӑхрӑм. Мери аллисене чӗрҫи ҫине хуҫлатса хунӑ та хӑйӗн вырӑнӗ ҫинче ларать; ҫӑра ҫӳҫне вӑл чӗнтӗрпе ҫавӑрнӑ чепчик ӑшне пуҫтарса чикнӗ; шурӑ хул пуҫҫийӗсене хӗрлӗ тутӑрпа витнӗ, урисене перссен тӗрлесе тунӑ туфли ӑшне чикнӗ. Пуҫне кӑкӑрӗ ҫине уснӑ та хускалмасӑр ларать; хӑй умне сӗтел ҫине кӗнеке уҫса хунӑ, анчах унӑн пӗр вырӑнтах тӑракан темӗнле тулли хуйхӑллӑ куҫӗсем пӗр страницӑнах ҫӗр хут вуласа тухнӑ пек туйӑнаҫҫӗ, шухӑшӗсем вара инҫетре...

Ҫав самантра йывӑҫ тӗми хыҫӗнче такам кӑштӑртатрӗ. Эпӗ балкон ҫинчен ҫерем ҫине сиксе антӑм. Курӑнман алӑ мана хул пуҫҫинчен ярса тытрӗ. «А-ах!— терӗ вӑл хытӑ сасӑпа,— лекрӗн-и... Княжнасем патне ҫӗр хута ҫӳреме вӗрентӗп сана!..»

— Ҫирӗпрех тыт ӑна!— тесе кӑшкӑрчӗ тепри, кӗтесрен сиксе тухса.

Кусем Грушницкипе драгун капитанӗ пулчӗҫ.

Эпӗ драгун капитанне пуҫӗнчен чышкӑпа ҫапса ӳкертӗм те йывӑҫ тӗмисем хушшине кӗрсе ҫухалтӑм. Хамӑр ҫурт тавраш ӗнчи садра пур сукмаксене те лайӑх пӗлеттӗмччӗ эпӗ.

— Вӑрӑсем килнӗ! Хурах!..— кӑшкӑрчӗҫ хайхискерсем; пӑшал сасси те илтӗнчӗ; йӑсӑрланакан чӳпек манӑн ура патнех пырса ӳкрӗ.

Тепӗр минутран эпӗ хваттере чупса ҫитрӗм, хӑвӑртрах салтӑнтӑм та выртрӑм. Манӑн тарҫӑ алӑка ҫӑрапа питӗрме ӗлкӗрчӗ кӑна, Грушницкипе капитан ман алӑка шаккама та пуҫларӗҫ.

— Печорин! Эсир ҫывӑратӑр-и? Кунта-и эсир?..— тесе кӑшкӑрса ячӗ капитан.

— Çывăратăп,— терĕм эпĕ хаяррăн.

— Тăрăр! вăрăсем килнĕ... черкессем...

— Манăн сунас,— тавăратăп эпĕ:— шăнасран хăратăп.

Вĕсем кайрĕç. Ахалех эпĕ вĕсене сасă патăм: вĕсем мана тепрер сехет шыратчĕç садра. Çав вăхăтрах хăрушла шăй-шай тухса кайрĕ. Крепоçран казак вĕçтерсе çитрĕ. Пурте хускалчĕç, пур тĕмĕсем хушшинче те черкессене шырама тытăнчĕç, анчах, паллах, нимĕн те тупаймарĕç. Çапах нумайăшĕ, гарнизон паттăрлăхне тата васкавлăхне ытларах кăтартнă пулсан, пĕр-ик теçетке тискер вăрă вырăнтах выртса юлатчĕ тесе çирĕппĕнех шутларĕç пулĕ.

*Июнĕн 16-мĕшĕ*

Паян ирпе кулата патĕнче пурте çĕрле черкессем тапăнни çинчен калаçаççĕ. Кирлĕ таран нарзан ĕçсе, çăкасем лартса тунă вăрăм аллейă тăрăх пĕр вунă хут утса çаврăннă хыççăн эпĕ Вера упăшкине тĕл пултăм. Вăл халь çеç Пятигорскран килнĕ. Вера упăшки мана алăран тытрĕ те, эпир ресторацине ирхи апат тума кайрăмăр, вăл калама çук пăшăрханать арăмĕшĕн. «Мĕн тери хăрарĕ пулĕ вăл паян çĕрле!— тет вăл:— çитменнине тата унашкал япала лăпах эпĕ çук чух пулмалла». Эпир ирхи апат тума кĕтесри пӳлĕме кĕмелли алăк патне вырнаçса лартăмăр. Унта çамрăксем пĕр вунă çынна яхăнччĕ. Вĕсем хушшинче Грушницкий те пурччĕ. Арăскалăм мана иккĕмĕш хут çынсем калаçнине итлесе лармалла май пачĕ. Ку калаçăвăн Грушницкий пурнăçне татса памалла пулчĕ. Вăл мана курмасть, çавăнпа эпĕ юри сасă парас мар тесе шутларăм, анчах ку манăн куçăмсем умĕнче унăн айăпне пысăклатрĕ кăна.

— Мĕнле-ха, вĕсем чăнах черкессем пулнă-и?— терĕ тахăш:— Вĕсене кам та пулсан курнă-и?

— Эп сире ĕç мĕнле пулнине пĕтĕмпех каласа паратăп,— тесе тавăрчĕ Грушницкий,— анчах, тархасшăн, ан сутăр мана; акă вăл мĕнле пулнă: ĕнер пĕр çын,— унăн ятне каламастăп эпĕ сире,— ман пата пырать те вунă сехетре каçпа Лиговскаясен пӳрчĕ патне такам вăрттăн шăвăнса пыни çинчен каласа парать. Сире асăрхаттармалла кирлĕ, княгиньă кунта пулнă, княжна килĕнче. Ак хайхи эпир унпа телейлĕ çынна сыхлама вĕсен чӳречисем патне тухса кайрăмăр.

Тӳррипех калатӑп, манпа юнашар ларакан ҫын пикенсех ҫиетчӗ пулсан та, эпӗ хӑрарӑм; Грушницкий темлерех чӑннине персе янӑ пулсан, вӑл хӑйшӗн чылаях кичем япаласем илтме пултарнӑ пулӗччӗ; анчах кӗвӗҫнипе вӑл кун ҫинчен шутламан та.

— Вӑт куратӑр-и ӗнтӗ,— терӗ малалла Грушницкий,— эпир так ахаль хӑратас тесе пульӑсӑр патронпа авӑрланӑ пӑшал илтӗмӗр те тухса кайрӑмӑр. Икӗ сехетчен кӗтрӗмӗр садра. Юлашкинчен, турӑ пӗлет ӑҫтан тухрӗ вӑл, анчах чӳречерен мар, мӗншӗн тесен вӑл уҫӑлман, ҫавӑнпа вӑл колоннӑ хыҫӗнчи алӑкран тухнӑ пулмалла,— тинех, тетӗп эпӗ, такам балкон ҫинчен аннине куратпӑр эпир... Княжна мӗнле? э? Ну, тӳррипех калатӑп, Мускав барышнисем! Ҫакӑн хыҫҫӑн мӗнле ӗненмелле? Эпир ӑна ярса тытасшӑн пултӑмӑр, анчах вӑл вӗҫерӗнчӗ те, мулкач пек, тӳрех тӗмӗсем хушшине чӑмрӗ; эпӗ вара ун ҫинелле персе ятӑм.

Грушницкий тавра ӗненмесӗр пӑшӑрханса калаҫни илтӗнчӗ.

— Эсир ӗненместӗр-и?— терӗ вӑл малалла.— Тупа тусах калатӑп сире, ҫаксем йӑлт пӗтӗмпех тӗрӗс, ҫитменнине тата, лайӑхрах ӗнентерес тесе, эпӗ сире ҫак господинӑн ятне те каласа парӑп, тен.

— Кала, кала, кам-ха вӑл!— илтӗнчӗ пур енчен.

— Печорин,— терӗ Грушницкий.

Ҫав самантра вӑл ҫӳлелле пӑхрӗ, эпӗ алӑкра ӑна хирӗҫех тӑратӑп; вӑл калама ҫук хӗрелсе кайрӗ. Эпӗ ун патне пырса тӑтӑм та хуллен те ӑнланмалла каларӑм:

— Питӗ шел, эпӗ эсир чи ирсӗр элеке ҫирӗплетсе тупа тунӑ хыҫҫӑн тин кӗтӗм. Эпӗ кунта пулнӑ пулсан, эсир ҫав тери ирсӗр ӗҫ тӑвайман пулӑттӑр.

Грушницкий хӑйӗн вырӑнӗнчен сиксе тӑчӗ те хӗрсе каясшӑн пулчӗ.

— Тархасшӑн,— терӗм эпӗ малалла ҫав саспах:— халех хӑвӑрӑн сӑмахусене каялла илме ыйтатӑп: ӑна пуҫран шухӑшласа кӑларнине эсир хӑвӑр питӗ лайӑх пӗлетӗр. Хӗрарӑм сирӗн паха енӳсем ҫине сиввӗн пӑхнишӗн ҫав тери хӑрушла тавӑрни тивӗҫлӗ тесе шутламастӑп эпӗ. Лайӑхрах шухӑшласа пӑхӑр: хӑвӑр ҫавӑн пек шухӑшланине ҫирӗплетсе, эсир ырӑ ҫын ятне илтме тивӗҫ ҫухататӑр тата пурнӑҫна хӗрхенместӗр.

Грушницкий ман умра пуҫне усса тӑчӗ, нимӗн тума пӗлмест. Анчах совеҫ мӑн кӑмӑллӑхпа кӗрешесси нумай

пымарӗ. Унӑн ҫумӗнче ларакан драгун капитанӗ ӑна чавсипе тӗртрӗ: вӑл карт сикрӗ те куҫне ҫӗклемесӗрех мана ҫапла каларӗ:

— Милостивӑй государь, эпӗ мӗн те пулин калатӑп пулсан, эпӗ ӑна шухӑшласа калатӑп, ҫавӑнпа тепӗр хут каласа пама та хатӗр... Эпӗ сирӗн сӑмахусенчен хӑрамастӑп, ҫавӑнпа кирек мӗн тума та хатӗр.

— Кӑна эсир кӑтартса патӑр та ӗнтӗ,— терӗм эпӗ ӑна сиввӗн, унтан, драгун капитанне аллинчен тытса, пӳлӗмрен тухрӑм.

— Мӗн кирлӗ сире?— тесе ыйтрӗ капитан.

— Эсир Грушницкий тусӗ, ҫавӑнпа та, паллах, унӑн секунданчӗ пулатӑр пулӗ?

Капитан питӗ мӑнаҫлӑн пуҫ тайрӗ.

— Эсир пӗлетӗр,— терӗ вӑл:— ҫитменнине эпӗ унӑн секунданчӗ пулма тивӗҫлӗ те, мӗншӗн тесен ӑна кӳрентерни мана та пырса тивет, ӗнер ҫӗрле эпӗ унпа пулнӑ,— тесе хушса хучӗ вӑл, хӑйӗн курпунтарах кӗлеткине тӳрлетсе.

— Э! апла пулсан эпӗ сире-иҫ ҫав тери сарӑмсӑр пуҫран тивертрӗм?

Вӑл пӗрре саралса, тепре кӑвакарса кайрӗ; вӑл тарӑхни унӑн пичӗ ҫине палӑрса тухрӗ.

— Эпӗ паян хамӑн секунданта сирӗн пата яма тивӗҫлӗ пулатӑп,— хушса хутӑм эпӗ, питӗ те кӑмӑллӑн пуҫа тайса тата вӑл тарӑхнине асӑрхаман пек туса.

- Ресторац крыльци ҫинче эпӗ Вера упӑшкине тӗл пултӑм. Вӑл мана кӗтсе тӑнӑ пулас.

Вӑл, хӗпӗртенӗ пек пулса, манӑн алла ярса тытрӗ.

— Пархатарлӑ ҫамрӑк ырӑ ҫын!— терӗ вӑл куҫҫулӗпе.— Эпӗ пурне те илтрӗм. Епле йӗксӗк! Пархатарсӑр!.. Ҫавӑн хыҫҫӑн йышӑн весене хисеплӗ киле! Мухтав турра, манӑн хӗрсем ҫук! Анчах сире, эсир хӑвӑрӑн пурӑнӑҫӑра камшӑн хӗрхенместӗр, ҫавӑ телей кӑтартӗ. Эпӗ сапӑр пулнине вӑхӑт ҫитиччен шанса тӑрӑр,— терӗ вӑл малалла.— Эпӗ хам та ҫамрӑк пулнӑ тата ҫар службинче тӑнӑ; пӗлетӗп, манӑн ҫак ӗҫсене хутшӑнма кирлӗ мар. Сывӑ пулӑр.

Мӗскӗн! Хӑйӗн хӗрсем ҫуккишӗн хӗпӗртет...

Эпӗ тӳрех Вернер патне кайрӑм, вӑл килтех пулчӗ. Эпӗ ӑна йӑлтах каласа патӑм — хам Верӑпа княжна ҫине мӗнле пӑхнине те, вӑрттӑн итленӗ калаҫӑва та каласа патӑм. Ҫак калаҫуран эпӗ ҫав господинсем пулька-

сăр авăрланă пăшалпа пертерсе мана ухмаха таратса хăварма шутлани ҫинчен пĕлтĕм. Анчах хале ĕҫ шўт виҫинчен тухать: вĕсем, паллах, кунашкал пулассине кĕтмен пулас.

Доктор манăн секундант пулма килĕшрĕ: эпĕ ăна перĕшў условийĕсем пирки темиҫе сĕнў патăм; унăн ҫине тăрсах ĕҫе мен май пур таран вăрттăнрах ирттерсе ямалла тăвас пулать, мĕншĕн тесен эпĕ хама кирек хăҫан та вилĕм умне илсе тухма пултаратăп, анчах ку тĕнчере хамăн пуласлăха кăшт та пăсас килмест.

Ҫакăн хыҫҫăн эпĕ киле кайрăм. Тепĕр сехетрен доктор хăйĕн экспедицийĕнчен таврăнчĕ.

— Сире хирĕҫ каварлашнă пекех туйăнать,— терĕ вăл.—Эпĕ Грушницкий патĕнче драгун капитанне тата тепĕр господина тĕл пултăм, унăн хушаматне ас тумастăп. Эпĕ кайри пўртре калушсене хывас тесе пĕр минутлăха чарăнсаттăм. Вĕсем калама ҫук хытă шавлаҫҫĕ те тавлашаҫҫĕ... «Ниепле те килĕшместĕп!— тет Грушницкий:— Вăл мана ҫынсем умĕнче кўрентерчĕ; ун чухне ĕҫ пачах урăхла пулнă...»

«Сана мĕн ĕҫ?— тесе тавăрать капитан:— Эпĕ йăлтах хам ҫине илетĕп. Эпĕ пилĕк дуэльре секундант пулнă, ҫавăнпа ăна мĕнле тумаллине пĕлетĕп ĕнтĕ. Эпĕ йăлтах шухăшласа тухрăм. Тархасшăн, мана ан чăрмантар ҫеҫ. Хăратни япăх мар. Ҫалăнма май пулсан, мĕншĕн хăвна хăрушлăх умне тăратмалла-ха?»— Ҫав самантра эпĕ кĕтĕм. Вĕсем тăруках шăп пулчĕҫ. Пирĕн калаҫусем самаях вăрăма пычĕҫ; юлашкинчен вара эпир ĕҫе ҫапла тума шутларăмăр: кунтан пĕр пилĕк ҫухрăмра улах ту хушши пур; вĕсем унта ыран ирпе тăватă сехетре каяҫҫĕ, эпир вĕсем хыҫҫăн ҫур сехет кайран тухатпăр; ултă утăмран перетĕр — Грушницкий хăй ҫапла тума ыйтрĕ. Вĕлерни — черкессен шучĕпе пулать! Халь эпĕ акă мĕнле шухăшлатăп: вĕсем, урăхла каласан, секундантсем, хăйсен малтанхи планне кăштах улăштарнă пулас та Грушницкий пистолетне ҫеҫ пульăпа авăрласшăн. Ку кăштах ҫынна вĕлернĕ майлăрах, анчах вăрҫă вăхăтĕнче, уйрăммăнах азиатсен вăрҫинче, чеелĕхсемшĕн ятлаҫҫĕ; ҫапах Грушницкий хăйĕн юлташĕсенчен пархатарлăрах пек туйăнать. Эсир менле шутлатăр? Хамăр тавҫăрса илнине пирĕн кăтартмалла-и вĕсене?

— Тем парсан та, доктор! Нимĕн те ан шухăшлăр; эпĕ вĕсене парăнмастăп.

— Мĕн тăвасшăн-ха эсир?

— Эпĕ ăна хам çеç пĕлетĕп.

— Ас тăвăр, ан лекĕр... ултă утăмран-çке!

— Доктор, эпĕ ыран сире тăватă сехетре кĕтетĕп; лашасем хатĕр пулаççĕ... Сывă пулăр.

Эпĕ хамăн пӳлĕме питĕрĕнтĕм те каçченех килте лартăм. Мана княгиньă патне чĕнме лакей килчĕ,— чирлĕ тесе калама хушрăм эпĕ.

. . . . . . . . . : :

Икĕ сехет çĕрле... Ыйхă килмест... Анчах çывăрсан та юратчĕ, ыран алă ан чĕтретĕр. Ултă утăмран тивертеймесĕр пеме йывăр. Э! господин Грушницкий! сирĕн мистификаци[1] хăвăршăнах ăнăçлă пулмĕ... эпир вырăнсемпе улшăнăпăр: халĕ манăн сирĕн шуралса кайнă пит-куçу çинче хăранин паллисене шыраса тупмалла пулать. Мĕншĕн эсир хăвăр çав ултă утăма йышăнтăр? Эпĕ сире тавлашмасăрах хамăн çамкана лартса паратăп тесе шутлатăр-и эсир... эпир шăпа ярăпăр... Ун чухне вара... унăн телейĕ пысăкрах пулсан ун чухне? Манăн çăлтăрăм мана улталамĕ-ши?.. Ахальтен-им вăл маншăн çав тери ĕçлерĕ...

Мĕнех-ха? Вилмелле пулсан вилес! Тĕнчешĕн пысăк çухату мар; мана хама та чылаях йăлăхтарса çитерчĕ. Эпĕ — балра анаслакан çын пек, хăйĕн карети килеймен пирки çеç вăл киле каймасть. Анчах каретă хатĕр... сывă пулăр!

Хамăн пĕтĕм пурнăçа аса илсе тухатăп та ирĕксĕрех хамран ыйтатăп: эпĕ мĕншĕн пурăннă? Мĕн тума çуралнă эпĕ?.. Чăнах та, ман тумалли пулнах пулас, чăнах та, пурнăçра манăн пысăк вырăнта пулмалла пулнă, мĕншĕн тесен эпĕ хамăн ăшра çав тери пысăк вăйсем пуррине туятăп... Анчах эпĕ çав хамăн вырăна тавçăрса илеймерĕм, эпĕ ниме тăман пархатарсăр йăласем астарни хыççăн кайрăм: вĕсен ăшĕнчен эпĕ тимĕр пек хытă та сивĕ пулса тухрăм, анчах пархатарлă туртăнусен вутне, пурнăçăн чи лайăх чечекне ĕмĕрлĕхех çухатрăм. Унтанпа вара миçе хут ĕнтĕ ăраскал аллинчи пуртă вырăнне пулнă! Асаплăх хĕç-пăшалĕ пулса, эпĕ хурлăх курма тивнĕ çынсен пуçĕсем çине ӳкнĕ, час-часах тарăхмасăр, анчах яланах нимĕн хĕрхенмесĕр... Манăн юрату никама та телей паман, мĕншĕн тесен эпĕ хам кама

[1] Мистификаци — кама та пулин ăнран яни.

юратнă, ăна уншăн пĕр ырăпа та тавăрман: эпĕ хамшăн юратнă, пĕр хама килентересшĕн юратнă; эпĕ чĕре темĕн ыйтнине çеç туса пынă, вĕсен сисĕмĕсене, вĕсен ачашлăхне, вĕсен хаваслăхĕсемпе асапĕсене çăтăланса çăтнă — çапах нихăçан та тăранма пултарайман. Ыçăпа аптранă çын вăйĕ пĕтсе çитнипе çывăрса каять те хăйĕн умĕнче чаплă апат-çимĕçсемпе эрехсем курать — çавăн пек; вăл тĕлĕкре курнă çимĕçсене хавассăн çăтать те, вара çăмăлрах пек туйăнать ăна; анчах вăранать кăна — ĕмĕт çухалать... вăл хайхи икĕ хут ытларах выçса каять те тарăхать!

Тен, ыран эпĕ вилетĕп!.. Вара çĕр çинче мана пачах ăнланса çитни пĕр чун та юлмасть. Пĕрисем мана эп хам чăннипех мĕнлинчен усалрах, теприсем — лайăхрах тесе шутлĕç... Вăл ыр̆ă çынччĕ, тейĕç пĕрисем, теприсем: йĕксĕк, тейĕç. Вăл та, ку та тĕрĕс мар. Çавăн хыççăн пурăнма кирлĕ-и вара? Çапах пурăнатăп — малалла мĕн пулать-ши тесе: темĕн çĕннине кĕтетĕп... Кулăшла та, кичем те!

Акă ĕнтĕ, эпĕ Н крепоçне куçни уйăх çурă çитет; Максим Максимович сунара кайнă... эпĕ пĕчченех чӳрече умĕнче ларатăп; хăмăр пĕлĕтсем тусене аяла çитичченех хупласа илнĕ; хĕвел тĕтре витĕр сарă пăнчă пек курăнать. Сивĕ çил шăхăрать, чӳрече хупписене силлентерет... Тунсăх!.. Хамăн çав тери тĕлĕнмелле ĕçсемпе чарăнса ларнă журнала малалла çырма пуçларăм.

Юлашки страницăна тепĕр хут вуласа тухатăп: кулăшла!— Эпĕ вилме шутланă; вăл пулма пултарайман: эпĕ хамăн асаплăх савăтне типĕтеймен-ха, сисетĕп халĕ; манăн тата нумай пурăнмалла.

Иртни пĕтĕмпех манăн асăмра çав тери уçăмлăн палăрса юлнă! Вăхăт пĕр йĕрне те, пĕр паллăна та хуратман!

Ас тăватăп эпĕ, перĕшӳ умĕн çĕрĕпех çывăраймарăм. Нумайччен çывăраймарăм эпĕ: мана вăрттăн кансĕрлĕх çĕнтерсе илчĕ. Пĕр сехете яхăн эпĕ пӳлĕм тăрăх утрăм; унтан лартăм та Вальтер Скотт романне уçрăм, вăл манăн сĕтел çинче выртатчĕ; вăл «Шотланди пуританĕсем» ятлă; эпĕ малтан вăйпах вуларăм, унтан асамлă шухăшпа киленсе, йăлтах манса кайрăм...

Юлашкинчен çуталчĕ. Манăн нервăсем лăпланчĕç. Эпĕ тĕкĕр витĕр пăхрăм, манăн пит-куç шуралса; тĕксĕмленсе кайнă, ыйхă вĕçнипе асапланнă пирки вăл;

анчах куç, йĕри-тавра хăмăр мĕлке çаварса илнĕ пулин те, мăнаçлăн та шеллевсĕр çуталать. Эпĕ хама хам тиркемерĕм.

Лашасене йĕнерлеме хушрăм та, тумланса, купальнă патне чупса антăм. Вĕрекен сивĕ нарзан ăшне кĕрсе ларнă май ӳтри тата ăшри вăйсем каялла таврăннине туйрăм. Эпĕ ваннăран бала кайма хатĕрленнĕ пек уçă кăмăллă та маттур пулса тухрăм. Çакăн хыççăн калăр ĕнтĕ чун ӳт-пӳрен килмест тесе!..

Каялла таврăнсан, эпĕ хам патăмра доктора тĕл пултăм. Вăл кăвак рейтуз, архалук[1] тата черкес çĕлĕкĕ тăхăннă. Çак пĕчĕк кĕлеткеллĕ çынна калама çук пысăк та лапсака çĕлĕк айĕнче курсан, эпĕ хыттăн кулса ятăм: унăн пит-куçĕ пачах та хастарлă мар, анчах халь вăл яланхинчен те вăрăмрах.

— Мĕншĕн эсир çав тери хуйхăллă, доктор?— терĕм эпĕ ăна.— Эсир çынсене калама çук нимĕн шухăшсăр леш тĕнчене çĕр хут та ăсатман-и вара? Шутлăр манăн ват вĕри чирпе чирленĕ тесе; эпĕ сывалма та, вилме те пултаратăп; вăл та, ку та йĕркеллех; ман çине хăвăра паллă мар чирпе аптăракан пациент çине пăхнă пек пăхма тăрăшăр,— вара сирĕн мĕн пулассине çав тери пĕлес килекен пулĕ, эсир халь манпа физиологи енĕпе темиçе паха сăнав тума пултартăр... Вăйпах вилĕме кĕтни вăл чăн-чăн чир мар-и вара?

Çак шухăш доктора тĕлĕнтерчĕ, çавăнпа та вăл хавасланса кайрĕ.

Эпир утсем çине утлантăмăр; Вернер чĕлпĕртен икĕ аллипе ярса тытрĕ те, эпир вĕçтертĕмĕр,— самантрах крепоç патĕнчен иртсе слободкă витĕр тухса кайрăмăр, ту хушшине кĕрсе кайрăмăр... Пирĕн умра çурри курăкпа витĕннĕ çул авкаланать, тата ун урлă унта та кунта шавлă çырма шывĕ каçса каять. Пирĕн час-часах ун урлă каçма тивет, доктор çав тери тарăхать, мĕншĕн тесен унăн лаши шывра кашнинчех чарăнса тăрать.

Кунтан сенкертерех те уçăрах ир пулнине ас тумастăп. Хĕвел симĕс йывăç тăррисем çийĕн кăшт курăнчĕ çеç, унăн пайăркисен малтанхи ăшши каçăн сӳрĕлекен сиввипе пĕрлешсе темле тутлăн ывăнтарать пек; ту хушшине çамрăк кунăн хавaслă пайăрки кĕреймен-ха;

[1] Архалук — кĕске сăхман, тӳмесем вырăнне тăхасем лартса çĕленĕскер.

вăл пирĕн пуç çийĕнче икĕ енепе те усăнса тăракан чул тусен тăррисене çеç ылтăн сăрпа сăрлать. Таран хушăксенче ӳсекен çăра çулçăллă тĕмĕсем çил кăшт сывласа илнипех пирĕн çине кĕмĕл тумламсем сапаççĕ. Ас тăватăп — çав ир эпĕ çутçанталăка нихçанхинчен те ытла юратрăм. Епле лайăх виноградăн сарлака çулçи çинче чĕтренекен тата сĕрен кĕперрин миллион пайăркисемпе çутăлакан кашни сывлăм шăрçине пăхса савăнма! Епле манăн куçăмсем тĕтрелле инçете шăтарасла пăхаççĕ! Унта çул ансăрлансах пырать, чул тусем кăвакланса тата хăрушăланса пыраççĕ, юлашкинчен вара вĕсем пĕрлешсе çирĕп хӳме пулса тăнă пек туйăнаççĕ. Эпир нимĕн шарламасăр пыратпăр.

— Эсир хăвăрăн халала çырнă-и?—ыйтрĕ Вернер.

— Çук.

— Вĕлерес пулсан мĕнле?..

— Наследниксем хăйсемех тупăнĕç.

— Сирĕн тусусем те çук-и, сирĕн вĕсене юлашки хут «каçарăр» тес килмест-и?..

Эпĕ пуçа пăркаларăм.

— Сирĕн хĕрарăм та çук-и вара, эсир асăнмалăх ун валли нимĕн те хăварас теместĕр-и?

— Пĕлес килет-и, доктор,— терĕм эпĕ ăна,— эпĕ сире чунăма уçса пама пултаратăп... Куратăр-и, вилнĕ чухне юратнă хĕрарăм ятне асăнакан тата таса помадă сĕрнĕ е помадă сĕрмен çӳç пайăрки парса хăваракан çулсенчен тухнă эпĕ. Килес сывăх вилĕм çинчен шухăшланă май эпĕ хам çинчен çеç шухăшлатăп; хăшĕсем ăна та тумаççĕ. Нимĕн те кирлĕ мар, туссем мана ыранах манаççĕ, е унтан та япăхрах, ман çинчен, турă пĕлет, темĕн те пĕр каласа пĕтерĕç; хĕрарăмсем урăххине ыталаса, вăл вилнĕ çын çумне ан хуштăр тесе, кулĕç манран. Пурнăç тăвăлĕнчен эпĕ темиçе идейă çеç илсе тухрăм — вĕсен хушшинче пĕр туйăм та çук вара. Ĕнтĕ тахçантанпах эпĕ чĕрепе мар, пуçпа кăна пурăнатăп. Эпĕ хам кăмăлăма та, хăтланчăкăма та: ĕнтĕ мĕн пулĕ-ха, тесе шайлатăп та, чĕреме нимĕн те перĕнмест. Ман ăшра икĕ çын: пĕри пурăнмаллипех пурăнать, тепри шухăшлать те малтанхи мĕн тунине тишкĕрет, пĕрремĕшĕ те пĕр сехетренех сирĕнтен те, тĕнчерен те ĕмĕрлĕхех уйрăлĕ, иккĕмĕшĕ вара... Иккĕмĕшĕ-и?.. Пăхăр-ха, доктор: куртăр-и эсир, чул ту çинче сылтăмра виçĕ çын тăни палăрать? Вĕсем пирĕн тăшмансем пулас?..

Эпир вĕçтертĕмĕр.

Чул ту айĕнчи йывăç тĕмисен хушшине виçĕ лаша кăкарнă; хамăр лашасене çавăнтах кăкартăмăр та тăвăр сукмак тăрăх площадкă çине улăхрăмăр, унта пире драгун капитанĕ, Грушницкий тата унăн тепĕр секунданчĕ кĕтсе тăратчĕç. Тепĕр секундантне Иван Игнатьевич теççĕ; эпĕ унăн хушаматне нихçан та илтмен.

— Эпир тахçанах сире кĕтетпĕр,— терĕ драгун капитанĕ, тăрăхлас шутпа йăвашшăн кулса.

Сехетĕме кăлартăм та ăна кăтартрăм.

Вăл каçару ыйтрĕ, манăн сехет васкать иккен, терĕ.

Темиçе минут хушши никам та пĕр сăмах чĕнмесĕр аптраса тăтăмăр; юлашкинчен доктор Грушницкий еннелле çаврăнчĕ те сăмах пуçларĕ:

— Эсир иксĕр те çапăçма хатĕр ĕнтĕ, çав майпа хисеплĕх умĕнчи парăмăрсене те татăр, халĕ акă калаçса татăлăр та, çавăнпа юн тăкмасăрах ĕçĕре пĕтерме те пулĕ, тесеттĕм эпĕ,— терĕ доктор.

— Эпĕ хатĕр,— терĕм эпĕ.

Капитан Грушницкие куç хĕсрĕ, Грушницкий эпĕ хăратăп пулĕ тесе шухăшларĕ те пуçне каçăртрĕ, хăйĕн пит çăмарти çинчи тĕксĕм шурă сăнарĕ кайман та-ха. Килсе чăраннăранпа та вăл ман çине пĕр хут кăна пăхса илчĕ: темĕнле вăл канăçсăрланса пăхать, ăшĕнче хаяр кĕрешӳ пынине кăтартса пăхать.

— Хăвăр условийĕрсене ăнлантарса парăр,— терĕ вăл,— эпĕ сирĕн валли мĕн те пулин туса пама пултаратăп, çавна ĕненсех тăрăр...

— Акă манăн условисем: эсир паянах халăх куç умĕнче хăвăр сăмахăра элеклени пулчĕ тесе йышăнăр, манран каçару ыйтăр.

— Савнă çыннăм, эпĕ тĕлĕнетĕп, епле эсир мана çавăн пек сĕнме пултаратăр?..

— Урăх мĕн сĕнме пултарнă пулăттăм вара эпĕ сире?..

— Эпир перĕшетпĕр.

Хул пуççийĕме хĕскелесе илтĕм.

— Юрĕ эппин: анчах ас тăвăр, пирĕнтен пĕри пур пĕрех вилмелле пулать.

— Эсир вилессе ĕмĕтленетĕп эпĕ...

— Анчах эпĕ урăхла пуласса ĕненетĕп-ха...

Вăл нимĕн те калаймарĕ, хĕрелсе кайрĕ, унтан ирĕксĕрех хыттăн кулса ячĕ.

Капитан ăна аллинчен тытрĕ те аяккалла çавăтса кайрĕ: тахçанччен вĕсем пăшăлтатрĕç. Эпĕ самаях кăмăллă килнĕччĕ те култа, анчах çакнашкал хăтланни мана тарăхтара пуçларĕ.

Доктор ман пата пырса тăчĕ.

— Итлĕр-ха,— терĕ вăл, пăшăрханса:— эсир вĕсем каварлашнине манса та кайнă пулĕ-ха!.. Эпĕ пистолет авăрлама пĕлместĕп, анчах хальхинче акă... тĕлĕнмелле, çын эсир! Вĕсем мĕн тума шутланине пĕлни çинчен калăр та, вĕсем хăяймĕç вара... Мĕне кирлĕ иккен! Кайăка персе ӳкернĕ пекех персе пăрахĕç сире вĕсем...

— Ан пăшăрханăр-ха, доктор, кĕтĕр кăштах... Эпĕ йăлтах урăхла çавăрса хурăп та, вĕсен енче нимĕнле çăмăллăх та пулмĕ. Ан тив, пăшăлтатчăрах вĕсем...

— Итлĕр-ха, ку йăлăхтарса çитерет капла!— терĕм эпĕ вĕсене хыттăн:— çапăçас-тăк çапăçас, сирĕн ĕнерех калаçса тăранма вăхăт пулнă...

— Эпир хатĕр,— терĕ капитан.— Вырнаçса тăрăр эппин!.. Доктор, ултă утăм виçсе парсамăр...

— Вырнаçса тăрăр!— терĕ Иван Игнатьевич та çурăк сасăпа.

— Чимĕр-ха!— терĕм эпĕ.— Тата тепĕр услови: эпир пуç хумаллипех çапăçатпăр та, çавăнпа пирĕн пур майпа та çак ĕçе никам пĕлмелле мар тăвас пулать, пирĕн секундантсем айăплă ан пулччăр. Килĕшетĕр-и эсир?..

— Пĕтĕмпех килĕшетпĕр.

— Апла пулсан, акă мĕн шухăшласа кăлартăм эпĕ. Куратăр-и, çак тӳп-тӳрĕ анакан чул ту тăрринче, сылтăмра, пĕр тăвăр площадкă пур? Çак площадкăран аяла çитиччен пĕр вăтăр чалăш пулать, ытларах пулмасан. Аялта çивчĕ шĕвĕрлĕ чулсем. Иксĕмĕртен кашниех çав площадкăн чи хĕррине пырса тăрĕ; чи çăмăл суран та вилĕмлĕ пулать вара: ку сирĕн шухăшăрпа килĕшет пулмалла, мĕншĕн тесен эсир хăвăрах ултă утăмран пемелле тăвасшăн пултăр. Кам аманĕ, вăл тӳрех аялалла сирпĕнсе анĕ те пĕтĕмпех саланса кайĕ; пулине доктор кăларĕ; ун чухне вара самантрах вилсе кайнине ăнсăртран ӳксе вилнĕ тесе ăнлантарма та çăмăл пулать. Эпир камăн малтан пемеллине пĕлме шăпа ярăпăр. Пĕлнĕ пулăр эппин, çапла тумасăр эпĕ çапăçмастăп.

— Юрать те пулĕ!— терĕ капитан, Грушницкий çине тинкерсе пăхса, лешĕ, килĕшнине пĕлтерсе, пуç тайрĕ.

Унăн сăнĕ кашни минутранах улшăнать. Эпĕ ăна йывăрлăха кĕртрĕм-ха. Яланхи условисемпе пенĕ пулсан, вăл мана ураран тĕллеме пултаратчĕ, мана ним мар амантса, хăй кăмăлне ытлашши татмасăрах мана тавăрма пултарнă пулĕччĕ; анчах халĕ ĕнтĕ унăн сывлăшалла персе ямалла е çын вĕлерекен пулмалла, е хăйĕн ирсĕр шухăшне пăрахса, манпа пĕр пекех хăрушлăх умне тухса тăмалла пулать. Çав самантра вара эпĕ ун вырăнĕнче пулма килĕшмен пулăттăм. Вăл капитана аяккалла çавăтса кайрĕ те ăна темĕн çинчен çав тери хĕрӳллĕн калама тытăнчĕ: куратăп акă, унăн кăвакарнă тути чĕтрет, анчах капитан йĕрĕнсе çеç кулса илчĕ те унран пăрăнчĕ.— «Эсĕ ухмах!— терĕ вăл Грушницкие самаях хыттăн.— Нимĕн те ăнланмастăн! Кайрăмăр!»

Тăвăр сукмак йывăç тĕми хушшипе чăнкă вырăналла улăхать; чул ту катăкĕсем çав çутçанталăк пусмин шанчăксăр картлашкисем пулнă, йывăç тĕмисенчен тыткаласа эпир çӳлелле улăхма тытăнтăмăр. Грушницкий малта пырать, ун хыççăн унăн секунданчĕсем, унтан эпир докторпа.

— Сирĕнтен тĕлĕнетĕп эпĕ,— терĕ доктор, аллăма хыттăн чăмăртаса.— Кӳрĕр-ха, ал тымарне тытса пăхам! Э-хе! сив чирпе чирленĕ чухнехи пекех!.. анчах питрен пăхсан нимĕн те палăрмасть... куçăр кăна сирĕн яланхинчен çутăрах çиçнĕ пек.

Çӳлтен сасартăк пирĕн урасем айне вĕтĕ чулсем кусса анчĕç.

Ку мĕн? Грушницкий такăннă-мĕн; вăл тытнă турат хуçăлнă та, хăй месерлех аялалла шуса анатчĕ пулĕ, юрать-ха секунданчĕсем тытма ĕлкĕрчĕç.

— Сыхланăр!— кăшкăртăм эпĕ ăна:—халех ан ӳкĕрха, вăл ырра пĕлтермест. Юлий Цезаре[1] асăра илĕр.

Акă эпир маларах тухса тăракан чул ту тăррине хăпарса çитрĕмĕр; площадкă юри пире çапăçмашкăн тунă темелле, вĕтĕ хăйăрпа витĕннĕ. Ту тăррисем, йĕри-тавра ирхи ылтăн тĕтре ăшне çухалса, хисепсĕр йышлă кĕтӳ пек хĕсĕнеççĕ те кăнтăр енче, Эльбрус тăвĕн пăрланнă тăррисем хушшинче, калама çук пысăк шурă купа пек курăнса тăраççĕ, вĕсен хушшинче хĕвелтухăçĕнчен юхса килнĕ çӳхе пĕлĕтсем шăваççĕ. Эпĕ площадкă хĕррине

[1] Юлий Цезарь — (пирĕн эрăччен 100—44 çç.) авалхи Римри государствă деятелĕ, паллă полководец, писатель.

пырса тăтăм та аялалла пăхрăм, пуçăм кăштах çаврăнаймарĕ: унта, тупăкри пек, сĕм-тĕттĕм те сивĕ туйăнать; вăйлă çумăрпа е иртен вăхăтпа катăлса ӳкнĕ чул ту тăррисем хăйсен çимĕçне кĕтеççĕ.

Эпир çапăçас тенĕ вырăн тĕрĕс виç кĕтеслĕх пек. Маларах тухса тăракан кĕтесрен ултă утăм виççе илтĕмĕр те кам кама малтан пемелле, çавна çак кĕтесе тăратмалла турăмăр, çурăмĕпе сакăлта еннелле çаврăнса тăмалла; вăл вилмесен вара ăна тепри улăштарать те çав вырăнах пырса тăрать.

Эпĕ Грушницкие çăмăлрах тума шутларăм, ăна тĕрĕслесе пăхасшăнччĕ эпĕ; унăн чунĕнче йăвашлăх хĕмĕ вăраннă пулсан, пĕтĕм ĕç те лайăхланса кайнă пулĕччĕ; анчах хăй мăн кăмăллă пулни, характерĕ хавшак пулни çĕнтермеллех пулнă çав... Араскалăм мана çăлса хăварсан, эпĕ ăна ним чухлĕ те хĕрхенесшĕн пулмарăм. Кам хăйĕн кăмăлĕпе çавăн пек тăвас тесе килĕшмен-ши?

— Шăпа ярăр, доктор!— терĕ капитан.

Доктор кĕсйинчен кĕмĕл тенкĕ кăларчĕ те çӳлелле ывăтса ячĕ.

— Решеткă!— васкаса кăшкăрчĕ Грушницкий, юлташĕ кăрт тĕртнипе сасартăк вăраннă çын пек.

— Орел!— терĕм эпĕ.

Тенкĕ çаврăнса улăхрĕ те чăнкăртатса çĕре ӳкрĕ, пурте ун патнелле тăрăнчĕç.

— Эсир телейлĕ,— терĕм эпĕ Грушницкие,— сирĕн малтан пемелле! Анчах ас тăвăр, эсир мана вĕлермесен, эпĕ сире пур пĕрех чĕрĕ хăварас çук, чăннипех калатăп çакна.

Вăл хĕрелсе кайрĕ; хĕç-пăшалсăр çынна вĕлерме намăс пулчĕ ăна: эпĕ ун çине тинкерсе пăхатăп; çав хушăра мана вăл ман ура патне пырса ӳкессĕн туйăнчĕ; каçару ыйтассăн туйăнчĕ. Анчах ирсĕр ĕç тума шухăш тытнине мĕнле уçса парас-ха? Вăл сывлăшалла персе ярассине эпĕ шансах тăнăччĕ! Ана эпĕ иккĕмĕш хут пертересси кăна чăрмантарма пултарать.

— Вăхăт!— терĕ мана доктор, шăппăн çанăран туртса.— Эсир халь те вĕсен вăрттăн шухăшне пĕлнине каламасан вара, пĕтĕмпех пĕтрĕ. Пăхăр-ха, авăрлама та пуçларĕ... Эсир нимĕн те каламастăр пулсан, эпĕ хам...

— Тем пулсан та, доктор!— терĕм эпĕ ăна аллинчен тытса чарнă май.— Эсир йăлтах ĕçе пăсатăр: эсир, мана

чӑрмантармастӑп, тесе сӑмах панӑччӗ... Сире мӗн ӗҫ? Тен, ман хама вӗлерттерес килет пулӗ...

Вӑл ман ҫине тӗлӗнсе пӑхрӗ.

— Э! апла пулсан, урӑхла ӗҫ!.. Анчах леш тӗнчере мана ан ӳпкелӗр...

Капитан ҫав вӑхӑтра хӑйӗн пистолечӗсене авӑрларӗ те пӗрне, ӑшшӑн кулнӑ пек, темӗн пӑшӑлтатса, Грушницие тыттарчӗ, тепӗрне мана пачӗ.

Эпӗ площадкӑ кӗтессине тӑтӑм, ҫӑмӑл аманас-тӑвас пулсан, каялла кайса ӳкес мар тесе, сулахай урапа чул ҫине тӗрентӗм, пӑртак малалла ӳпӗнтӗм.

Грушницкий мана хирӗҫ тӑчӗ те паллӑ панӑ хыҫҫӑн пистолетне ҫӗклеме тапратрӗ, чӗркуҫҫийӗсем чӗтӗреҫҫӗ унӑн. Вӑл мана тӳрех ҫамкаран тӗллет...

Эпӗ калама ҫук шӑртланса кайрӑм.

Сасартӑк вӑл пистолетне антарчӗ те, пир пек шуралса кайса, хӑйсен секунданчӗ енне ҫаврӑнчӗ.

— Пултараймастӑп,— терӗ вӑл хупӑ сасӑпа.

— Хӑравҫӑ!— терӗ капитан.

Пӑшал сасси янрарӗ. Пульӑ манӑн чӗркуҫҫине шӑйӑрса кайрӗ. Эпӗ, хӑвӑртрах площадкӑ хӗрринчен пӑрӑнас тесе, хам сисмен ҫӗртенех темиҫе утӑм малалла ярса пусрӑм.

— Ну, Грушницкий шӑллӑм, шел тивертейменшӗн!— терӗ капитан.— Халӗ ӗнтӗ санӑн черет, кайса тӑр! Малтан мана ытала: эпир урӑх пӗр-пӗрне кураймӑпӑр. Вӗсем пӗр-пӗрне ыталарӗҫ; капитан кӗҫ-вӗҫ кулса ямасть:— Ан хӑра,— хушса хучӗ вӑл, Грушницкий ҫине чеен пӑхкаласа.— Тӗнчере ырри нимӗн те ҫук! Кӑмӑл сӑмах — йӗплӗ ҫӑмах, кун-ҫул — ҫук чун, пӗтсен — ухмах, теҫҫӗ.

Ҫак трагикла сӑмахсене мӑнаҫлӑхпа каланӑ хыҫҫӑн вӑл хӑйӗн вырӑнне кайса тӑчӗ; Иван Игнатьевич та, куҫҫульне кӑларса, Грушницкие ыталаса илчӗ, акӑ вӑл пӗр-пӗчченех мана хирӗҫ тӑрса юлчӗ. Халичченех тӗлӗнетӗп вара эпӗ, мӗнле кӑна туйӑм вӗремерӗ-ши ҫавӑн чух ман кӑкӑрта: ҫак мӑн кӑмӑллӑ та лӑпланнӑ чӑрсӑрлӑхпа пӑхса тӑракан ҫын хам чӗрене кӳрентерни те, курайманлӑх та, йӗрӗнтерни те пулчӗ, вӑлах-ҫке пӗр-икӗ минут каярахпа кӑна хӑйне нимӗнле хӑрушлӑх умне те тӑратмасӑр мана йытта вӗлернӗ пек персе вӗлерессӗнччӗ, урам кӑшт ҫеҫ ытларах суранланнӑ пулсан, эпӗ чул ту ҫинчен персе анаттӑмах ӗнтӗ.

Пăртак та пулин ўкĕнет-ши вăл, тесе эпĕ ăна куçран темиçе минут хушши тинкерсе пăхрăм. Анчах вăл мана кулса ярасран аран чăтса тăнă пек туйăнчĕ.

— Вилес умĕн турра пуç çапма сĕнетĕп эпĕ сире,— терĕм вара ăна эпĕ.

— Ман чунăмшăн хăвăрăнниичен ытла та чăрманăр. Хăвăртрах пемешкĕн кăна ыйтатăп эпĕ сирĕнтен.

— Эсир хăвăр элекĕртен сивĕнместĕр-и? Қаçару та ыйтмастăр-и манран?.. Лайăхрах шухăшласа пăхăр; кăмăлăр сире мĕн те пулин калĕ.

— Печорин господин!— кăшкăрчĕ драгун капитанĕ.— Эсир кунта çылăх каçарттарма килмен-çке, çавна ан манăр... Еçе хăвăртрах пĕтерĕр; ту хушшипе иртсе çўрекенсем пулĕç — пире вĕсем курма пултарĕç.

— Юрĕ. Доктор, килĕр-ха ман пата.

Доктор пырса тăчĕ. Мĕскĕн доктор: Грушницкий вунă минут каярах шуралчĕ те, вăл унран та шурăрах.

Ак çак сăмахсене вара эпĕ юриех, вилĕм приговорне вуласа панă пек, татса та хыттăн, ăнланмалла каларăм:

— Доктор, ку улпутсем хыпаланнă майпа ман пистолет ăшне пульă хума маннă: ăна çĕнĕрен авăрласа парăр-ха, лайăхрах авăрлăр!

— Пулма пултараймасть!— кăшкăрчĕ капитан:— пулма пултараймасть апла! Эпĕ икĕ пистолетне те авăрланăччĕ; сирĕн пистолетăртан пульă тухса ўкнĕ пулин çеç... Вăл манăн айăп мар!— Анчах сирĕн çĕнĕрен авăрламашкăн тивĕçĕр çук... нимĕнле тивĕçĕр те... Ку вара пĕтĕмпех йĕркене хирĕçле пулать; эпĕ ирĕк памастăп...

— Юрĕ эппин!— терĕм эпĕ капитана:— апла пулсан, эпир сирĕнпе те çак условисемпех перĕшетпĕр...

Вăл нимĕн калама аптрарĕ.

Грушницкий пуçне кăкăрĕ çине ўсрĕ те, тарăхса, кичеммĕн пăхса тăрать.

— Ан хăтлан ĕнтĕ!— терĕ вăл юлашкинчен капитана, лешĕ доктор аллинчен пистолета туртса илесшĕн тăнă чух...— Хăвах пĕлетĕн вĕт вĕсем тĕрĕс тунине.

Капитан ăна кăлăхах тĕрлĕрен паллăсем парать, Грушницкий пăхасшăн та мар. Çав хушăра доктор пистолета авăрларĕ те ăна мана тыттарчĕ.

Çавна курсан, капитан сурчĕ те урипе тапрĕ.— Ухмах та çав эсĕ, ачам,— терĕ вăл:— ирсĕр ухмах! Ĕнтĕ пĕрре ман çине шаннă пулсан, эпĕ мĕн калаçине пурне

те итлесе тăр... Çавă кирлĕ сана! шăна пекех вилсе вырт эппин...— Вăл аяккалла пăрăнчĕ те:— çапах, та ку пачах йĕркене хирĕçле пулать,— тесе мăкăртатрĕ.

— Грушницкий!— терĕм эпĕ:— халь вăхăт пур-ха: йышăн хăвăн элекне, вара эпĕ сана пĕтĕмпех каçаратăп. Эсĕ мана ухмаха лартаймарăн, çавăнпа çырлахатăп эпĕ,— асна ил-ха, эпир санпа туссем пулнăччĕ-çке.

Унăн пичĕ хĕрелсе кайрĕ, куçĕ йăлтăртатрĕ.

— Перĕр!— терĕ вăл:— Эпĕ хамран йĕрĕнетĕп, сире кураймастăп. Эсир мана вĕлерейместĕн, эпĕ сире çĕрле пĕр-пĕр кĕтесре чиксе пăрахатăп. Иксĕмĕртен пĕрне вырăн çук пире çĕр çинче...

Эпĕ персе ятăм...

Тĕтĕм сирĕлсен, Грушницкий площадкă çинче курăнмарĕ. Сакăлта хĕрринче çăмăллăн тусан тусса тăрать.

Пурте пĕр сасăпа ахлатса ячĕç.

— Пĕтрĕ мыскара!— терĕм эпĕ доктора.

Вăл сăмах хушмарĕ, хăранипе аяккалла пăрăнчĕ.

Эпĕ хул пуççийĕме хĕскелерĕм те Грушницкий секунданчĕсене пуç тайрăм.

Сукмак тăрăх аялалла аннă чух чулсем хушшинче Грушницкийĕн юнланса пĕтнĕ кĕлеткине асăрхарăм. Ирĕксĕрех эпĕ куçăма хупрăм...

Лашана салтсан, эпĕ килелле уттарса кайрăм. Манăн чĕрере чул выртатчĕ. Хĕвел тĕксĕммĕн туйăнать, ун çути мана ăшăтаймасть.

Яла çитес умĕн эпĕ лашана сылтăмалла çавăртăм та ту хушшипе кайрăм. Çын çине пăхма та йывăрччĕ мана: пĕччен пулас килчĕ. Чĕлпĕре пăрахрăм, нумайччен пуçа усса пытăм, унтан вара пĕр пĕлмен вырăна пырса тухрăм; эпĕ лашана каялла çавăртăм, çул шырама пуçларăм, Кисловодск патне çитнĕ чух хĕвел анма пуçланăччĕ, хам та, лашам та самай ĕшеннĕччĕ.

Тарçăм мана Вернер килни çинчен каласа пачĕ, унтан икĕ çыру тыттарчĕ,— пĕри унранччĕ, тепри... Верăран.

Пĕрремĕшне тытса уçрăм та, унта çапла çырнăччĕ:

«Пурне те, мĕн май пур таранах, лайăх турăмăр: суранланса пĕтнĕ ӳтне хурса килнĕ, пулине кăкăрĕнчен кăларнă. Пурте ăна: инкеке пула вилнĕ, теççĕ; комендант кăна пуçне сулкаларĕ те нимĕн те шарламарĕ, эсир тавлашнине пĕлет пуль вăл. Сире хирĕç нимĕнле

сăлтав та çук, çавăнпа эсир, çывăрайсан, лăпкăн çывăрма та пултаратăр... Сывă пулăр...»

Иккĕмĕш çырăва эпĕ нумайччен уçмасăр иккĕленсе тăтăм... Мĕн çырма пултарнă вăл ман пата!.. Темĕн йывăр пуласса сисни ман ăша вăркатать.

Ак çав çыру, вăл ман пуçа манăçми кĕрсе ларчĕ:

«Эпĕ пĕрне-пĕри урăх нихçан та курас çуккине туйса пĕтĕмпех шанса çыратăп. Темиçе çул каярах санпа уйрăлнă чухне те çавăн пекех шутланăччĕ; анчах пӳлĕхçĕм мана иккĕмĕш хутчен те тĕрĕслемелле турĕ; эпĕ çав тĕрĕслеве чăтаймарăм, хавшак чĕрем каллех паллана сасса парăнчĕ... Çакăншăн эсĕ манран йĕрĕнес çук, тĕрĕс каламастăп-и? Ку çырăвăмра ĕнтĕ уйрăлни те, çылăх каçарттарни те пулĕ: чĕрем сана юратма пуçланăранпа унта мĕн тулса çитнине йăлтах кăтартмалла манăн. Эпĕ сана айăп тумăп — ман çине эсĕ ытти пур арçынсем пăхнă пекех пăхрăн: хăвăн япалу пек пăхрăн, хаваслăх та пăшăрхану е куляну паракан хăвата курнă пек юратрăн, вĕсем пĕр-пĕринпе улшăнсах пынă, вĕсем пулмасан пурнăç та кичем-çке. Эпĕ ăна малтанах ăнлансаттăм... Анчах эсĕ телейсĕр пултăн, çавăнпа та эпĕ сан вырăнна хам телейсĕр пулма килĕшрĕм, эп çапла тунине эсĕ хăçан та пулин хака хурăн, терĕм, хăçан та пулин манăн нимĕне пăхăнман ачашлăха хаклăн, тесе шутларăм. Унтанпа нумай вăхăт иртрĕ ĕнтĕ: эпĕ санăн чунăнти пур вăрттăн кĕтессӳсене те пĕлсе çитрĕм те ăнлантăм... сана шанса тăни кăлăхах пулчĕ иккен. Йывăр пулчĕ мана. Анчах ман юрату чĕрем çумне ӳссех ларнă-мĕн: вăл хуралса кайнă, çапах та сӳнмен.

«Эпир ĕмĕрлĕхех уйрăлатпăр; апла пулсан та, эсĕ шансах тăма пултаратăн, эпĕ нихçан та урăххине савас çук: чунăм саншăн хăйĕн пĕтĕм хăватне, пĕтĕм куççульне те пĕтĕм шанчăкне пĕтерсе хучĕ. Сана пĕр хутчен юратса тăнă хĕрарăм ытти арçынсем çине йĕрĕнмесĕр пăхаймасть, эсĕ вĕсенчен лайăхрах пулнипе мар, эх, çук! анчах сан ăшăнта пĕр хăвна çеç пӳрнĕ темĕнле уйрăм хăват, темĕнле асамлăх та мăнаçлăх пур; сассăнта,— ху кирек мĕн каласан та — никам çĕнтерейми хăвату пур; никам та хăйне çавăн пек ялан юраттарасшăн тăрăшма пултараймасть; никам куçĕ те çав тери ырлăха ĕмĕтлентереймест; никам та хăйĕн вăйлă-енĕсемпе çав тери тасан усă курма пултараймасть, тата никам та сан пек çав тери чăн-чăннипех телейсĕр пулма пултараймасть,

мĕншĕн тесен никам та çав таран хăйне телейлĕ тесе ĕнентерме тăрăшмасть.

«Халĕ ĕнтĕ ман сана хам мĕншĕн кунтан васкавлăн тухса кайнине ăнлантарса памалла; сăлтавĕ сана пĕчĕккĕ пек туйăнĕ, мĕншĕн тесен вăл мана хама çеç тивет.

«Паян ирпе упăшкам ман пата кĕчĕ те эсĕ Грушницкипе тавлашни çинчен каласа пачĕ. Эпĕ питех те сăнран улшăнтăм пулас, мĕншĕн тесен вăл мана куçран тинкерсе пăхрĕ; санăн паян çапăçмалла пулни çинчен пĕлсен, хам та айăплă пулнăран кĕçех ăнран кайса ӳкеттĕм; мана хам ăнран каяс пек туйăнчĕ... Анчах халĕ, хам ăсăмпа шухăшлама пултарнă чух, эсĕ чĕрех юласса шанатăп эпĕ, вилме пултараймастăн эсĕ мансăр, пултараймастăн! Манăн упăшка нумайччен пӳлĕм тăрăх уткаласа çӳрерĕ; вăл мана мĕн каланине пĕлместĕп, хам мĕн каланине те ас тумастăп... ăна эпĕ сана юрататăп, тенĕ пулас. Сăмах вĕçĕнче вăл мана калама çук усал сăмахпа кӳрентерчĕ те тухса кайрĕ, çакна çеç ас тăватăп. Унтан вăл каретă кӳлме хушнине илтрĕм... Акă виçĕ сехет те çитет, чӳрече умĕнче эсĕ таврăнассине кĕтсе ларатăп эпĕ... Эсĕ чĕрех, эсĕ вилме пултараймастăн... Каретă хатĕрпе пĕрех.. Сывă пул, сывă пул!.. Эпĕ пĕтрĕм, анчах мĕн инкекĕ пур?.. Эсĕ мана яланах асра тытассине шанма пулсан, ...юратасси çинчен каламăп та,— çук, асра çеç тытсан, вара... шанса тăма пултарăттăм... Сывă пул, килеççĕ... ман çырăва пытармалла...

«Эсĕ Мерине юратмастăн вĕт, çапла-и? Эсĕ ăна качча илес çук вĕт? Итле-ха, çапла-çке: эпĕ саншăн тĕнчере мĕн пуррине йăлтах çухатрăм-çке...»

Ухмаха ернĕ çын пек крыльца çине сиксе тухрăм эпĕ, карташ тăрăх çавăтса çӳрекен черкес утăма утлантăм та вара Пятигорск çулĕ тăрăх вĕçтертĕм. Ĕшенсе çитнĕ утăма нимĕн хĕрхенмесĕр хăвалатăп, вăл пĕтĕмпех кăпăка ӳкрĕ, хартлатса, чуллă çул тăрăх вĕçтерсе пырать.

Хĕвеланăçри ту хысакĕ тăрăх капланнă хура пĕлĕт хыçне пытаннăччĕ; ту хушшинче тĕттĕм пулчĕ, чĕрĕ сулхăн çапрĕ. Подкумок, чулсем çийĕн юхаканскер, янравсăр та пĕр евĕрлĕ кĕрлет, эпĕ чăтаймасăр сывлăш пӳлĕниччене лашама хăвалатăп. Верăна Пятигорскра курас çук тенĕ шухăш ман чĕрене мăлатукпа çапать. Пĕр минут тата пĕр минут курасчĕ ăна, сыв пуллашасчĕ, аллине чăмăртасчĕ... Эпĕ кĕл тăвататăп, ылханатăп,

макăратăп, кулянатăп... çук, эпĕ пăшăрханнине, тарăхнине нимĕнпе те пĕлтерме çук! Ана ĕмĕрлĕхех çухатма пултарасси çинчен шухăшласан, Вера маншăн тĕнчере темрен те хаклăрах,— пурнăçăмран та, чысăмран та, телейĕмрен те хаклăрах пек туйăнчĕ! Пуçăмра мĕнле тĕлĕнмелле те урнă шухăшсем сĕрлесе хăпнине турă пĕлет... Çапах та эпĕ нимĕне пăхмасăр лашана пĕрмай хăвалатăп. Акă хайхи утăм пашканине асăрхама пуçларăм. Вăл тӳрем çĕртех пĕр-икĕ хутчен чăрănса та илчĕ... Ессентукине — казаксен станцине — çитиччен пилĕк çухрăм юлчĕ, унтан урăх лашапа кайма та пултараттăм.

Лашам тата пĕр вунă минутлăх вăйне çитерейсен, пĕтĕмпех çăлса хăварма пултарнă пулăттăм. Анчах сасартăк, ту хушшинчен тухнă чух, пĕр пĕчĕк çырмаран улăхнă çĕрте, çаврăнма чăнкă тĕлте, вăл çĕре персе ӳкрĕ. Эпĕ йăпăр-япăр сиксе антăм, тăратасшăн пултăм ăна, чĕлпĕрĕнчен турткаларăм, усси çук; хĕстернĕ шăлĕсем витĕр хуллен йынăшни илтĕнчĕ; кăштах тăрсан вăл вилсе те кайрĕ, юлашки шанчăка çухатса, эпĕ пĕр-пĕчченех çеçен хир варринче тăрса юлтăм; çуран кайма тăтăм — ура лăштăрах кайнă; иртен кунхи пăшăрханусемпе ĕшенсе, çывăрайманнипе тертленсе çитнĕскер, эпĕ йĕпе курăк çине ӳкрĕм те пĕчĕк ача пек макăрса ятăм.

Нумайччен эпĕ пĕр хускалмасăр выртнă, куççулĕме тытма тăрăшмасăр татăлса йĕтĕм, кăкăрăм çурăлать пуль тенĕччĕ; пĕтĕм вăй-хăватăм, пĕтĕм хастарлăхăм тĕтĕм пек сирĕлчĕ; чунăм халсăрланчĕ, ăсăм шăпланчĕ, çав самантра мана кам та пулин курнă пулсан, вăл манран йĕрĕнсех пăрăннă пулĕччĕ.

Каçхи сывлăмпа ту çилĕ манăн çуннă пуçăма уçăлтарсан тин, ăс-тăнăм яланхи пек йĕркене кĕрсе çитсен тин пĕтнĕ телей хыççăн хăвалани усăсăр та ăссăр иккенне тавçăрса илтĕм эпĕ. Тата мĕн кирлĕ ĕнтĕ мана? Çавна курас-и тата? Мĕншĕн? Пирĕн хушăра пĕтĕмпех пĕтеймен-и вара? Сыв пуллашнă май кӳренсе чуп туни кăна манăн асăмсене пуйтараймасть ĕнтĕ, ун хыççăн пире уйрăлмашкăн кăна йывăртарах пулать.

Çапах та эпĕ макăрма пултарни юрĕ-ха! Вăл ĕнтĕ нервăсем урмăшнипе те пулĕ, çывăрмасăр çĕр каçнипе, пистолет кĕпçи умĕнче икĕ минут хушши тăнипе тата вар-хырăм пушаннăран та килет пулĕ.

Пурте лайăха! Çак çĕнĕ асап, çар чĕлхипе каласан,

манăн ăшра телейлĕ диверси[1] туса ирттерчĕ. Макăрни сывлăхшăн усăллă, унтан тата эпĕ утпа çӳремен пулсан, каялла ирĕксĕрех вун пилĕк çухрăма çуран утман пулсан, çав каçхине куçăма та хупман пулăттăм.

Кисловодска ирпе пилĕк сехетре таврăнтăм, вырăн çине çитсе ӳкрĕм те, Наполеон Ватерлоо[2] хыççăн сывăрнă пек, сывăрса кайрăм.

Эпĕ вăраннă чух тулта тĕттĕм пулнăччĕ, уçнă чӳрече умне лартăм та архалука вĕçертсе ятăм, вара ĕшеннĕ хыççăнхи йывăр ыйхăпа лăпланайман кăкăра ту çилĕ уçăлтарчĕ. Çырма леш енче, инçетре пуçĕсене шывалла сĕнксе тăракан йăвă çăка тăррисем витĕр, крепоçри тата ялти çуртсенчи хăй çутисем курăнаççĕ. Пирĕн карташĕнче шăпах, княгиньă пӳртĕнче тĕттĕм.

Доктор кĕчĕ: унăн çамки картланнă, вăл яланах мана алă параканччĕ, халĕ ман паталла аллине тăсмарĕ.

— Доктор, ăçтан эсир?

— Лиговская княгиньă патĕнчен, унăн хĕрĕ сывă мар — нервисем халсăрланнă... Ун пирки мар-ха ĕç, акă мĕн çинчен калаçассăм пур: пуçлăхсем сисеççĕ, анчах кăтартса паракан сăлтавсем çук, çапах та эпĕ сире асăрхансарах тăма сĕнетĕп. Княгиньă мана паян: эпĕ пĕлетĕп вĕсем манăн хĕршĕн перĕннине, терĕ. Ана, хай, леш старик пĕтĕмпех каласа панă... Мĕн ятлăччĕ-ха вăл эсир ресторацире Грушницкипе хирĕçсе кайнине куракане? Эпĕ сире систерме тесе килтĕм.— Сывă пулăр. Тен, эпир урăх кураймăпăр; сире ăçта та пулсан ăсатĕç.

Вăл алăк умĕнче чарăнса тăчĕ: аллăма тытса чăмăртасси килчĕ унăн... Эпĕ ун аллине чăмăртас тенĕ пулсан, вăл мана мăйран ыталаса тытнă пулĕччĕ, анчах эп, чул пек, вырăнтан тапранмарăм — вăл тухса кайрĕ.

Пулаççĕ-çке çынсем, пурте çавăн пек вĕсем: ĕçĕн усал енĕсене малтанах пĕлсе тăраççĕ, урăх май çуккине кура, пулăшаççĕ те, канаш та параççĕ, ырлаççĕ те-ха ăна, кайран вара хăйсем çинчен хываççĕ те ответ тытма хăяканнинчен тарăхса пăрăнаççĕ. Пурте çавăн пек вĕсем, çитменнине чи ăслисем те çавăн пек.

Тепĕр кун ирпе, крепоçа кайма аслă пуçлăхсенчен приказ илсен, эпĕ княгиньă патне сыв пуллашма кĕтĕм.

---

[1] Диверси — сăмаха кунта: урăххи çинчен шухăшлама май пачĕ, тенĕ пек ăнланмалла.

[2] Ватерлоо — Бельгири ял. Ватерлоо патĕнчи çапăçура 1815 ç. Франци императорне Наполеона пĕтĕмпех çĕнтернĕ.

— Сирен мана уйрăммăнах хыпар каламалли пур-и?— тесе ыйтре вăл манран.

— Телейлĕ пулма сунатăп,— терĕм ăна эпĕ, тата çавăн майлă каларăм та, вăл тĕлĕнсе кайрĕ.

— Манăн сирĕнпе пит пысăк сăмах пур,— терĕ вăл. Эпĕ шăппăн лартăм.

Сăмах мĕнрен пуçламаллине пĕлменни уççăнах курăнать: унăн пичĕ херелсе кайрĕ, çемçе пӳрнисемпе сетел çине шăлкалать, каярахпа вара тытăнчăклă сассипе сăмахне вăл çапла пуçласа ячĕ:

— Итлĕр-ха, мсье Печорин, эп сире ырă çын пуль тетĕп.

Эпĕ пуçăма тайрăм.

— Çакна ĕненетеп те-ха эпĕ,— терĕ вăл малалла,— эсир хăвăра тыткалани кăштах иккĕлентерет те, анчах сирĕн ун пек тума сăлтавăр пур-тăр, эпĕ вĕсене пĕлместĕп, çавăнпа сирĕн мана шанса весем çинчен каласа памаллах. Эсир манăн хĕре элекрен хӳтĕлерĕр, уншăн пурнăçăра хĕрхенмерĕр, перĕшни те... Ан та калăр, эсир ун пирки йышăнмасса пĕлетĕп эпĕ, мĕншĕн тесен Грушницкие персе вĕлернĕ (вăл сăхсăхса илчĕ). Турă каçарĕ ăна — сире те каçарасса шанатап!.. Унта есĕм çук манăн... Эпе сире ятлама пултараймастăп, мĕншĕн тесен сăлтавĕ, айăпсăр пулин те, манăн хĕр пирки пулнă. Вăл мана пĕтĕмпех каласа кăтартрĕ... пĕтĕмпех тесе шутлатăп эпе: эсир ăна хăвăр савса тăни çинчен каласа панă, вăл сире хăй юратни çинчен пĕлтернĕ (çакăнта княгиньă йывăррăн сывласа илчĕ). Анчах вăл чирлĕ, эпĕ туйсах тăратăп, ахаль чир мар вăл! Ана вăрттăн хуйхă пусать: тӳррипе каламасть те, анчах эпĕ пĕлетĕп, сăлтавĕ сирĕнте кунта... Итлĕр-ха, эсир шухăшлатăр пуль, эпĕ пысăк чин та пуянлăх шыратăп тесе,— ан шутлăр: хĕрĕме çеç телейлĕ тăвасшăн; сире хальхи вăхăтра ăмсанмаллах мар, анчах вăл иртме пултарать. Пурлăхăр пур; манăн хĕр юратать сире, ăна упăшкине телей кăтартма воспитани панă. Эпĕ пуян, вăл ман пĕртен пĕр хĕр... Калăр, мĕн сире тытса тăрать? Куратăр-и, манăн сире çаксене йăлтах каламалла марччĕ те, анчах эпĕ сирĕн чĕрĕре, сирĕн чыслăхăра шанатăп,— аса илĕр-ха, манăн пĕр хĕр... пĕрре...

Вăл макăрса ячĕ.

— Княгиньă,— терĕм эпĕ,— сире пĕр сăмах та ка-

лаймастăп эпĕ; хĕрĕрпе улах çĕрте калаçса пăхма ирĕк парсамăр...

— Нихçан та!— тесе кăшкăрчĕ вăл, ăшĕ вăрканипе пукан çинчен çĕкленсе.

— Кирек мĕн тăвăр эппин,— терĕм эпĕ, тухса кайма хатĕрленсе.

Вăл шухăша кайрĕ, аллипе паллă туса мана кĕтсе тăма хушрĕ те тухса кайрĕ.

Пилĕк минута яхăн иртрĕ; чĕрем хыттăн тапать, анчах шухăшăм лăпкă, пуçăм сивĕ, хамăн чунăм чипер Мерине пĕр хĕлхем те пулин юратнине мĕн чухлĕ шырамарăм пулĕ, çапах та манăн тăрăшни кăлăхах пулчĕ.

Акă алăк уçăлчĕ те, вăл кĕчĕ. Турă çырлах! Ăна юлашки хут курнăранпа мĕн тери улшăннă иккен вăл,— нумай пулатчĕ-и унтанпа?

Пӳлĕм варрине çитсен вăл тайкаланма пуçларĕ; эпĕ сиксе тăтăм та, аллăма парса, ăна пукан патне çавăтса çитертĕм.

Акă ĕнтĕ ăна хирĕç тăратăп. Пайтахчен ним те чĕнмерĕмĕр эпир; унăн çав тери хуйхăллă пысăк куçĕсем манăн куçра темĕскер шанчăк шыранă пек пăхрĕç: шуралса кайнă тутисем ăшшăн куланçи пулчĕç; чĕркуççи çине хуçлатса хунă çепĕç аллисем те çав тери ырхан та витĕрех курăнаççĕ, эпĕ ăна ытла хĕрхентĕм.

— Княжна,— терĕм эпĕ,— эсир пĕлетĕр пулĕ эпĕ сиртен кулнине?.. Эсир йĕрĕнмелле ĕнтĕ манран.

Унăн пит çăмарти хĕрелсе кайрĕ.

— Çавăнпа эсир мана юратма та пултараймастăр,— терĕм эпĕ малалла.

Вăл аяккалла çаврăнчĕ; чавсипе сĕтел çине таянса куçне аллипе хупларĕ те куççульне çутатнă пек туйăнчĕ.

— Ах турă!— терĕ вăл аран илтĕнмелле.

Кăна чăтма çук пула пуçларĕ: тепĕр минутранах эпĕ ун умне чĕркуçленнĕ пулăттăм.

— Çапла ĕнтĕ, эсир хăвăрах куратăр,— терĕм эпĕ мĕн пултарнă таран лăпкă сасăпа, ирĕксĕрех кулнă пек туса:— эсир хăвăрах куратăр эпĕ сире качча илейменнине. Эсир халь çавăн пек тăвас тетĕр пулсан та, часах ӳкĕннĕ пулăттăрччĕ. Аннĕрпе калаçни мана ирĕксĕрех сирĕнпе нимĕн пытармасăр та кăнттамммăн калаçма сĕнет; вăл тĕрĕс мар ăнланать-ха, тетĕп эпĕ. Эсир ăна урăхла майпа та ĕнентерме пултаратăр. Ĕнтĕ куратăр пулĕ, эпĕ сирĕн умăрта чи мĕскĕн те чи ирсĕр ĕç тăватăп, çитмен-

кине тата тунмастăп та ун пирки; çакна çеç тума пултаратăп эпĕ сирĕншĕн... Эсир ман çинчен кирек мĕнле усал шухăшласан та, унпа ман килĕшмеллех... Куратăр пулĕ, эпĕ сирĕн умăрта ниме юрăхсăр çын... Тĕрĕс мар-и, эсир мана халиччен юратса тăнă пулин те, çак минутран пуçласа манран йĕрĕнекен пулатăр!..

Вăл мрамор пек шуралса кайрĕ, ман еннелле çаврăнса пăхрĕ, куçĕ çеç тĕлĕнмелле йăлтăртатса илчĕ.

— Эпĕ сире кураймастăп...— терĕ вăл.

Эпĕ тав турăм, хисеплĕн пуç тайрăм та тухса кайрăм.

Тепĕр сехетрен курьер тройки мана Кисловодскран сиктерсе илсе кайрĕ. Ессентуки патне çитес чухне эпĕ çул хĕрринчи хамăн харсăр утăм виллине палларăм; иртен-çӳрен казаксем йĕнерне хывса илнĕ пулас та, йĕнерĕ вырăнне унăн çурăмĕ çинче икĕ çăхан ларатчĕ. Эпĕ ассăн сывласа илтĕм те пăрăнтăм...

Халĕ акă, кунта, çак кичем крепоçра, эпĕ час-часах иртнине аса илнĕ май хамран хам: мĕншĕн эпĕ ăраскал хам уçса панă çул çине тăрасшăн пулмарăм-ши тесе тĕпчетĕп: унта мана тӳлек савăнăç та ăшри канăçлăх кĕтетчĕ-çке... Çук, эпĕ ун пек кун-çулпа килĕшес çукчĕ! Эпĕ вăрă-хурахсен бригĕ[1] çинче çуралса ӳснĕ матрос пек: çав матросăн чунĕ тăвăлпа çапăçăва йăлтах хăнăхса çитнĕ, ăна типĕ çĕр илĕртеймест, сулхăн ката та, лăпкă хĕвел епле савăнса çутатни те ăна илĕртес çук: кунĕпех вăл тинĕс хĕрринчи хăйăр тăрăх утать, хум çине кĕрсе пĕр евĕрлĕ саспа кĕрлекен тинĕс шавне итлет те тĕтреллĕ инçете тинкерсе пăхать: курăнмĕ-ши унта çав кăвак тинĕспе хăмăр пĕлĕт хушшинче шыв чарланĕн çунатти пек çуталакан ĕмĕтри парăс? Пысăк хум кăпăкĕсенчен пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн уйрăлса пушă пристань патнелле пĕр тикĕс çывхарса килмест-ши вăл?



[1] Бриг — икĕ мачтăллă пĕчĕк карап.



# III

## ФАТАЛИСТ[1]

Пĕрре мана тепле майпа казаксен станцинчи сулахай флангра пĕр икĕ эрне хушши пурăнма тÿрĕ килчĕ; çавăнтах пĕр батальон пехотă та тăратчĕ; офицерсем пĕр-пĕрин патне пухăнатчĕç, каçсерен картла вылятчĕç.

Пĕрре, бостонпа[2] йăлăхса çитсе, картсене сĕтел айне пăрахсан, эпир С. майор патĕнче пайтахчен ларсаттăмăр; калаçу яланхи пек мар илĕртмелле пулчĕ. Сăмахăмăр этем ăраскалне пĕлĕт çинче çырса хунă тесе шухăшлакан мусульмансем пек çынсем хамăр хушăра та нумай пурри çинчен пычĕ; кашниех тĕрлĕрен тĕлĕнмелле ĕçсем çинчен каласа пачĕç.

— Тăвансем, эпир калаçни нимĕскере те татса параймасть,— терĕ ватă майор,— шухăшăрсене тĕрĕс тесе калакан хăрушă япаласене сирĕнтен никам та курман вĕт?— терĕ вăл.

— Курманах ĕнтĕ, анчах эпир шанчăклă çынсенчен илтнĕ,— терĕç нумайăшĕ.

— Çаксем пĕри те тĕрĕс мар!— терĕ тахăшĕ.— Ăçта вĕсем, пирĕн хăш сехетре вилме пÿрнине çырса хунă

[1] **Фаталист** *латинла («фатум»* сăмахран)— ăраскалăм малтанах çырса хунă, этем ăна хирĕç кĕрешме пултараймасть, тенине ĕненекенскер.

[2] Бостон — картла выляни.

списока курнă шанчăклă çынсем?.. Малтанах çапла пĕлсе тăни пур пулсан, мĕншĕн эппин пире ăс-хакăл та, ирĕк те панă-ха? Мĕншĕн пирĕн хамăрăн мĕн туни çинчен пĕтĕмпех каласа памалла?

Çав вăхăтра пĕр офицер, пÿлĕм кĕтессинче лараканскер, ура çине тăчĕ те, сĕтел патне васкамасăр пырса, пурин çине те лăпкăн та савăнăçлăн пăхса илчĕ. Вăл серб çынниччĕ, çапла иккенне ятĕнчен те пĕлме пулать.

Вулич поручикăн сăн-сăпачĕ хăйĕн характерне тивĕçлĕччĕ. Пĕвĕ çÿллĕ, пит-куçĕ тĕксĕмрех, çÿçĕ хура, тинкерсе пăхакан хура куçлă, пысăк та, çапах чипер сăмсаллă, ун нацийĕн уйрăмлăхĕ,— тути çинче ĕмĕр палăрса тăракан салху та сивĕ кулли,— çаксем пурте ăна ăраскал хăйне юлташлăха панă çынсене хăйĕн шухăшĕсемпе хăй мĕн юратнисене каласа кăтартма пултарайман çын пек палăртаççĕ.

Вăл паттăр пулнă, сахалтарах та, анчах тÿрĕ калаçать, хăйĕн ăшĕнчи е çемьери вăрттăн шухăшĕсене никама та пĕлтермест; эрех тутанса та пăхмасть, темелле: çамрăк казачкăсем хыççăн,— вĕсене хăйсене курмасăр ытарайманлăхне пĕлме йывăр,— вăл нихçан та сĕтĕрĕнмен. Çапах та полковник арăмĕ, унăн çивчĕ куçне кура, ун çине ăшшăн пăхкалать, тетчĕç: вăл вара çакăн çинчен юптарса каласан çилленмеллипех çилленетчĕ.

Вулич картла выляма пит юратать — ăна вăл никамран та пытарса тăмасть вара. Симĕс сĕтел хушшинче вăл пурин çинчен те манса каять; çитменнине, ялан тенĕ пекех, выляса ярать; анчах выляса яни унăн выляс кăмăлне хĕтĕртет кăна. Пĕрре çапла, экспедици ирттернĕ чух, çĕрле, вăл минтер çинче банк янă пулать те, унăн калама çук пысăк ăнăç пулнă, имĕш. Çав вăхăтра сасартăк пăшалсемпе пени илтĕне пуçланă, пăшăрханнипе пурте сиксе тăнă та пăшалĕсем патне чупнă. «Хур-ха пĕтĕм банкна!» тесе кăшкăрса янă, тет, Вулич чи хĕрÿллĕ понтерĕсенчен[1] пĕрне: «манăн çиччĕллĕ карт каять», тесе каланă, тет, лешĕ чупса кайнă майăн. Çынсем хăшкăлса чупнине пăхмасăр Вулич карт валеççе панă, тет.

[1] Понтер — хĕрÿллĕ вăйăсенче — банк яракана хирĕç пĕр-пĕр карт çине укçа хуракан çын.

Вăл ыттисем патне ҫитнĕ ҫĕре лере вăйлă кĕрешӳ пына. Вулич пульăсем ҫинчен те, чеченецсен хĕҫĕсем ҫинчен те шухăшламан: вăл хăйĕн телейлĕ понтерне шыраса тупнă.

— Ҫиччĕллине патăм сана,— тесе кăшкăрнă вăл ăна, вăрманти тăшмана хĕссе кăларма пуҫланă салтаксем хушшинче курсан, унтан ҫывăхарах пырса, вăл хăйĕн кошелекĕпе бумажникне кăларнă та, лешĕ кунăн парăмне йышăнасшăн пулмасан та, укҫине тыттарса хăварнă. Парăмне татнипе кăмăлĕ ҫаврăнсан, вăл малалла чупнă, салтаксене хăй хыҫҫăн ертсе кайнă, вара вăл кĕрешӳ вĕҫне ҫитичченех хирĕҫ нимĕн хăрамасăр ҫапăҫнă.

Вулич поручик сĕтел патне пырса тăрсан, вăл пĕр-пĕр тĕлĕнмелле ĕҫ тăвасса кĕтсе, пурте шăп пулчĕҫ.

— Тăвансем,— терĕ вăл, сасси унăн лăпкă та, анчах яланхинчен хулăнрах,— тăвансем, мĕн тавлашмалли пур унта? Сире кăтартса пани кирлĕ:— хăвăр ҫинчех сăнаса пăхма сĕнетĕп сире этем хăй пурнăҫне хăй тыткалама пултарнинe. Кашни ҫыншăнах вăл хăҫан вилмеллине малтанах палăртса хунă-и?.. Кам ҫавна пĕлмешкĕн килĕшет?

— Эпĕ мар, эпĕ мар! Вăт тĕлĕнтермĕш! Тупнă-ҫке шыраса!..— тенĕ сасăсем илтĕнчĕҫ пур енчен те.

— Тавлашатăп,— терĕм эпĕ шӳт туса.

— Мĕнле?

— Ҫынна мĕн пулмаллине малтанах ҫырса хуман, тетĕп,— терĕм эпĕ кĕсъере тăрса юлнă пĕр-ик виҫ теҫетке червонеца пĕтĕмпех сĕтел ҫине силлесе.

«Тупăшатăп,— терĕ Вулич янраман сасăпа.— Майор, эсир судья пулатăр; акă, вун пилĕк червонец; ытти пиллĕкĕшне, сирĕн мана памалли пурччĕ, хутăма кĕрĕрха эппин, вĕсене ҫаксем ҫумне хушăр-ха.

— Юрĕ,— терĕ майор,— анчах ăнкараймастăп-ха, чăнах, мĕн пирки те мĕнле майпа тавлашăва татас тетĕр вара эсир?..

Вулич нимĕн шарламасăр майор ҫывăракан пӳлĕме кĕчĕ; эпир ун хыҫҫăн пытăмăр. Хĕҫ-пăшал ҫакăнса тăракан стена патне пырса тăчĕ те вăл пăтари тĕрлĕ калибрлă пистолетсенчен пĕрне, ал айне лекнине, ярса илчĕ. Эпир ăна ăнланманччĕ-ха: анчах вăл курокне пемелле туса лартса тар сапсан, нумайăшĕ ирĕксĕрех кăшкăрса ячĕҫ те ăна аллинчен ярса тытрĕҫ.

— Мĕн тăвасшăн эсĕ?— итле-ха, капла ăнран кайни пулать-çке!— тесе кăшкăрчĕç ăна.

— Тăвансем!— терĕ вăл, вăраххăн хăй аллине вĕçертсе.— Кам вара маншăн çирĕм червонец тӳлесшĕн?

Пурте шăп пулчĕç, аяккалла пăрăнчĕç.

Вулич тепĕр пӳлĕме тухрĕ те сĕтел умне ларчĕ, пурте ун хыççăн тухрĕç. Вăл пире пурсăмăра та ларса тухма сĕнчĕ. Сăмах хушмасăрах ăна итлерĕмĕр: çав самантра вăл темĕнле сисмен хушăрах пире хăй аллине çавăрса илчĕ. Эпĕ ăна куçран тинкерсе пăхрăм; ман çине вăл куçне пĕр сиктермесĕр те лăпкăн пăхса тăчĕ, шуранкарах тути йăвашшăн кулкаларĕ; хăй нимĕн пирки те пăшăрханмастчĕ пулин те, эпĕ унăн шуралса кайнă питкуçĕнче вилĕм мĕлки палăрнине ас туса илтĕм. Тахçантанпах салтакра тăнисем каласа панă тăрăх та, хам та асăрханă ĕнтĕ — çитес сехетсенче вилмелли çыннăн питкуçĕнче темĕнле вилĕм шăпи вĕçне çитни палăрать, хăнăхнă куç çавна асăрхасан йăнăшма та пултараймасть.

— Эсир паян вилетĕр! — терĕм эпĕ ăна. Вăл ман еннелле вăр-вар çаврăнчĕ те çапах та вăраххăн, лăпкăн сăмах хушрĕ:

— Вилесси те пулĕ, вилмĕп те-и, тен...

Унтан вăл майор еннелле çаврăнчĕ те пистолета авăрланă-и тесе ыйтрĕ. Майор, ăшĕ вăрканине пула, лайăх ас тумасть.

— Çитĕ, Вулич! — тесе кăшкăрчĕ тахăшĕ: — пуç вĕçĕнче çакăнса тăнăскере авăрланах ĕнтĕ; мĕн шӳт тăвасси пур!..

— Айванла шӳт! — терĕ тепри.

— Пилĕк тенкĕ ырăнне аллă тенкĕ хуратăп, пистолета авăрламан! — тесе кăшкăрчĕ виççĕмĕшĕ.

Çĕнĕрен тупăшма хатĕррисем те пулчĕç.

Çак вăрăм церемони мана йăлăхтарса çитерчĕ.

— Итлĕр-ха,— терĕм эпĕ,— е перĕнĕр, е пистолета хăй ырăнне çакса хурăр, çывăрма каймашкăн та вăхăт.

— Тĕрĕс, çывăрма каяр,— тесе кăшкăрчĕç ыттисем.

— Тăвансем, ан тапранăр ырăнăртан!— терĕ Вулич, пистолет кĕпçине çамки çине тĕллесе. Пурте хытса кайнă пек пулчĕç.

— Печорин господин,— тесе хушса хучĕ вăл,— пĕр картне илсе çӳлелле ывăтăр-ха.

Халь те ас тăватăп-ха, сĕтел çинчен черви туз картне илтĕм те çӳлелле ывăтрăм: пурте сывлами пулчĕç;

куҫсем пурин те, сехӗрленнипе тата тем курас пурринё пӗлес килнипе, пистолет патӗнчен вилӗм тузӗ ҫинелле пӑхаҫҫӗ, лешӗ сывлӑшра пӑлтӑртатса ҫавӑнса васкамасӑр анать: вӑл сӗтел ҫумне перӗннӗ самантра Вулич пистолет пускӑччине вӗҫертрӗ те... осечкӑ!..

— Мухтав турра! — авӑрламан иккен тесе кӑшкӑрса ячӗҫ нумайӑшӗ.

— Ҫапах та пӑхӑр-ха,— терӗ Вулич. Вӑл каллех курокне пемелле май туса ҫӗклерӗ те чӳрече патӗнче ҫакӑнса тӑракан карттуса тӗллерӗ: пӑшал сасси янраса кайрӗ — пӳлӗме тӗтӗм тухса тулчӗ; тӗтӗм сирӗлсен, карттусне пӑта ҫинчен илчӗҫ те: пульӑ шӑпах варринчен тухса кайнӑ иккен, стена ӑшне кӗрсе ларнӑ.

Пӗр виҫӗ минут хушши никам та сӑмах чӗнеймерӗ; Вулич манӑн червонецсене хӑйӗн кошелокне чиперех пуҫтарса чикрӗ.

Мӗншӗн пистолет пӗрремӗш хут персе яманни ҫинчен апла та капла калаҫа пуҫларӗҫ; хӑшӗсем: тарӗ таса мар пулнӑ пулӗ, теҫҫӗ, теприсем, пӑшӑлтатса: малтан тарӗ чӗрӗ пулнӑ та, Вулич кайран типпине хушнӑ, теҫҫӗ; ҫав юлашки шухӑш тӗрӗс мар тетӗп эпӗ, мӗншӗн тесен эпӗ пистолет ҫинчен куҫӑма пӗрре те сиктермерӗм.

— Вӑйӑра эсир телейлӗ вара! — терӗм эпӗ Вулича...

— Ҫуралнӑранпа та пӗрремӗш хут кӑна,— терӗ вӑл, хӑйпе хӑй ҫырлахнӑ май, йӑл кулса: — ку вара банкпа штосран[1] лайӑхрах.

— Анчах хӑрушӑрах та-ҫке.

— Мӗнле-ха эсир, пӳрни пулать тенине ӗненме пуҫларӑр-и ӗнтӗ?

— Ӗненетӗп те-ха, анчах ӑнланаймастӑп акӑ, мӗншӗн мана эсир паян пур пӗрех вилмелле пек туйӑнаттӑрччӗ?

Халь кӑна хӑйне ҫамкинчен пӗр пӑшӑрханмасӑр пеме тӗллекен ҫын сасартӑк хӗрелсе кайрӗ те нимӗн калама аптраса тӑчӗ.

— Ҫитӗ ӗнтӗ! — терӗ вӑл ура ҫине тӑрса.— Эпир тупӑшса пӗтертӗмӗр акӑ, халӗ сирӗн сӑмахӑрсем те вырӑнсӑр... Вӑл ҫӗлӗкне илчӗ те тухса кайрӗ. Ку мана темӗне асӑнтарчӗ — чӑнах та ахаль пулмарӗ ҫав.

Вулич хӑтланчӑшӗ ҫинчен тӗрлӗрен калаҫса, часах пурте килӗсене саланчӗҫ, мана ӗнтӗ эгоист та, терӗҫ пуль, мӗншӗн тесен эпӗ перӗнсе вилес текен ҫынпа ту-

---

[1] Штос — илӗртӗнсе картла выляни.

ĕшрăм; мансăр пуçне вăл çакăн пек майлă вăхăт та тупайман, тейĕн çав!..

Станицă çывăхĕнчи пушă тăкăрлăкпа эпĕ килелле таврăнатăп: хĕрелнĕ тулли уйăх пŷртсен пĕр тикĕс мар тавра курăмĕ хыçĕнчен пушар шевли пек курăна пуçларĕ; кăн-кăвак тӳпере çăлтăрсем лăпкăн ялкăшаççĕ. Вĕсем çине пăхнă май, тахçан ĕлĕк-авал ăс-тăнлă шутланнă çынсен шухăшĕ аса килсе кайрĕ мана. Çав çăлтăрсем, имĕш, çĕр çинчи çав пĕчĕк çĕр татăкĕшĕн пыракан айван тавлашăва е этем юри шухăшласа кăларнă тивĕçлĕхсемшĕн кĕрешнĕ çĕре вĕсем те хутшăнаççĕ пулать; мана ытла кулăшла пек туйăнчĕ. Мĕн курăнать иккен: çав лампадăсем, вĕсен шухăшĕпе пĕр вĕсен кĕрешĕвĕсемпе уявĕсене çеç çутатса тăма чĕртнĕскерсем, ĕлĕкхи пекех ялкăшса çунаççĕ, вĕсен кăмăлĕсемпе шанчăкĕсем вара. пĕр-пĕр шухăшсăр çул çӳревçĕ вăрман хĕрринче хунă вут пек, тахçанах хăйсемпе пĕрле сӳнсе ларнă ĕнтĕ! Анчах мĕнле вăй-хăват та мĕнле шанчăк парса тăнă-ха вĕсене çав тӳпе, хăйĕн хисепсĕр йышлă çăлтăрĕсемпе çутатса, чĕлхесĕр те пулин вĕсен хутне тӳреммĕн кĕрем пек пулса!.. Эпир, вĕсен мĕскĕн тăхăмĕсем, çĕр çинче нимĕнле шанчăксăр та мăнаçлăхсăр çапкаланса çӳрекенскерсем, ыррине те, усаллине те пĕлейменскерсем, çынна ырă кӳрес тесе е хамăра та пулин телей кăтартас тесе, хамăр хăçан та пулин пур пĕрех вилессине пĕлсе сехĕрленсе тăнинчен урăх нимĕнле пысăк çухату тума та пултараймастпăр, мĕншĕн тесен кĕтнĕ телей пулма пултарайманнине пĕлетпĕр эпир; çавăнпа та хамăр вată асаттесем пĕр пăтрашуран тепĕр пăтрашăва кĕнĕ пекех, эпир те иккĕленӳрен иккĕленĕве нимĕн хавхаланусăр кĕретпĕр, вĕсен пекех, шанчăкăмăр та çук пирĕн, тата кашни чунах этемпе е ăраскалпа кĕрешнĕ чухне тĕл пулакан хăватлă туйăмсем те тупни çук пирĕн...

Çавăн евĕрлĕ ытти шухăшсем те чылай иртрĕç ман асăмра; вĕсене тытса чармарăм эпĕ, мĕншĕн тесен кирек мĕнле те пулин шухăш çинче чарăнса тăма юратмастăп; мĕн усси пултăр унтан...

Хамăн малтанхи çамрăклăхра эпĕ ĕмĕтленсе çӳрекен çын пулнă; эпĕ яланах хамăн лăплана пĕлмен вылянчăк ăс сăнласа панă тĕксĕмпе хаваслă сăн-сăпата ачашланă. Анчах мĕн юлчĕ вара унран ман валли? Тĕлĕкре хам çапăçнă хыççăн халăм пĕтни тата хĕрхенӳпе тулса тăракан тĕлсĕр аса илӳ çеç. Çав усăсăр кĕрешӳре эпĕ чĕрери

кăвара та, чăн-чăн пурнăçра кирлĕ хăвата та кăлăхах пĕтерсе тунă иккен; çак пурнăçа эпĕ шухăшпа пурăнса ирттернĕ хыççăн кĕтĕм, çавăнпа мана ытла кичем те ирсĕр пулса кайрĕ, хай хăйшĕн тахçанах паллă кĕнеке майлă çырнă начар произведенине вулакан çыннăн кăмăлĕ пăтраннă пек пулать.

Çав каçхине пулса иртнĕ ĕçсем ман ăшăмра самаях таран йĕрсем хăварчĕç, манăн нервăсене те урмăштарчĕç. Пĕлейместĕп пулĕ халĕ: те ĕненетĕп ĕнтĕ эпĕ пӳрнĕ тенине, те çук, анчах çак каçхине эпĕ ăна пĕр иккĕленмесĕрех ĕненнĕ: çав тери ĕненмелле пулса тухрĕ-çке вăл, çавăнпа эпĕ хамăрăн ватă асаттесенчен, вĕсене пулăшма юратакан астрологинчен[1] кулкаларăм пулин те, ирĕксĕрех вĕсен çулĕ çине лекрĕм, анчах эпĕ çав хăрушă çул çинче шăпах вăхăтра чарăнтăм, хам нимĕнрен йĕрĕнмен, нимĕскере те курмасăр ĕненмен йăлана тытса метафизикăна[2] аяккалла пăрса ятăм та хамăн ура айне пăхкаларăм. Çавнашкал сыхланни питĕ вырăнлă пулчĕ: эпĕ темĕскерле самăр те çемçе япала çине кĕçех такăнса ӳкмен иккен, чĕрĕ япала пулчĕ пулас. Пĕшкĕнтĕм — уйăх тӳрех çул çине çутатма пуçланăччĕ — мĕскер куратăп-ха? Ман умра çурмаран хĕçпе касса пăрахнă сысна выртать... Ăна пăхкалама ĕлкĕртĕм кăна, ура сасси те илтрĕм: тăкăрлăкран икĕ казак чупса тухрĕç, пĕри ман пата пырса тăчĕ те: эсир сысна хăвалакан ӳсĕр казака курман-и, тесе ыйтрĕ. Казакне курман, тесе ăнлантарса патăм та эпĕ ăна, лешин чăрсăр паттăрлăхĕ мĕн туса хунине кăтартрăм.

— Эккее, хурах! — терĕ иккĕмĕш казакĕ.— Чихирь[3] ĕçсе чăнтăхать те мĕн тĕле килнине йăлтах турама пуçлать. Кайăпăр ун хыççăн, Еремеич; ăна çыхса пăрахмаллах, унсăрăн...

Вĕсем кайрĕç, эпĕ хам çулпа малалла хытăрах асăрханса утрăм та юлашкинчен чиперех хамăн хваттере çитрĕм.

Эпĕ пĕр ватă уретник патĕнче пурăнаттăм, ăна ырă

---

[1] Астрологи — авалхи суя наукă, вăл планетăсем куçни тăрăх тата вĕсен созвездисем хушшинчи вырăнĕ тăрăх халăхсен пуласлăхне тата çынсен ăраскалне каласа парасси çинчен вĕрентнĕ пулать.

[2] Метафизикă — чăн пурнăçа вичесĕр сисĕм-туйăмпа пĕлсе çитни çинчен сăмах пырать кунта.

[3] Чихирь — йӳçсе çитмен çамрăк эрех.

кăмăлĕшĕн, уйрăмах тата Настя ятлă лайăх хĕрĕшĕн юрататтăм.

Хĕрĕ вара пĕчĕк кĕрĕкĕпе чĕркеннĕ те, яланхи пекех, эпĕ килессе кĕçĕн алăк патĕнче кĕтсе тăрать; уйăх унăн каçхи сулхăнпа кăвакарнă пĕчĕк те чипер тутисене çутатать. Вăл мана палласа илчĕ, ăшшăн кулса ячĕ, анчах манăн унпа йăпанса тăма вăхăтăм çук. «Сывă пул, Настя!» терĕм эпĕ ун умĕнчен иртсе кайнă чух. Вăл темĕн каласшăнччĕ, анчах ассăн кăна сывласа илчĕ.

Хам кĕнĕ хыççăн пӳлĕм алăкне хупрăм, çурта çутрăм та вырăн çине выртрăм; ыйхăм кăна ку яхăнта яланхинчен те ытларах кĕттерчĕ. Çывăрса каяс чухне хĕвелтухăç çуталма пуçланăччĕ, анчах та манăн çав каçхине çывăрса тăранас çуккине пĕлĕт çинех çырса хунă пулĕ çав. Ирпе тăватă сехетре ман чӳречерен иккĕн шаккарĕç. Мĕн пулнă, тесе, эпĕ сиксе тăтăм: «Тăр, тумлан!» тесе кăшкăрчĕç мана темиçен. Эпĕ васкаварлăн тумлантăм та тухрăм. «Пĕлетĕн-и мĕн пулнине?» — терĕç мана илме пынă виçĕ офицер пĕр харăссăн, хăйсем вилнĕ пекех кăвакарса кайнă.

— Мĕн?

— Вулича вĕлернĕ.

Эпĕ юпа пек хытса кайрăм.

— Чăнах вĕлернĕ! — терĕç вĕсем малалла.— Каяр хăвăртрах.

— Ăçта каймалла вара?

— Кайнă чух пĕлĕн.

Кайрăмăр. Вĕсем мана, Вулич виличчен çур сехет малтан ăна пур пĕр вилмелле çĕртен çăлса хăварнă турă çырни пирки тĕрлĕрен асăрхаттарусем хушса, мĕн пулнине йăлт каласа пачĕç... Вулич тĕттĕм урам тăрăх пĕчченех иртсе пынă: ун умĕнчен çав сыснана касса пăрахакан ӳсĕр казак иртсе пынă пулнă, ӳсĕрри ăна асăрхамасăрах иртсе кайнă пулĕччĕ, тен, Вулич ăна чарса тăман пулсан.— Эсĕ кама шыратăн, тăванăм? — тесе ыйтнă Вулич, лешĕ тӳрех: — Сана,— тенĕ те çавăнтах ăна хĕçпе çапса хул пуççийĕнчен чĕри патне çитиччен касса татнă. Мана хирĕç пулнă икĕ казак, вĕлерекенне хăваланă май, аманнăскере çĕклесе тăратнă, анчах лешĕн чун тухасси çеç юлнă та пĕр икĕ сăмах кăна хушнă: «Вăл тĕрĕс каларĕ!» — тенĕ. Çак сăмахсем мĕне пĕлтернине эпĕ çеç чухларăм; вĕсене ман пиркиех каланă ĕнтĕ; эпĕ мĕскĕне кĕтмен çĕртенех унăн ăраскалне каласа

патăм; инстинктăм улталамарĕ çав мана: унăн улшăннă пит-куçĕнче эпĕ вилĕм çывхарнине кăтартакан паллăна тĕрĕс сăнаса илтĕм иккен.

Вĕлерекенни станицă вĕçĕнчи пушă пӳртре хупăнса ларнă, эпир унталла каятпăр. Хĕрарăмсем çав еннелле макăра-макăра чупаççĕ, кая юлса тухнă казак, кинжалне васкавлăн хăй çумне чиксе, пиртен чупса иртрĕ.

Шуйхану ытла хăрушă пулчĕ.

Акă ĕнтĕ çитрĕмĕр те эпир; пăхатпăр: алăкĕсемпе чӳрече хупăлчисене шалтан питĕрнĕ пӳрт тавра халăх пухăннă. Офицерсемпе казаксем хăйсем хушшинче хĕрӳллĕн калаçаççĕ, хĕрарăмсем тĕрлĕ сăмахсем каласа йĕреççĕ. Вĕсем хушшинче эпĕ ăсран каясса çитнĕ карчăкăн питне-куçне асăрхарăм. Хăй вăл чĕркуçленнĕ те, пуçне аллисемпе тытса, хулăн пĕрене çинче ларать: вăл иккен çын вĕлерекенĕн амăшĕ пулнă. Вăхăчĕ-вăхăчĕпе унăн тутисем хускалкалаççĕ... кĕл-тăватчĕç-ши вĕсем е ылханатчĕç-ши.

Преступнике тытас тесе, мĕн те пулин тумаллахчĕ ĕнтĕ çав вăхăтра. Çапах никам та чи малтан кĕрсе кайма хăват çитерейместь.

Эпĕ чӳрече патне пытăм та унăн хупăлчи хушăкĕнчен пăхрăм: вăл, сăнсăрланса кайнăскер, урайĕнче выртать, сылтăм аллине пистолет тытнă, юнланнă хĕçĕ умĕнче выртать. Чарăлса кайнă куçĕсем хăрушшăн йăлтăртатаççĕ; вăхăчĕ-вăхăчĕпе хăй чĕтресе илет те, ĕнерхине аса илнĕ пек пулса, хăйне пуçĕнчен ярса тытать. Çавăн алчăранă куçĕнче эпĕ пысăк хăстарлăх пуррине кураймарăм, çавăнпа майора: эсир кăлăхах алăка çĕмĕрместĕр, казаксене çавăнта кĕрсе кайма хушмастăр, терĕм эпĕ, ăна халь тытсан лайăхрах пулать, кайран вăл тăна кĕме те пултарать, терĕм.

Çав вăхăтрах ватă есаул[1] алăк патне пычĕ те ăна ятран чĕнчĕ, лешĕ сасă пачĕ.

— Çылăха кĕтĕн, Ефимыч шăллăм,— терĕ есаул: — çавăнпа ним тума та çук, парăн ĕнтĕ.

— Парăнмастăп! — терĕ казак.

— Турăран хăра! Эсĕ ылханлă чеченец мар-çке, тӳрĕ кăмăллă христианин. Енчен хăвăн çылăхупах аташрăн пулсан, нимĕн тума та çук, мĕн курмаллине курасах пулать!

[1] Есаул — патша çарĕнчи казаксен аслă офицер чинĕ.

— Парăнмастăп! — тесе кăшкăрса ячĕ казак тискеррĕн, унтан курок шалтлатни илтĕнчĕ.

— Эй, инкеçĕм! — терĕ есаул карчăка: — ху кала-ха ывăлна: сана итлĕ-и тен... Капла турра çиллентерни çеç пулать вĕт. Пăх-ха, акă улпусем те ăна икĕ сехет хушши кĕтсе тăраççĕ-çке.

Карчăк ун çине тинкерсе пăхрĕ те пуçне пăркаларĕ.

— Василий Петрович,— терĕ есаул, майор патне пырса: — вăл парăнмасть — эпĕ ăна пĕлетĕп; алăкне çĕмĕрсен, пирĕннисене нумайăшне вĕлерсе пĕтерет. Ăна персе пăрахма хушмăр-ши? Чӳрече хупăлчин хушăкĕ сарлака.

Çав самантра манăн пуçа темĕнле шухăш пырса кĕчĕ: Вулич пекех эпĕ те хам ăраскалăм мĕнле иккенне пĕлме шутларăм.

— Тăхтăр-ха,— терĕм эпĕ майора,— эпĕ ăна чĕрĕллех тытатăп,— терĕм. Есаула унпа сăмах хускатса яма хушрăм та алăк патне виçĕ казак тăратрăм, хам паллă тусанах алăка çĕмĕрсе мана пулăшма хатĕр пулăр, терĕм. Унтан пӳрт тавра çаврăнтăм та çав хăрамалла чӳрече патне пырса тăтăм: чĕрем вăйлăн тапать.

— Ах, çĕр çăтасшĕ! — тесе кăшкăрать есаул: — эсĕ пирĕнтен кулас тетĕн-им? Алла илеймĕç, тесе шутлатăн-и? — Вăл пĕтĕм вăйĕпе алăкран шаккама тытăнчĕ; хушăк витĕр пăхрăм та казак мĕн тунине сăнарăм, вăл ку енчен тапăнассине кĕтмен,— сасартăк чӳрече хупăлчине хăйпăтса ывăтрăм та чӳречерен пуç хирлех аялалла ыткăнтăм. Пăшал сасси янăрарĕ, пульă эполета татса кайрĕ. Анчах та, пӳлĕме тулнă тĕтĕме пула, ман тăшман хăй çумĕнчи хĕçне шыраса тупаймарĕ. Ăна аллинчен пырса тытрăм; казаксем те çĕмĕрсе кĕчĕç, вара виçĕ минут та иртмерĕ — преступника çыхрĕç те конвойпа ăсатрĕç. Халăх саланчĕ, офицерсем мана саламларĕç — мĕншĕн саламламалли пурахчĕ çав.

Çакăн хыççăн мĕнле-ха фаталист пулса каяс мар тейĕн! Анчах кам пĕлет, мĕне те пулин ĕненĕ-ши вăл е ĕненмĕ-ши? Час-часах эпир сисĕмсем улталанине е ăс аташнине тĕрĕс шухăш тесе те шутлатпăр! Эпĕ пур япаларан та иккĕленме юрататăп: çапла пулни характер çирĕплĕхне кансĕрлемест; хама мĕн кĕтнине пĕлмесен, эпĕ яланах малалла хăюллăн утатăп. Пур пĕрех вилĕмрен усалли нимĕн те пулас çук, пур пĕрех вилĕмрен хăтăласси те пулмасть!

Крепоçа таврӑнсан, хампа мӗн пулнине эпӗ йӑлтах Максим Максимыча каласа патӑм тата çав пӳрнӗ тени çинчен вӑл мӗн шутланине пӗлес терӗм. Малтан ӑнланмарӗ вӑл ман сӑмаха, анчах эпӗ хам пултарнӑ таран ӑнлантарса патӑм та, вара вӑл пуçне сулкаласа каларӗ:

— Пулать ӗнтӗ, вӑл пуç çавӑрттармӑш япала çав!.. Мӗн тесен те çав азиат пӑшалӗсен пускӑчи начар хӗрнӗ пулсан е пӳрнепе хытах пусмасан, часах осечкӑ парать. Тӳррипе калатӑп, эпӗ черкессен винтовкине те çавӑн пиркиех тиркетӗп: вӗсем темӗнле пире алӑ май мар пек туйӑнаççӗ: тыткалама пӗчӗккӗ, кӗç-вӗç сӑмсаран çаклатса каяймасть сана... Анчах хӗçӗ вӗсен — тайма пуçӑм!

Унтан кӑшт шухӑшласа татах сӑмах хушрӗ:

— Шел мӗскӗне... шуйттан хушнӑ-и ӑна çӗрле ӳсӗр çынпа калаçма!.. Ӗнтӗ, çапла пӳрнӗ пуль çав ӗнтӗ!..

Урӑх эпӗ унран пӗр сӑмах та тӗпчесе пӗлеймерӗм: метафизикӑллӑ калаçусене кирек хӑçан та юратмастчӗ вӑл.

